К С(чув)
А 35
18646. чув.

Юрий Айдаш



# Кӑнтӑр ҫутипе

Национальная библиотека ЧР
4-018646

18646 чув

К^с(чув)
А36

Юрий Айдаш

# Кӑнтӑр ҫутипе

Повесть



ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ ● ШУПАШКАР—1974

С(ЧУВ)2
А 36

18646 чув.
Чувашская республиканская
библиотека
им. М. Горького
ПРОВЕРЕНО
20 10 10 ОКТ 2017

Юрий Григорьевич АЙДАШ

ПРИ ДНЕВНОМ СВЕТЕ

Редактор Р. М. Митрушкина

Художник В. Я. Арапов

Художественный редактор А. А. Афиногенов.

Технический редактор А. Ф. Никитина.

Корректор Н. Н. Маслова

НТ 16909. Сдано в набор 11/VI-1973 г. Подписано к печати 21/XI-1973 г. Изд. № 37/74 г. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 3. Физ. печ. л. 4,50. Усл. печ. л. 7,56. Учетно-изд. л. 8,0. Заказ № 2943. Тираж 10.000 экз. Цена 43 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

0—7—3—3
37—74 М.

© Чувашское книжное издательство, 1974.



I

Катер çине пурте пӗрле ларчӗç. Кун каçипе тенӗ пекех хӗрӳ хӗвел çинче пиçӗхнӗ çынсен шухӑшӗ-кӑмӑлӗ самаях сӳрӗкленнӗ курӑнать. Володя çаплах Тамарӑна сӑнама пӑрахмарӗ. Атӑл тӳремӗ çине киленсе пӑхса пыракан Славик сасартӑках хӑйӗнчен сылтӑмра Тимеров сассине илтрӗ:

— Мана кӑçалхи репертуар чӑннипех шиклентерет...

— Пӗрремӗш хут мар-çке... Хӑнӑхнӑ ӗнтӗ.

Славик калаçакансем еннелле çаврӑнчӗ, анчах лешсем урӑх ним те чӗнмерӗç. Çак çынсем умӗнче хӑйне темшӗн айӑплӑ пек туйса илчӗ те çамрӑк, унӑн чӗри сисмеллех хӗсӗнсе ыратса кайрӗ. «Мӗнпе савӑнтарайӑп эпӗ вӗсене»,— хӑй тӗллӗн шухӑшларӗ вӑл.

## II

Володя Славике чеен куç хĕсрĕ.

— Эсĕ мана йăлăхтарсах çитертĕн, урамсем тăрăх чуптарса. Тен, уйрăлăпăр...

«Мĕн шуйттанле-ха вăл лайăх тумланма вĕренсе çитнĕ?.. Хăй хитре, çавăнпа пуль тумтирĕ те ун çинче сыпăçуллă, тăпăл-тăпăл»,— шухăшлать Славик, тусĕ çине ытараймасăр пăхса.

— Ма чĕнместĕн?— ыйтрĕ Володя.

Славик çаплах шарламарĕ. Юратать вăл Володьăна. Тен, иккĕшне пĕр вăхăтра пурăнма тӳр килнĕрен пулĕ. Пĕр сывлăшпа сывлаççĕ-çке, пĕр илемпе киленеççĕ, малашлăх ĕмĕчĕсем те пĕр еверлĕ... Тăвансем теме те пулать. Кам та пулин халь çакăнта Володьăна кӳрентерес пулсан, мĕнле ыратĕччĕ Славик чĕри? Е йывăрлăха лексен? Пултарнă чухлĕ пулăшĕччĕ вăл ăна.

— Ну, юрĕ, ыранччен, эппин!

Малтанхи пекех çăмăллăн, хăй мĕн тунине лайăх пĕлсе тăракан çын пек лăпкăн та çав вăхăтрах кĕрнеклĕн утса кайрĕ Володя.

— Пархатарсăрскер...— кулкаласа юлчĕ Славик. «Тамара патне... Мĕн пулса тухĕ ĕнтĕ вĕсен?»

Славик балюстрада çине тайăнчĕ те Атăл хумĕсене нумайччен сăнарĕ.

Хĕвел анас умĕнхи вăхăт. Йăм-хĕрлĕ пысăк çаврашка горизонт йĕрне перĕннĕ ĕнтĕ. Вăл ал сехечĕн минут йĕппи пек майĕпен куçса пынине халĕ питĕ аван курма пулать — кăнтăрла ăна асăрхама çук. Тепĕр çур сехет иртсен çаврашка курăнми пулчĕ. Славик тӳпене, Атăл хумĕсене сăнать. Пуç тĕлĕнчи çутă кăвак тӳпе тухăçалла тĕксĕмленсе пырать, сулахай çыранти вăрман тăррисемпе пĕрлешнĕ çĕрте вара вăл хура кăвак тĕс йышăнать. Тин çеç курăнми пулнă хĕвел тĕлĕнче, горизонт йĕрĕнчен çӳлерех, хĕрлĕ те сенкер сăрпа пĕвеннĕ таткаланчăк пĕлĕтсем ним хускалмасăр çакăнса тăраççĕ. Пĕлĕтсен çӳлти хĕррисене тахăшĕ хитре хăю тыттарнă. Çав хăю, шăпах анăç тĕлĕнче йăмăх хĕрлĕскер, çурçĕрелле тăсăлнăçемĕн майĕпен шупкалсах пырать те юлашкинчен палăрмиех пулать. Çак тем пысăкăш илемлĕ кĕпер айĕнчен аслă Атăл хăйĕн çăмăл хумĕсене хуллен хăвалать, хăвачĕпе киленнĕн, ик çыран хушшипе мăнаçлăн ярăнса анать. Тăвалла хăпаракан пăрахут хыçĕнче, кăштах шупкалса, çутă йĕр юлать.

Уçă та çемçе тĕссем. Вĕсем кăшт шĕвĕрех пек. Уйрă-мах — электричество лампочкисен Атăл çине тумлатнă çутисем.

Кĕтмен çĕртен Славик балюстрада леш енче, курăк çинче, хăйĕнчен инçех те мар кăшт сулахаярах ларакан хĕр-художнике асăрхарĕ. Тӳртĕнтерех тăнăран пуль-и вăл ăна малтанах курман. Пĕр вăхăт хĕр хăй умне тин-керет те хăвăрт-хăвăрт ĕçлеме тытăнать, мĕн курнине часрах ӳкерчĕке кĕртесшĕн тейĕн. Этюдник çине çирĕп-летнĕ хут листи Славике самантрах тыткăнларĕ: çав листа çинче каччă хăй анчахрах киленнĕ çутçанталăк сăн-сăпатне курчĕ. Çав тӳпех, çав хура кăвак та айкки-семпе хĕрлĕ йăрăмлă пĕлĕтсемех; Атăл, причал... хум-сем... электричество лампочкисен шыв çине ӳкнĕ сапа-ланчăк çути...

Славик хĕре сăнасарах пăхрĕ. Лараканскер, вăл ва-там пӳллĕ, çинçе кĕлеткеллĕ пек туйăнчĕ. Хура çӳçлĕ хăй, çӳçне çивĕтлемесĕр тăсса янă, шăлаварпа, шурă тăваткал тĕрĕллĕ сенкер кофтăпа. Çара урисенче — шу-рă танкеткăсем. Акă хĕр çĕкленчĕ те, этюдник çинчи хут листине айккине илсе хурса, ун вырăнне тепĕр листа майлаштарма тытăнчĕ. Çынсем хăйне сăнанине асăрха-рĕ пулин те, вăл балюстрада енне çаврăнмарĕ. Çĕнĕ хут листине вырнаçтарса çирĕплетсен, çăмăллăн сиккелесе, çыран хĕррине анчĕ. Тĕксĕм баржа çинче темиçе ача пулă тытатчĕ. Ачасем хĕр çине çаврăнса та пăхмарĕç. Хĕр вĕсем патне асăрханса çывхарчĕ, сăмах та чĕнме-сĕр карлăк çине таянчĕ, вара ачасен хускавсăр сăн-пичĕ-сене тата шывра курăнакан сарă вăлта хуллисене тин-керчĕ.

«Этюдникне пуçтармарĕ, тата мĕн ӳкересшĕн-ха ку?..» — шухăшларĕ Славик.

Тӳпе тĕксĕмленсех пырать. Электричество ламписем çуттăнрах та çуттăнрах курăнаççĕ. Хура тавралăхри тĕр-лĕ тĕслĕ çутăсем, шалтан та, тултан та çутă çуртсем, çăра тĕксĕм-симĕс ӳсекен çулçăсем, вĕсен хушшинче çу-накан хĕрлĕ роза пăнчисем, сенкер астрăсен тĕлĕнмелле çепĕçлĕхĕ — чуна пăлхатса яракан самант! Балюстрада çумĕпе Славик хуллен утать. Таврари çак мĕнпур илеме унăн пурне те кăтартас килет, ăнлантарас килет.

Тепĕр çур сехетрен вăл хăй малтан тăнă вырăна çав-рăнса çитрĕ те тăпах чарăнчĕ: ун умĕнче паçăрхи хĕр-художник лара парать. Ун этюдникĕ çине сулахайран та, сылтăмран та электричество ламписен çути ӳкет.

Хĕр темле ăнланма та йывăр хавхаланупа, ташланă чухнехи пек кăшт палăрмалла кулса, ĕçлет. Питçăмартисем хĕп-хĕрлĕ хăйĕн — мăкăнь пек.

«Охо!— тĕлĕнчĕ Славик ăна курсанах,— ку мĕнле фанатичка тата?»

Хĕр çине вăл хăйпе юнашар тăракан çынсем те асăрхамаллах тинкерсе пăхрĕ пулмалла: пĕр-икĕ çамрăк, хăйсемпе пĕр шухăшлă çын тупнă пек, ун енне çаврăнса тăчĕç.

— Бизнес тăвать,— терĕ вĕсенчен пĕри, кăштах тăрсан,

Славикĕн калаçас килмерĕ.

— Хăй хакне ўстерекен,— ăнлантарчĕ кўршĕ, вăл чĕнменнине кура.

— Пăхсан, унăн хакĕ халь те пĕчĕк мар пек,— калаçăва хутшăнчĕ тепри.— Хĕр — пĕрремĕш сорт!

Славик хальхинче те чĕнмерĕ. Кўршĕсем урăх ун çине пăхмарĕç.

Нимĕн те илтмен пек, хĕр малтанхи киленўпех ĕçлерĕ. Хăй умĕнчи çутçанталăка вăл вăхăчĕ-вăхăчĕпе çивĕччĕн пăхса сăнать те каллех хучĕ çине тинкерет. Пĕчĕкçĕ çаврăнăçуллă аллисем унăн пĕрре хăвăрт, тепре майĕпен хускалса илеççĕ.

Хĕр мĕнле ĕçленине Славик нумайччен сăнаса тăчĕ. Сасартăк унăн куçĕсем Володя куçĕсемпе тĕл пулчĕç. Лешĕ Тамарăна аллинчен тытнă та Славик патнелле çывхарать.

— Халĕ те тăратăн-и?— тĕлĕнчĕ вăл.

— Халĕ те тăратăп...

Володя ахăлтатсах кулса ячĕ те Тамарăна хăй çакăнта Славикрен мĕнле уйрăлни çинчен каласа пама тытăнчĕ.

Славик Тамарăн тăп-тăп кĕлеткине, йăлтăртатакан куçĕсене асăрхарĕ, вара, темĕн çинчен шухăшласа, çапла каласа хучĕ:

— Пĕтĕмĕшпе илсен, пурнăç начарах мар пек.

— Сан пек матурăн та вăл начар пулсан, ман пеккисем çинчен калаçмалли те çук!— Володя Тамара çине çивĕччĕн, шăтарас пек пăхрĕ. Хĕр самантлăх пуçне чикрĕ те, çавăнтах темĕнле хаваслăхпа çуталса, ăна çўлелле яштах çĕклерĕ, унтан Атăл енне çаврăнса тăчĕ.

— Мăнаçлăх, лăпкăлăх, шухăшлăх...

Хавхаланулла килену сисĕнчĕ Тамарăн чĕтренчĕк сассинче.

— «Шухăшлăх» сăмах çук,— хирĕçлерĕ Володя.
— Ан пултăр...
Славик аллипе аялалла, çыраналла, кăтартрĕ:
— Курăр-ха: çав причал çăп-çăмăл пек куранса тăрать. Пачах та йывăрăшĕ çук, тейĕн. Паçăртанпах пăхатăп...
— О! Ку причал... чăнах та, ку причал аптрас çук...— терĕ Володя, хĕр-художнике асăрхаса.— Эс паçăртанпах ун çине пăхни мана нимĕн чухлĕ те тĕлĕнтермест халĕ.
Хĕре Тамара та асăрхарĕ.
Володя калаçма чăрăнмарĕ:
— Çапах та — мĕн мурĕшĕн ларать-ха вăл кунта çĕр хута? Нивушлĕ урăхла май çук?
— Мĕнле май?— хăвăрт ыйтрĕ Славик, тусĕ çине пăхмасăр.
— Э-э! Эсĕ нимĕн те ăнланмастăн-çке! Ну, калăпăр, вăл Хĕрлĕ площадьрен Советсен площадьне хăпариччен ун хыçĕнче пĕр кĕтӳ каччă пуçтарăнмалла.
Славик паçăр хăйпе юнашар тăнă каччăсене аса илчĕ те:
— Эсĕ çаплах тӳрккес шухăшламастăн пуль-çке?— терĕ.
Тамара пĕрре Славик çине, тепре Володя çине пăхать.
— Чăнах та,— терĕ Володя вылянчăк сассипе.—Эп çавăн пек тӳрккес шухăшламастăп. Ансăртран пуçа пырса кĕнĕрен çеç-ха... Тен, вăл çав тери аван хĕр пулĕ. Çуллахи каçсене, хăйĕн искусствине чунтан юратакан-скер. Чăнах, чăнах...
Тамара айккинелле пăрăнса тăчĕ.
— Ман çинчен мĕн калаçаççĕ-ши?— терĕ вăл, ассăн сывласа.
— Ан куляпăр, тусăмсем, художник те ан кулянтăр,— шăппăн хушса хучĕ Володя юлашки сăмахĕсене,— эпир çынсем çинчен е вĕсем пирĕн çинчен мĕн шухăшлани, калаçни пире е вĕсене лайăх пулма чăрмантармасть, усал та тăваймасть. Кашнин хăйĕн турри пур. Вăл ун умĕнче таса та çылăхсăр пулма тăрăшать.
— Çав япăх та — кашнин хăйĕн уйрăм турă пулни,— çаврăнмасăрах хуравларĕ Тамара.
Володя хăй çине Славик ыйтуллăн пăхнине асăрхарĕ.
— Эсир мана ăнланмарăр,— терĕ вара вăл.— «Кашнин хăйĕн турри» тени мистика пекрех, çавна пула вăл—

юрăхсăр сăмах çавранăш. Урăхла каласшăн эпĕ: кашнин чунĕ таса пултăр.

— Çав тери тĕрĕс,— тĕртсе илчĕ Славик Володьăна, вăл кирек мĕнле калаçура та мала тухма тăрăшнине пĕр вăхăтрах хисеплесе те, кăмăлламасăр та. Ак халĕ те Володя кăшт мухтаннă пек туйăнчĕ ăна. Тен, каччă ытлашши хавхаланса кайни çапларах курăнать-ши?

— Ку тавлашăва çакăнпа вĕçлĕпĕр. Е, татах та калаçмалли пулсан, çак тĕлте халлĕхе пăнчă лартса хăварăпăр.

Володя Тамарăна аллинчен тытрĕ.

— Слава, атя пирĕнпе,— чĕнчĕ Тамара.

Славик хирĕç хуравламарĕ, алне сулса çеç илчĕ.

— Ку причалтан вăл халех уйрăлаймасть-ха,— йĕкĕлтешсе кăшкăрчĕ Володя, каялла çаврăнса пăхса.

Вĕсем майĕпен тăвалла хăпарса кайрĕç те халăх хушшинче çухалчĕç.

Киле кайма пуçтарăнакан хĕр çине Славик шăпах вăхăтра çаврăнса пăхрĕ. Лешĕ халь кăна ура çине тăнăччĕ-ха. Хĕре калаçу пуçламăшĕнчех хăратса пăрахасран асăрханса, Славик вырăнлă сăмахсем шырарĕ, анчах та, нимĕн тупайман енне, пуçа мĕн килнĕ, çавна персе ячĕ:

— Эсир ăна «Қаçхи юрă» тесе ят паратăр-и?

— Вăл ята тивĕçлĕ ӳкерме пултармалла. Эп малтан хам та ăна çапла ят парасшăнччĕ те...— Хĕр, пуçтарăннă май, Славик çине пĕрре кăна хăвăрт пăхса илинччĕ. Лешĕ унăн шухăшĕсен йĕрĕ çине тĕп-тĕл ӳкрĕ пулмалла, çавăнпа та хĕр, хăйпе пачах палламан çын калаçнине тӳрех сисмен пекех, вăтаннине е тĕлĕннине палăртмарĕ. Пĕрне-пĕри тахçанах пĕлнĕ пек, хăй вăйне те, хăйпе калаçаканăн вăйне те аван курса тăнă пек, ăшă кулăпа çемçелнĕ сăн-питне вылятса, художник сăмахне лăпкăн пуçларĕ. Анчах та Славик тепре сăмах хушса ĕлкĕриччен хĕр пичĕ çинчи кулă таçта кайса çухалчĕ, куçĕсенче те малтанхи ăшă лăпкăлăх вырăнне темĕн урăххи, сивĕреххи курăнчĕ.

Славик тăнă çĕртен хускалмарĕ, çак самантра хĕр кăмăлĕнче пулса иртнĕ улшăнăва хăй сиснине нимпе те палăртмарĕ, малалла калаçрĕ:

— Мĕншĕн апла калатăр? «Қаçхи юрă» сирĕн ĕçшĕн шăпах тивĕçлĕ ят пек туйăнчĕ мана...

Славик балюстрада леш енне хăвăрт сиксе каçрĕ те, хĕр патне çывхарса, халь çеç тунă эскизсене шыраса



тупрě. Çак хěре вăл пěр-пěр вечерта курса унпа паллашма шут тытас пулсан, тен, ун умěнче нумайччен хăюсăррăн тапăртатса тăнă пўлěччě. Халě унăн çавăн пек тěллев çукчě: картина чăннипех те хытă интереслентерněрен çеç вăл хěрпе калаçма тытăнчě. Те сисрě çакна хěр, те сисмерě — урăх вăл сăмах хушмарě, хут листисем умне пěшкěннě Славик çине тěлěнерех пăхса илчě те ун çумне пырса тăчě.

— Çивěч куçлă эсир... Тěп-тěрěс ўкерсе илнě. Анчах та çутçанталăк копийě мар-ши ку?— калаçма пуçларě çав вăхăтра Славик.

Хěр, каччă çине ăна хак панă пек тинкерсе пăхнăçемěн, хавхалануллăн, хěрўллěн ответлерě:

— Эп çак каçа юрататăп. Манăн çак тавралăхри илеме куçран вěçертес килмест. Манăн çутçанталăк чунě патне май килнě гаран çывăха пырас килет.

Хěр калаçма чарăнчě те палламан çын çине тинкерсе пăхрě.

— Анлантăм,— лăпкăн илтěнчě каччă **сасси.— Ку** шухăш сире паян çеç мар, тахçанах канăç паман пулас.

— Чăнах та шухăшланă,— терě хěр.— Пăтрататпăр çав ěнтě хамăр кўлěри шыва. Теприсемшěн ку çур пус тăман япала ěнтě. Кама кирлě çакăн евěрлě вăрттăнлăхсем?

Славик ун çине куларах пăхрě:

— Мана кирлě... ку маншăн усăллă. Манăн пурне те пěлмелле...

Этюдникě патне пěшкěннě хěр пуçне çěклемесěрех ыйтрě:

— Кам вара эсир?

Славик, вăтаннă пек, улшăннă сасăпа калаçма пуçларě:

— Мěнле калас... театрта ěçлеме тытăнатăп. Эпě — режиссер. Кăçал анчах институт пěтертěм...

Çак сăмахсене илтсен, хěр ун енне хăвăрт çаврăнчě, гўрленсе тăчě. Славик те хăйне алла илчě, вăтанăçне парăнтарас тенě пек, малалла çирěппěнрех, кăштах кулса калаçрě:

— Мана Вячеслав теççě... Славик. Хушаматăм — Кудрявцев. Эсир студентка пулě-ха. Юлашки курсран-и?.. Ятăр... ăна хăвăр калатăр ěнтě.

— Галя,— терě хěр, аллине каччăна тăсса парса.— Анчах эп студентка мар, вěренсе пěтернě ěнтě.

Çак сăмахсене калană хыççăн хěр этюдникне май-

лаштарса хулпуççи урлă çакрĕ те, кăмăллăн кулса, Славик енне çаврăнчĕ:

— Кайрăмăр-и, эппин?

Славик ăна балюстрада урлă каçма пулăшрĕ, çав вăхăтрах пĕлес килнине палăртмасăр ыйтрĕ:

— Ĕçлессе ăçта ĕçлетĕр вара?

— Эп халь отпускра-ха, çавăнпа...

— Çавăнпа... ăçта ĕçлетĕр ĕнтĕ вара?

— Театрта.

Галя ун енне çаврăнса пăхрĕ те, каччăн тĕлĕннĕ сăн-питне курса, ахăлтатса кулса ячĕ.

— Театрта?— ыйтрĕ Славик.

— Улталамастăп ĕнтĕ. Е эп театрта ĕçлеме пултараймастăп, тетĕр-и? Мĕнле çав эсир, арçынсем, хăвăра çеç этем тесе шутлатăр?

Славик аптрасах ӳкрĕ.

— Çук, çук. Эп ун пек шухăшламан. Ман шутпа, эсир шăпах театрта ĕçлеме çуралнăн туйăнать...

— Ак тата! Паллашнă-паллашманах хитре сăмахсем каласа пуçа çавăрма тытăнтăр иккен.

— Каçарăр...

— Юрĕ-çке, каçарăп.

Пĕр вăхăт иккĕшĕ те чĕнмесĕр утрĕç. Юлашкинчен Славик сăмах хушрĕ.

— Ĕçлеме, мĕнле, йывăр-и? Е хăрамаллиех çук? Гальăн сăн-пичĕ кăштах тĕксĕмленчĕ.

— Хамăн ĕçсене чиперех тесе калаймастăп. Пурте пĕр çынтан килмест...

— Мĕн чăрмантарать вара сире?

— Пурне те хăвăрт пĕлесшĕн эсир. Ĕçлеме тытăнăрха, ак, ун чухне хăвăрах курăр.

— Çапла та — малтанах пĕлни пăсмасть. Тен, ман умра та çав чăрмавсемех тухса тăрĕç. Нумай театрсенче йăлана кĕнĕ пĕр хирĕçӳ пур: аслă режиссерпа килĕштереймеççĕ. Ку хирĕçӳ вара чĕрне айне тирĕннĕ шăрпăк пекех — туртса та кăлараймастăн, пӳрне вĕçне те касса пăрахас килмест.

— Çапла... Эпир те аслă режиссерпа пĕрне-пĕри ăнланаймастпăр-ха...

— Эсир — çамрăк, вăл — ватă. Тен, çавăнпа пуль. Тишкерсе пăхман-и ку варианта?

Хĕр Славик шӳтлесерех каланине ăнланман пек пулчĕ:

— Эп хам та çапла пуль, тетĕп...

Славик кулма пăрахрĕ.

— Мĕн килĕшмест вара ăна?

— Кая юлнă этем вăл. Çапла калани модăна кĕнĕ калаçу евĕрлĕ те-ха, эсир мана ĕненĕр. Тепĕр тесен, хăвăрăн ирĕк. Çапах та эп чăн калатăп. Анатолий Степанович вăхăт мĕнле хăвăртлăхпа улшăнса пынине те сисмест. Творчествăра ĕçлекенĕн чи малтанах çак сисĕмлĕх пулмалла.

— Тĕрĕс ку. Эп ăна сăнаман-ха, вăл мĕнле çын иккенне тӳрех пĕлме çук. Вăхăт кăтартĕ. Çапах та эсир ытлашширех кăмăлсăрланнă пек туйăнать.

— Çулталăк çеç ĕçлетĕп пулин те театртан каяс шухăш ман пуçа пĕрре мар кĕнĕ ĕнтĕ. Хам ĕç хама савăнтармасть, артистсенчен нумайăшĕ кайрĕç...

— Ну, ку — айванланни çеç.

— «Кĕрешмелле», тесшĕн ĕнтĕ эсир.

— Кирлĕ пулсан, кĕрешмелле.

— Паттăрсем тупăнаймарĕç-ха çав...

— Пăхатăп та — кăмăлăр пăсăлсах кайнă иккен. Тен, аслă режиссер тĕрĕс тăвать пуль.

— Нумайăшĕ çапла шухăшлаççĕ. Никам та витĕр пăхмасть. Çавăнпа ĕнтĕ...

— Мĕн «çавăнпа»?

— Хамăра кура хисепĕ...

Славик ним те чĕнмерĕ. Унăн Гальăна шеллес килчĕ. Хыткан хулпуççисем, çăмăл утти, тӳрĕ пăхакан куçсем... «Хăй çав тери хĕрӳллĕ этем пек, çапах йывăрлăхсенчен хăрать».

— Директорĕ мĕнлескер тата?— ыйтрĕ Славик.

Галя ун енне çаврăнмасăрах сӳрĕккĕн ответлерĕ:

— Пырать... кăмăлĕ ырă...

— М-м-м...

Славик ассăн сывласа илчĕ.

Калаçу каллех татăлчĕ. Шухăша кайса, хуллен утрĕç вĕсем.

### III

Пушă вăхăт пулнипе савăнса тата малтанхи ăнăçусемпе киленсе, Володьăпа Славик паян яра куна тенĕ пекех ним те тумарĕç. Вĕсем театрти вахтер сĕтелĕ патне çитсе чарăннă чух кăнтăрла иртни тăватă сехетчĕ ĕнтĕ. Ĕçсĕр аптранă пек, коридорта иккĕшĕ те тĕлсĕр уткаласа çӳрерĕç, хаçатсем пăхкаларĕç, халь çеç кăларнă

«Чĕрĕп» номерне вуласа, тăраниччен ахăлтатрĕç. Шур акăш тумĕ тăхăннă тăвата балерина вĕсен çумĕпе кусĕсене мăч та хупмасăр, вĕсене лачах асăрхаман пек иртсе кайрĕç — балеринăсем хыççăн çил çĕкленсе юлчĕ.

— Çапла пулĕ-ха пурнăç малашне,— «акăшсене» куçпа пăхса ăсатрĕ Володя.— Çак мамăк кĕлеткеллĕ фейăсем хыççăн та чупма тӳр килет пуль... Эх-ха-хай!

Вăл, юрланă пек туса, юриех ассăн сывласа илчĕ те тусĕ çине пăхрĕ.

— Пĕтĕм республика вĕсем çинчен калаçать. Пăртак кĕвĕçес те килет. Пуласлăхĕ хитре вĕсен,— савăнăçлăн калаçрĕ Славик.— Мускав балечĕ, Ленинград балечĕ, Шупашкар балечĕ! Янăрать-çке! Пурте хăй йĕркипе пырать.

Коридорта ура сасси илтĕнчĕ. Тахăшĕ паркет урай çине пушмак кĕлисемпе çирĕп пусса утать.

— Марш ритмĕпе килет, темшĕн савăннă,— хăй шухăшне шăппăн пĕлтерчĕ Володя, кулса.

Иккĕш те коридор вĕçнелле пăхрĕç.

— Çук пуль, паркет кăмăлсăртарах сасă парать-çке,— çавăн пекех пăшăлтатса хирĕç тавăрчĕ Славик.

Кĕçех коридор вĕçĕнче модăпа çĕлетнĕ костюм çийĕн плащ уртнă пĕр вăтам пӳллĕ çамрăк çын курăнчĕ. Славикпе Володя ун çине тинкерсе пăхрĕç. Каччăн хура куçĕсем сиввĕн те çивĕччĕн йăлкăшаççĕ, тутине хăй кӳренчĕклĕн çăт çыртса тытнă. Вăл темшĕн питĕ хытă тарăхни пĕрре пăхсах курăнать. Коридорта тăракан икĕ çамрăкăн хаваслă сăн-пичĕсене асăрхасан, вăл кăшт майĕпентерех утма тытăнчĕ.

Ырă кăмăллă вахтер палламан çын умĕнче алăка уçма та хатĕр тăратчĕ ĕнтĕ, сасартăк каччă пынă çĕртех тăп чарăнчĕ, унтан Володьăпа Славик патне васкамасăр çывхарчĕ те хыттăн пăшăлтатса:

— Сирĕн режиссер — путсĕр этем,— терĕ.

Палламан çыннăн хуйхи ытла та пысăк пулнăн курăнчĕ. Çитменнине тата унăн сассинче вăл хăй мĕн каланине çав тери хытă ĕненни сисĕнчĕ, çамрăксем пĕрпĕрин çине сăмахсăр пăхса илчĕç. Чееленсе пăхнинче кулас килни палăрчех пулмалла — каччă вĕсем çине каллех шăтарасла тинкерчĕ те лешсем хăйне хирĕç мĕн каласса кĕтрĕ. Володьăпа Славик нимĕн калама аптрарĕç. Унпа килĕшес — килĕшме май çук, килĕшес мар — тавлашу пуçланса каять. Çавă çеç çитменччĕ ĕнтĕ тата...

— Ун пек бюрократа эп халиччен те курман,— çемçетсерех ăнлантарчĕ палламан сын малтан каланă сăмахсене.— Пирĕн патра пулсан-и — пĕр кун та пурăнаяс çук вăл...

Каччă сасси халĕ малтанхинчен хытăрах янăрарĕ пулин те чылай йăвашраххăн илтĕнчĕ.

— Мĕн пулса тухрĕ тата?— çемçен ыйтрĕ Славик.

— Нимех те мар. Ĕçĕ те ман — çапласкер анчахчĕ...

Вăл тарăннăн сывласа илчĕ те аллисене плащ кĕсйине чикрĕ. Самантлăх вăл пуçне уснăччĕ, унтан ăна кĕçех хăвăрт çĕклерĕ, вара Славик çине «çак сын манăн вăрттăнлăха пĕлме тивĕçлĕ-ши, тивĕçлĕ мар-ши» тенĕ пек сăнаса пăхрĕ. Славик ăна килĕшрĕ пулас — вăл унпа малалла калаçма хатĕрленни сисĕнчĕ.

Çав вăхăтра алăкран Людмила кĕни курăнчĕ. Вăл Володьăпа Славик хăйне саламланине хирĕç пуç тайрĕ те çемçе, кăмăллă сасăпа лăпкăн пĕлтерчĕ:

— Урамра паян — ытарма çук аван!

Палламан çамрăка вăл тахçанах вĕренсе çитнĕ меслетпе леш сисиччен пăхса хак пама ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ. Вара, Володя хăйне хирĕç кăштах палăрмалла кулса илнине асăрхаман пек пулса, лăпкă та çирĕп утăмсемпе тĕкĕр умне кайса тăчĕ. Унăн илемлĕ вăйлă кĕлетки çине пĕр самант пурте чĕнмесĕр пăхрĕç. Пĕр-пĕринчен вăтаннă пек, Володьăпа Славик харăсах палламан çамрăк еннелле çаврăнчĕç. Лешĕ Людмила кĕрсенех ун çине куç айĕн пăхса илчĕ те калас тенине каламарĕ: çак чечен хĕрарăм умĕнче вăрçăшса тăма аванах мар, тесе шутларĕ ĕнтĕ.

Ак халĕ вăл, Славике сăмах хушасшăн пулса, ун çине темиçе хутчен те пăлханчăклăн пăхкаларĕ. Анчах та сывăхрах Людмила тăни ăна каллех такăнтарчĕ. Юлашкинчен, Володя татах Людмилăна сăнама тытăннине асăрхасан, вăл Славике кăчăк туртса хăйпе пĕрле пыма паллă пачĕ. Славик килĕшрĕ.

Пĕр татăлнă калаçăва тепĕр хут ниçтан тӳрех пуçарма пĕлмесĕр, Славикпе палламан çамрăк кăштах чĕнмесĕр утрĕç.

Урамра кĕрхи çумăр вĕтĕргеткелет. Хура кăвак тата вырăнăн-вырăнăн тĕксĕм шурă пĕлĕтсем, салхуллă шухăшсем пек, пĕрин хыççăн тепри е пĕр-пĕрин çине капланса йывăррăн шăваççĕ. Йĕпе асфальт çинче хутранситрен сарă çулçă курăнкалать. Славик Людмила сăмахĕсене аса илчĕ. Çакна вăл «ытарма çук аван» терĕ-

ши?— шухӑшларӗ вӑл.— Ҫакнах пулсан — маттур-ҫке вӑл».

— Сирӗн, тен, вӑхӑтӑр та ҫук пулӗ-ха,— каҫару ыйтакан ҫын сассипе калаҫма пуҫларӗ юнашар утаканни.

— Калас тенине калама хӑвӑрӑн кӑмӑлӑр пулсан, итлесси мана чӑрмав мар,— ҫемҫен тавӑрчӗ Славик.

Ҫамрӑк ҫын ӳсӗрсе илчӗ те сывӑхри кафе еннелле пуҫӗпе сулчӗ:

— Кӗрсе ларар мар-и ҫавӑнта? Унта типӗ, ӑшӑ, лӑпкӑ...

— Айтӑр, эппин,— килӗшрӗ Славик.

Тепӗр темиҫе минутран вӗсем пысӑк залӑн пӗр кӗтесӗнче вырнаҫрӗҫ.

— Хӑйне хирӗҫ ларакан ҫамрӑк ҫын ҫине халӗ Славик тинкерсех пӑхрӗ. Лешӗ пӗр ҫирӗм ҫиччӗсенче пулма кирлӗ. Сухалне кун сиктерсе хырать пулмалла: тӑваткал янахӗ тикӗс, ун варринчи пӗчӗкҫеҫ путӑк хитрен курӑнса тӑрать. Каччӑн вичкӗн хура куҫӗсем тӳррӗн пӑхаҫҫӗ. Сӑн-сӑпатӗнче ҫирӗплӗх те, хӑюлӑх та палӑрать. Вӑл сасартӑк кулса ячӗ:

— Пӗлетӗр-и? Ют ҫӗрте эп хама яланах кӑшт ухмахларах туятӑп. Арӑслансене те сив шывпа лӑплантарма пулать. Вӗсем те хӑйсем кам иккенне манаҫҫӗ. Ак халь тин ӑнкарса илтӗм: эпир этемсемех-ҫке. Нивушлӗ вара пӗрне-пӗри сӑмахпа каласа ӑнлантарма ҫук? Ӗненместӗп...

Ҫамрӑк ҫын усӑлсах ҫитрӗ пулас, вӑл хавхаланасах калаҫма тытӑнчӗ.

— Тӳрех пӗлтерем: манӑн ятӑм Алексей, хушаматӑм — Яндушов. Эп — инженер. Театршӑн ют ҫын, темелле. Сирӗн аслӑ режиссер ҫапла ӑнланчӗ те пулмалла... Эп Шупашкар ГЭСне тунӑ ҫӗрте ӗҫлетӗп. Хаҫатсем тӑрӑх пӗлетӗр ӗнтӗ... тата, тен, залра куркаланӑ-тӑр вӗсене — унти ҫынсене. Тӗлӗнмелле ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ.

— Пӗлетпӗр кӑштах,— пурин ятӗнчен те каларӗ Славик именчӗклӗн.— Пирӗн ялтан та виҫҫӗн ӗҫлеҫҫӗ.

Ку хӑй ятӗнчен пулчӗ.

— Эп сире ӳпкелесшӗн мар. Сирӗн ӗҫӗ ҫавӑн пек. Анчах хам та мухтанса каламастӑп. Манӑн ӗҫӗ ҫавӑн пек. Ҫынсем хушшинче. Вӗсен сӑн-сӑпачӗ, шухӑш-кӑмӑлӗ, пӗлетӗр-и, чӗрене сывлӑшлах кӗнӗн туйӑнать. Ҫав ҫынсен сулмаклӑ калӑпӑшне, куҫӑмне эп ӑспа ӑнланса ҫеҫ мар, пӗтӗм ӳт-пӳпе туйса тӑратӑп. Тӗлӗнмелле! Хам

вĕсем çинчен çапла шухăшлани тата вĕсене хăшпĕр çĕрте пулăшма пултарни мана савăнтарать. Çутçанталăк сăнĕ урăхланса каять пек вара... Тĕрĕссипе каласан, эп çакна ăнлансах та çитерейместĕп, тата... ак халь калана сăмахсене эп нихăçан та никама та каламан..

Славик малтанхи пекех шăп ларчĕ. Яндушовăн сăмахĕсем ăна пурнăçăн çĕнĕ енне кăтартнăн туйăнчĕç. Славик халиччен те техникăлла вузсенче вĕренекен ачасемпе калаçкаласа курнă. Хăй вĕреннĕ чухне вăл пĕр физик-аспирантпа çывăхчĕ. Лешĕн тĕп-тĕрĕс сăмах çаврăнăшĕсем, уйрăм сăмах çинче пачах кĕтмен çĕртен логикăлла пусăмсем туни тата çав пусăмсем питĕ вырăнлă пулни Славике пĕр вăхăтрах тĕлĕнтеретчĕ те, савăнтаратчĕ те.

Наукăна çывăх çын епле шухăшланинче, уйрăмах çав çын физик пулсан, ахаль çын, гуманитарий, калама çук нумай çĕнĕлĕхсем тупать. Сăмах дисциплинине, унăн чăн-чăн хакне тата вĕсен уйрăм майлашăвне, халиччен теорире çеç асра тытнăскерне, вăл чĕрхаллĕн, пурнăçра курать-çке. Чăн та, хăй çинчен вырăнсăр сăпайланса, тата теприн çинчен ăна ытлашши мухтаса калаçни пулма тивĕçлĕ мар кунта. Тĕрĕслĕх — акă мĕн хаклă. Физиксемпе лириксен шăпах Славик малтанхи курссенче вĕреннĕ вăхăтра пуçланнă тавлашăвĕ ăна темиçе хутчен те çав аспирантпа тĕл пултарса калаçтарнă. Искусство темипе калаçакан физик — ку хăйне уйрăм интереслĕ ыйту... Халĕ ак, Яндушов çине пăхса ларнă май, Славик çав физика аса илчĕ.

— ...Çапла эп сирĕн режиссерăр умне тухса тăтăм... Халĕ тепĕр япала çинче чарăнса тăмалла пулать: эпĕ тахçантанпах театра юрататăп... сăлтавсем пулнă... Хамăр театршăн вара, спорт чĕлхипе каласан, чăннипех те «чирлетĕп».— Тăван искусство-çке! Сăмах майĕн — эпир хамăр халăх историне, чăваш историне, лайăх пĕлменни те питĕ пăшăрхантарать мана.

Яндушов сассине пусарчĕ, вара тарăннăн сывласа илчĕ те малалла калаçма тытăнчĕ:

— Хам ĕçре куллен куракан çынсемпе ыттисене палласштарас тесе, эп темиçе сцена çыртăм. Тӳрех калатăп: вĕсене сцена искусствине пăхăнсах та çырман пулĕ. Ку енчен пăхсан, çырни пĕтĕмпех татăк-кĕсĕк теме пулать...

— Вĕсенче чăн-чăн пурăнăç сăн-сăпачĕ курăнсан...

Славик калаçма тытăнсанах Яндушов ăна тимлĕн итлеме пикенчĕ. Славик сиорĕ: çамрăк инженерăн ку

тĕлĕшпе уйрăм шухăш пур, халь вăл ăна Славик шухăшĕпе танлаштарса тĕрĕслесшĕн.

— ...сцена саккунĕсем нумаях хур курас çук...

Яндушов чĕнмерĕ. Славик тата темĕн каласса вăл чăтаймасăр кĕтрĕ.

— Унсăр пуçне, сире çав саккунсемпе паллаштарасси театр тивĕçĕ, режиссер тивĕçĕ...

— Театршăн, режиссершăн чăрмав пулмасть-и ку?— асăрханса ыйтрĕ инженер.

— Тарăнрах шухăшласан тата искусство çинчен итленĕ пуçламăш лекцисене асра тытсан — пулмасть.

— Қаçарăр, ăнлансах çитеймерĕм...

— Эп акă мĕн каласшăн: искусствăна халăх тунă. Искусство халăх валли, тетпĕр. Килĕшетпĕр..

— Çапла, ку — аксиома...

— Искусствăра ĕçлекеншĕн ку азбука пулмалла. Пĕрремĕш параграф,— малалла калаçрĕ Славик.— Унтан вара ытти те çав тĕмеске çинчен курăнтăр. Паçăр эп кăштах вăтаннă пек те пултăм... эсир пирĕн театрпа халăх хушшинчи çыхăну çинчен калаçма тытăнсан. Эп хам кунта çĕнĕ çын, кăçал çеç ĕçлеме тытăнтăм, çапах та ку театр историне пĕлетĕп. Унăн хăйне кура пысăк çитĕнӳсем пур, анчах халĕ эпир вăл çитĕнӳсем çине çӳлтен пăхмалăх ӳснĕ ĕнтĕ. Пире урăх çитĕнӳсем кирлĕ. Çакна шута илсен, чарăнса тăрса шухăшламалли сахал мар... Чимĕр-ха, хăçан килсе патăм терĕр çак эсир хăвăрăн пьесăра?

— Шăп икĕ çул çитрĕ унтанпа.

— Авă мĕнле! Анатолий Степанч ку таранччен сире тивĕçлĕ ответ та паман, çав вăхăтрах пьеса театрта выртнă, эппин?

— Çапла...

Славикĕн сăн-пичĕ тĕксĕмленчĕ. Çак çамрăка пĕлес килни анчах интереслентерчĕ ăна малтан. Халĕ вара инженерăн юлашки сăмахĕсем ăна сасартăк чĕрине пырса тиврĕç. «Эпĕ те çавăн пек пулăп-ши?— шухăшларĕ вăл, Алешăн сĕтел çине хунă пысăк алтупанĕсене куç хывса.— Çук, çук. Ку ытла та ырă мар япала-çке. Искусствăшăн çав пьеса чăннипех те çӳпĕ çеç пулсан та, çын ĕмĕчĕсене, çын шанчăкне çапла мăшкăл туни — пысăк тискерлĕх. Кунта çынна хисеплемени курăнать.

— Илсе юлнă чух мĕн765 каларĕ вара вăл?.. Тепĕр тесен, ку паллă-ха. Çапах та малтанхи вăхăтсенче пьеса кунсулĕ пирки хăй мĕн шухăшланине пĕлтерчĕ-и?



Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького

— Вăл ăна вуласа тухнă. Худсовет членĕсене вулаттартăм, спектакль тума пулать пуль, тесе калаçрĕ.

— Мĕн шуйттанĕ чăрмантарнă-ха ăна тата кайран çак шухăша пурнăçа кĕртме?

— Ун пирки эпĕ паян ыйтрăм. Худсовет лартма йышăнмарĕ, терĕ. «Пулса çитнĕ» пьесăсем татах та пур имĕш. Хăйĕн унăн ĕçĕ нумай, тепĕр режиссер манăн «татăк-кĕсĕксемпе» аппаланма килĕшмен иккен. Каялла пачĕ. Çавă çеç. Пичете сĕнме хушрĕ. Мана эп Эсхил камне пĕлменнипе тĕксе илчĕ тата. Ăнлантарчĕ вара. Трагеди ашшĕ иккен.

Алешăн хуйхăллă сăнĕ çинче кулă çуталчĕ. Славик мĕн шухăшланине пĕлес тенĕ пек, вăл ăна лăпкăн пăхрĕ те, лешĕ шухăша кайнипе кура, савăнăçлă сасăпа малалла калаçрĕ:

— Манăн темле ухмахла шанчăк пур: паян пĕтĕм тĕнче мана хирĕç тăрса тухсан та, ыран вăл ман тĕрĕслĕхе йышăнассăн туйăнать. Спектакль пулма тивĕçлĕ, пулать те. Хăçан, ăçта, мĕнле майпа — эп кун пирки нимĕн те пĕлместĕп. Тен, юлташсем тупăнĕç, пулăшĕç. Ĕненсех тăратăп... Паçăр ытлашширех хĕрсе кайрăм ĕнтĕ, туятăп... Эп сире йăлăхтармарăм-и?

— Çук, çук,— терĕ Славик, юлташĕ калаçнине тимлĕн итлекенскер.

— Çынсем тĕрлисем пулаççĕ, усаллăх та тĕрлĕрен иккен. Усал ырă пек курăнма та пултарать. Пĕлетĕр-и, мĕн каларĕ Анатолий Степанч? «Репертуар ахаль те хавшак, эп ăна татах та начарлантăр теме пултараймастăп»,— терĕ... Мĕнле çын вăл?

— Искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ...

Славик тăрăхласарах каланине Алеша тӳрех сисеймерĕ пулас. Вăл каллех малганхи пек тарăхса сăмах хушрĕ:

— Мана унăн титулĕсем кирлĕ мар, чунне пĕлес килет.

Славик хăй те ăнланмасть ăна, мĕн калама пултарĕ ĕнтĕ вăл аслă режиссер çинчен?

— Халĕ саншăн тĕп ыйту ку мар-çке-ха.— Сасартăк «эсĕ» терĕ Славик.— Ан кулян, пурăнсан курăпăр. Халлĕхе вăл — сан пьесуна илмен мăн кăмăллăрах ĕçлĕ çын.— Каярахпа ыттине те пĕлĕн. Эп хам та ăна ăнкарсах пĕтерейместĕп-ха.

Калаçу татăлчĕ.

Иккĕшĕ те чĕнмеççĕ, çăра çулçăллă сарлака розан

айӗнче ларакан приемникран Пысӑк театрти сӗрме купӑсҫӑсен ансамбле «Раймонда» балет музыкине выляни илтӗнет.

Тулта тӗксӗм. Ҫумӑр ҫаплах чарӑнман-ха. Тарланӑ чӳрече умӗнчен уҫӑ сывлӑшпа хӗмленнӗ сӑн-питлӗ ҫынсем васкаса иртсе каяҫҫӗ.

Славик аллине Алеша папки патне тӑсрӗ.

— Парса яр. Вуласа пӑхӑп.

Алеша килӗшрӗ.

Вӗсем ӑшшӑн сывпуллашса уйрӑлчӗҫ.

Славик театра утрӗ.

— Ну, мӗнле, майлаштартӑн-и?— куларах кӗтсе илчӗ Славике Володя.

Юлташӗ хӑйӗнчен кам ҫинчен ыйтнине пӗлчӗ Славик, анчах Володя театрта камшӑн юлнине аса илчӗ те хӑй те ҫавӑн евӗрлӗрех ыйту пачӗ:

— Ну, мӗнле, лӑплантӑн-и?

Володя савӑнсах ӳкрӗ.

— А, пӗлетӗн-и, пурнӑҫ кунран-кун лайӑхланса пырать пек...

Володя юриех каласа пӗтермерӗ.

— Мӗн-ха тата апла?— нимӗн сисмен пекрех кулкаларӗ Славик.

— Эп Людмила пирки...

— Ну-ну, каласа пар хӑвӑртрах.

— Людмила — пӗлетӗн-и — ман хыҫҫӑн тӗнче хӗррине ҫитиччен пыма хатӗр!— хавхаланса пӗлтерчӗ Володя.

— Хӑй ҫапла каларӗ-и?

— Сӑнӗнченех курӑнать.

— Тамара вара? Шӑхӑрса юлать-и?

Кулса тата ҫав вӑхӑтрах пӑлханса пӑхрӗ юлташӗ ҫине Славик.

— Тамара? Тамара ниҫта та тарас ҫук.

— Чӗрӳ икке пайланӗ-ши вара?

— Кун пек япаласем ҫинчен шухӑшламасан лайӑхрах. Сисӗмлӗх ҫеҫ кирлӗ... Ну, мӗнле этем пулчӗ вӑл?

— Инженер. Пьеса ҫырнӑ.

Володя Славик аллинчи папкӑна асӑрхарӗ те куҫӗсемпе ҫеҫ кӑтартса:

— Ҫакӑ-и?— тесе ыйтрӗ.

— Ахӑ.

Володя, папкӑна илсе, унӑн хуплашкине уҫнӑ май, ҫапла каларӗ:

— Ёлёк Испанире дуэньăсем пулнă. Ĕçсĕр аптранă карчăксем. Вĕсем çамрăк та илемлĕ арăмсен чыслăхне упранă, теççĕ. Упăшкисем валли. Анчах та дуэньăсем куçĕ мĕн чухлĕ çивĕчрех, çамрăк арăмсен упăшкисене улталас шухăш çавăн чухлĕ вăйлăрах. Ха-ха-ха! Дуэнья ан пул ĕнтĕ. Юрать-и? «Пулмастăп» тесе сăмах пар. Лайăх ача пул-ха!

Славик ним те чĕнмерĕ.

Володя папкăна уçрĕ. «Çулçă тăкăннă тапхăр»,—вуларĕ вăл пьесăн ятне. Ăна пуçламăш йĕркесемех килĕшрĕç пулас.

— Итле-ха, сан инженерӳ ухмах мар. Вуласа пăхха çак тĕлте.— Володя страница çине пӳрнипе кăтартрĕ.— Аван вĕт!

Унтан каллех вулама тытăнчĕ те хутран-ситрен çеç «аван» текелесе палăртса пычĕ. Сасартăк вăл пуçне ялт! çĕклерĕ, шанчăкне çухатнă çын пек хытса тăчĕ.

— Ку тата мĕн? Ку ĕнтĕ ытла та кулăшла! Ку япаласене пĕлмесĕр пьеса çырма лармалла та мар.— Вăл Славик мĕн каласса кĕтрĕ. Славик нимĕн те чĕнменнине кура, малалла калаçрĕ.— Тепĕр тесен, сан вăл инженерçке-ха... Сенкер ача пулас. Сенкерлĕх — аван япала. Вăл çĕнĕлĕхе пĕлтерет. Ӳснине пĕлтерет. Пьеси аптрамасть пулмалла. Лартас теместĕн-и?

— Вуласа тухман-ха...

— Лартма пулать ĕнтĕ. Репертуар планне пăсма тивет вара. Тата аслă режиссер тем калас пур.

## IV

— Ну, эсир мĕн тума пултарнине халех тĕрĕслесе пăхăпăр.

Аслă режиссер репетици irrтерекен зала кĕрсенех, çамрăксем çине ăшă кулăпа пăхса, лăпкăн калаçма тытăнчĕ. Лешсем сасартăках шăпланса, ăна итлеме хатĕрленчĕç. Чăнах та ĕнтĕ, аслă режиссер калаçăва çаппа пуçлани вĕсене ни сехĕрлентермерĕ, ни савăнтармарĕ. Володя та хăй ăшĕнче «тĕрĕслесе пăхăпăр» терĕ. Анатолий Степанович сăмахĕсене аора тытас тесе çеç мар каларĕ вăл кăна. Унăн шухăшĕсем кăшт урăхларахчĕ. Самантлăха вăл пуçне чикрĕ, унтан ăна каллех васкамасăр çĕклесе, хăй шухăша кайнине урăх пĕрре те палăртмарĕ, аслă режиссерпа ытти артистсене вăрттăн, систермесĕр сăнарĕ.

Анатолий Степановичăн çемçен илтĕнекен баритонĕ Славике чи малтанхи тĕлпулурах килĕшнĕччĕ. Халĕ вăл, aслă режиссер калаçнине тимлесе, шухăша кайрĕ. Кĕтмен çĕртенех унăн шухăшĕсем Алеша Яндушов çине куçрĕç. Славик салхулланчĕ. «Ытлашши чăркăшман-ши вăл режиссерпа? Анатолий Степанович çынсемпе çемçен калаçать, хăйне тирпейлĕ тыткалать; пысăк культурăллă çынна, тен, инженерăн тӳрккесрех кăмăлĕ килĕшсех те кайман пуль...»

Славик туйса илчĕ: вăл паçăртанпах Анатолий Степановичăн сассине çеç итлет иккен, мĕн каланине хăлхана та чикмест. Репетици пуçланман, мĕн çинчен калаçать-ха вăл? А-а — иртнисене аса илтерет иккен!..

Анатолий Степанович çаплах калаçать те зал тăрăх каллĕ-маллĕ утать, утать, утать... Пĕрре вăл кам çине те пулсан çивĕччĕн тинкерет, вара утма чарăнсах калаçать, е тата, пурне те манса кайнă пек, пуçне мăнаçлăн каçăртса, çынсене асăрхамасăр, çемçе утăмсемпе уткаласа çӳрет. Аслă режиссер çапла васкамасăр утни, унăн шуралнă çӳçĕ, тачкаланма ĕлкĕрнĕ кĕлетки ăна ватă çын пекрех кăтартать, анчах, сăнасарах пăхсан, çак çыннăн вăй пурри аванах курăнать. Сывлăхлă çын сăн-сăпачĕ ĕнтĕ. Çав сăн-питре халĕ хăйĕн йывăр та чыслă ĕçне кунсерен вăй хурса пыракан çыннăн мăнкăмăллăхĕ палăрать.

Хăй çинчен куç илмесĕр пăхса тăракан çынсемпе ăна ăнсăртран çеç паллашма тӳр килнĕ пек, сивĕ чунлă шăпа ирĕксĕрлесе хушнине кичеммĕн пурнăçа кĕртнĕ пек, Анатолий Степанович калаçрĕ, калаçрĕ, калаçрĕ...

Володя хăй çумĕнчех тăракан Тамарăн сăн-пичĕ ачалла савăнăçпа çуталнине асăрхарĕ те тарăхса кайрĕ:

— Елкăри пек. Çапла-и? Хĕл мучи юмах каласа парать.

Тамара, хăй айванлăхĕнчен вăтаннăн, Володя çине ӳпкевлĕн пăхрĕ.

— Юрĕ ĕнтĕ...

«Вăл мана юрататъ»,— çав самантрах тавçăрса илчĕ Володя; вара хĕрелсе кайнă Тамарăн кĕлеткине хăй сисĕмлĕхĕн мĕнпур хăвачĕпе пĕр харăс уççăн туйса илнĕ пек пулчĕ те урăх ун çине пăхмарĕ. Унăн тăнлавĕсене юн тапса пычĕ. Вăл Анатолий Степанович калаçнине те итлемерĕ.

Славик, йĕри-тавра пăхкаласа, Гальăна шырарĕ, анчах хĕр ниçта та курăнмасть. Славик хăй çине тарăх-

са кайрĕ: Гальăн кунта пулма сăлтавĕ те çук, пӳлĕмĕнче ларать пуль...

Кĕçех репетици пуçланчĕ.

Артистсенчен нумайăшĕ сасартăк хаваслanса кайрĕç, пурте драматургпа режиссер гунă тĕпчене кĕчĕç те унта хăйсене çаврăнăçуллăн тытма вĕрене пуçларĕç. Ку вара — йывăрлăх! Хăнăхнă сасăран, хăнăхнă сăмах çаврăнăшĕсенчен, хăнăхнă хусканусенчен хăтăлса,— тепре çуралса тăрасси çăмăл мар. Ĕнтĕ актер пурнăçĕ çавă: унăн пĕр вĕçĕмсĕр улшăнма хатĕр пулмалла!

Анатолий Степановичăн кашни сăмахне итлеме тăрăшать Тамара.

«Чипер хĕр»,— шухăшлать ун çине пăхса аслă режиссер.— Мĕншĕн эп кăштах çамрăкрах мар-ши?»

Вара анчах выляса пăхнă мизансценăна тата тепĕр хут выляма хушать.

— Карташова, сирĕн аванах тухмарĕ çак вырăнта, асăрхарăр-и?— çемçен кулса çаврăнать вăл Тамара еннелле.—Туйăмлăрах пулмалла!..

Хыпăнса ӳкнĕ хĕр хĕреле-хĕреле (ара, Володя пăхсах тăрать-çке), çапла каласа хурать:

— Татах тепре выляса пăхма тивет пуль эппин...

Тамарăн кашни хусканăвĕпе сăмахĕнче — ачалăх, ачалăх, ачалăх. Çакна Анатолий Степанович та асăрхать.

— Доярка трактористран уйрăлса кайнă чух... хăвна тахçанах йăлăхтарса çитернĕ упăшкупа сывпуллашнă пекех курăнтăн эс.

Çынсем ахăлтатсах кулса ячĕç.

Тамара пуçне чикрĕ.

— Ку таранччен те ыталанма вĕренсе çитеймен, тейĕн...— шăппăнрах хушса хучĕ те Анатолий Степанович чӳрече еннелле çаврăнчĕ.

— Çамрăк малаллах, вĕренет!— илтĕнчĕ тахăшĕн тăрăхлакан сасси.

Шухăша кайнă Славик кăшт куларах пăхса тăчĕ. «Акă пирĕнтен пĕрне шыва кĕртеççĕ. Кашни коллективăн хăйĕн саккунĕсем пур. Çав саккунсене пăхăнмаллах. Çынсем тĕрлĕ майпа çывăхланаççĕ...»

Володя, çак кĕске калаçăва чĕнмесĕр итленĕскер, тусĕ патне çывхарчĕ те ăна хăлхинчен çапла каларĕ:

— Анатолий Степановича пĕрре вирлĕн тăхăнтартса ярас килет.

— Мĕншĕн?— малтанхи пекех лăпкăн ыйтрĕ Славик.

Юлташĕн кăмăл çаврăнăш мыскарисене вăл аванах пĕлет ĕнтĕ.

— Вăл пире пурне те хăйĕнчен кая хурать. Пире пурне те, ăнлантăн-и?

— Ун çинчен çапла шухăшлама иртерех-ха.

Вĕсем, хăйсен калаçăвне çынсем ан илтчĕр тесе, аяккалла пăрăнчĕç. Утрĕç те коридорах тухса кайрĕç.

— Эсĕ, яланхи пекех, айван. Каçар та-ха, Анатолий Степанчăн чунне эпĕ çак темиçе кун хушшинче лайăх ăнлантăм ĕнтĕ. Ăна эпĕ витĕр курса тăратăп тесен те тĕрĕс. Старикрен нафталин шăрши кĕрет.

— Калăпăр, эсĕ ăна чăнах та витĕр курса тăратăн. Вара мĕн?

Славик ăшĕнче Володьăпа килĕшме те хатĕр. Анчах халлĕхе нимĕн те уççăн палăрман-çке.

— Ун аллинче шăхлич пулма кирлĕ мар, акă мĕн!.. Ыйтса тăрать тата.

— Никам аллинче те шăхлич пулма кирлĕ мар.

— Э, тавлашмăп! Пурнăç кăтартĕ-ха, тепĕр тесен...

— Вăт çапла кала та... Эсĕ Тамарăшăн кÿрентĕн пулĕ-ха.

— Ытларах хамшăн... Ав, Людмила килет.— Володя шăппăнрах калаçма тытăнчĕ.

— Вăл сан çумна паян иккĕмĕш сценăра ытла та ачашшăн сĕртĕннĕ пек туйăнчĕ. Асту, ăна упăшки питĕ юрататъ. Сыхлан...

— Эп сыхланнăран Людмила хальхинчен лайăхрах та, начартарах та пулас çук.

— Охо!

— Шăп,— Людмила сисиччен асăрхаттарчĕ Володя юлташне. Унтан хыттăн:— Людмила Сергеевна килет пирĕн пата!— терĕ.

— Çаплах, килет,— юриех типпĕн тавăрчĕ хĕрарăм, унтан кÿренчĕклĕ сасăпа хушса хучĕ.—Чĕнесчĕ хăть Людмила тесе. Вăл пур —«Людмила Сергеевна». Ĕнтĕ хăçантанпа пĕрле ĕçлетпĕр...

Володя тусĕ сисиччен хурчка куçĕпе Людмила кĕлеткине хăвăрттăн та çивĕччĕн пăхса хакларĕ.

Людмила арçынсем хăй çине çапла пăхкаланине тахçанах хăнăхнă ĕнтĕ, ытти чух ку ăна килĕшсех каймастчĕ, халĕ вара унăн питçăмартийĕсене хĕрлĕ сăн çапрĕ:— Ну, йĕкĕтсем, атьăр, мана сире чĕнме янăччĕ.

Людмила, Людмила... «Йĕкĕтсем» сăмахне вăл асăрханса, темле вăрттăн сасăпа каларĕ. Йăшать иккен,

йăшать иккен хăш чух этем шанса тăни, темрен те çирĕп тесе шутлани. Людмила та вăхăтăн хĕрхенӳсĕр чуппине туять, çав пăлхантарать те ăна.

Репетици ирттерекен зала Людмила каччăсене иккĕшне те çаватса кĕчĕ.

— Илсе килтĕм кăвакарчăнсене.

Володьăн аллине вĕçертнĕ чух Людмила хăйĕн пӳрнисене каччă кăшт сисĕнмелле хĕссе илнине туйрĕ. Вăл каччă çине пăхмарĕ. Унăн куçĕ самантлăх Тамарăн куçĕпе тĕл пулчĕ. Çакна Володя та асăрхарĕ. «Тĕлĕнмелле пиçĕ кăмăл иккен манăн паян,— шухăшларĕ вăл,— пĕриншĕн юн вĕриленет пек, теприн аллине вăрттăн чăмăртатăп, çав вăхăтрах манăн хамăн туссемпе те йĕркеллĕ этем пулмалла. Тата мĕн тума хатĕр-ши эп?»— вăл, çăмăл кĕлеткин хаваслă туйăмлăхĕпе хăй чунне йĕкĕлтенĕ пек, никам çине пăхмасăр, темĕнле вальс кĕввине шăхăрса, пĕчченех ташлама тытăнчĕ.

Пурте ун еннелле çаврăнчĕç. Анатолий Степанович хăй те, темĕн калас тесе анчах çăвар уçнăскер, Володя çине лăпкăн пăхса тăчĕ.

Тĕлĕнмелле самант пулчĕ ку. Илемлĕ, кĕрнеклĕ, çаврăнăçуллă каччăн кашни хусканăвĕнчех чуна тыткăна илекен темĕнле ирĕклĕх палăрчĕ. Уйрăмах унăн сăнсăпачĕ пăхса тăракансен чĕринче пĕр пек туйăм çуратрĕ: çав сăн-сăпатра вăй сисĕнчĕ — пăхăнтарма пултараканскер. Вăл, Володьăн сассипе, хусканăвĕсемпе, каччă епле пăхнипе, кăштах хĕрелнĕ питçăмартисен илемĕпе пĕрлешсе, пăхса тăракансене яланлăх парăнтарчĕ. Пурте юратакан ача пек курăнчĕ çак самантра Володя. Ку ачана вăрçма е унпа киревсĕр шӳтлеме юраманни, ăна хисеплеме, юратма кирли пуриншĕн те паллă пулчĕ. Вăл, аслисен мăнкăмăллăхĕпе хăнăхăвĕсене пусмăрламасăр, пуринпе те çапла пĕр тан ирĕклĕн тытма пултарни нумайăшне килĕшрĕ. Тĕрĕссипе каласан, çак самантăн чăн-чăн хакне никам та ăнланса юлаймарĕ: ку вăл çак çынсем çавăн пек япаласене ăнланас тесен те ăнланма пултарайманнинчен мар, вĕсем пурте ырă кăмăллăскерсем пулнинчен килнĕ. Володя вара çынсене нимпе те куçкĕрет ирĕксĕрлемен, терĕмĕр ĕнтĕ. Пĕр Анатолий Степанович çеç, çынсем пурте, ун сăмахне итлеме чарăнса, Володьăна куç хывнине сăнаканскер, сасартăк тăна кĕнĕ пек пулчĕ: пит çăмартисемпе тути çинче малтанхи кулă майĕпен тытăнса тăратчĕ пулин те, куçĕнче савăнăç çути йăлтăртатма пăрахрĕ унăн. Вăл ак

халь çеç çынсене репетици пуçлама чĕнесшĕнччĕ — унăн вăрттăн шухăшĕсене тĕп-тĕрĕс пĕлсе тăнă пек, Володя хăех тăп чарăнчĕ те уçă сасăпа пурне те çапла пĕлтерчĕ:

— Қаçарăр, эп ашкăнма тытăнтăм пулас. Эп хăш чух ашкăнма юрататăп.

«Ку йĕкĕтпе асăрхануллăрах пулмалла,— шухăшларĕ Анатолий Степанович.— Ку йĕкĕтпе асăрханулларах пулмалла...»

Уйрăммăн мĕн палăртрĕ-ши Анатолий Степанович çапла каласа? Ăна вăл хăй те пĕлмест. Анчах та çак каччăн ирĕкĕ хăйĕн ирекĕнчен вăйлăрах пулнине вăл чунĕпех сиссе тăчĕ пулмалла. Хăш енчен, мĕнле хăратма пултарĕ-ши вăл çынна, тата çапла тума унăн кăмăлĕ çаврăнĕ-ши — çакна та пĕлмест Анатолий Степанович, çапах та хăрушлăх умне хĕçпăшалсăр тухса тăрасси хисепе тивĕç япала мар. Ăна Анатолий Степанович ытла та аван ăнланать. Тен, çапла каланинче çын хăй харпăрлăхне сыхлама хăнăхни ытларах палăрчĕ пулĕ. Анатолий Степановичăн вара харпăрлăх туйăмĕ, сăмах майăн каласан, сухал хырмалли хатĕрпе пўртре тăхăнмалли çемçе пушмаксене çеç мар, хăй ĕçлекен театра та çавăрса илет. Чăнах та, ку туйăма ватă çын хăйĕн ĕçне юратнинчен пĕтĕмпех уйăрса илсе пăхма юрамасть, апла пулин те асăннă туйăмсем пĕри тепринпе мĕнлерех шайлашнине сисĕмлĕреххисем аванах асăрхаççĕ. Чи малтан Анатолий Стпанович хăй ăна лайăх пĕлсе тăрать. Ак халь вара вăл çав илемлĕ каччăн çемçе сассинче хăрушлăх пуррине туйса илчĕ те пысăк зала, çĕнĕ çурта кĕнĕ чухнехи пек, пурнăçĕнче пĕрремĕш хут пăлханчăк туйăмпа пăхса çаврăнчĕ. Унăн пуçне темле йывăр шухăшсем капланса килме тытăнчĕç, анчах та вăл, вĕсене вăйпах хăваласа ярса, сасартăк пурне те хатĕрленме хушрĕ.

Репетици çĕнĕрен пуçланчĕ.

Анатолий Степанович урăх пĕрре те шўтлемерĕ. Каласасса вăл малтанхи пекех тирпейлĕн калаçрĕ. Қашни сăмахне вырнаçуллă, витĕмлĕ тума тăрăшрĕ. «Çавă çав»,— кулса илчĕ хăй ăшĕнче Володя, çак улшăнăва асăрхаса. Тăхтавра вăл Славик патне пычĕ те:

— Куртăн-и, мĕнлерех сан шефу? Станиславскирен нимпе те кая мар пуль?— тесе, аслă режиссер еннелле кăтартрĕ.

— Станиславский пирки калаçмăпăр,— Славик пуçне çĕрелле чикрĕ.— Творчество курăнмарĕ. Тахçан

такам усă курнă меслетсем, такам канашĕ, темĕнле ирĕксĕрлесе тунă комбинацисем... Ытлашши нумай кăтартать. Капла актера пăсма та часах... Тепĕр тесен, пьеси те ĕнтĕ... Ну, маншăн халь чи интересли вăл мар-ха. Чи интересли — эпĕ хам!

— Ăнланатăп.

— Ман хама курас килет. Çавăнпа килĕшрĕм те ĕнтĕ выляма.

— Ĕçле, тăванăм. Санран этем пулма кирлех.

Володя Славике хулпуççинчен лăпкаса илчĕ.

— Мĕнле фокус пулчĕ вăл сан паçăрхи?— тусĕ еннелле çаврăнчĕ кăшт чĕнмесĕр тăнă хыççăн Славик.

— Эп темшĕн савăнаттăмччĕ пулас ун чух. Савăнăç ташши!.. Ну, юрĕ, пурнăç ытла та хитре!

— Çавăнпа çапăçтарать вăл çынсене.

— Ача пек пул-ха, тусăм. Çĕр çулхи ват çын пек калаçатăн. Кур-ха, Тамара салхуллă темшĕн...

— «Мне грустно, потому что весело тебе»...

— Ан та кала! Пирĕн хушăмăрта мĕн те пулсан пур-и? Сисĕнет-и?

— Халиччен эс çапла ыйтакан марччĕ.

— Халиччен Тамарăпа пĕрле Людмила çӳреместчĕ.

— Пĕлместĕп... Ну, сисĕнет... Анчах Людмилăпа ан çыхлан. Вăл саншăн ытла та...

Славик каласа пĕтермерĕ. Володя ăна хулĕнчен турткаласа илчĕ:

— Ну-ну! Каласа пĕтер. Мĕн каласшăнччĕ эсĕ? Вăл маншăн ытла та... ну, мĕн?

Славик кулса илчĕ:

— Тамара чăнах та салхуллă...

Володя хĕр еннелле пĕр вăхăт чĕнмесĕр пăхса тăчĕ те кĕтмен çĕртен ахăлтатсах кулса ячĕ, вара, халь çеç мĕн калаçнине пĕтĕмпех маннă пек, хăвăрт лăпланса, Славикрен уйрăлчĕ.

Сисĕнмесĕрех тата тепĕр сехет иртсе кайрĕ. Паянхи пĕрремĕш репетици, тӳррипех каласан, Славике савăнтармарĕ. Аслă режиссерăн, кирек мĕнле пулсан та, ытларах фантази кăтартмалла пекчĕ... Тен, Володя тĕрĕсех калать пуль: Анатолий Степанович ытларах малалла мар, хыçалалла пăхать.

Славик залран тухрĕ те коридорта чӳрече патĕнче чарăнчĕ, шухăша кайса урамалла пăхма тытăнчĕ, вара каллех Гальăна аса илчĕ. «Тĕлĕнтермĕш хĕр... Анчах та вăл мана нихăçан та юратас çук. Çутçанталăк ăна

хăйĕн чи хаклă парнине панă. Сайра хутра çеç тĕл пулать çав парне. Асамлăх пекех вăл — ăнланма та, ăнлантарса пама та çук ун вăй-хăватне... Тĕлĕнмелле чипер сăнпуç... Эпĕ пур — дельфинсем те манран ăслăрах, çаврăнăçуллăрах пуль»...

Чĕри çапла сасартăках çивĕччĕн тунсăхлама тытăннине туйрĕ те Славик, хăйпе хăй кăмăлсăр пулса, ытти çинчен шухăшлама тăрăшрĕ. Кăшт тăрсан ун патне Володя пырса тăчĕ, чӳрече янаххи çине пĕр сăмах чĕнмесĕр хăпарса ларчĕ те репетици иртternĕ залăн уçă алăкĕнчен пĕрерĕн-пĕрерĕн тухакан çынсене пăхкаларĕ.

Алăкра Анатолий Степанович курăнсанах Володя вырăнтан хускалчĕ.

— Килет,— шăппăн пĕлтерчĕ вăл.

Славик, сăмах кам çинчен пынине тӳрех ăнланнăскер, урамалла пăхма пăрахрĕ, çаврăнса тăчĕ.

Анатолий Степанович вĕсемпе танлашрĕ:

— Ну, мĕн, йĕкĕтсем, пуçăрсене уснă эсир? Ывăнтăр та-и? Юрамасть апла, юрамасть...

Вăл чарăнчĕ.

— Ывăнтарчĕ,— аслă режиссера куçран пăхмасăр каларĕ Володя. Сасси унăн салху тухрĕ.

— Нумайăшĕсем актер ĕçне çăмăл тесе шутлаççĕ. Эп сире ку ыйтупа çутта кăларас теместĕп, çапах та... Хăнăхас пулать... Паян аван ĕçлерĕр, тăрăшрăр. Маттур!

«Ачисем ашшĕ-амăшĕсене килĕшсен, ашшĕ-амăшĕсем те ачисене килĕшеççĕ» тенине аса илчĕ те Славик, чĕнмерĕ.

— ...Санăн паян чăн-чăн режиссер куçĕ курăнчĕ,— Анатолий Степанович Славике хулпуççинчен тĕртсе илчĕ.— Асра тытса юлтăн-и? Иккĕмĕш сцена пуçламăшĕнче. Пĕчĕк çеç деталь — çапах мĕнле чун кĕртрĕ вăл спектакле? Сцена çуталсах кайрĕ. Кĕтменччĕ. Савăнтартăн. Ну, тĕлĕнмех те кирлĕ мар: Добрынин патĕнче вĕреннĕ... Çапла, Добрынин... Андрей Петрович... Пĕррехинче эпир унпа пулла кайрăмăр. Вăл кунта килсен. Вăл, Шупашкара килсен, яланах ман патра пулать... Пĕррехинче çапла пулла кайрăмăр. Хуларан тăварах, пĕр пилĕк çухрăмра, улах вырăн пур...

Анатолий Степанович хавхалансах калаçма тытăнчĕ, калаçнăçемĕн çамрăксене сăнарĕ. Лешсен сăнĕсем улшăнмарĕç. Володя хутран-ситрен — те чунтан килнсех, те йĕкĕлтешсе — пырĕ тĕпĕнчен темĕнле сасăсем кăларчĕ,

Славике вара кичемлĕх ытларах та ытларах пуснăн туйăнчĕ.

Теме сиснĕ пек, аслă режиссер хăй калавне вĕçне ҫитиччен татрĕ те урăххи ҫине куçрĕ:

— Пĕр сăмахпа каласан, сире шанатăп. Чĕререн шанатăп. Эсир — пирĕн театр пуласлăхĕ.

Ҫапла вĕçлерĕ те вăл хăй сăмахне ҫамрăксенчен ал тытсах уйрăлчĕ.

— Ыранччен!— савăнăҫлăн чĕтренчĕ унăн ҫемҫе баритонĕ.

— Ыранччен,— ирĕклĕн сывласа ответлерĕç Володьăпа Славик.

Ҫамрăксенчен пăрăнса утма тытăнсанах, Анатолий Степанович хавасланхĕ çухалчĕ.

— «Ачасем — пирĕн пуласлăх!», «Хăвăр шăлăрсене упрăр. Çын шăлĕсемпе чăмлăр»,— йĕкĕлтешсе илчĕ Володя.

## V

Хăшпĕрисен шучĕпе, Гальăн тахçанах çемьеллĕ пулас вăхăчĕ çитнĕ. Тем каласан та, хĕрупраçшăн çирĕм пилĕк çул — сахал мар, ача ăсĕ каймалла пек ĕнтĕ. Калаçма юратарах паракансем хĕре тĕл пулмассерен çак ыйтăва хускатнă, анчах нихăçан та вĕсем Галя шухăшĕсене пĕлеймен. Унăн хура куç харшийĕсем чăлтчăлт чĕтренкелесе илнĕ, çавăн пек самантсенче хĕр нихçанхинчен те ытларах илемленсе кайнă, çапах хăй çинчен нимĕн те уçăмлăн каламан. Хĕрĕн çынна пĕлтерме юраман темĕнле вăрттăнлăх пур пулĕ, тесе шутланă вара хăшпĕрисем.

Атăл хĕрринчи тĕлпулу хыççăн Гальăна театрта темиçе хут та курчĕ Славик, анчах вĕсем урăх пĕрре те малтанхи пек калаçмарĕç. Каччă хăй туйăмĕнчен хăй вăтанчĕ пулас, çакна сиссе вара хĕрĕ те каччăна сăмах хушас темерĕ пулмалла. Минутлăх тĕл пулнă вăхăтсенче иккĕшĕ те калаçма сăмах тупаймарĕç. Лăпкăн сывлăх сунакан Славик сассинче мĕнле туйăм пытаннине хĕр асăрхаман пек пулатчĕ. Унăн чĕри те урăхларах тапма тытăнатчĕ, анчах сăнĕ-пичĕ малтанхи пекех юлатчĕ — кăмăллă, уçă сăн-пит.

Чăн та, кирлĕ тесе шутласан, Галя хăй те унпа калаçма пултарнă, анчах вăл калаçмастчĕ — çитменнине Галя юлашки вăхăтсенче ĕçлессе те Анатолий Степано-

вичпа ёҫлетчӗ. Ҫапла вара вӗсен калаҫӑвӗсем ӑнсӑртран пуҫланнӑ е юри пуҫарнӑ калаҫусем пек курӑнатчӗҫ.

«Мӗн тунӑ пулӗччӗ-ши ман вырӑнта Володя?— шухӑшлать Славик ак халь те, Галя хӑйӗнчен пӗр пӳлӗм урлӑ пӳлӗмре эскизсемпе тӑрмашса ларнине пӗлсен. — Тен, вӑл ӑна ҫӑмӑллӑнах, йӑмӑкне чӗннӗ пек, урама чӗннӗ пулӗччӗ-ши?»

Славик тарӑннӑн сывласа илет те хӑҫан та пулин Гальӑпа юнашар утасси ҫинчен, пӗрне-пӗри сӑмахсӑрах ӑнланасси ҫинчен шухӑшласа ӗмӗтленме пикенет. Иккӗшӗн пурпӗрех ҫавӑн пек юрату пуласса темшӗн ӗненет каччӑ.

«Сакӑр сехет ҫитет. Кӗҫех вӑл киле кайма тухать»,— шухӑшлать Славик, пӑлханма тытӑнса. Вӑл паҫӑрах сӗтел хушшинчен тухнӑччӗ ӗнтӗ, Алеша алҫырӑвӗпе асапланма пӑрахса, пӳлӗм тӑрӑх уткаласа ҫӳретчӗ.

Коридорта пушмак кӗлисем шаклаттарни илтӗнчӗ. «Тухрӗ, каять!»

Сехет пӗр пек те туйӑмсӑр шакканӑ евӗр, пушмак кӗлисен сасси коридор тӑрӑх майӗпен вӑйсӑрланса пычӗ те юлашкинчен пачах илтӗнми пулчӗ.

«Мӗнрен шикленсе тӑратӑп-ха ӗнтӗ эпӗ?»— Славик плащне сулахай аллине пуҫтарса тытрӗ, пӳлӗмрен хӑвӑрт чупса тухрӗ.

Кӗрхи нӳрлӗ ҫил ӑна самантрах уҫӑлтарса ячӗ. Вӑл шлепкине ҫамки ҫине пусарах лартрӗ те, хӑй умӗнче пӗр вӑтӑр утӑмра Гальӑн ҫӑмӑл кӗлеткине асӑрхаса, ун патне хӑвӑрт ҫывхарма пуҫларӗ.

Юлашки утӑмсем тунӑ чух унӑн чӗри кӑлтлатса сикетчӗ, акӑ вӑл хӗрпе танлашрӗ те ӗнтӗ, халӗ сӑмах хушмалла ҫеҫ! Галя та ӑна асӑрхарӗ. Славик хӗр ҫине пӑхса кӑштах йӑл кулчӗ, анчах вӑхӑтра сӑмах хушса ӗлкӗреймерӗ пулас,— Галя ун еннелле ҫаврӑнчӗ те:

— Пирӗн пӗр ҫулпах каймалла иккен-ха, эп пӗлменччӗ,— терӗ.

Унӑн сассинче те, ҫак сӑмахсенче те Славик хӑйне хӗр хӑюллӑрах пулма чӗннине туймарӗ. Тӗрӗссипех каласан, ҫапла чӗнни ҫукчӗ те ӗнтӗ унта. Ҫак кӗтмен-туман тӗлпулу хӑйшӗн тӗлӗнмелле пулнине ҫеҫ пӗлтересшӗнччӗ Галя.

— Ҫапла,— хӑвӑрт хирӗҫ тавӑрчӗ Славик, май килнӗ чух ухмахла чӗмсӗрлӗхрен хӑтӑлас тесе. Унтан, кӑшт лӑпланса:— Ну, мӗнлерех ӗнтӗ санӑн «Каҫхи юрӑ»?— тесе ыйтрӗ.

— Туса пĕтермен-ха...
— Мĕн тата апла?
— Вăхăт çукки тарăхтарать. Хăвах пĕлетĕн-çке, халĕ кунне-çĕрне театрта тенĕ пекех иртттеретĕп. Сывлăш çавăрма та ĕлкĕрейместĕп.
— Ӳкерчĕксем мана ун чухнех килĕшнĕччĕ те, туса пĕтерсен, картинунтан пăрăнса утма та йывăр пулать пуль.
Славик хăйне лăпкăнрах, ирĕклĕрех тытма тăрăшрĕ. Гальăн уçă сăн-пичĕ яланхи пекех ырă кăмăллине асăрхасан, вăл тата ытларах хавхаланчĕ.
Галя хирĕç чĕнмерĕ. Темшĕн калаçас килмерĕ унăн. Вăл халь ытларах Славик калаçнине итлесе пынă пулĕччĕ. Е пачах пĕччен утнă пулĕччĕ. «Аçтан сиксе тухрĕ-ха вăл ман хыççăн?— шухăшларĕ хĕр.— Мĕскер ĕнтĕ, вăл чăнах та манпа калаçасшăн-ши? Кăмăла кайма пултарăп-и эп ăна?
— Эсĕ ăçта пурăнатăн çак?— каччăна çавăн пек ыйту парасса Галя хăй те кĕтменччĕ.
— Сирĕн еннеллех, инçе мар...
— Пулма пултарать,— терĕ Галя.
— Мĕншĕн кулатăн вара унпăн?
— Ахалех.
— Ним кулмалли те çук...
Вĕсем «Родина» кинотеатр умне çитсе тăчĕç.
— Айта кĕретпĕр. Паян питĕ интереслĕ картина,— Славик Галя çине тарăннăн-тарăннăн пăхрĕ.
— Манăн билет пур ĕнтĕ.
— Санăн? Билет-и? Ку интереслĕ! Тăхта! Миçере пуçланать-ха вăл?
— Пуçланиччен вăхăт пур-ха...
Вĕсем вестибюле кĕчĕç.
— Тăр çакăнта. Ниçта та ан кай, юрать-и?
Галя нимĕн те чĕнмерĕ. Чӳрече патне кайса тăчĕ. Черетре тăракан çынсем хушшинче вăл Славикĕн кĕрneклĕ, çăмăл кĕлеткине курать. Унăн хулпуççийĕсем сарлака, шлепки айĕнчен тирпейлĕ касса тикĕсленĕ çӳç хĕрри курăнать. Хăлхи тăррисем сивĕпе хĕрелнĕ, вĕсене курсан Галя хăй тĕллĕн кулса илчĕ. Вара каллех чӳрече енне çаврăнчĕ те, çамкипе сивĕ кĕленче çумне тĕренсе, шухăша путрĕ. Унăн эскимо çисе çӳрекен вунултă çулхи хĕрача пулас килсе кайрĕ. Пĕр-пĕр çӳхе пальто, модăпа пуçтарнă çӳç мар, икĕ кăтра çивĕт, çивĕт вĕçĕнче — шурă хăюсем. Мĕн чухлĕ кулас килет — кул: никам та

чармасть. Сиккеле. Класла выля, арçын ачасене вăрçтарса ил. Вĕсенчен тăрăхласа кулăшла ÿкерчĕксем ту та тепĕр ирхине шкулта пурне те çапăçтарса яр. Вырсарникун крыльцара тахăшĕн ури сасси илтĕннине пÿлĕмре шăппăн итлесе лар. Шаккасан — тÿрех сирпĕнсе тухма кирлех мар. Кĕтсе тăрать! Ан тив, кăштах шăнтăр. Унтан — кино. Телей...

Галя ассăн сывласа илчĕ те, тахăшĕ хăйне хулĕнчен тытнине туйса, каялла пăхрĕ. Ăна хирĕç тÿрех — Славиксĕн савăнăçлă сăн-пичĕ.

— Пулчĕ, —терĕ вăл.— Айта, урама тухар-и?

Галя килĕшрĕ.

Вĕсем Атăл хĕррине кайрĕç.

Халĕ кунта çын сахал. Тăват-пилĕк çамрăк мăшăр çеç, çутçанталăк сивĕпе те çумăрпа хăмсарнине ним вырăнне хумасăр, йĕпе асфальт тăрăх майĕпен уткаласа çÿреççĕ. Тенкелсем çинче никам та çук.

Вĕсем иккĕшĕ пĕрремĕш хут тĕл пулнă вырăна пырса тухрĕç. Атăл çинче халĕ те ун чухнехи пекех çутăсем выляççĕ. Тÿпе — çăлтăрсăр. Сивĕ çанталăк темле кичем сăнлăн курăнать. Ун чухнехи пек лăпкăлăх, чуна йăпатакан ачашлăх, çепĕçлĕх çук ĕнтĕ халь. Таçти-таçти çĕрсемпе телей çинчен шухăшлаттаракан вăрттăнлăх та пытанса тăмасть çак паянхи сивĕ, хуллен вĕтĕртетекен çумăрлă каçра.

Славик тем калаçать. Малтанах ăна Галя тăрăшсах итлерĕ, халь ак каччă сăмахĕсем ун хăлхине те кĕмеççĕ, çумăр сасси евĕр, Славик сасси пĕр пек илтĕнсе тăрать. Гальăн пачах урăх шухăшсем-ши?

— Мĕншĕн чĕнместĕн эсĕ?

Галя хăй еннелле çаврăннă каччăн кăштах пăлханчăк сăн-питне асăрхать те, ним каламасăрах ăна хулĕнчен тытать. Хĕрарăм сисĕмлĕхĕ пĕлтерет ăна: каччă унпа çывăх пуласшăн; пултăрах, эппин...

Хĕр аллине туйса тăни Славике татах савăнтарса ячĕ, анчах Галя ăна асăрхаман пекех тăрать.

— Мĕн шухăша кайрăн?

Чăнах, мĕн çинчен шухăшлать ĕнтĕ халь Галя? О-о! Сахал-и шухăш? Юрату çинчен мар-ши? Юрату çинчен те. Юрату? Мĕн вăл? «Пĕр самантрах çунтарса яракан çулăм». Çапла калатчĕ... Кам? Çапла калаттăмăр... Апла, эп халь çунса кайнă пулать-и ĕнтĕ? Çук! Тĕрĕс мар!.. Эп пуяннисенчен те пуянрах-ха! Эп пуяннисенчен... пуянрах... пу-ян-рах...

— Пĕлетĕн-и, юлташсем лит кулăшлаччĕ ман... Общежитири пурнăçа халĕ те аса илетĕп, нихăçан та манас çук. Пĕрре...

«...Нумайăшĕ мана юрататчĕç. Çăлтăрпа, хĕвелпе танлаштаратчĕç, «пурнăçран та хаклă эсĕ», тетчĕç. Маншăн çапăçатчĕç пĕр-пĕринпе. Чи çывăх туссем, мана курсан, пĕрне-пĕри курайми пулатчĕç. Ах! пурнăç! Эп ăна ытла хытă юрататтăм та, пĕлмерĕм пуль унпа килĕштерме. Вăл маншăн панулми сачĕ пекехчĕ. Мĕн тăвас килнĕ, çавна тăваттăм, çав пахчари панулмисене суйла-суйла татнă пек. Тулли кăмăлпа, савăнăçлă пурăнаттăм. Кун вылявĕ, сывлăш хусканăвĕ, ачаш сăмахсем. Çаксем пурте пулнă манăн, эп вĕсен хуçиччĕ, çĕр эп хушнипех çавăннăн туйăнатчĕ. Çăлтăрсем те мана иглетчĕç, çемçе юр пĕрчисем ман çине хуллен вĕçсе анатчĕç, эп вĕсен йăмăкĕччĕ. Мана курсан, çăка çулçисем пĕр-пĕринпе хуллен пăшăлтатма пуçлатчĕç, эп иртсе кайнине клумба çинчи чечексем нумайччен чĕнмесĕр пăхса ларса юлатчĕç. Эп вĕсене хам та юрататтăм. Çавăнпа вĕсем те мана юрататчĕç, манăн ăшша сисетчĕç...

— Кайран пурнăç кăшт улшăнчĕ. Тен, эпир хамăра ачалăхран уйăртăмăр пулĕ. Пирĕн кашни калаçура, кашни хусканура темле мăнаçлăх паларакан пулчĕ. Çук, ку вăл мăнаçлăх та мар-ха... Мĕнле каламалла ĕнтĕ ăна?..

«...Эп хама пурнăçран çӳле тытма шутларăм пулас. Анчах пурнăç хăй урапинчен маларах ирттерсе яма юратмасть. Вăл Наçти мар çав. Ун пахчинчи мĕнпур панулмисене ыйтмасăрах татса илме юрамасть. Татсан вара... Вăл чăнах та илемлĕччĕ. Хура çӳçлĕ, пуçĕ авалхи грексен статуйисене аса илтеретчĕ. Хура куçĕсенче— çулăм, çулăм, çулăм... Пурте юмахри пек пулчĕ-çке... Илемлĕ хĕрсем шапа пулаççĕ, ытарайми йĕкĕтсем — выç кашкăрсем... «Çунса каяр-и çав вутра?»—терĕ. «Çунар»,—терĕм... Ытла телейлĕччĕ эп, çĕр çинчи пур хĕрарăмсенчен те телейлĕрех пуль теттĕм хама. Вĕренме те вăй çитетчĕ, унпа тĕл пулма та. Вăхăт иртни те сисĕнмерĕ. Юлашки каç эпир тепĕр кунне театра кайма шутланăччĕ. «Ыранччен»,— тесе уйрăлтăмăр. Яланхи пекех, сехет çине те пăхмастăм, вăл килессе шанаттăм... Килмерĕ, килмерĕ!.. Тĕкĕр умне пырса тăтăм. Нумай пулатчĕ хама курманни.—«Манăн чечекĕм»,—тетчĕ те,— ĕненеттĕм. Пăхрăм та — ах, турă! Эп пĕтĕмпех шурса

кайнă. Хăвăртрах пăрăнтăм. Тус-хĕр патне чупрăм. Ман куççуль ăна ытла та хĕпĕртеттерчĕ пулас, тулта тĕтреллĕ кун тăратчĕ, вăл вара манран пăрăнса чӳрече енне çаврăнчĕ те, хаваслăн: «ытарайми кун паян!»— терĕ. Эп тухса кайрăм...»

— Эп сана кӳрентермерĕм пуль те?

Галя, каччă хăйне кăрт туртнипе шартах сиксе, ун еннелле çаврăнчĕ:

— Çук-çке.

— Эсĕ мана итлемерĕн те пулас...

— Мĕн калаçатăн? Итлесех пытăм... Пирĕн вăхăт çитмен-и вара?

Галя калаçăва урăх йĕрпе яма май килнĕшĕн савăнса кайрĕ.

— Чăнах та! Икĕ минут çеç юлнă. Атя!

Славик хĕре аллинчен çирĕп ярса тытрĕ те, вĕсем çуллахи кафе патĕнчен анаталла хăвăрт чупса анчĕç.

Кинотеатра çитнĕ çĕре иккĕшĕ те хĕрелсе кайнăччĕ, савăнăçлăччĕ. Юлашки шăнкăрав сассине илтсе, васкасах зала вирхĕнсе кĕчĕç. Вырнаçса ларчĕç çеç — сарлака шурă пир çине аппарат çути ӳкрĕ те.

Галя экран çинчи пурнăçпа интересленмерĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче унăн хăй пурнăçĕ пирки ларсах шухăшланă кунсем сахал мар пулнă пулин те, çак самантра вăл, юнашар каччă ларнă чух, хăй иртсе тухнă çул çине пăхма, ăна хаклама кăмăл турĕ. Тем тесен те, çав этем улталаса хăварнă хыççăн Галя, урăх нихăçан та арçынна калаçмастăп тесе тупа тунăскер, паян пĕрремĕш хут авланман, çемьесĕр çынпа юнашар ларать. Мĕн хĕтĕртрĕ ăна çапла тума? Унăн питĕ йĕрес килсе кайрĕ. Вăл паян хăйне нихçанхинчен те çемçерех пек курăнчĕ. Мĕншĕн итлерĕ-ши вăл çак çамрăкăн сăмахне? Мĕншĕн вăл унпа яланхи пек типпĕн калаçмарĕ? Е унăн чунĕ, ку таранччен тӳснĕскер, паян пĕррремĕш хут ăс вĕрентнипе пурăнма килĕшмерĕ-и? Ирĕклĕхе, сывлăша, çутта юратаканскер, вăл паян ирĕклĕхпе, сывлăшпа, çутăпа тĕл пулчĕ те унран уйрăлас темерĕ-и?

— Галя, пар аллуна...

Каччă темĕн пăшăлтатать. Мĕн пăшăлтатать вăл?

— Галя, аллуна, тархасшăн...

— Тӳрĕ лар,— лăпкăн калать вăл, аллине памасăр, каччă çине те пăхмасăр: вăл экран çине пăхать, анчах хăй пурнăçне курмасть-и вăл çав тăваткал шурă пир çинче?

Славик хăйне хĕр кӳрентернĕ пек туйса илет. Çурма тĕттĕмре Гальăн аллисем шуррăн курăнаççĕ. Залри çутă улшăнсах тăнă май, вĕсем шыв айĕнчи шурă чул хум вылянипе йăлтăртатнăн, кăштах чӳхеннĕн туйăнаççĕ. Вĕсем пĕрре çывăхрах курăнса каяççĕ, тепре — аякра-аякра пек. Хăйĕн çутă, çунаглă ĕмĕчĕсенче каччă çак илемлĕ сăн-питлĕ лăпкă хĕре тахçанах ĕнтĕ пĕр тăванран та ытларах хаклама хăнăхнă. Мĕн чухлĕ калаçнă вăл хăй ăшĕнче Гальăпа, мĕнле кăна тĕл пулман унпа. Анчах çав тĕлпулусенчен пĕринче те каччă паянхи пек тĕксĕм ларман...

Кино пĕтрĕ.

Автобус çинче вĕсем пĕр сăмах та калаçмарĕç. Галя валли вырăн тупăнчĕ те, вăл çул тăршшĕпех урамалла пăхса ларса пычĕ. Çак саманга астуса юлма тăрăшса, Славик хĕртен кăшт хыçаларах тăраканскер, унăн тутăрĕ çине, унăн илемлĕ хулпуççийĕсемпе аллисем çине куç илмесĕр пăхса пычĕ.

Автобус çинчен ансан та вĕсен пĕрле нумаях пымалла пулмарĕ. Пĕр аллă утăм кайсанах, Галя:

— Çитрĕмĕр,— терĕ.

Славик ун çине пăхрĕ те хĕрĕн ĕнерхи, унчченхи, яланхи лăпкăлăхне курсан, пуçне хăвăрт аяккалла пăрчĕ.

«Ан тарăх»,—йăпатрĕ ăна ăшĕнче Галя. Вăл çак кӳренекен каччăна лешĕ аяккалла пăхнă чух шăппăн сăнарĕ. Славик сăмах тупайманнипе аптрарĕ. «Уйрăлмаллаччĕ иккен автобус çине ларсанах,— шухăшларĕ вăл, вĕчĕрхенсе.— Кăна пĕлнĕ пулсан...»

— Юрĕ, эпĕ кĕретĕп...

Галя килĕ енне пĕр-икĕ утăм турĕ.

— Тăхта!

Славик хăй сисмесĕрех хĕр патне çывхарчĕ те унăн аллине ик аллипех ярса тытрĕ. Хĕр кăштах турткалашрĕ, каччă çине юриех сиввĕн пăхрĕ:

— Килĕшетĕп, эсĕ манран вăйлă.

Ку сăмахсем те каччăна кӳрентерчĕç. Анчах вăл хăй кӳреннине çĕнтерчĕ, кĕтмен çĕртен кулса ячĕ те хавaслăн:

— Ямастăп, пурпĕрех ямастăп,— терĕ.

Галя майĕпен турткалашма пăрахнăçемĕн каччă ун аллине пĕчĕккĕн пушатсах пычĕ. Галя аллине туртса илмерĕ. Çавăншăн Славик ăна ăшĕнче тав турĕ, вара чĕреренех кулянса:

— Кĕрех эппин, васкатăн пулсан,— терĕ.

Хĕр, каччă умĕнче тӳрре тухас тенĕ пек, çемçен таварчĕ:

— Хăвах пĕлетĕн, ыран ирех тăмалла.

— Айта...

Каччă хĕре çурт еннелле çавăтса кайрĕ. Пĕр подъезд патĕнче чарăнчĕç.

— Кĕр...

Славик хăйне чăнах та юратнине сисрĕ пулас Галя. Вăл çемçелчĕ. «Халь ăна ачашласан та юрать, анчах... юрамасть çав».

Галя алли Славик аллинчен майĕпен шуса тухрĕ.

Темле сисĕмлĕхпе хăй тĕрĕсех тунине ĕненсе, Славик кĕтмен çĕртен Гальăна хытă ыталаса тутинчен чуптурĕ. Хĕр хăй ытамĕнчен туртăннине сисрĕ вăл, анчах та ăна чылайччен вĕçертмерĕ.

— Ах, эсĕ çавăн пекскер-и-ха?— терĕ Галя хĕрелсе.— Кай кунтан, ну!

— Ан çиллен, Галя. Ыранччен...

Автобуссем чарăнакан вырăна хуллен утакан Славик çине хĕр пĕр самант чĕнмесĕр тинкерчĕ те, лешĕ каялла çаврăнма хатĕрленнине курса, тĕттĕм подъезда кĕрсе çухалчĕ.

Анчах темĕн канăç памарĕ ăна, темрен хăрарĕ вăл, тем пирки пăшăрханчĕ. Шухăша кайнăскер, пусма картлашки çинче чарăнчĕ те сисмесĕрех хуллен каялла çаврăнчĕ, майĕпен утса урама тухрĕ, пĕр икçĕр метрта пĕчченех тăракан Славикĕн салхуллă куçĕсене курас пек, ун çине тинкерсе пăхрĕ. Тĕлсĕр шухăшсен тыткăнне лекнĕ Славик хăй те сасартăк каялла çаврăнса тăчĕ те çав самантрах Гальăна асăрхарĕ. Вара сасартăк пурте кирлĕ вырăна вырнаçрĕ. «Вăл мана юратать!»— хĕпĕртесе шухăшларĕ каччă. «Вăл мана юратать, юратать!»

Хăвăртгăн талпăнса тапакан чĕре хĕрӳлĕхне хĕр умĕнче палăртас мар, ăна юриех пусарас тенĕ пек, хĕр патне часрах çитме васкарĕ пулин те, хуллентерех утма тăрăшрĕ Славик. Акă ĕнтĕ вĕсене темиçе утăм çеç уйăрса тăрать. Хĕрĕн шалти çутăпа, чун çутипе çуталса йăлкăшакан сăн-питне, çав вăхăтрах хурлăх паллиллĕскерне, аванах курать халь каччă. «Çурхи каçра шур уйăх»,— çапла танлаштарать вăл ăна. Хĕр ун умĕнчех ĕнтĕ, ун çумĕнчех... «Ах, манăн ачашăм, манăн телейĕм!..»

Çĕмĕрĕлесрен хăранă пек, асăрханса тытрĕ вăл икĕ аллипе хĕр пуçне, вара нумай вăхăт ăна ытараймасăр пăхрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те чĕнмерĕç. Мĕн курчĕç вĕсем пĕр-пĕрин куçĕсенче? Мĕн шырарĕç çав çуталса-çунса тăракан таранлăхра? Иртнĕ кунсен мĕлкине-и е пуласлăхăн кăшт çеç палăракан сенкер тĕррисене? Мĕне ĕненчĕç вĕсем, куçран куçа пăхса? Ĕнентерес тенинех-и е ĕненес килнине çеç? Тата мĕн пытарчĕç вĕсем пĕр-пĕринчен? Çук, çук, «пытарчĕç» мар, уçăмлăн калама хăрарĕç. Мĕн вăл, мĕн вăл — вĕсен чунĕсене пĕтĕмпех пĕрлешме чăрмантараканскер?

— Эс манран нимĕн те ыйтмастăн-çке,— шăппăн, лăпкăн калаçма пуçларĕ Славик, хĕре хулпуççисенчен ыталаса.

— Сирĕн пурнăçăр пирĕн умра отчетлах мар пуль,— çавăн пекех шăппăн таварчĕ те Галя ассăн сывласа илчĕ. «Арçынсем ытларах хăйсем ун пирки тĕпчеме юратаççĕ. Патшалăх никĕсне пысăк инкекрен сыхласа хăвармах тăрăшаççĕ, тейĕн»,— шухăшларĕ вăл.

— Çапах та,— терĕ Славик савăнăçлăн.— Саншăн интереслĕ пулма кирлĕ: эп миçе çулта, хăçан тата ăçта çуралнă, атте-анне кам манăн, ку таранччен миçе чӳрече çапса çĕмĕрнĕ, миçе литр эрех ĕçнĕ тата ытти те... Ну, ыйт!

Вăл кулса ячĕ. Анчах та, Гальăн сăн-пичĕ халĕ те çаплах хурлăхлă пулнинчен тĕлĕнсе, часах кулма пăрахрĕ, ун çине малтанхинчен те хытăрах тинкерчĕ. Çак самантрах тем питĕ кирлĕскер пулса иртмелле пек туйăнчĕ ăна сасартăк, вăл вара хĕрĕн питçăмартисем çийĕн усăннă çӳç пайăркисене умлăн-хыçлăн хуллен чупгуса илчĕ те пӳрне вĕçĕсемпе ун тутине сĕртĕнсе, аран илтĕнмелле пăшăлтатрĕ:

— Ну, кала ĕнтĕ, кала...

Çапла çепĕççĕн хавхалантарни Гальăн чунне пĕр вăхăт лăплантарчĕ. Вăл хăйне вăйлăраххăн туйса илчĕ, вара пуçне Славик кăкăрĕ çине хучĕ те, хăйне намăслантаракан, хăйĕн чысне варалакан йĕксĕк япаларан уйрăлнă пек, ирĕклĕ те уçă сасăпа лăпкăн каласа хучĕ:

— Слава, эс ĕмĕтленнĕ хĕр мар эп...

Çак сăмахсене калас умĕн çеç вăл йĕрсе яма та хатĕрччĕ, ак халĕ, вĕсене каланă хыççăн, тӳрех лăпланчĕ. Славик çине пăхас килмерĕ унăн, каччă çумĕнче вăл малтанхи пекех пĕр хускалмасăр тăчĕ.

Славик пурне те ăнланчĕ. Хĕре çак сăмахсене каласа

хӑй айӑпне ҫынна кӑтартасси епле йывӑр пулнине туйса илчӗ те вӑл, ӑна нимӗн чухлӗ те иккӗлентерес мар тесе, унӑн суранне ыраттарасран сыхланса, лӑпкӑн, ачашшӑн, ҫав вӑхӑтрах ӗнентерӳллӗн калама тӑрӑшрӗ:

— Эп ҫав тери ухмах, Галя. Эп ҫавӑн пек чух мӗн каламаллине те пӗлместӗп. Тен, кунта сӑмахран та ытларах ӗненни кирлӗ пулӗ. Ӗненни ҫеҫ. Урӑх ним те. Эп сана юрататӑп. Эсӗ манӑн пурнӑҫӑн пӗртен-пӗр хаклӑ сӑнарӗ. Мана телейлӗ, ирӗклӗ, пултаруллӑ тума пултаракан пӗртен-пӗр ҫын халӗ. Ҫакна ӗненетӗп эпӗ, ҫакна шанса тӑратӑп. Урӑх мана ним те кирлӗ мар.

— Ытла ырӑ кӑмӑллӑ пулма ыйтмастӑп эп санран,— шӑппӑн илтӗнчӗ Галя сасси. Вӑл макӑрать пулас: Славик ун хулпуҫҫийӗсем чӗтренсе илнине асӑрхарӗ.— Эп ун чухне хам мӗн тунине аванах пӗлсе тӑнӑ. Эп ӑна чӗререн юратнӑ...

Славик хӑйне хӗр умӗнче айӑпа кӗнӗнех туйса илчӗ. Нимпе те лӑплантарма пултараймарӗ вӑл ӑна, хӗрӗн пуҫне ҫеҫ аллисемпе каллех хуллен тытса ҫӗклерӗ. Гальӑн хурлӑхӗ, ун чӗри ҫунса асапланни кӗтмен ҫӗртен Славике те ярса илчӗ. Вӑл вара, ҫаплах кирлӗ сӑмах тупаймасӑр, хӗре чуптунӑ май пӗр вӗҫӗмсӗр пӑшӑлтатрӗ:

— Лӑплан, пӗчӗкскерӗм... Лӑплан, ачашӑм. Эпӗ сана юрататӑп, юрататӑп...

Ҫил алхасма чарӑннӑ пек пулчӗ. Йывӑр та нӳрлӗ пӗлӗтсенчен тасалма тытӑннӑ тӳпере унта та кунта ҫӑлтӑрсем йӑлкӑшма пуҫларӗҫ.

## VI

Пысӑк залра ташлаҫҫӗ. Юбиляр, Анатолий Степанович Куколев, ӗҫме-ҫиме лартса тултарнӑ вӑрӑм сетел хушшинче чыслӑн каҫӑрӑлса ларать. Унпа юнашар икенчен те унӑн ҫывӑх ҫыннисем вырнаҫнӑ. Паян Анатолий Степанович ҫуралнӑранпа шӑп та лӑп 50 ҫул ҫитрӗ. Ҫак чаплӑ куна палӑртса, хӑнасем темиҫе хутчен те черккисене ӳпӗнтерчӗҫ ӗнтӗ, аслӑ режиссера маччана ҫити ывӑтрӗҫ, нумай ҫул пурӑнма «ырлӑх-сывлӑх» сунчӗҫ. Ак халӗ самаях хӗрнӗ халӑх, ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пайланнӑ та, сӗтел хушшинче ӗҫет, юрлать, залра — ташлать, улах кӗтессенче пуҫҫавӑрмӑш сӑмахсем пӑшӑлтататать. Янӑраса ҫеҫ тӑраҫҫӗ театр чӳречисем. Асӑрханса калаҫасси нумайӑшӗн иртсе кайнӑ ӗнтӗ. Халь кашниех хӑйӗн ырӑ кӑмӑлне кӳрши умӗнче палӑртма тӑрӑшать.

— Сахал мар ĕçлерĕмĕр санпа,— терĕ, ав, Юманов драматург та, аслă режиссер хулпуççийĕ çине аллине хурса.— Сахал мар, тусăм... Тар юхтарнă, тăрăшнă. Çирĕм çул пĕрле утатпăр-çке. Ырă ятлă пултăмăр халăхра...

— Малашне те çаплах ĕçлесчĕ-ха, Федечка! Халь вăй пур-ха. Куç курать, шăл витет... Эс ĕç-ха, ĕç...

Анатолий Степанович, эрех кĕленчи илсе, Юманов черккине тултарчĕ те, тарлă питне шурă тутăрпа шăлса типĕтрĕ.

— Сирĕн туслăхăра такам та ăмсанмалла,— хушса хучĕ режиссер помощникĕ Шурков.— Эсир, мĕнле калас, пĕртăвансем пек килĕштерсе ĕçлетĕр... Çитес шăматкун каллех премьера! Паянхи чăваш театрне, туршăн та, Анатолий Степанович, сирĕн тата, Федор Федорович, сирĕн театр теме те юрать пуль.

— А мĕн, тен, юрать те пулĕ,— иккĕленме хăтланчĕ Юманов.

— Пулма та пултарать,— терĕ Анатолий Степанович.— Анчах та,— учитель ашкăнакан ача çине пăхнă пек пăхса илчĕ вăл Шурков çине,— анчах та кун пек калаçусенче сăпайлăх кирлĕ. Кун пек чух тĕрĕс сăмах — юлашки сăмах тейĕпĕр — халăхра...

— Сăпайлăх çынна илем кӳрет, теççĕ,— лăпланмарĕ Шурков.— Чăнах ку. Çапах та эп тĕрĕсех каларăм пулĕ, тетĕп. Халăх сăмахĕ, терĕр. Хăвăрах пĕлетĕр-çке: хаçатсем, радио, телевидени — пурте сирĕн çинчен...

— Мĕн пултарнине тăватпăр,— хăй тивĕçне питĕ лайăх ăнланакан çын пек мăнаçлăн пĕлтерчĕ те Анатолий Степанович помощникне эрех тултарса пачĕ.—Ак, эс премьера, тетĕн. Çапла, премьера. Анчах та сахал тăрăшрăмăр-и эпир уншăн? Хура тар тухрĕ манăн. Хура тар...

— Эс чăннипех те канма пĕлмесĕр ĕçленине халăх курса тăрать. Маттур!— аслă режиссера ыталасах чăмăртарĕ Юманов.

— Çапах та, халтан кайсах ĕçлеме кирлĕ мар сирĕн, Анатолий Степанович,— каллех калаçакансем енне пуçне пĕкрĕ Шурков.— Тепĕр чух эсир сăнран та улшăнатăр. Юрамасть вăл ун пек. Чĕре пăсăлма пултарать. Сирĕн вĕренекенсем те пур-çке...

Анатолий Степанович вара кăмăллăн кулса илчĕ те помощникне çурăмĕнчен лăпкаса:

— Эс кăштах ÿстеретĕн-ха, ÿстеретĕн эс кăштах,— терĕ.— Ав, çав ачасене чĕн-ха кунта.

Вăл чÿрече умĕнче таракан Славикпе Володя çине тĕллесе кăтартрĕ.

Шурков сĕтел хушшинчен йăпăр-япăр тухрĕ те, кăшт тăхтасан, каччăсене иккĕшне те хулĕсенчен çавăтсах аслă режиссер патне илсе пычĕ.

— Ах, маттурскерсем, эсир пачах та ĕçмен тем — тăп-тăрă урă-çке!— вĕсене хирĕç çĕкленчĕ Анатолий Степанович.— Атьăр-ха, тытар пĕрле! Сире, ав, радиопа телевидени хуçи курасшăн. Халăх çине чап яраканĕ. Паллашăр.

Вăл, хаваслăн кулса, каччăсене Щукин патне туртрĕ. Щукин тăлпан та кĕрнеклĕ арçын, тирпейлĕ тумланнăскер, Славикпе Володьăн аллине çирĕп тытса чăмăртарĕ те ăшшăн кулса:

— Питĕ хавас, питĕ хавас сирĕнпе паллашма. Пырăр — ырă сунсах кĕтетпĕр,— терĕ.

Паллашнă ятпа чанклатсах ĕçрĕç.

— Пултаруллă ачасем, кăçал тин институтран килнĕ,— Анатолий Степанович каллех Щукин енне çаврăнчĕ.— Пирĕн театр пуласлăхĕ.

Çамрăксем чĕнмерĕç. Володя çеç «радиопа телевидени хуçи» енне пăхса, аслă режиссер сăмахĕсене ытарлăн йышăннă пек, кăштах палăрмалла пуçне тайрĕ те хуллен кулса илчĕ.

— Чăн-чăн артист тăватăп эп вĕсенчен,— терĕ Анатолий Степанович юнашар ларакансене, çамрăксем пăранса кайсан.

— Чăн-чăн артист... Эх, çамрăклăх! Аçта-ши эс! Аçта-ши çав телейлĕ кунсем, хĕвел шевлиллĕ ачалăх? Çамрăклăх вăрçăра иртрĕ. Çапах та, тăвансем, ÿпкелеместĕп эп пурнăçа. Мĕн ĕмĕтленнĕ — пурне те тунă. Пурнăçран ытлашши ыйтма çылăх, тăвансем! Тĕрĕс калатăп-ши эп?

— Тĕрĕс!— чи малтан хуравларĕ Шурков.

— Тĕрĕс, тĕрĕс-с!— илтĕнчĕç тата ыттисен сассисем те.

Анатолий Степанович икĕ аллине те сĕтел çине хучĕ, мăнаçлăрах курăнма тăрăшса, шăв-шавлă зала хуллен пăхса çаврăнчĕ. Сасартăк ун куçĕ тĕлне Тамара тухса тăчĕ. «Хĕрсем, хĕрсем, çул хĕрринчи чечексем пек эсир,—шухăшларĕ Куколев.—Эх-х, мĕншĕн вăхăт çакăн пек хăвăрт иртет-ши?.. Эй, тата!..»

Акă вал ура çине тачĕ те кăпăшка кĕлеткеллĕ арăмĕнчен шӳтлесе уйрăлнă хыççăн, хитре реверанс туса, Тамарăна ташлама чĕнчĕ. Тамара килĕшрĕ.

Çак каç Тамарăна уйрăмах интереслĕ пулассăн туйăнчĕ, унăн чĕри теме сиснĕн хăвăрт-хăвăрт тапса илчĕ. Тамара ăна, амăшĕ пĕчĕк ачана лăплантарнă пек, темтепĕр суйса пусаркаларĕ. Темле савăнăç сăнарĕ унăн умĕнчех тăчĕ пулас, анчах та çав савăнăç, çав телей уншăн çитме çук, алла илме çук, хĕвел шевли пек япалан туйăнса каять пулмалла вăхăтăн-вăхăтăн, мĕншĕн тесен çăлтăр пек çунса тăракан куçсенче хутран-ситрен ахаль кичемлĕх мар, чăн-чăн хурлăх, чăн-чăн тунсăх мĕлкисем вылярĕç.

— Мĕн çинчен шухăшлатăр?

Анатолий Степанович сасси уççăн, илемлĕн янăрарĕ.

Тамара ун çине пăхрĕ те савăнăçлăн кулса илчĕ çеç, нимĕн те чĕнмерĕ.

— Юратса пăрахмарăр пуль те? Эх, мĕншĕн эп пĕр çирĕм пиллĕксенче мар-ши?..

Анатолий Степанович çапла шӳтленине Тамара çурри итлерĕ, çурри итлемерĕ; вăл хăй ташланине те сисмерĕ тейĕн: хĕрелсе çулăмланнă сăн-пичĕ унăн малтанхи кулăпах суталса-çунса тăчĕ, çепĕç те илемлĕ хусканăвĕсем, çăмăл урисем сăпайлăн та хавхалантармалла выляни, çинçе пилĕклĕ яштака, çамрăк кĕлетки музыкăпа виçеллĕ килĕшсе пыни аякран пăхма питех те илĕртӳллĕ, илемлĕ.

— Музыка пек,— терĕ Славик хăйпе юнашар тăракан Володьăна.

— Суятăн пулĕ,— тĕлĕннĕ пек пулчĕ Володя.—Асан тутине ухутара мар, сĕтел хушшинче пĕлеççĕ, ачам...

Славик хирĕç нимĕн те чĕнменнине кура Володя хытах кулса ячĕ те:

— Ĕçмен артист артист мар, атя, тепрер хурар,— терĕ.

Славик урăх ĕçме килĕшмерĕ.

— Çитĕ-ха, паян ман ӳсĕр пулма юрамасть. Куратăн-и, ав, Галя тăрать.

— Сан шăпах кăшт ӳсĕр пулмалла. Вара тăнран кайса пăхмастăнччĕ ун çине. Эсĕ хăвна шан. Ху тĕрĕс тунине ĕнен.

— Эп шанатăп, ĕненетĕп...

— Асăрханса шанатăн, мĕскĕнĕм, асăрханса ĕненетĕн! Ак сан йăнăшу. Асăрханма кирлĕ мар.

Володьăпа тавлашсах тăма кăмăл çук халь Славикĕн. Унăн хăвăрт тухса каяс килчĕ кунтан. Урама, ирĕке, уçă сывлăша. Гальăпа.

— Кур-ха: Людмила...

Володя Славике пиншак çаннинчен тытрĕ. Вĕсем ташлакансем еннелле çаврăнчĕç. Зал варринче Анатолий Степановичпа Тамарăсăр пуçне Людмилăпа унăн мăшăрĕ, Николай Иванович, çеç юлнă иккен. Людмилăн кĕлетки çемçелнĕ курăнать, вăл кăшт ӳсĕртерех те пулас, упăшки еннерех усăннă пуçĕ те йывăр пек. Вĕсем вальс кĕввипе темиçе хутчен çаврăнса илчĕç те, Людмила сĕннипе, урăх çаврăнма пăрахрĕç, çӳрерĕç çеç. Николай Иванович, тӳррĕн те çивĕччĕн пăхма тăрăшаканскер, арăмне диван патне çавăтса кайрĕ.

— Шеллетĕп эп çав çынна,— терĕ Володя, пуçĕпе Николай Иванович çине кăтартса.

— Мĕншĕн?

— Вăл чăнах та Людмилăна хытă юратать.

— Çавăншăн-и?

— Людмилăшăн вăл те пур, те çук... Çак пăшăрхантарать.

— Тен, эсĕ Людмилăна куç хывнине Николай Иванович пĕлет пулĕ, тетĕн-и?

— Эп куç хывнине вăл пĕлес çук... Çапах та вăл арăмĕ хăйпе сиввĕнрех калаçнине асăрхама тивĕçлĕ.

Володя Славик çине чеен кулса пăхрĕ. «Пурнăç— кăткăс япала! Хăçан кама шеллемелле-ши, хăçан кама ĕненмелле? Кирлех-ши шелleме, кирлех-ши ĕнентерме? Кайран каю шăтать, теççĕ. Галя пĕркун, ав, «шалти тĕрĕслĕх» терĕ. Ку вăл темле вăрттăн килĕшӳлĕх пуль— шалти килĕшӳлĕх. Паллах, чунпа ăс килĕшĕвĕ. Тăвас тенипе тума кирли пĕр-пĕринпе çырлахни. Тата — тивĕç те, çынсем умĕнчи тивĕç».

— Айта, ав... пире кĕтеççĕ.

Володя, пиншакне юсакаласа, Славике пĕчченçĕ тăракан Гальăпа Тамара патне илсе кайрĕ.

— Ну, мĕнле, хуçа сĕтелĕ çинчен сире те лекрĕ-и?— кулкаларĕ Володя.

— Сире лекнĕскер, паллах ĕнтĕ,— хирĕç тавăрчĕ Галя.— Эпир сиртен катăк мар пуль-çке?

— Çук, çук, саркайăксем! Калас пулать: Анатолий Степанович паян ырă кăмăллă. Кур-ха, епле çутă ун сăн-пичĕ. Юмановпа шӳтлет, помощникне хулпуççинчен çатлаттарса илет, Тамарăна куç хĕсет. Çапла-и, Тамара?

Володя ӑтанса кайнӑ Тамара ҫине пӗр ҫеккунтлӑх ҫеҫ ҫивӗччӗн, юриех кӳлешнӗ пек пулса, ҫав вӑхӑтрах кӳлешнине те палӑртасшӑн мар пек, пӑхрӗ.

Тамара нимӗн те чӗнме ӗлкӗреймерӗ, Володя каллех калаҫрӗ:

— Маттур Анатолий Степанович. Пултарать вӑл, пултарать! Акӑ камран вӗренмелле ҫаврӑнӑҫулӑха.

— Паян Володя галстуксӑр,— терӗ Галя, сӑмаха пӑрса. Вӑтаннӑ Тамарӑна пулӑшасшӑн пулчӗ курӑнать.

Володя ҫутӑ-кӑвак кӗпин ҫухавине тытса пӑхрӗ те малтанхи хавасла сасӑпа:

— Ман кӑкӑрта демократ чӗри тапать,— терӗ.— Ҫапла вара, галстуксӑр,— емеххе, теҫҫӗ-и-ха? Эп — чӑн-чӑн демократах ӗнтӗ. Славик ҫине пӑхӑр-ха! Ача чӑм шыва ӳкнӗ. Ҫав майкӑчпа ҫӳриччен...

Володя хӗрӳллӗ, ҫивчӗ, савӑнӑҫлӑ, илемлӗ.

Паян галстукпа килнӗ пулсан, вӑл урӑхла калаҫатчӗ те, пурпӗр каллех тӗрӗс пулатчӗ. Ҫураласҫӗ-ҫке ҫӗр ҫине ҫавӑн пеккисем — шывра та путмаҫҫӗ, вутра та ҫунмаҫҫӗ. Туспа — туслӑ, тӑшманран — хӑрамаҫҫӗ, ӗҫ вӗсене парӑнать, таланчӗ те ҫук мар, ҫапах.. «Ман ӑна юратмалла мар,— шухӑшлать хӗр.—Ман ӑна юратмалла мар. Вӑл мана пӗтерет...»

Тамара хӑй мӗн шутланине те пӗлмест. Мӗншӗн кӗреҫҫӗ-ши ун пуҫне ҫавӑн пек ухмахла шухӑшсем? Унӑн такама шанас килет, хӑйне шанма пултараймасть вӑл. Такама ӗненес килет, анчах Галя тауншӑн кирлӗ чухлӗ ҫывӑх мар пек. Такамран ӑс ыйтас килет. Камран? Славикрен-и? Ҫук. Славик аван ача та... Ах, ку урӑххи-ҫке. Урӑххи-ҫке ку... Тамарӑн ирӗклӗ, ҫутӑ, уҫӑ пулас килет—паҫӑрхи пек, кӑшт та пулин, самантлӑх ҫеҫ! Вара вӑл кунта урӑх пӗр минут та тӑмӗччӗ, тухса вӗҫтерӗччӗ. Унӑн хӑйне вӑрҫас килет. Ҫук, вӑрҫас та килмест. Ҫын хӑйне вӑрҫма тивӗҫлӗ мар-ҫке. Ӑна темӗн кирлӗ.

Тамара йӗри-тавралла пӑхать. Пурте савӑнӑҫлӑ. Галя та, ав, кулать. Маттур вӑл, Галя, кӑшт сивӗрех те ӗнтӗ. Пурте ун пек ӑҫтан пулччӑр. «Атте-анне ҫапла ҫуратнӑ».

— Галя, айта киле.

Тамара хӑй сассине хӑй те аран илтрӗ.

— Кӑшт тӑхтӑр ӗнтӗ, халех ӑҫта каятӑр?

Кӑна Володя калать. Вӑл Тамарӑна аллинчен тытать.

Славик Володьӑран уйрӑлчӗ те, Галя еннелле ҫаврӑнса, шӑппӑн:

— Ман сана пӗр сӑмах каламалли пур,— терӗ,

— Мĕн тата?

Галя каччăсен чеелĕхне ăнланчĕ, çапах та унăн халь вĕсене чăрмантарас килмерĕ. Вăл Тамарăпа Володьăна иккĕшне çеç хăварасшăн пулчĕ.

Славик Гальăна хулĕнчен асăрханса тытрĕ:

— Ну, мĕнле, килĕшет-и сана кунта?

— Килĕшет,— терĕ Галя юриех.

Халĕ ĕнтĕ каллех Славикĕн сăмах хушмалла.

— Володя — маттур ача.

— Çапла, вăл, ачи, пултараканскер...

Те кулать Галя, те чăн калать — пĕлмест Славик.

— Айта урама.

— Мĕн эс? Çумăр айне-и?

Славик, пулăшу ыйтнăн, Володьăпа Тамара еннелле вăрттăн пăхать.

Володя ав, Тамарăна аллинчен тытнă та, çынсенчен те вăтанмасть — тăрать. Тамара, Тамара... Унăн кĕрен платйи çинчен çапла тĕс ӳкет-ши — мĕншĕн мăкăнь пек çунать-ха пичĕ? Мĕн калаçаççĕ вĕсем сарлака чӳрече патĕнче?

— Тулта тĕттĕм, пăч-тĕттĕм, пăч-тĕттĕм... Çутçанталăк та пире пĕрле пулма хушать, Тамара...

Володя хĕр аллине хыттăн чăмăртать. Тамара Володьăн алли çине пăхать. Илемлĕ вăйлă алă. Пӳрнисем вăрăмах мар, чĕрнисем яка, юн тымарĕсем шур ӳт çинче кăштах кăваккăн курăнаççĕ.

Тамара çӳçенсех каять, аллине туртса илет те, Володьăран хăвăрт пăрăнса утать.

Вырăнтах тăрса юлчĕ Володя.

«Ах, мĕншĕн çапла турăм? Хăнăхмалла та пулин çӳремелле пулнă-çке каччăсемпе»,— Тамара пĕтĕмпех хăйне айăплать.

Гальăпа Славик таçта пăрăннă. Володя куçĕсем Людмила куçĕсемпе тĕл пулчĕç. «Нивушлĕ вăл мана шыранă?» Володя, тем калас тенĕ пек, Людмила çине вăрахчен пăхса тăчĕ те майĕпен утса залран тухрĕ. «Тухать-и, тухмасть-и?... «Тухать-и те тухмасть-и?» Володьăн кулас килет. Ытла та тулли унăн кăмăлĕ. Ытла та пултаруллă вăл. Тамара юр пĕрчи пек ирĕлсе кайрĕ. Юрĕ. Унпаваскамасан та пулать. Паян мар-тăк — ыран.

Туфли кĕлисем тикĕссĕн шаклатни илтĕнчĕ.

Володя выключатель кнопки çине пусрĕ. Çутă сӳнчĕ. Çав самантра Людмила кăшт чарăнса тăчĕ те, Володя майĕпен коридор тăрăх утса кайнине курса, ун

хыççăн пычĕ. Володя каялла çавăнмарĕ. «Пырать-çке»,— хăйпе хăй киленсе шухăшлать Володя. Вăл аслă коридортан пĕчĕккине пăрăнчĕ те Людмилăна курăнми пулчĕ.

Хăшĕ сунарçă кунта? Хăшĕ кайăк? Володя хăйĕн кашни утăмне малтанах виçсе тĕрĕслерĕ. Людмила ун хыççăн хăй мĕн тунине пĕлмесĕрех утрĕ. Утас килчĕ унăн çав çамрăк хыççăн.

Людмила кĕтесрен пăрăнчĕ те тӳрех Володя ытамне лекрĕ. Тăна кĕме памасăр, каччă ăна çирĕп ыталаса илчĕ те пĕр вĕçĕмсĕр чуптума тытăнчĕ — тутинчен, мăйĕнчен, питĕнчен, кăкăрĕнчен.

— Ах, мĕн тăватăн эсĕ?

Володя чĕнмерĕ. Темĕн вĕçерĕнчĕ, тем патне çитрĕ вăл, унăн малашне хăй мĕн тунине тĕрĕслес килмерĕ, тăнлавĕсемпе хăлхисем пĕçерме тытăнчĕç — вĕсене юн тапса пычĕ.

Вăл Людмилăн çемçе кĕлеткине хăй çумне тата хытăрах чăмăртарĕ те каллех уçă кăкăра чуптума тытăнчĕ.

— Володя, мĕн тăватăн?..

— Юрататăп,— терĕ Володя çӳçенчĕк сасăпа.—Атя, сивĕ кунта...

Людмила «ăçта» тесе ĕлкĕриччен, Володя ăна аллинчен тытрĕ те хăй хыççăн чуптарсах илсе кайрĕ.

Людмила хăй чупнине те, каччăн вĕри аллине те, иккĕшĕн пушмакĕсем хыттăн шаклатнине те кăшт çеç асăрхаса пычĕ. Халĕ çак пурте нимле пĕлтерĕшсĕр, ырă та мар, усал та мар пек туйăнчĕ ăна.

Володя кĕсйинчен çăраççи кăларчĕ. Тепĕр самантран алăк уçăлчĕ. Людмила ним те ыйтмарĕ. Малалла мĕн пулассине вăл аванах пĕлет, тахçанах кĕтетчĕ ăна. Тахçанах, Володьăна куриччченех! Халĕ вара... Çук! Мĕншĕн унăн сыхланмалла, мĕншĕн аяккалла пăхмалла!— Çук-çук-çук! «Ахаль те ку таранччен айван пулнă, çитет!» Апла пулин те хăйĕн сыхланма кирлине, аяккалла пăхма кирлине тата ытти темскерсем çинчен шухăшламаллине Людмила сисет. Ку ăна ытла тарăхтарать, вăл хăй хăравçă пулнишĕн кулянать, хăйне намăслантарать те — «ах, Володя, ытала мана, ан яр мана, никама та ан пар мана, пĕччен ан хăвар мана»,— каччă кăкăрĕ çумне çыпçăнать, ăна вĕри аллисемпе мăйĕнчен ыталаса илет, хĕрӳллĕн чуптума тытăнать.

Çапла, пирĕнтен нумайăшĕ çĕрлехи вăрманта, хăрамăш пулса, шăхăрса юрласа пыраççĕ.



— Мĕншĕн эсĕ ман çине çавăн пек пăхрăн?— ывăннă сасăпа хурлăхлăн ыйтрĕ тепĕр çур сехетрен Людмила каччăран.

— Мĕнле?

— Темле, калама та пĕлместĕп... Эсĕ мана хĕрхенессĕн туйăнчĕ.

— Эп сана хĕрхенетĕп, Людмила. Тахçантанпах куратăп сан вăрттăн асапна.

— Чăнах-и, Володя?

Людмила йĕрсе яма хатĕрччĕ, унăн пуçĕ каллех Володя кăкăрĕ çине усăнчĕ. Володя ăна хуллен лăпкарĕ.

— Чăнах, Людмила,— терĕ вăл пĕрре те суймасăр. Тĕрĕсси çакăччĕ: вăл халĕ çеç Людмилăна чăннипех те шеллесе илчĕ. Çак илемлĕ çамрăк хĕрарăмăн тунсăхлă чунĕ ытла та пĕччен пулнă иккен, никамсăр, мăшăрсăр. Вăл нумайччен хăйне хăй улталаса пурăннă.

— Эп пĕр-пĕччен-çке. Мĕншĕн улталанă-ши эп хама хам?

— Эсĕ ăна юратнă пуль-çке?

Володя чӳречене хирĕç тăракан Людмилăн шурă питне, йăлтăртатса çунакан куçĕсене сăнать.

— Малтан юрататтăм. Тен, халĕ те юрататăп пулĕ, анчах... Ман Светланăн ашшĕ мĕншĕн эсĕ мар-ши?..

Людмила йĕрсе ячĕ те Володьăн майĕпен сӳрĕкленсе пыракан сăн-питне пачах та асăрхамасăр, хăй тĕллĕн калаçнă пек, куççулĕпе чыхăна-чыхăна калама пуçларĕ:

— Ун чух эп поварта ĕçлеттĕм. Вунтăххăра анчах кайнăччĕ. Хальхинчен чипертерех те пулнă пуль... Вăл инженер-çке! Кăмăлларăм, икĕ ача пуррине те пăхса тăмарăм. Аппăшĕ те мана юрататчĕ, пĕрле ĕçлеттĕмĕр аппăшĕпе... Вăт... шăпах çав çул атте вилчĕ. Ялта килçурт юхăннă, Николай аннене самай пулăшрĕ... Вара ман та уншăн кирлĕ çын пулас килчĕ, унăн телейĕ пулас килчĕ. Вăл хăй мана яланах «манăн телейĕм, пурнăçăм эсĕ» тенĕрен-ши ку? Качча тухрăм çапла... Унчченех эп театрти студие çӳреттĕм. Качча тухнă çулах Мускава вĕренме кайрăм. Пĕреххут, ямалла пулман ун мана. Çын, ăслансан, ирĕкленет-çке... Эп те хам йăнăша сиссе илтĕм, анчах халь чавса çывăх та — çыртма çук. Телейсĕр шăпа манăн. Пĕтĕм пурăнăç та — Светланăра çеç. Çут тĕнчепе çав çыхăнтарса тăрать...

Володя сехечĕ çине пăхрĕ те Людмилăна çурăмĕнчен лăпкаса:

— Пире тахҫанах ҫухатрӗҫ пулӗ ӗнтӗ. Каяр,— терӗ.

Людмила шартах сикрӗ:

— Ҫухатчӑр! Эп никама та ответ пама тивӗҫлӗ мар.— Володя ҫине тарӑхнӑ пек пӑхрӗ вӑл.

— Ан вӗрилен. Лӑпкӑ пулмалла санӑн.

— Каҫар, Володя. Аш ҫуннипе эп... Ирӗклӗ пулас, терӗм. Пуринчен те. Хамран та...

Володя тӗлӗнсе пӑхрӗ. Унӑн урама тухас килчӗ. Унӑн ҫак хӗрарӑмран каҫару ыйтас килчӗ. Ҫапах та— мӗншӗн? Кунта иккӗшӗн те пӗр айӑп мар-и вара?

— Володя, кала, эсӗ манӑн-и?— тилмӗрсе пӑхрӗ Людмила, анчах каччӑн куҫӗсене курмарӗ вӑл.— Володя, чунӑм, эпӗ сана килӗшетӗп-и?

— Килӗшетӗн, Людмила,— терӗ Володя. Ӗненмеллерех пултӑр тесе, вӑл Людмилӑна каллех хӑй ҫумне пӑчӑртарӗ.

— Апла эп телейсӗрех мар-ха, телейсӗрех мар-ха! Эпир телейлӗ пулатпӑр, ҫапла вӗт, Володя?

«Ӳсӗр, ухмахланатӑн»,— калас килчӗ Володьӑн. Вӑл кулса ячӗ:

— Тупа та туршӑн!..

— Володя!

Людмилӑн сӑн-пичӗ савӑнӑҫлӑн ҫуталса илчӗ.

— Эпӗ халӗ никамран та хӑрамастӑп. Пӗлетӗн-и, никамран та, килӗшетӗн-и манпа пыма? Аллунтан ҫавӑтатӑп та сӗтел патне илсе пыратӑп. Акӑ манӑн чӑнчӑн ҫывӑх тус, тетӗп. Эпӗ унӑн, тетӗп. Володя, килӗшетӗн-и?

Володя ним калама аптрарӗ, «Ухмахланать»,— шухӑшларӗ вӑл каллех.— Пулаҫҫӗ вӗт мурсем».

— Людмила, мӗншӗн эсӗ ытла та аван!— терӗ Володя тарӑхса.

Людмила каччӑн чӗтренчӗк сассине ӗненчӗ:

— Эпӗ мар, эсӗ аван, эсӗ пуринчен те аванрах.

— Санӑн Николай Иванович патне каймалла, Людмила. Лайӑх мар, пӗлсен,— асӑрхаттарчӗ ӑна Володя, сехечӗ ҫине кӑтартса.

— Мӗншӗн? Эп никамӑнне те ним те варламан.

— Вӑрри эс мар, эпӗ пулса тухатӑп...

— Ҫук, ҫук! Эс те мар, Володя! Эп унӑн мар ӗнтӗ. Эп вӑл пурнӑҫа пӗтерме тахҫанах шут тытнӑ!..

«Ак татӑлса анчӗ пуҫ ҫине»,— тарӑхрӗ ӑшӗнче Володя.

— Апла, эппин, ну, кайрӑмӑр.

Володя Людмилăна аллинчен тытрĕ. Вĕсем тĕттĕм коридора тухрĕç...

Елкăна кăштах кая юлса пынă хĕрача, хăйĕн савăнăçлă юлташĕсем тахçанах ĕнтĕ парнесем илнине курса, кĕвĕçекен чунне ниепле лăплантараймасăр, симĕс турат çинчи пĕр парнене татса илесшĕн пулчĕ. «Юрамасть»,— вĕрентрĕç ăна ыттисем. «Юрамасть»,— теççĕ юлташĕсем. Хĕл Мучи темшĕн ăна çаплах асăрхамасть. Анчах хĕрача пĕлет: кăшт маларах килнĕ пулсанах, çав парне унăн аллинчеччĕ. Апла пулсан, хĕрачан ăна илмеллех. Ан тив, юлташĕсем «юрамасть», теччĕр. Ан тив, Хĕл Мучи нимĕн те ан асăрхатăр. Чăнах та, парнине ăна валли ятарласах хатĕрленĕ пулсан, хĕрачан парнесĕр юлмалла мар-çке...

«Нивушлĕ эп çак телее тивĕçсĕр-ши?— шухăшласа илчĕ Людмила коридорта.— Çук!»

— Эп кĕместĕп,—терĕ Володя, коридор вĕçне тухсан.— Юлташсем кайнă та пулас... Е—эп каярах юлса кĕрĕп. Пĕрле аван мар.

Людмила, шухăша кайнăскер, нимĕн те чĕнмерĕ, аллине Володя аллинчен майĕпен вĕçертрĕ те, вăрт çаврăнса, зала кĕрсе кайрĕ.

Володя тумланма чупрĕ.

Зала кĕрсенех Людмила упăшкине шырарĕ. Николай Иванович чӳрече умĕнче пĕчченех пирус туртса тăрать иккен. Людмила тӳрех ун патне утрĕ.

— Çаплах тăратăн-çке,— терĕ вăл ним калама пĕлменрен.

Николай Иванович чĕнмерĕ. Вăл Людмилăн тăртанса кăштах кăвак тĕс çапнă куç хăрпăкĕсене, ывăннă сăн-питне асăрхарĕ. Çӳçĕ те паçăрхи пек йĕркеллĕ мар. Людмила ăна хирĕç пăхса тăраймарĕ, пуçне чикрĕ, тарăхса кайрĕ.

— Аçта пултăн?— ыйтрĕ Николай Иванович лăпкăн курăнма тăрăшса.

Упăшки мĕнле пăхнине лайăх ăнланакан Людмила вăл пурне те тавçăрса илнине тӳрех пĕлчĕ. Çапах та унăн тавçăрулăхĕ темех мар-ха. Вăл ним те курман-çке. Пурпĕрех Людмила сасартăк хăраса ӳкрĕ.

— Туалетра,— терĕ вăл хытă сасăпа.

Вара хăвăрт хĕрелсе кайрĕ те, шăлĕсемпе тутине çыртса лартса, пуçне чикрĕ.

Николай Иванович пирусне сӳнтерчĕ, йывăррăн сывласа илчĕ.

## VII

Чуна пӑлхатакан шухӑшсем кашнин тенӗ пекех спектакль вӗҫленичченех ҫуралчӗҫ. Артистсенчен пӗри те хӑй мӗншӗн пӑшӑрханни ҫинчен теприне сасӑпах пӗлтерме хӑяймарӗ. Апла пулин те статистсенчен тытӑнса аслӑ режиссера ҫитиччененех ӑнланчӗҫ: сценӑпа зал хушшинчи сыхӑну татӑлчӗ, вӗсене халӗ сивӗ пушлӑх уйӑрса тӑрать. Никам та ҫакна ӗненесшӗн пулмарӗ, кашниех хӑй ӑшӗнче иртнӗ вӑхӑта аса илме тытӑнчӗ. Анчах тахҫан кӑмӑла хуҫнӑ япаласем паян та пулма тивӗҫлӗ тесе кам ӗнентерме пултарӗ? «Ҫук, тивӗҫлӗ мар,— шухӑшларӗҫ пурте.— Кунта темӗнле начар япала сиксе тухнӑ пулӗ. Залпа сцена хушшинчи вӑрттӑн ҫыхӑнӑва тӗрӗслесе тӑракан камертон пӗрремӗш хут кӗтмен сасӑ кӑларчӗ-ши вара? Капла пулма пултараймасть. Эппин...»

Вырӑнти драматургсем ҫырнӑ пьесӑсенчен нумайӑшӗ ял пурнӑҫне сӑнласа параҫҫӗ. Театр кунҫулне пӗлекеншӗн паллӑ ӗнтӗ: ҫак пьесӑсем халӑх йӑли-йӗркине, шухӑш-кӑмӑлне, унӑн кулленхи аталанӑвне, кӗскен каласан — наци сӑн-сӑпатне чылай уҫӑмлӑн кӑтартрӗҫ. Пьесӑсенчен чи лайӑххисем классикӑлла драматурги никӗсне хывӑнса юлчӗҫ.

Юлашки ҫулсенче те пирӗн драматургсем ытларах ял еннелле туртӑнни курӑнчӗ. Анчах та тӳрех каламалла: ӑнӑҫлӑ пьесӑсем сахал ҫырӑнчӗҫ. Авторсем факт ҫинчен факт ҫине сиккелерӗҫ, пулӑмсен тымарне шыранӑ чух вара час-часах пӑтрашкаларӗҫ, шырама пӗлменни те сисӗнчӗ. Ҫапла вара, малтанах калаҫса татӑлнӑ пек, темиҫе драматург пӗр евӗрлӗ пьесӑсем ҫырчӗҫ. Тӗрлӗрен калаҫрӗҫ персонажсем, тӗрлӗ ӗмӗтпе хавхаланса ҫунчӗҫ, ҫапах та пурнӑҫӑн илемӗ, малалла пурӑнма, ӗҫлеме хӗтӗртекен вӑйӗ курӑнмарӗ.

Ҫавӑн пек пьесӑсенчен пӗри пулчӗ те ӗнтӗ Юмановӑн «Шӑнман пӑр ҫинче» комедийӗ. Театр репертуарӗ пуянах пулманран тата пьеса авторӗ нумай ҫул хушши театрпа ҫыхӑнса ӗҫленӗрен, ӑна кӳрентерме хӑяймасӑр, тенӗ пек, худсовет Юманов пьесине лартма йышӑнчӗ. Мӗн тӑвӑн, такамшӑн та паллӑ-ҫке: артист яланах хӑй выляс тенӗ пьесӑра е рольте выляма пултараймасть. Хушнине те итлес пулать. Халь акӑ...

Анатолий Степанович питне сивӗ ҫапрӗ. Артистсем хӑй ҫине чӗнмесӗр, ыйтуллӑн пӑхнине вӑл курса ҫеҫ мар, пӗтӗм кӗлеткипе туйса ӑнланчӗ. Пулса иртнин сӑлтавӗ

хăйĕнчен те сахал мар килнине вăл пĕлчĕ ĕнтĕ, çавăнпа та хăйне лăплантарас тесе тата тĕрĕслĕхе тӳрех çиеле кăларасран хăраса, хуйхăллăрах сăн-сăпатпа çӳрерĕ, çынсемпе асăрханса калаçрĕ. Аслă режиссер мăнаçлăхне тытса тăма хевти çитмерĕ-и унăн, е вăл ăна халь юриех пытарчĕ-и — сасси те Анатолий Степановичăн яланхи пек вăйлăн янăрамарĕ. Ку, чăнах та, тĕрĕс мар тактика пулчĕ пулмалла, кĕçех вăл хăй те йăнăш тунине сисрĕ.

— Анатолий Степанович,— йăлăннă пек пăхрĕ ун çине гримне çума та манса кайнă Тамара.— Анатолий Степанович...

Аслă режиссер, Тамарăн хуйхăллă сănне курса тĕлĕннĕ пек, чарăнса тăчĕ. Çемçен кулса, пĕр сăмах хушмасăрах иртсе каясшăнччĕ вăл малтан, анчах нимĕн чĕнмесĕр иртни те тĕрĕсех пулмасса вăхăтра тавçăрса илчĕ те:

— Ну мĕн?.. Нимех те мар. Пĕр çĕрте йăнăш турăмăр. Çавă çеç,— тесе, малалла утса иртрĕ.

Тамара вырăнтан та хускалмарĕ. Мĕн пулса иртет вара паян театрта? Хăçанганпа хатĕрленĕ комеди те...

Хăй патнелле майĕпен утса килекен Володьăн çутă сăн-пичĕ ăна кăштах хаваслантарчĕ. «Шанчăк пур-ши вара?— шухăшларĕ хĕр.— Эп пĕтĕмпех намăс куртăмăр, тесе».

— Мĕн кулатăн?— сиксе ӳкрĕ вăл çапах та Володя çине.

— Комедире кулаççĕ,— ответлерĕ Володя, нимĕн пулман пек, унтан, Тамарăн сулахай аллине тытса, ăна аристократла хуçланса чуптурĕ.

— Кай-ха,— Тамара ăна тĕртсе яма хăтланчĕ.

— Манран вунă утăмра пьеса авторĕ тăрать. Ман шутпа, эс мана мар, ăна ытларах çилленнĕ,— малтанхи пекех лăпкăн ответлерĕ Володя.— Кайса тĕртсе кăлар-ха ăна сцена çине...

— Тен, вăл айăплă та мар...

— Чи айăпли — вăл.

— Мĕнле тӳрех çапла калатăн-ха эс?

— Эп йăнăшмастăп. Пьеса — виле. Ăна чĕртме талантлă коллектив та пултарас çук. Пирĕн вара кунта...

— Шăп... Такамсем килеççĕ...

Спектакль пĕтнĕ иккен. Аслă режиссерпа автор халăха пуç тайнă. Куракансем килĕсене саланнă. Артистсем хăйсен пӳлĕмĕсене каяççĕ.

Тамарăпа Володя патне тăваттăн-пиллĕкĕн çывхараççĕ: Валентина тата темиçе çамрăк статист. Валентина, Тамарăпа танлашсан, ун çине айăпланă пек сиввĕн пăхса:

— Шăнман пăр çине тăрса юлтăмăр,— терĕ. Унтан Володьăна чăрсăррăн сăнарĕ те ним чĕнмесĕр малалла уттарчĕ.

— Тĕлĕнтермĕш Валентина,— кулса ячĕ Тамара, лешĕ куçран çухалсан.

— Тĕлĕнмелли те çук,— хирĕçлерĕ Володя.— Пурте тĕкĕр çинчи пек... Юрĕ, кайрăмăр. Паян калаçу пулать пек туйăнать.

Çав вăхăтра Анатолий Степановичпа пьеса авторĕ Федор Федорович Юманов режиссер кабинетĕнче ларатчĕç.

— Ах, намăс, намăс! Юрĕ, эпĕ хамăн айăпа йышăнатăп,— пуçне чиксе каларĕ Федор Федорович.— Тухатăп та калатăп...

— Эсĕ хăвăн айăпна йышăнсан, эп пĕчченех айăплă пек пулса юлатăп. Кашниех ыйтма пултарать — пьеса начар пулнине аслă режиссер курман-и? Çук, тăванăм, пĕрле йăнăш турăмăр та, ăна пĕрле тӳрлетме тăрăшмалла.

— Мĕнле майпа? Мĕнле майпа!— тарăхса кăшкăрчĕ Юманов. Унтан, Анатолий Степанович хăй çине кӳренсе пăхнине асăрхаса, каллех лăпланчĕ.— Каçар. Вĕриленни халь усăсăр.

— Юрать-ха эс çакна та пулин туятăн... Калаçмасăр ирттерме çук ку япалана. Артистсем пурте пăлханаççĕ. Осветитель таранах. Калаçăпăр, анчах çиелтен кăна... Пьесăна репертуартан кăларма тивет, ним тума та çук.

— Çапах та, кала-ха тӳррипе, ăна репертуара кĕртнĕ чух паянхи кун çапла вĕçленессе кĕтме пултарнă-и эс?

— Ха-а! Пьесăна мана килсе панă чух эс ху паянхи кун çапла вĕçленессе шухăша илме пултарайнă-и? Кала-ха çавна.

— Пĕтĕм пурнăç пĕтрĕ,— Юманов аллисемпе пуçне ярса тытрĕ.— Пĕтĕм пурнăç пĕтрĕ!

— Çĕкле пуçна. Сан ятна республика пĕлет. Искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, мăнкăмăллăхна ан çухат. Искусствăра ялан такăр çул пулмасть. Эксперимент вăл, тăванăм, таçта та илсе çитерет.

Федор Федорович пуçне çĕклемерĕ. Анатолий Степанович хăрушлăх калăпăшне пĕрремĕш хут лайăх курнă пек, сехĕрленсе ӳкрĕ.

Пӳлĕме шаккарĕç. Юманов, хăвăрт сиксе тăрса, чӳрече патне кайрĕ — çăлтăрсем çине пăхма тытăнчĕ.

— Кĕрĕр,— терĕ, сассине çирĕплетсе, Анатолий Степанович.

Кабинета режиссер помощникĕ Петр Иванович Шурков кĕчĕ.

— Çынсем калаçасшăн,— салхуллăн пĕлтерчĕ вăл.

— Кĕçĕрех-и?— васкаса ыйтрĕ Анатолий Степанович, тарăхнине пытармасăр.

Юманов Шурков еннелле çаврăнчĕ.

— Кĕçĕрех, халех,— Шурков галстукне майлам пекки турĕ. Аслă режиссер çине те, автор çине те пăхмарĕ хăй.

— Ăçта пуçтарăннă?

— Вуниккĕмĕшĕнче.

— Пыратпăр.

Шурков тухса кайрĕ.

— Асту,— çаврăнчĕ Анатолий Степанович юлташĕ еннелле,— лáпкă пулмалла. Ытлашши калаçмалла мар. Сыхланмалла. Тапăнма... Тапăнассине эпĕ хам çине илетĕп. Иксĕмĕршĕн те çакă паллă пулмалла: паянхи премьера — пĕчĕк çеç инкек. Вăл пирĕн коллектив авторитетне пăсма пултараймасть, анчах кашнин хăйĕн халăх умĕнчи ответлăхне ӳстермелле. Çак шухăша пирĕн артистсене пĕлтермелле. Ĕç трагеди пек ан курăнтăр...

Вĕсем кĕнĕ чух залри çынсем хĕрсех калаçатчĕç.

Анатолий Степанович çăмăл утăмпа сĕтел патне çитсе тăчĕ те çынсене шăпланма паллă пачĕ. Юманов малти ретри пĕрремĕш вырăна йышăнчĕ. Çынсем шăпланчĕç.

— Паянхи пуху производствăлла канашлу пекки пулать пуль ĕнтĕ. Эсир мĕнле шухăшлатăр?

Анатолий Степанович савăнăçлăрах пулма тăрăшрĕ. Пиншакне хывса пукан хыçĕ çине çакрĕ, ытлашши хӳхĕм костюмĕ ăна халăхран уйăрса тăрасран шикленчĕ, тейĕн.

— Пирĕншĕн пулсан — пурпĕрех. Производствăлла канашлу пулсан — пултăрах,— терĕç вырăнтан.

— Президиум суйлатпăр-и?

Президиум суйласа тăма килĕшмерĕç.

Шурлăх тăрăх утакан çын тĕмеске çинчен тĕмеске

ҫине асӑрханса пускаланӑ пек, Анатолий Степанович майӗпен, ҫемҫен калаҫма тытӑнчӗ.

— Ҫапла, паянхи кун пирӗншӗн савӑнӑҫлах пулмарӗ. Куракан пире ӑнланмарӗ... Тем каласан та, спектакльте ҫитменлӗхсем пулчӗҫ, темелле. Эпир рольсене ӑнлансах ҫитеймерӗмӗр-ши? Халӗ манӑн нихӑшне те уйрӑм палӑртса калаҫас килмест. Кашни мӗн пултарнине тунӑ пулсан... ҫук, кашни хӑйӗн умӗнчи ответлӑхне туйнӑ пулсан, тен, паянхи намӑса — намӑс тесех калӑпӑр — курман пулӑттӑмӑр эпир.

Анатолий Степановичӑн сасси йывӑррӑн илтӗнчӗ. Сӑн-пичӗ ҫинче вӑл ҫак инкекшӗн чӗререн кулянни курӑнчӗ.

— Инкекшӗн чи малтан худсовет айӑплӑ, аслӑ режиссер айӑплӑ. Спектакле эпӗ хам хатӗрлерӗм.— Хальхи пурнӑҫ ыйтӑвӗсем пьесӑра ҫивӗччӗн тухса тӑнӑ пек туйӑнчӗҫ мана... ыттисене те. Ана лартма хатӗрленнӗ вӑхӑтра пьесӑра чылай ҫитменлӗхсем пурри курӑнчӗ. Эпир ӑна, хӑвӑрах пӗлетӗр, нумай лайӑхлатрӑмӑр — чӗлхе тӗлӗшӗпе те, сцена техники тӗлӗшӗпе те вӑл ҫӑмӑлрах, тирпейлӗрех пулса тӑчӗ. Пулса тӑнӑ пек туйӑнчӗ... Ахӑртнех, эпир пурне те курса ҫитереймерӗмӗр пулас... Чӗререн калатӑп, паянхи каҫ маншӑн — хӑрушӑ тӗлӗк пек...

Анатолий Степанович пуҫне усрӗ. Унӑн хурлӑхлӑ сассине нумайӑшӗ чӗнмесӗр итлерӗҫ. Хӑшӗ-пӗри аслӑ режиссера ӑшӗнче шеллесе те илчӗ. Чӑнах, тумхахсем пулкаланӑ та, паянхи пекки вара... Чаршав хупӑннӑ вӑхӑтра куракансем аран-аран ал ҫупнине итлеме аванах пулмарӗ. Ахалех фоторепортерсем хӑйсен «ҫиҫӗмӗсене» ҫиҫтерсе ҫӳрерӗҫ. Радио корреспонденчӗ аслӑ режиссер хыҫҫӑн кӑлӑхах чупрӗ. Лешӗ нимӗн те каласа пӗлтерме килӗшмерӗ...

— Авторӗ, Федор Федорович Юманов, мӗн калать?— ыйтрӗҫ вырӑнтан.

Юманова сӑмах пачӗҫ. Малтан хӑрани иртсе кайрӗ пулас: Юманов, хӑрушлӑхран пурпӗрех пӑрӑнса иртме ҫуккине ӑнланса, инкекпе килӗшме паҫӑрах шут туса хунӑччӗ те халӗ ак сӗтел патне йӗркеллех утса ҫитрӗ, калаҫма пуҫларӗ.

— Юлташсем,— терӗ вӑл шӑнса пӑсӑлнӑ пек хӑйӑлтатса.— Ман пурнӑҫра паянхи пек кун пӗрре те пулманччӗ-ха. Тӳрех каламалла, искусствӑра урӑх лайӑхлатма кирлӗ мар произведенисем сахал, уйрӑмах сӑмах искус-

ствинче. Ман пьесăна та лайăхлатма май пулнă е лайăхлатма кирлĕ пулнă.— Çапла ăнлантарни Анатолий Степановича пачах вырăнсăр пек туйăнчĕ, вăл автор çине салхуллăн пăхса илчĕ те каллех пуçне усса итлеме пуçларĕ.— Анчах та вăл мана пулса çитнĕ япала пек туйăнчĕ. Юлташсем тиркемерĕç. Ана сцена çинче лартма хатĕрленĕ вăхăтра эпĕ режиссер каланипе пурнпе те килĕшсе пытăм. Анатолий Степанович пултаруллă режиссер, вăл театрта нумайранпа ăнăçлăн ĕçленине республикăра кашни çын пĕлет ĕнтĕ. Çавăнпа та унăн сăмахĕсем маншăн, сцена саккунĕсене начар чухлакан çыншăн, кĕтнĕ сăмахсем пулчĕç...

Федор Федорович хăй пăтрашма тытăннине сисрĕ те сăмахне кĕтмен çĕртен татса хучĕ:

— Кĕскен каласан, эсир калаçăр-ха, юлташсем. Сирĕн шухăша пĕлес килет ман.

Юманов хăй вырăнне хăвăрт кайса ларчĕ.

Шурков сăмах илчĕ.

— Эпĕ ку спектакле мĕнле хатĕрленнине питĕ лайăх астăватăп. Кунта ларакансем ăна татăкăн-татăкăн анчах пĕлеççĕ пулсан, эпĕ вара — пĕтĕмĕшпех пĕлетĕп,— темле хыпаланса калаçма тытăнчĕ вăл. Унăн куçĕсем Анатолий Степанович çинче темиçе хутчен те чарăнчĕç. Лешĕ пуçне çĕклемерĕ, калаçакансем çине пăхмарĕ.— Паян психологилле кризис пулчĕ пулмалла. Пьесăна лартма хатĕрлесе çитернĕ пекех туйăннăччĕ мана. Анчах та паян сасартăк хăшĕ-пĕрисен сасси урăхла илтĕнсе кайрĕ. Килĕшӳсĕр нотăсем илтĕнчĕç. Эпĕ çамрăксем çинчен калатăп. Çамрăксем репетицисенче хăйсене начар мар кăтартрĕç. Ытти пьесăсенчи рольсене те куракан аван йышăнчĕ, тесе палăртнăччĕ хăй вăхăтĕнче. Мĕн каласси пур, паян...

Славикĕн тăнлавĕнчи юн тымарĕсем сасартăк карăнса кайрĕç, куçĕсем тĕтреленчĕç. Пуçĕ те йывăрланчĕ. Вăл хăйпе юнашар ларакан Тамара хĕрелсе кайнине ун çине пăхмасăрах сисрĕ. Володя сăн-пичĕ малтанхи пекех уçă. Халь-халь тăрăхлама тытăнас пек, хăмăр куçĕсем çивĕччĕн пăхаççĕ. Володя вырăнтан та хускалмарĕ, анчах вăл пĕрре пĕтĕм кĕлеткипе тăрр! чĕтресе илнине никам та сисмерĕ — пурте трибуна еннелле пăхатчĕç.

— ...Юлашки репетицире мĕн тума пултарни — çамрăк актер ӳсĕмĕн чи çӳлти картлашки мар. Паян эсир ĕç çинчен калаçатăр-çке-ха, юлташсем, çавăнпа та тӳрех каламалла: паян Тихонов актер хăй пултарнинчен начар

вылярĕ. Ҫтаппан ролĕ (ку рольте Володьăччĕ), ыттисемпе танлаштарсан, хăйне уйрăм тăракан роль. Ҫак роле вылякан артист хăйĕн партнерĕсемсĕр, пĕччен, тĕрĕс утăм тума пултараймасть: партнерсем ку рольпе пигĕ ҫирĕп ҫыхăннă. Ку ҫыхăнăва репетицире актерсем асăрханăччĕ ĕнтĕ. Паян вара Ҫтаппан... айăп ан тăвăр та, начарччĕ: вăл сцена ҫинчен мансах кайрĕ, партнерĕсене курмарĕ, сассипе те, хусканăвĕсемпе те вĕсене хупласа хучĕ...

Шурков, поражени тӳснĕ полководец пек, пуҫне хурлăхлăн усрĕ, шухăша кайрĕ, хушса хучĕ:

— Ыттисем хăйсен йăнăшĕсене сисрĕҫ пулĕ, тетĕп...

Шурков калаҫса пĕтерчĕ те Анатолий Степанович еннелле ҫаврăнчĕ.

Володя трибуна умнелле тухрĕ. Ун ҫине нумайăшĕ канăҫсăррăн пăхрĕҫ.

— Эп хам спецификăлла ушкăна лекнине куратăп. Актерсем этем туйăмĕсене кăтартаҫҫĕ. Тен, ҫавăнпа пуль манран малтан калаҫакансем пурте тенĕ пекех хăйсен туйĕмĕсем ҫинчен каларĕҫ: автора туйăннă, аслă режиссера туйăннă, режиссера пулăшакана та туйăннă. Мĕнех, туйăмсем пулсан — аван, эп туйăмсене хирĕҫ мар. Таврари пурнăҫа туйăмсемпе пĕлетпĕр. Эпĕ ҫакна ҫеҫ асăрхаттарасшăн: туйăмсем — шанчăксăр туссем. Вĕсем хăнăхни хыҫҫăн та кайкалаҫҫĕ. Тепĕр чух тата вĕсем хăйсен сăн-сăпатне улăштарма та хатĕр...

Володя лăпкăн та ҫемҫен калаҫрĕ. Ку пурне те тĕлĕнтерчĕ пулмалла. Кĕҫех вăл сасартăк сассине ҫирĕплетрĕ, сывлăш ҫавăрнă пек, кĕлеткипех хусканса илчĕ те хыттăн пĕлтерчĕ:

— Апла пулин те паян лартнă пьеса вилĕ... Идейи пархатарлă ĕнтĕ: ҫын чунĕ кĕрешӳре туптанса ҫирĕпленет, илемленет! Анчах та пьесăн ҫивĕч палăртнă тĕллевĕпе йĕркеллĕ куҫăмĕ ҫук. Унăн теми пирки те сăмах пымасть — тема суйласа илмелĕх те турă паман пулсан, искусство патне ҫывхарма та кирлĕ марччĕ... Эп репетицисенчех нумай ҫитменлĕхсем асăрхарăм, анчах та ун чух хама ытлах шанса пĕтерейменрĕм курăнать. Опытлă юлташсен авторитечĕ те пусмăрларĕ пулмалла мана. Ҫак сцена фокусĕсен ниме тăман юрăхсăр пуххи, искусство произведенийĕ пулса, куракан умне тухма тивĕҫлĕ марччĕ. Ку вăл ватă карчăка хĕрле тумлантарса качча панă пекех — ҫылăхĕ те, кулăшĕ те пĕрле. Паян лартнă комеди — ҫак енĕпе ҫеҫ комеди...

Володя ларать, унтан каллех хăвăрт сиксе тăрса, хăвăрт хушса хурать:

— Çамрăксем вара, çынсем каларĕш, юсанĕç-ха...

Анатолий Степанович пуçне те çĕклемерĕ. Володя калаçăвĕ ăна мĕнлерех тивет-ха тесе ун çине пăхакансем ун сăн-пичĕ улшăннине асăрхамарĕç. Чăнах та, куç умне тухса тăнă хăрушлăх, халĕ хăйен сăнне кăтартнăскер, аслă режиссерăн мĕнпур вăйне пĕр çĕре пĕрлештерчĕ. Çав вăхăтрах вăл малтанхинчен те лăпкăрах курăнчĕ. Кирек мĕнле пулсан та, вăл йăнăшсем сахалтарах турĕ — тума пултарнинчен. Тăнлавсенче юн тапнине туйма пăрахрĕ вăл, малтанах хытă пĕçерсе кайнă питçăмартисем сивĕнчĕç, çынсем сисиччен аслă режиссер кăкăр туллин сывласа илчĕ те, пуçне çĕклесе, калаçакан Володя çине питĕ лăпкăн, питĕ тимлĕн, чăрсăр хăюлăхпа пăхса ларчĕ. Унăн ăслă куçĕсенче халĕ вăл калаçакана хисеплени, каланă сăмахсенчен нумайăшне йышăнни тата çав вăхăтрах залра ларакансенчен нихăшĕ те пĕлме пултарайман вăрттăн япаласем çинчен пĕлсе тăни курăнчĕ. Унсăр пуçне, çав вăрттăнлăх паянхи кун йывăрлăхĕпе, халь çеç лартнă ыйтусене татса парассипе питĕ тачă çыхăннине те систерчĕç çав кăштах шĕвелме ĕлкĕрнĕ кăвак куçсем.

Володя каласа пĕтерсенех халăх шавласа кайрĕ. Çак йĕркесĕр шăв-шавра мĕнле кăмăл пуçпулса тăнине Анатолий Степанович тӳрех асăрхарĕ: Володьăна ырлаççĕ. Унăн çивчĕ сăмахĕсем кăштах хăракаласа тăракансене те хăюлăх пачĕç пулмалла. Ав, худсовет членĕ Валя Сурская та малалла тухса тăчĕ, сăмах ыйтрĕ.

— Анатолий Степанович!— кăшкăрса ячĕ вăл сасартăк халиччен хинчен урăхларах янăракан сасăпа.— Анатолий Степанович! Астăватăр-и, ку пьесăна эпир репертуара та ытла кăмăллăнах йышăнманччĕ курăнать. Кайран, ăна репертуара кĕртсен, актерсем ăна аран-аран вуласа тухсан, вĕсен сăнĕсем афиша вулакан качака сăнĕ евĕрлĕ марччĕ-и вара? Эсир çине тăнипе анчах пьеса кун курчĕ.

Валентина йĕри-тавра пăхса илчĕ те, юлташĕсем хăйпе пĕр шухăш-кăмăллă пулнине вĕсен куçĕсенченех курса, татах президиум сĕтелĕ еннелле çаврăнчĕ.

— Тихонов тĕрĕсех каларĕ. Пьеса, чăнах та, вилĕччĕ. Ăна чĕртсе эпир халтан кайрăмăр. Анчах вăл кĕçех сапаланса арканасси сире ăнланмалла марччĕ-и вара? Пĕр трюк хыççăн тепри — вĕсене тарăн шухăшпа çыхса

пымалла-çке!.. Эп çакна палăртасшăн,— вăл каллех юлташĕсем еннелле çаврăнчĕ,— начар пьесăсем лартни пире чыс тумасть, вăл пирĕн творчествăлла сисĕмлĕхе те мăкатать, эпир темлерех, ну, мĕнле калас, ялти драмкружокра выляксансем пекрех пулса тăратпăр. Татăклăн каласан, эпир хамăр мĕн тума пултарнине кăтартаймастпăр! Пирĕн пултарулăх та чаксах пырать. Çапла вĕт, юлташсем!

— Çапла, çапла,— терĕç вырăнтан.

Анатолий Степанович çынсем çав тери хавхаланса, хĕрÿленсе кайнине асăрхарĕ те, сăмах илсе вĕсене лăплантарма хатĕрленнĕччĕ çеç, çав вăхăтра ватă актер Тимеров Александр Осипович сас пачĕ:

— Пĕр-ик сăмах пур... Ирĕк парăр-ха.

— Тархасшăн, Александр Осипович.

Тимеров йăлана кĕнĕ хусканупа кĕсйинчен тутăр кăларса тарлă мăйне шăлса илчĕ те лăпкăн, шăппăн калаçма пуçларĕ.

— Аван калаçатăр эсир, итлетĕп те. Хĕрсех кайрăр. Питĕ кăмăллă...— вăл кулса илчĕ. Унтан самантлăх çиçсе çуталнă сăн-пичĕ тĕксĕмленчĕ унăн. Александр Осипович сассине те улăштарчĕ.— Ку асар та писер калаçу ахаль çĕкленмерĕ пек туйăнать мана. Унăн маларах пулса иртмеллеччĕ пирĕн хушăра... Чăнах та, эпир юлашки вăхăтра ытла та пĕр пек вылятпăр. Темĕнле стандартлă шай тупăнчĕ пирĕн. Начар темех те çук пек, çапах та халăха пăлхатса калаçтаракан, чуна килĕшекен, тăнран яракан! спектакльте выляманни нумай пулать ĕнтĕ. Мĕнле, эпир чăнах та çав тери начар выляксансем-и? Пăхатăп та çакна асăрхатăп: талантлă çамрăксем хушшинче пурăнатăп эп. Аçта-ши, эппин, талантлă спектакльсем? Аçта вĕсем?.. Анатолий Степанович, эсĕ тÿррипе каланăшăн кÿренес çук ĕнтĕ. Çакна палăртмалла: санăн тимлĕх ĕлĕкхинчен чылай чакрĕ. Штампсем тыткăна илме пăхаççĕ сана. Мĕн тăвас тетĕн, чăн сăмахăн суйи çук, теççĕ. Пĕр çул çеç пурăнмастпăр çĕр çинче. Тав турра, халăх ятне çĕклемелĕх, ăна тивĕçтерекен спектакльсем те пурччĕ. Юлашки вăхăтра лăплантăмăр пулас: халăх театра йышлăн çÿрет, финанс планĕ тулса пырать. Тата мĕн кирлĕ?.. Çук, тăванăмсемĕр, капла тек пулмасть. Паянхи кун — юлашки... Анатолий Степанович, нумайăшĕ санран килет. Эсĕ — аслă режиссер. Худсовет ларăвĕсенче сан авторитет сулмаклăрах. Ĕçе улăштармаллах. Малашне ку çул çинчен тухмалла

пулать... Халăх тенĕрен... халăх та улшăнма пултарать. Вăл барометр пекех, театрта мĕнле çанталăк тăнине аван кăтартать...

Тимеров ларчĕ, кăвакарнă çӳç пайăркисене аллипе хуллен майлаштаркаларĕ.

Анатолий Степанович, унăн сăмахĕсенчи тĕрĕслĕхе ăнланать. Çапла, унăн авторитечĕ пысăк. Çапла, вăл хăй мĕн тăвас тенине тăватех. Çапла, вăл юлашки вăхăтра... Мĕн юлашки вăхăтра? Ах, эп мар-и-ха сана çĕклерĕм, хаклă тусăм? Эп мар-и сан çулна такăрлакан? Халăх артисчĕ!

Аслă режиссер Тимеров çине пăхмарĕ. Вăл йывăррăн çĕкленчĕ те, маларах асăрханса калаçма шут тунăскер, халĕ вара тӳрех çапла пуçларĕ:

— Репертуара çирĕплетесси манран çеç килмест. Унта çичĕ çын. Эп хам шухăша çирĕп тытни сире хисеп тумасть. Чăнлăха çапăçса çирĕплетмелле. Çапла мар-и, Тихонов? Çапла. Çапла, Александр Осипович! Эп йăнăшатăп пулсан, тӳрлетĕр çийĕнчех. Мĕншĕн паянхи куна çитермеллеччĕ? Юлашки репетицире спектакле эсирех йышăнтăр. Паян ăна эсирех пĕтерсе хутăр. Айăпĕ — ман çинче тата автор çинче иккен! Çук, хаклă тусăмсем, ку ытла та лутсĕр, тĕлĕнтермĕш япала! Анчах та, юрать, эп килĕшетĕп, пурте эсир каланă пекех пултăр. Халь мĕн тумалла ĕнтĕ манăн? Çĕнĕ репертуар хатĕрлесе çирĕплетмелле мар-и? Çук, тăванăмсем. Эпир çак спектакле чĕртетпĕрех. Эпир, сирĕнпе...

Çак кĕтмен çĕртен пуçа килнĕ юлашки шухăш Анатолий Степановича савăнтарсах ячĕ. Вăл калаçма чарăнчĕ. Ун çине тĕлĕнсе пăхрĕç.

«Ах, шуйттан илесшĕ, маттур хăтланать!»— шухăшларĕ те хăй ăшĕнче Володя тусĕ патнелле майĕпен утса кайрĕ. Лешĕ, аслă режиссерăн юлашки сăмахĕсенчен тĕлĕннĕскер, çав вăхăтра ун çине çурри ĕненсе, çурри ĕненмесĕр пăхкаларĕ.

Сасартăк вăл выранĕнчен çĕкленчĕ те пурне те илтĕнмелле хытăн, татăклăн каларĕ:

— Репертуара вăйлатма тата урăх майсем те пур!

Вара, çынсен шухăшне малтанах пĕлсе тăнă пек, вĕсен ирĕкне пурнăçлама ĕмĕтленнĕн, çăмăллăн утса трибуна патне тухрĕ.

— Эп калас тени сирĕншĕн ытла çĕнех пулас çук,— калаçма пуçларĕ вăл, хăй нимĕн чухлĕ те пăлханманнинчен тĕлĕнсе.— Чăнах та çĕнĕ мар. Эсир хăвăрах пĕ-

летĕр театрти çитменлĕхсене, йывăрлăхсене — кун пирки çулталăк маларах хаçатра та çырнăччĕ. Тӳррипе каласан, критика театр ĕçне тĕрĕс хаклать. Анчах эпир хамăр ытлах хыпса çунмастпăр курăнать ĕçе йĕркелессишĕн...

Залра малтанах пăшăлтатса калаçни илтĕнчĕ, кăшт тăрсан, сасăсем хыттăнах илтĕнме тытăнчĕç. Лару-тăру çакăн пек çаврăнса ӳкессе пачах та кĕтмен Анатолий Степанович Славик сăмахне пӳлсех ун патне пычĕ:

— Итле-ха, çамрăк çыннăм, çапла демагогла калаçни сана вырăнсăр пек туйăнмасть-и? Мĕнпе çирĕплетсе кăтартма пултарăн эс хăвăн сăмахусем тĕрĕс иккенне? Ав, çынсем те ыйтаççĕ...

Зал шăпланчĕ. Пурте Славик мĕн каласса чăтаймасăр кĕтрĕç.

— Калаçу шăпах çавăн патне çитнĕччĕ те, — терĕ вăл. — Ĕç акă мĕнре: республикăри драматургсем халăх валли паянхи кун ыйтăвĕсене уçăмлăн çутатса паракан паха пьесăсемех çыраймарĕç-ха. Талантлă драматургсем çукрах теме хăраса тăрар мар. Анăçлăрах ĕçлекенни те пĕр Николай Мелентьев анчах. Ытларах ют чĕлхесенчен куçаратпăр. Классиксем патне кивçене каятпăр. Ку вăл начарах та мар, тейĕпĕр, пĕр енчен илсен. Анчах çав вăхăтрах начарри те сахал мар-çке. Илсе пăхар-ха паян пыракан пьесăсене, вырăнти авторсем çырнăскерсене. Пурнăçăн çивчĕ проблемисене курмастпăр эпир вĕсенче. Ашăх вĕсем. Пахалăхĕ енчен пăхсан та — начар... Мана, театр çыннине, çак сăмахсене калама пĕрре те çăмăл мар, анчах та каласах пулать. Унсăр пуçне, суйласа илсе репертуар планне кĕртнĕ пьесăсенчен те мĕнлерех спектакльсем пулса тухаççĕ-ха пирĕн? Александр Осипович тĕрĕс びаларĕ: темле стандартлă шай тупăнчĕ, терĕ. Çав шайран та аяла анма юрамасть, çӳлерех хăпарма эпир хăратпăр пулас. Йăнăшма та хăратпăр! Тиркешекен те çук-çке — хамăр хушăра пĕрне-пĕри хăюллăн асăрхаттарса калани çук. Килти критиксем, пирĕн вăя анализ туса кăтартас вырăнне, пире час-часах ырлаççĕ. Çулталăк маларах хаçатра çырнăччĕ, терĕм. Ана кунти критик çырман. Вăл Мускавран ятарласах пирĕн ĕçе тĕпчеме килнĕскер пулнă. Эсир астума тивĕçлĕ ĕнтĕ: Михаил Немцев. Тĕрĕс çырнă вăл — пирĕн режиссура начар. Çĕршыври чи лайăх театрсенче усă куракан çĕнĕ меслетсене йышăнмани, йышăнма хăрани, творчество тĕлĕшĕпе нимĕн чухлĕ те малалла аталан-

манни, аталанма тăрăшманни — çакăн пек «чирсене» палăртнăччĕ вăл. Ку та сирĕншĕн тахçанах паллă.

Тата тепĕр çитменлĕх пур — çамрăксем сахал пирĕн: чăнах та, камран вĕренес, кампа ăмăртас? Çавна пула артистсем те питĕ лăпкă пурăнаççĕ. Тĕрĕс каларĕç кунта хăшĕ-пĕрисем: артистсене режиссерăн аталантармалла, вĕсем мĕн тума пултарнине шута илсе, вĕсен пултарулăхĕпе туллин усă курмалла. Анчах капла искусство ытла та мĕскĕне тăрса юлмасть-и, тусссем! Эпир артистсем-çке. Творчество тĕлĕшĕнчен пирĕнтен кашни — хăйне уйрăм тĕнче. Чăн, артистсене режиссер та аталантарать, çапах артистăн хăйĕн те чунĕ çулăмлансах тăмалла. Профессиллĕ ăсталăха ӳстерме тăрăшман артист (артист çеç мар — кирек кам та!) нихăçан та ăнăçу тăваймĕ. Мĕншĕн тесен унăн чунĕ сӳннĕ. Вăл — режиссер сăмахне итленипе тĕрлĕ хусканусем тăвакан пукане! Пуканесен театрне хурлас теместĕп эпĕ. Çапах та пирĕн пуканесен театрĕ çеç пулмалла мар.

Зал шăп. Славик калаçма чарăнчĕ пулин те, çынсем пĕр сăмах та чĕнмерĕç. Анатолий Степанович та çак шăплăха пăсма шикленсе тăчĕ. Вăл, Славикрен инçех те мар лараканскер, каччă калаçма чарăнсан та вырăнтан хускалмарĕ, çынсем çине унчченхи пекех курмасăр, çиелтен пăхрĕ. Унăн пуçĕнче темле шухăшсем хĕвĕшетчĕç пулас çав вăхăтра, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн помощникĕн пăлханчăк сăн-сăпатне те, Юманов залран тухса кайнине те асăрхамарĕ. Славик сывлăш çавăрса илчĕ, самантлăх шухăша кайса пуçне чикрĕ, унтан ăна хăвăрт çĕклерĕ те каллех калаçма пуçларĕ. Хăйне тимлесех итленĕрен пулмалла — вăл халь майĕпентерех калаçрĕ. Сасси те унăн малтанхинчен чылай çемçерех, лăпкăрах илтĕнчĕ.

— Тепĕр хут калатăп: эп халь каланă шухăшсем çĕнĕ мар. Эп кăтартнă çитменлĕхсене Немцев хăй статйинче манран лайăхрах кăтартса панă. Апла-тăк, мĕншĕн асăнас-ха иртнине? Пĕтĕм ĕçĕ те çавăнта — ку пирĕн театршăн иртни пулайман çав. Ку — хальхи, паянхи. Асăннă йывăрлăхсене çĕнтерсе тухайман театр. Çакна эпир паянхи премьерăра питех те уçăмлăн куртăмăр. Акă, пĕрерĕн-пĕрерĕн калатăп: Юманов пьеси начар — пĕр тĕреклĕ шăнăр, интрига шăнăрĕ çук унăн (çакна Тихонов тĕп-тĕрĕс палăртрĕ), режиссура начар (астăватăр-и: монтировочнăй репетици те вăйăн-шайăн иртсе кайрĕ, спектакль пынă чух вара сцена çинче сылтăмпа

сулахая манни те пулчӗ), актерсем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ... Юлашкинчен калани, чӑн та, сирӗн кӑмӑлӑра хуҫать пуль. Ҫапах та ан пӑшӑрханӑр. Сире те ҫӑмӑлах мар... Анчах та театр актертан пуҫланнине кам пӗлмест? Эпир ак рольсене пӑхмасӑр калама вӗренетпӗр те режиссер кӑтартнӑ тӑрӑх мизансценӑсем вылятпӑр. Актерӑн шухӑшне, фантазине тахӑшӗ морфий парсах ҫывратса янӑ, тейӗн... Ҫитӗ. Ҫакӑн ҫинчен калаҫмалла-и пирӗн? Йышӑнар та хамӑр намӑса... Репертуар пирки...

Анатолий Степановичӑн, ҫак сӑмахсене илтсен, тӗлӗрни те иртсе кайрӗ. Вӑл пуҫне ҫӗклерӗ, пӗтӗм кӗлеткипех Славик еннелле ҫаврӑнса ларчӗ, ҫамрӑк режиссер мӗн каласса кӗтме пуҫларӗ. Актерсем те вӑхӑтлӑха кӗшӗлтетсе илчӗҫ, пӑшӑлтатса калаҫма пуҫларӗҫ...

— ...Репертуар пирки виҫӗ сӑмах... Эп асамҫӑ мар. Ҫавӑнпа та паянхи репертуара кӗрекен спектакльсене урӑххисемпе улӑштарма пултараймастӑп. Улӑштарма ыйтмастӑп та. Юманов пьеси пирки Анатолий Степанович халь ҫеҫ калани илӗртӳллӗ, анчах усӑсӑр. Эпир акӑ мӗн тума пултаратпӑр: кашни артист кашни спектакльте чунне парса вылятӑр. Чун шухӑшпа хӑюллӑ. Апла тӑк, шухӑшламалла! Юлашкинчен ҫакна пӗлтеретӗп,— терӗ Славик, сылтӑм аллине ҫӗклесе.— Ман патра пӗр пьесӑн алҫырӑвӗ пур. Авторӗ — инженер, ГЭС тунӑ ҫӗрте ӗҫлет... Ана Анатолий Степанович та пӗлет-ха,— аслӑ режиссер хӑй вырӑнӗнче канӑҫсӑррӑн хусканса илчӗ.— Пьеси шухӑшлаттараканскер. Пирӗншӗн те, куракансемшӗн те вӑл интереслӗ пулассӑн туйӑнать. Ҫитес вӑхӑтра ҫав материалпа ӗҫлеме кӑмӑл пур...

Славик калаҫма чарӑннӑ-чарӑнманах Анатолий Степанович ура ҫине тӑчӗ те, васкамасӑр утса, ҫамрӑк режиссер патне ҫывхарчӗ. Унтан сасартӑк кӗрлесе кайнӑ ҫынсене лӑпланма паллӑ парса, директива вуланӑ пек лӑпкӑн та мӑнаҫлӑн калаҫма тытӑнчӗ:

— Вячеслав Кудрявцев нумай каларӗ, ӗненмелле каларӗ. Итлерӗм-итлерӗм те, чун хурланса кайрӗ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен пирӗн наци драматургийӗ ҫук, мӗншӗн тесен пирӗн театрта пултаруллӑ режиссерсем ҫук, мӗншӗн тесен актерсем те вӑй хурса ӗҫлемеҫҫӗ. Мӗн хавхалантарчӗ-ши ҫамрӑк ҫынна ҫапла сӑмах ҫаптарма? Калама ҫук пысӑк ответсӑрлӑх ку. Калама ҫук пысӑк ответсӑрлӑх тата... пурнӑҫа пӗлменни, ӗҫри юлташӗсене хисеплеменни. Пурнӑҫ ҫине историк куҫӗпе пӑхма хӑнӑхманни те палӑрать кунта..

Анатолий Степанович хăш! сывласа пуçне чикрĕ, пĕр вăхăт чĕнмесĕр тăчĕ. Унтан каллех...

— ...Наци драматургийĕ пур пирĕн, режиссерсем те ĕçлеççĕ, актерсен те вăй сахал мар. Чăваш театрĕн историйĕпе çиелтен çеç паллашнă çыншăн та çакă куçкĕрет. Чăн, Гогольсем, Шекспирсем çук пирĕн, анчах вĕсем кашни çул пулмаççĕ. Театр вара кашни кунах ĕçлеме тивĕç. Пирĕн финанс планĕ пур, мĕншĕн тесен эпир — патшалăха тупăш паракан организаци... Михаил Немцев статйи пирки пирĕн тахçанах калаçу пулнă. Тенденцилле статья, тесе йышăнтăмăр эпир ун чух ăна. Чăвашла та пĕлмен критикшăн чăваш театрĕпе чăваш куракане хушшинчи çыхăнăва тĕрĕс хаклама, чăн та, йывăр ĕнтĕ. Эпир ăна ăнланатпăр... А сан, Кудрявцев, çынсене вĕрентме иртерех-ха. Малтан хăвăн вĕренес пулать. Институт вăл аван. Анчах чăн-чăн ăсталăх театрта ĕçленĕ чух туптанать. Ан ман çавна... Паянхи калаçу пуриншĕн те усăллă пулчĕ пуль, тетĕп. Вăл саншăн уйрăмах усăллă пулма кирлĕ. Юманов пьесине эпир репертуартан кăларма пултараймастпăр. Сан инженеру пирки вара мĕн те пулин татăклăн калама иртерех-ха. Халлĕхе çав алçырăвне никам та вуламан. Ăна пĕр çын хак панипех пысăк ĕçе кӳлĕнекен ытла та ăссăр пулмалла... Ман шутпа, юлташсем, çакăнпа вĕçлетпĕр те пуль диспута, а санпа эпир, Вячеслав, кайран та калаçкалăпăр. Пушă вăхăт тупăнать...

Анатолий Степанович сăмахне лăпкăн вĕçлерĕ. Вăл пурне те ăнланать, пурне те тĕп-тĕрĕс виçсе хак панă, çынсем курманнине те курать, тейĕн.

Çынсем те урăх калаçса тăма кăмăл тумарĕç. Славик темĕн каласшăнччĕ, анчах та ун çумне пырса тăнă Володя ăна чарчĕ.

— Паянлăха çитĕ. Пĕтĕм ĕçне пăсса хума пултаратăн,— терĕ вăл. Хĕрсем те килĕшрĕç унпа.

Темле майпа-çке залран тухнă чух алăк умĕнче Славикпе аслă режиссерăн юнашар утма тӳр килчĕ. Асли çамрăккине хулпуççинчен лăпкаса илчĕ, малалла иртерсе ячĕ.

— Хăватлă çаптартăн паян, маттур.

Славик ним калама аптрарĕ те хирĕç сăмах хушмасăрах иртерсе ячĕ. Мĕн тăвăн, пиçсех çитмен-ха ун чунĕ çакăн евĕрлĕ тытăçусенче. Қаланă пулсан та, мĕн калĕччĕ вăл Анатолий Степановича? Ăнланчĕ вăл аслин тактикине. Вăл сăмахпа шăлма пултарнине куçăн курса

ененчĕ, çынсен чун хусканăвĕсене тĕрĕс туйса, весене ӳлĕртме пĕлнине те курчĕ. Юрĕ, малалла мĕн пулĕ-ха.

## VIII

Сĕтел хушшинче вăл пĕчченех ларать.

Çак кунсенче Славик пĕрмаях канăçсăр çӳрерĕ. Чăнах та, вăл хăйне хăй çынсем умĕнче тытма пĕлнĕрен çех никамах та ун пирки сăмах-юмах хускатмарĕ, мĕншĕн тесен унăн ĕçри юлташĕсем вăл кӳреннине те, ăнăçсăрлăхшăн питĕ кулянине те асăрхамарĕç. «Халĕ хамăн туйăмсене ирĕке ямалла мар»,— шухăшларĕ вăл.

Яндушовпа тĕл пулни паян эрне çитет.

Славик инженер— алçырăвне тишкерет. Пĕтĕмĕшпе илсен, Яндушовăн «сценисем», чăнах та, сценăна шăнăçмаççĕ. Темĕнле, пьеса евĕрлĕ çырнă повесть пекрех пулса тухнă. Шупашкар çывăхĕнчи пĕр ялта çуралса ӳснĕ чăваш каччи агрегат заводĕнче ĕçлеме пуçлать. Вăл — инженер, анчахрах институт пĕтернĕ. Çынсене хавхалантарма, ĕçе пĕтĕçтерме пĕлекен ăста специалиста иккĕмĕш çулнех НОТ лабораторин начальникĕ туса хураççĕ. Произведенири тĕп ĕçсем шăп çак вăхăтран пуçланаççĕ те ĕнтĕ. Герой тĕрлĕ кăмăллă çынсемпе калаçать, кашнин пултарулăхне тишкерет, завод ĕçне ăслăлăх никĕсĕ çинче йĕркелеме тăрăшать. Çак ĕç — унăн пурнăçĕ. Анчах пурнăç çулĕ ялан такăр пулмастьçке. Чылай йывăрлăхсемпе кĕрешме тивет çамрăкăн. Карьерăшăн çунакан цех начальникне те тăрă шыв çине кăларать вăл, творчество туйăмне çухатнă мăк каска пек руководительсене те вырăнтан хускатать тата ытти те... «Аван повесть,— шухăшлать Славик,— анчах инженер ĕçри юлташĕсене сцена çинче курасшăн-çке-ха. Мĕнех, кĕрешӳ вăйлă. Ку — сценăшăн чи кирли. Сăнарсем те типлă».

Каçхине çичĕ сехетре вĕсем эрне маларах ларнă кафере каллех тĕл пулчĕç.

Яндушов премьера кунне залраччĕ. Мĕн пулса иртнине вăл пĕлет. Çĕрлехи пуху çинчен ăна никам та нимĕн те каламан-ха. Ку ăнăçсăрлăхшăн кашниех кăшт айăплă тесе шутлать пулас вăл. Çапах та инженер ун çинчен сăмах хускатмарĕ.

Çакăн пек сăпайлăха Славик çийĕнчех палăртса хакларĕ, уншăн çĕнĕ юлташне ăшĕнче тав турĕ, анчах калаçура пурпĕрех ку япала иккĕшне те тăвăрласса тĕрĕс ăнланса, тӳрех çапла каласа хучĕ:

— Премьера ăнаççăр пулчĕ пирĕн... Тар çитмерĕ...
Славик сасси тата тĕлсĕр пекрех илтĕннĕ юлашки сăмахсем лару-тăрăва инженер умĕнче аванах уçса кăтартмарĕç пулин те, Яндушов çакна ăнланса юлма ĕлкĕрчĕ: каччă кулянать, хăйшĕн те, театршăн та.
— Пурнăçра пулкалать,— терĕ Яндушов та, Славике лăплантарма тăрăшни кăлăхах пуласса тӳрех сиссе.
— Çав начар та. Эсĕ залра пурччĕ пулас-ха.
— Куртăм,— терĕ Яндушов, куçĕсемпе стакан хĕррине тĕллесе.
— Тарăхмарăн-и?— Славик малтанхи пекех Яндушов çине тимлĕн пăхать. Хăйне ку ыйту пирки уççăн калаçма хĕтĕртнине инженер тинех тавçăрса илчĕ те, çăмăллăн сывласа, пуçне çĕклерĕ, Славик çине лăпкăн, ĕнентерӳллĕн пăхрĕ, кĕтмен çĕртен йăл кулса илчĕ. «Ача пек уççăн кулать»,— самантрах асăрхарĕ Славик.
Çапла йăл кулни халĕ пачах вырăнсăр пек туйăнчĕ Яндушова. Вăл вара, йăнăшне тӳрлетме васкаса, хăвăрт пуçларĕ:
— Эп, чăнах та, çав тери хытă тарăхрăм ун чух... Манăн темиçе шухăш тупăнчĕ. Қайран, çӳресен-çӳресен.
— Мĕнле шухăшсем, кала-ха,— юлташĕ пăлханнине сиссе хавхалантарчĕ ăна Славик.
— Темех мар... Эп хам çуна çинчен сирĕн çуна çине куçса ларнă пекрех те-ха ĕнтĕ ку...
— Айта, яра пар,—калаçăва савăнăçларах, шӳтлĕрех туса, Яндушова ирĕклĕнрех калаçма пулăшасшăн пулчĕ Славик.— Тепĕр тесен, пĕркун çак сĕтел хушшинче хăвах каларăн-çке: театр, драматурги, пĕтĕм искусство уйрăм çынсен монополийĕ пулма пăрахать, терĕн...
— Вăл çапла та... Юрĕ, эппин. Мĕнлерех шухăшлаççĕ-тĕр специалистсем, пĕлместĕп. Эпĕ тӳрех калатăп: автор актерсене ухмаха тăратса хăварать. Чăнах та, театрта режиссерсем пур. Нумай чухне е яланах вĕсем пьеса авторне калама çук пысăк пулăшу параççĕ. Пама тивĕçлĕ те. Мĕн пулса тухнă Юманов пьесипе? Мĕншĕн сирĕн аслă режиссер унтан лайăх спектакль хатĕрлеме пултарайман? Асту: ку чи интереслĕ ыйту.
— Мĕншĕн пек туйăнать сана?
— Татсах калаймастăп. Тен, режиссерăн хал çитмен пулĕ. Лайăх пьесăран та начар спектакль тума пулать-ха вăл. Юрĕ, ку ыйту — маншăн уçăмлах мар. Эп хам мĕн курнине çеç хаклама пултаратăп. Мана спектакльте

ытла та ăшăх шухăшсем çинче нумай ташласа тăни кăмăла каймарĕ. Ку йĕрĕнтерет. Килĕшӳсĕр. Комеди аслă та çулăмлă пулмалли çинчен тин çеç калаçнă пек туйăнать ĕнтĕ мана, çапах та тĕрлĕ лăпăр-лапăра искусство шайне çĕклетпĕр.

— Актер чысĕ çапла вараланать те,— хушса хучĕ Славик.

— Тĕрĕс,— çирĕплетрĕ Яндушов.— Унтан вара манăн тепĕр шухăш пур — спектакль ăнăçсăр пулни авторсем пирĕн вăхăт сăнарне калăпăшĕпе курманнинчен килет пек. Мĕн тăвăн. Эпир хамăр паянхи кунта çухалса, ирĕлсе каятпăр, унăн тĕсне тĕпчеме пире те вăхăт çитмест, те ăс çитмест. Пĕлместĕп... Тен, шăпах паянхи кун çине çеç тинкерни те тĕрĕсех мар пуль. Пурнăç вăл пĕр вĕçĕмсĕр куçăм-çке... Тапхăрăн-тапхăрăн пăхса, пурнăç йĕрне курма тăрăшмалла. Илсе пăхар юлашки аллă-утмăл çула. Искусствăра мĕнле геройсем çуралчĕç? Ну, кала. Эс литературăпа искусствăна манран лайăхрах пĕлетĕн.

— Павел Власов, Максим...

— Чапай та...

— Чапай та... Давыдов, Бахирев...

— Çитрĕ те! Камсем вĕсем? Революци тума хатĕрлекенсем, ăна тăвакансем, ăна хӳтĕлекенсем. Акă вăл— пурнăç йĕрĕ. Пурте пĕр йĕрпе пыраççĕ. Никĕсре — революци. Вăл пирĕн вăхăтшăн кивĕ мар, вăл яланах çамрăк. Мĕншĕн тесен, «революци» сăмах «ырă» сăмаха пĕлтерет. Тĕнче искусстви — чăн-чăн искусство — яланах ырра хӳтĕленĕ, усала хирĕç кĕрешнĕ. Чăн-чăн искусство умĕнче яланах пĕр тĕллев пулнă — этеме телей тупма пулăшасси. Чăн-чăн искусство яланах телее, пурнăçа юратма вĕрентнĕ.

Яндушов хĕрсех кайрĕ.

Славикшĕн вара инженер сăмахĕсем çĕнех пулмарĕç пулин те, вăл киленсе итлерĕ, çак сынпа тĕл пулса паллашма тӳр килнĕшĕн тепĕр хут чĕререн савăнчĕ.

— «Европа тăрăх мĕлке çӳрет. Коммунизм мĕлки»,— тенĕ Маркспа Энгельс çĕр çирĕм çул маларах. Искусствăра та коммунизм мĕлки çӳрет, тивĕçлĕ те çӳреме. Пирĕн тĕп шухăш — революци. Пирĕн вăхăтри тĕп герой — коммунист.

Яндушов шăпланчĕ те Славике куçран тӳп-тӳррĕн пăхрĕ. Эсĕ манпа килĕшетĕн-и, тесе ыйтнă пек пăхрĕ вăл ун çине. Славикĕн çутă сăн-пичĕ, йăлкăшакан

куçёсем ăна лăплантарчĕç пулмалла, вăл стаканĕнчи тахçанах сивĕнсе кайнă кофене хăвăрт ĕçсе ячĕ те каллех Славик еннелле çаврăнчĕ.

— Çитĕ, эп сана ывăнтартăм та пулĕ-ха ку калаçусемпе.

— Юрĕ-çке, çакăн пек калаçусем кашни кунах пулмаççĕ. Час-часах эпир хамăрăн пĕчĕк хуйхă-суйхăсемпе аппаланатпăр та тепĕр чух тĕллев çинчен те манса каятпăр. Унсăр пуçне, санăн пьесуна пăхса тухнă май — пытармасăрах калатăп — эсĕ ху та мана интереслентерме тытăнтăн. Ак паян вара çак кĕске калаçу... ну, мĕнле каламалла, хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ...

Славик кăмăллăн кулса илчĕ.

— Унтан,— хушса хучĕ вăл,— эп сан пьесунта пысăк çитменлĕхсем курмарăм. Шухăш енчен пурте аван: çирĕп, хĕлхемлĕ, чăнах та, хăшпĕр сценăсене вырăнтан вырăна куçарма тивет. Хăшĕсем тухса та ӳкеççĕ пулĕ. Эп унта, пăхса тухнă май, паллă туса пытăм... Сана пĕр уйăх ĕçлемелĕх те çук вăл.

— Э-э, тăванăм. Халĕ эпĕ икĕ уйăх та ĕçлеме пултаратăп. Чуна ăшăтакан, шанчăк паракан хĕлхем çеç кирлĕччĕ.

Славик пьеса алçырăвне Яндушова тыттарчĕ. Кăштах хуçланнă хулăн тетрадь кĕтесĕсене инженер пысăк ал лаппипе пусарса якаткаларĕ, ун çине ăшшăн, савăнăçлăн пăхкаларĕ.

— Тем тесен те, йывăр ăнланма: мĕншĕн вара сирĕн режиссер ман пьесăна яхăнне те ямарĕ-ха театр патне? Эсĕ çемçешкерех режиссер пултăн пулĕ, тăванăм. Мана скидка кирлĕ мар. Тӳррипе кала.

— Тӳррипех каларăм,— кулса ячĕ Славик.— Çакна хушма пулать: Анатолий Степанович санăн пьесуна вуласа та тухман. Тен, вулама та пуçламан пулĕ...

— Мĕншĕн?!

— Мĕншĕн тесен... ăçтан калăп эп сана мĕншĕнне? Мĕншĕн тесен пьесуна писательсен драма секцийĕнче пăхса тухман, театрта худсовет тишкермен.

— Ку йĕркесене пĕлмен эп... Ку бюрократизм мар-и ĕнтĕ?

— Ку — бюрократизм мар çав,— тарăхса каларĕ Кудрявцев.— Ку вăл бюрократизм мар. Ĕçĕн хăйĕн йĕрки пур, теççĕ. Тулашĕнчен пăхсан, пурте тĕрĕс. Хăвах шухăшла...

— Хытă тутăхнă иккен сирĕн режиссер.

— Юрӗ, ҫитӗ ун ҫинчен. Тепӗр тесен, пирӗн пӗрремӗш задача — санӑн пьесунтан лайӑх спектакль тӑвасси.

— Драма секцийӗ вуламан, худсовет тишкермен пьесӑран-и?

Яндушов куҫӗсем кӑштах хуйхӑллӑн, ытларах тарӑхса ҫуталчӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах вӗсенче хаьл-халь хӗмленсе каяс пек хавхалану та курӑнчӗ. Шанчӗ вӑл тусне.

Славик ӑна хирӗҫ чӗнмерӗ.

Вӗсем каферен тухрӗҫ.

## IX

Анатолий Степанович сӑмахӗсем Славик чӗрине ытла хытӑ ыраттарчӗҫ. Унӑн мӗнпур хавхаланӑвӗпе ҫунатлӑ ӗмӗчӗсем ҫине, вӑл таса та ҫутӑ, пӗртен-пӗр тӗрӗс тесе шутланӑ принципсем ҫине аслӑ режиссер хӑй пачах урӑхла пӑхнине кӑтартса пачӗ. Калӑн, Славик пуҫӗнче виҫӗ пуслӑх та ӑс ҫук. Мӗнпур ӗҫе кунта ҫеҫ вӗренмелле имӗш. Институт вӑл нимех те мар. Унта — буква, теори, кунта — пурнӑҫ ешерет. Ытлашши пысӑк мар-и ку чыс?

Славик хаярланчӗ. «Анатолий Степанович евӗрлисемпе кӗрешмелле, ҫав ҫеҫ витӗмлӗ. Вӗсене сӑмахпа вырӑнтан хускатаймӑн, ӗҫпе шаккамалла». Нумай шухӑшласа тӑмасӑр, Славик, Алешӑпа курса калаҫмасӑрах, юсаса ҫитернӗ пьесӑна пӗр палланӑ машинисткӑна кайса пачӗ. Тепӗр эрнерен пьесӑн вунӑ экземплярӗ хатӗр пулчӗ.

Славик ГЭС тунӑ ҫӗре шӑнкӑравларӗ. Каҫхине Алеша ун патне килнех пычӗ. Ҫур ҫӗрченех ларчӗҫ вӗсем. Характерсемпе ситуацисен килӗшӳллӗ пӗрлешӗвне тепӗр хут йӗрлесе тухрӗҫ, кашни ытлашши сӑмахпа сӑмах ҫаврӑнӑшне кӑларса ывӑтрӗҫ те пьесӑн тапса тӑракан вӑйне ӳсӗн курмалла туса ҫитерчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ ӑна актерсене кӑтартма та юрать.

Тепӗр кун ирхине Славик тӳрех театр директорӗн пӳлӗмне кӗрсе кайрӗ. Владимир Борисович та анчах килнӗ пулас-ха: тин ҫеҫ хывӑннӑ пек, вӑл, сӗтел хушшинче тӑрса, ҫӳҫне якататчӗ.

— Ларӑр,— терӗ вӑл, Славике хирӗҫ сывлӑх сунса.

Славик калас тенӗ сӑмахӗсене калама хатӗрленнӗччӗ те — чӑтса тӑчӗ: кирек мӗнле пулсан та, ҫавӑн пек пысӑк ӗҫ ҫинчен мӑнаҫлӑрах калаҫмалла пек туйӑнчӗ ӑна. Анчах та Владимир Борисович Славик хӑпарса тӑнӑ каскана тӳрех тапса йӑвантарчӗ.

— Илтрӗм,— терӗ вӑл.—Эсӗ пӑлхав пуҫласа янӑ, терӗҫ. Тӗрӗс-и ку?

Славик хӗрелсе кайрӗ теваскасах хуравларӗ:

— Тӗрӗс, Владимир Борисыч. Шел, эсир пулмарӑр...

— Пӑлхав — пӑлхав-ҫке вӑл.

— Чӑн, Владимир Борисыч, пӑлхав вӑл — пӑлхав.

Пуҫланма ӗлкӗричченех калаҫу ҫапла хирӗнсе ларма тытӑннине иккӗшӗ те туйрӗҫ. Владимир Борисыч ҫӗнӗрен пуҫларӗ:

— Эс шӳт туса-и е чӑнах?

— Мӗн ҫинчен калаҫатпӑр эпир?— хальхинче Славик, хӑйне алла илме ӗлкӗрнӗскер, директор мӗн ыйтнине юриех пӗлмӗш пулчӗ.

— Мӗн калаҫрӑр эсир Анатолий Степановичпа пӗр эрне маларах? Ҫавӑн ҫинчен!

Владимир Борисович ҫилленме тытӑнчӗ курӑнать: сасси улшӑнчӗ, куҫӗсем те сивӗ хӗм сапаҫҫӗ.

Славик ӑнланчӗ: директор ун шухӑшне ырламасть.

— Владимир Борисыч, ӗҫ, витӗр пӑхсан, ҫакӑн пекрех: театр репертуарӗ хавшак.

— Аҫтан пӗлетӗр эсир пирӗн театрӑн репертуарӗ хавшак иккенне?— касса татрӗ Владимир Борисович.

— Калама ирӗк парӑр ӗнтӗ, тархасшӑн. Пирӗн театрӑн репертуарӗ хавшак иккенне Юманов пьеси тӑрӑх Анатолий Степанович хатӗрленӗ спектакль те кӑтартса пачӗ. Ытти спектакльсем пирки куракансем нимӗн те шарламаҫҫӗ-ха.

— Вӑт, аван та!

— Пачах аван мар пек, ман шутпа. Куракансем ним те калаҫманни аван-и?

Директор сӑнӗ ҫемҫелчӗ. Владимир Борисович Славикпе хирӗҫсех кайма шикленчӗ. Вӑл лӑпкӑнрах, асӑрханарах калаҫма пуҫларӗ.

— Итле-ха, ырӑ ҫыннӑм, нивушлӗ ӑнланмалла мар: эпир авторсемпе договор ҫырнӑ, пирӗн хатӗр пьесӑсем пур. Тархасшӑн: тыт та ларт. Мӗншӗн аслӑ режиссера килӗшмен, худсовет курман пьесӑна лартма шут тытрӑн? Тен, эсӗ Анатолий Степанович начар режиссер тесе каласшӑн, тен, директора вырӑнтан кӑлармалла, тен, тата, тур ҫырлахах, пирӗн паллӑ драматургсенчен пӗри те, сан шутпа, драматург мар пуль...

— Владимир Борисыч, итлӗр, тархасшӑн. Патшалӑх параппансем туса кӑларать пулсан, ку вӑл кашни ҫыннӑн параппан туянмаллине пӗлтермест-ҫке. Ҫапла кала-

наччĕ пĕр журналист пĕр статьяра. Эсир те вырăнсăр пĕтĕмлетсе каларăр... Анатолий Степановичăн мĕн пуррине унран никам та туртса илеймĕ, çуккине эпир пама тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен эпир çемье интересĕсемшĕн çеç ĕçлеместпĕр, çапла мар-и ара? Директора сире эп ларгман, эп кăларас та çук, анчах директор та турă мар. Директор текен учреждени çук. Çынсемпе ĕçлекен директор пур. Çапла-и? Çапла. Драматургсем пирки те калам. Иртнĕ çуркуннехи конкурсра уйăрса илнĕ пьесăсем те, тĕрĕссипе каласан, хавшак. Пулă çук чух — рак та пулă. Çав пьесăсем пирки те çаплах каламалла. Вĕсем пирĕн вăхăта сăнласа парас тенĕ — ах! мĕнле таса та пархатарлă шухăшпа çырнăскерсем! Пĕлнĕ-курнă япаласене те тĕл пулма пулать вĕсенче. Çапах та «ку пирĕн пурнăç сăнарĕ» темелĕх çук-ха! Çук! Вăхăтăн çивчĕ ыйтăвĕсем палăрмаççĕ. Çынпа çын хутшăннин илемĕ курăнмасть. Мĕн тăвас тетĕр ĕнтĕ?

— Ну, итлĕр-ха, эсир ытлашширех калаçатăр. Çынсенчен «санăн мĕншĕн талант çук» тесе ыйтма епле хăймалла? Ку — ытла та тĕлĕнмелле.

— Тĕлĕнмеллех мар. Апла ыйтма та тивĕç пур, ыйтасах тесен. Малтанлăха ыйтмăпăр. Малтанлăха кирлĕ чухлĕ вăй хума çеç ыйтасчĕ. Вăй хурсан, килĕшӳллĕ, аван, витĕмлĕ — çынна юрăхлă, теççĕ-и-ха тата?— çавăн пек япала тума пулатех. Эпĕ çакна ĕненетĕп, çав ĕненӳпе ĕçлетĕп.

— Мĕнле çав сирĕн ытла та хирĕçес килет вăл, э? Кăтăклансах тăрать-и-мĕн?— сасартăк çемçелчĕ директор сасси. Унăн сăмахĕсене пачах та илтмен пек, Славик малалла калаçрĕ:

— Çапла вара, театршăн чăннипех те йывăр вăхăтра, сарай çине çăлтăр персе аннă пек, сасартăк аслă режиссер умне пьеса тухса тăрать. Мĕнле пуян материал! Чун та пур. Ăс вылявĕ те. Чăн-чăн этем сăн-пичĕ çуталса-çиçсе тăрать, ĕç романтики... Режиссерпа актерсен фантазийĕ чăннипех те ялкăшса-çĕкленсе каймалла. Мĕн тейĕр эсир? Çав пьесăна, вăл сцена формипе килĕшсех çитменрен, худсовет вуласа репертуара кĕртменрен, авторĕ çирĕм çиччĕре те Эсхил кам иккенне пĕлментен, такăрлатнă çулпа чупмантан, театрти аслă режиссерпа директора (каçарăр) палламантан — çав пьесăна сцена çинче кăçал выляса пама май çук имĕш!..

«Ай качакаланать, ай качакаланать — чăннипех актер»,— шухăшлать Владимир Борисович.

— Эпир Ленинран сахал вёренетпӗр ҫав, Ленинран сахал вӗренетпӗр, тетӗп.

— Эсир — режиссер, ача мар темелле, ҫаплах ача ӑсӗ кайман-ҫке сирӗн,— тӗксӗммӗн каласа хучӗ Владимир Борисович. Унтан, хӑй иккӗленме тытӑннине асӑрхаса, лӑпланас шутпа кулянҫи туса илчӗ те сӑмахне малалла тӑсрӗ.— Паллах, тӗрӗс шухӑш, анчах, хӑвах пӗлетӗн, кашни утӑма «Интернационал» юрласа тумаҫҫӗ.

— Кирлӗ те мар... «Интернационал» юнра пулмалла.

Славик хӗрсе кайрӗ. Сасартӑк калаҫу ҫакӑн майлӑ улшӑнни уншӑн хӑйшӗн те кӗтмен ҫӗртен пулчӗ, вӑл хӑй пӗтӗмпех тӗрӗс калanине чунтан ӗненчӗ, вара Владимир Борисович ҫине ҫӗнтерӳҫӗ пек пӑхма тытӑнчӗ. Ҫав вӑхӑтрах, ку таранччен те ҫынна сӑлтавсӑр кӳрентерсе курманскер, тата кирек мӗн ҫинчен те лӑпкӑн калаҫса ӑнлантарма май пуррине туйсах тӑраканскер, вӑл сассине пусарчӗ те хуллен хушса хучӗ:

— Владимир Борисыч, эсир ан ҫилленӗр, ак, шухӑшласа пӑхсан, хӑвӑр та манпа килӗшетӗр...

Ҫамрӑкӑн ытлах хирӗҫес килмерӗ: выртакана хӗнемеҫҫӗ. Директор театрта хуҫа пулма кирли пуриншӗн те паллӑ. Славик те пӗлет ӑна. Ҫав вӑхӑтрах никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар : театр политикине халӗ Владимир Борисович мар, аслӑ режиссер йӗркелесе тытса пырать. Художествӑллӑ тата административлӑ руководитель. Пӗр енчен илсен, ку аван та теме пулать. Пӗтӗмпех ҫыннисенчен килет тулӗк — Владимир Борисыч, ав, ытлашши ҫемҫешке, Анатолий Степанович тӑрӑшмасть. Мӗнле тӑрӑшмаллине те пӗлмест-ха. Ҫапла вӑл, хӑвӑн ҫитменлӗхӳсене курми пулсан.

Владимир Борисович ним те чӗнмерӗ, пирус пачки туртса кӑларчӗ. Унӑн хыткан та вӑрӑм пӳрнисем хуллен вылянине Славик вӑрахчен сӑнарӗ. Владимир Борисович пирусне чӗртрӗ те, вӑрӑммӑн сывланӑ май, ҫӑварӗнчен ҫӑра тӗтӗм вӗрсе кӑларнӑ май, куҫӗсене хӗссе, чӳрече енне пуҫне пӑрса чылайччен пӑхса тӑчӗ. Унӑн шӗвӗр сӑмсаллӑ, шӗвӗр янахлӑ, типшӗм те тарӑн пӗркеленчӗклӗ сӑн-пичӗ ҫине кун ҫути пӗр енчен ӳкрӗ. Славикӗн ҫак ватӑ ҫынна, кивелсе кайнӑ пулсан та, ӗҫе юрӑхлӑ пӗрпӗр япалапа танлаштарас килчӗ. Анчах танлаштару тупӑнмарӗ. Владимир Борисович хӑрах ури ҫине ытларах тӗренсе тӑрать, тепӗр ури чӗркуҫҫи тӗлӗнче кӑштах хуҫланнӑ. Славик сӑнарах пӑхрӗ те театр директорӗ майӗпен сулланнине асӑрхарӗ.

— Пёлмелле мар сире, çамрăксене,— терĕ сасартăк Владимир Борисович, çирĕп те типĕ сасăпа.— Те чăнах та ăслă эсир, те ăслă пек курăнма вĕренсе çитнĕ.

Славикĕн кулса ярас килчĕ те — вăл хăйне тытса чарчĕ. «Чун хавалĕ,— шухăшласа илчĕ вăл,—чун хавалĕ кирлĕ этеме. Кĕлетке пĕтет, шăмшак хытать, этем хăйĕн чунĕпе çеç вилĕмсĕр...»

— Ну, мĕнле ĕнтĕ апла, Владимир Борисович, ĕç тухма пултарас пек-и пирĕн?

— Аçта пьеси?

— Кунтах!

Славик пьесăн пĕр экземплярне папкăран кăларса директора тыттарчĕ.

— Худсоветăн ытти членĕсем пăхса тухсан лайăхрах ĕнтĕ... Анатолий Степановичпа... аслă режиссерпа хăвăр çапăçăр. Вăл çаплах килĕшес çук. Пĕтĕмĕшпе илсен, эсир репертуарпа драматургсем çинчен калани тĕрĕс... Тĕрĕс...

Владимир Борисович пуçне чикрĕ те чĕлĕмне сÿнтерчĕ.

«Ленин çинчен аса илтерни тата?»— ыйтрĕ ăшĕнче Славик, Владимир Борисовичăн çап-çара çутă пуçĕ çине чăннипех те хĕрхенсе пăхса. Ун çак вăрттăн ыйтăвне илтнĕ пекех Владимир Борисович пуçне çĕклерĕ те хуйхăллăн:

— Ватăлатпăр çав,— терĕ.

Çамрăк чухнехи пек, вăл чĕлхипе шаплатнă сасă кăларчĕ те лàпкăн, килти пек пулса, Славик çине куç илмесĕр пăхрĕ. «Ăмсанать, манăн çамрăклăха ăмсанать»,— тавçăрса илчĕ Славик кулянса. Унăн урăх çак пÿлĕмре тăрас килмерĕ. Вăл хăвăрт сывпуллашрĕ, алăк енне çаврăнса, Владимир Борисовича:

— Вулăр, эппин,— тесе хăварчĕ.

— Вулăп,— тавăрчĕ Владимир Борисович.

Славик хĕпĕртесех ÿкрĕ: ăнăçлă утăм пулчĕ. Вăл, пĕр пуçланă ĕçе вĕçне çитерес тесе, пьесăн ытти экземплярĕсене те худсовет членĕсене валеçсе пачĕ. Малтан калаçнă чухнех вĕсенчен пĕри те чăкăлташланса тăмарĕ. Пурте Славик шухăшланă пек, йĕркеллĕ пулса пычĕ. «Худсовет членĕсенчен нумайăшĕ пьесăна йышăнсан, Анатолий Степанович пирки ытлашши пăшăрхансах тăмăпăр»,— шухăшларĕ çамрăк режиссер. Чăнах та, çавăн пек паллă çын ку ĕç çине йăвашрах куçсемпе, ăн-

ланма тăрăшса пăхнă пулсан лайăхрахчĕ. Юрĕ ёнтĕ. Кайран та пулсан ăнланĕ.

Славик Галя пÿлĕмне чупрĕ.

— ...Галя!

— Мĕн?

— Эс мĕн тăваттăнччĕ халĕ?

— Пĕлместĕн пуль ёнтĕ эп мĕн тунине? Ӳкеретĕп.

— Пĕр япала çинчен калаçса илмеллеччĕ.

— Мĕн çинчен тата?

— Пулас спектакль çинчен. Вăл манăн чăн-чăн спектакль пулать-çке! Эп халех савăнатăп.

— Кĕр. Мĕн алăкрах тăратăн?

Галя пÿлĕмĕн алăкне шаккамасăрах уçнăскер, пуçне шалалла чиксе çеç калаçатчĕ Славик. Галя ун сассине илтсенех малтан хăй кăрт сикнине туйса илчĕ те халĕ лăпланчĕ ёнтĕ. Çав каçранпа вĕсем темиçе те тĕл пулчĕç, анчах чĕре тĕпĕнчех пытанса выртаканни çинчен сăмах хускатмарĕç, майĕпен чечекленсе саралакан туйăма вĕсем пĕр-пĕринче çеç курса пĕлме тăрăшрĕç. Ку вĕсене иккĕшне те килĕшрĕ. Чăнах та, Галя малтанхинчен кăштах çемçелчĕ пулин те, Славик унран ытларах та ытларах ачашлăх кĕтрĕ. Хăй вара май килнĕ чух хĕрпе яланах çепĕç те лăпкă калаçма тăрăшрĕ, ун умĕнче тирпейлĕн курăнасшăн пулчĕ. Галя вара каччăпа мĕн чухлĕ ытларах çывăхланать, çавăн чухлĕ унăн чĕри те ытларах ыратса каять. Иртнĕ пурнăçпа пуласлăх çирĕп çыхăннă иккен. Славикпе тĕл пуличчен çеç-ха Галя кун пирки хальхи чухлĕ пăшăрханмастчĕ. Каччăпа ачашрах пулас килет ун. Халь те акă вăл ун çине ытла ăшшăн пăхрĕ те хăйĕнчен хăй вăтанса кайрĕ.

— Иртнĕ çул, хамăн пĕрремĕш ĕçе курсан, эпĕ те çаплах савăнтăм.

— Курсан-çке-ха эсĕ, эп, ак... куричченех...

— Эс хăвна шанатăн, çавăнпа вăл.

— Эп хама шанатăп? Тен, ку чăнах та çапла пулĕ. Эп ытларах çынсене шанатăп. Çынсемсĕр, пĕччен, мĕн тăвăн?

— Ну-и, вăл чăнах ёнтĕ...

— Итле-ха, манăн акă çакна пĕлес килет: мĕн шухăшларăн эсĕ чи малтанах театрта ĕçлеме тытăннă кунсенче?

— Ку ытла пĕтĕмĕшле ыйту пуль...

— Ну, апла пулсан — кунта килсенех курнă спектакльсем çинчен эсĕ мĕн шухăшларăн?

Галя тĕксĕмленчĕ:

— Шупашкар Мускав мар-çке ĕнтĕ...

— Ăнлантăм!— Славик хăвăрт кăшкăрса ячĕ.—Эс çапла каланинченех палăрчĕ: сана спектакльсем килĕшмен.

— Тăхта, тăхта-ха,— тарăхрĕ Галя.— Эсĕ савăннă пекрех туйăнать. Ак кур, ун чухне начар пулнă, эпир лайăх тăватпăр. Çапла шутлатăн пулсан, вара эс...

— Мĕн?

— Начар çын. Мĕншĕн тесен театрта талантлă çынсем, искусствăна чунтан парăнса ĕçлекенсем сахал мар. Анчах та сапаланчăк вăя пĕрле пĕтĕçтерсе ĕçлеме пултаракан пĕр çын çитмест. Пĕр çын!..

— Çапла! Режиссер çук. Анатолий Степанович театршăн нумай вăй хунă, теççĕ. Тен, тĕрĕс те пулĕ. Тен, пултарнине пурне те туман. Ман темшĕн иккĕленес килет.

— Халь иккĕленесси модăра-çке...

— Эс мана ăнланман пек калаçатăн.

— Аçтан ăнланăп-ха пĕтĕмпех,— юриех хирĕçлерĕ хĕр.— Çынна çын мар, çын хăйне хăй те тепĕр чух ăнланма пултараймасть. Кам пĕлет сан шухăшусене?

— Галя...

Славик хĕр çине ăнланма, ĕненме ыйтнăн тата çав вăхăтрах тĕлĕнсе пăхрĕ:

— Кирек мĕнле аван шухăш пирки те иккĕленме пулать. Анчах хăшпĕр чух çапла иккĕлени тăни вунвиçĕ çулхи хĕрача тасалăхĕ пирки иккĕленнĕ пекех. Вăл намăслантарать те, кулянтарать те... Çитменнине, ку сăмахсене санран илтессе кĕтменччĕ эпĕ.

Славик мĕн çинчен калаçнине Галя йăлтах ăнланать. Унпа килĕшет те вăл. Анчах çак самантра унăн Славик чĕрине темшĕн-çке питех те хытă ыраттарса пăхас килчĕ. Çавăнпа вăл каччăн юлашки сăмахĕсене илтмĕш пулчĕ.

— Хăй вăхăтĕнче Анатолий Степанович та çаплах пуçланă теççĕ ĕçлеме,— терĕ вăл туйăмсăр сасăпа.

— Ну! Пуçланă пултăр. Ĕçленĕ пултăр. Лайăххишĕн — тавтапуç ăна! Паянхи кун вара мĕн — вунпилĕк çул маларах пулнипе лăпланмалла-и? Йывăç, ухмах пулсан та, кашни çул пĕрре çулçă кăларать. Çĕнелет! Этем ăслă. Унăн кашни самантрах çĕнелмелле, вăйланмалла, хитреленмелле.

Галя кулса ячĕ — ăшшăн, лăпкăн, яланхи пек:

— Ухмах йывăçсене те лекрĕ. Ытла та çиллес-çке эсĕ.

Славик чĕнмерĕ. Çак хĕр хăйпе вылянине туять вăл, мĕншĕн вылянине пĕлмест, ак халĕ вăл ăшшăн калаçать — те ĕненмелле, те ĕненес çук ăна.

— Пурин те ман пек çиллес пуласчĕ, вара...

— Вара мĕн?

— Вара кăшт çапăçса илнĕ пулăттăмăр. Анчах пурте ытлашши лăпкă. Эсĕ те лăпкă.

— Мĕн тумаллаччĕ манăн? Эп хам режиссер мар вĕт. Кунги çитменлĕхсене нумайăшĕ курассĕ, ах! тесе ассăн сывлассĕ, пурте ыран паянран аванрах пуласса шанассĕ... Режиссерсем кашни кун çуралмассĕ вĕт. Вĕсем тата пуртĕ талантлă пулмассĕ. Талантлисен Анатолий Степановичăнни чухлĕ опыт çук.

— Вăт ку чăн-чăн этем сасси! Паçăрах çапла хĕрсе каймалла пулнă санăн.

— Эп хĕрмен, эп чăннине каларăм.

— Чăннине каларăн пулсан, тата аван.

Гальăн çилленнĕ сăн-питне сăнаса, халĕ Славик хăй кулкаларĕ:

— Ытла та çиллес эсĕ паян. Мĕн пулнă сана? Кам кӳрентерчĕ?

Галя ун çине чĕнмесĕр пăхса тăчĕ. Хĕр çак самантра Славике питĕ юратрĕ.

— Эсĕ,— терĕ вăл кӳреннĕ ача сассипе. Вара хăй те кулса ячĕ.

Вĕсем хушшинче темскер çĕмрĕлчĕ. Темĕн, сивĕскер, çухалчĕ. Самантлăх. Темĕн уçăлчĕ. Пĕлĕтсем хушшинче кăн-кăвак тӳпен çугă та тăрă, тарăн сенкерлĕхĕ курăннă пек. Ик çырана пĕрлештерсе каçă выртнă пек. Славик каçă çине ыткăнсах кĕрсе кайрĕ:

— Галя, эсĕ манăн!

Хĕр Славик ытамне çаплах хăвăрт лекессе пачах кĕтменччĕ, вăл кăштах туртăнса илчĕ те лăпланчĕ. Унăн пуçĕ Славик кăкăрĕ çинелле сулăнатчĕ.

— Санăн мар!— терĕ вăл çав вăхăтра. Унăн сасси каллех типпĕн те сиввĕн илтĕнчĕ. Славикĕн питçăмартисем майĕпен хĕрелсе пычĕç. Чĕри хĕсĕнсе ыратса илнине туйса, вăл Гальăна ытамĕнчен вĕçертрĕ те алăк патне салхуллăн утса кайрĕ.

— Пьесăна вуласа тухсан, ун пирки хăвăн шухăшусене пытармасăр каласса шансах тăратăп,— терĕ вăл, вара сывпуллашмасăрах тухса кайрĕ.

Галя хирĕç чĕнмерĕ, сĕтел хушшине ларчĕ те, чӳрече енне тинкерсе, шухăша кайрĕ. Кăшт вăхăт иртсен, çав шухăшсенчен хăтăлас тесе пуль, хăвăрт сиксе тăчĕ, юрлама тытăннă май, темле ӳкерчĕксем тума пуçларĕ. Анчах тепĕр минутран каллех шăпланчĕ.

## X

— Мĕн шуйттанĕ тума кирлĕ пулчĕ сана çак тытăçу? Тупăннă паттăр, тĕрĕслĕх шыракан! Аслă реставратор чапне ĕмĕтленместĕн-и?..

— Тăхта, итле-ха...

— Çук-çук! Эс итле-ха малтан...

Хăйне хирĕç çĕкленнĕ Славике хулпуççинчен тытса пусарчĕ те Володя каллех малтанхи пек хавхаланса калаçма тытăнчĕ.

— Айта, ку япала çине аякран пăхса илер. Чи малтанах, кам эсĕ?— театрта виççĕмĕш кун ĕçлекен этем. Çакна пĕлни те санăн ухмахла ĕçӳ ăнăçсăр пулма пултарнине кăтартса пама çителĕклĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен эсĕ — пĕччен. Мĕнпе кăтартрăн эсĕ хăвна? Пĕрремĕш пухурах хĕртсе илчĕç, çавăнпа-и?.. Ахалех хăвна пĕтертĕн. Мĕн калама пултараççĕ сан ĕçӳ çинчен ыттисем? Режиссер авторитетне пĕтерме тăрăшать, мĕншĕн тесен режиссер унăн çитменлĕхĕсене асăрхарĕ, тейĕç. Эс пин хут тĕрĕс пул. Çынсен вăхăт çук сан тĕрĕслĕхне тишкерсе тăма. Вĕсем çиелтине çеç кураççĕ. Çиелти вара çапларах: Анатолий Степанович — паллă çын, унăн ăллинче пысăк коллектив, унăн çывăх тусĕсем — паллă çынсем, унăн план пур, вăл çав планпа ĕçлет. Ĕçре йĕрке пулма кирлĕ, йĕрке хăйне пăхăнтарать. Эсĕ пур... Тьфу! Эсĕ çӳпĕ анчах-çке ăна хирĕç. Ниепле те ăнланаймастăн-и çавна?

— Эп хам театрта ĕçлеместĕп-çке-ха. Мана çĕнĕ пьеса кăмăла каять. Вăл халăха та килĕшме тивĕçлĕ. Анатолий Степанович пирки эпĕ халĕ калаçас та теместĕп. Ку — пысăк ыйту. Эпĕ халь питĕ сахал пĕлетĕп. Вăл мана ĕçлеме ан чăрмантартăр çеç. Е пулăштăр!..

— «Пулăштăр»! Пулăшать! Курăн акă: пĕр-пĕр киревсĕр ĕç патне çитсе тухатăн-ха эсĕ.

— Халлĕхе кунта киревсĕр е киревлĕ ĕç çук. Çынсем пĕрне-пĕри ăнланманни пур. Яндушовпа эпир калаçса татăлнă ĕнтĕ. Эпĕ сăмах патăм. Эпĕ хама шанатăп. Тĕрĕсрех каласан, хама мар — çынсене, çынсен ăнланулăхне...

— Шанах, ухмах... Ăçта çăва патĕнчен пырса çапăнчĕ-ха сана çав Яндушов? Мĕн çухатнă пулăттăн эсĕ çав автор тепĕр çул тарласа ларнă пулсан? Ун чухне çак пьеса, тен, планпа кайнă пулĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ хăвна тĕрĕслĕх рыцарĕ вырăнне хурса каппаятăн-и?

— Тархасшăн, пумай ан калаç: эп каппаймастăп... Çитменнине, эсĕ яланах манран лăпкăрах пулаканччĕçке? Сана паян паллама та çук.

— Паллами те пултăн, эппин. Калатăп вĕт, каппаятăн, тесе.

— Апла эс ман ĕçе шанмастăн?

— Шанмастăп, тесе каламастăп эп. Çапах та пьесăран лайăх спектакль тăваасси çеç мар-çке кунта. Калатăп вĕт-ха: эпир, театрта ĕçлекенсем, хамăрăн пĕчĕк патшалăхра. Театр патшалăхĕнче. Сан ĕçне метрпа е килогрампа виçмеççĕ. Туйăмсемпе виçеççĕ. Туйăм вăл— алпа тытса пăхмалли япала мар, тата туйăм тĕрлĕ çыннăн тĕрлĕ. Ку — пĕрре. Патшалăх пулсан, патши те пур. Калăпăр, пирĕн демократи, анчах вуншар çул хушши çирĕпленнĕ авторитета хирĕç тăни усăсăр.

— Усăсăр мар, хăрушă, тесшĕн эсĕ. Паллах, хăрушă.

— Сăмах, сăмах, сăмах! Эх, Славик, чунăм! Тем тăватăн эсĕ...

— Шанмастăн, куратăп... Чăнах та, йывăр ĕнтĕ шанма. Мĕн мурĕшĕн хирĕçсе кайрăм-ха эп Анатолий Степановичпа? Майĕпен тумаллаччĕ. Халь унран каçару ыйтмалла-и? Мĕншĕн ыйтмалла? Эп ăна кӳрентертĕм-и? Вăл хăй мана кӳрентерчĕ. Мĕншĕн çилленмеллеччĕ унăн эп пьесăна йышăннăшăн? Эп ăна хам тĕрĕс тунине ăнлантарса параймарăм çав...

— Айван эсĕ. Вăл сан айванлăхна аван курса тăрать. Сан унран каçару ыйтмаллинче мар ĕçĕ. Эс ун умĕнче ним чухлĕ те айăплă мар. Çав вăхăтрах айăплă. Тĕлĕнетĕн-и? Айăплă çав. Унăн авторитетне шанмарăн. Ку таранччен унпа сан пек калаçакан пулман. Чăнах, эп хам та пĕркун интереслĕ сăмахсем каларăм ăна. Чĕлхене малашне çапла ирĕке ярассăм çук. Ĕçе урăхларах тумалла. Лăпкăнрах, юн тăкмасăр. Эс ав, хресченле... Тепĕр тесен, хресчен те малтан çиччĕ виçнĕ пулĕччĕ...

— Чăн-чăн авторитет пур, тепĕр чух вĕрсе хăпартнă авторитет та тĕл пулкалать.

— Юрĕ, юрĕ! Эс мĕн калассине паллă.

— Калас-тăк, эп хам çакна ĕненетĕп: Анатолий Степановича кирлинчен ытларах хисеплеççĕ. Ĕлĕкренех çапла хисепленипе халĕ вăл хăйне мăнна хурать. Çав вăхăтрах руководителе кирлĕ хăшпĕр енĕсем унăн халĕ пачах та çук. Консерватизм ытларах палăрать. Аслă режиссер ĕçĕсене те вăл — эпĕ кăна, куçпа курнисĕр пуçне, чунпа ĕненсе тăратăп — çителĕклĕ таран туса пымасть. Мĕнпур инкекĕ акă мĕнре: туса пыр, теме те çук ăна. Пурпĕрех тăваймасть: çуначĕсем йывăрланнă. Ĕнтĕ хăçантанпа вĕçмест вăл? Таланта ăна ĕçлеттерес пулать çав, вара тин вăл йăлкăшса çунма тытăнать. Уйрăм составлă хурçă пур. Унран тунă касакан инструментсене хăйрамаççĕ. Каснăçемĕн вĕсем хăйсемех хăйранса пыраççĕ.

Иккĕш те чĕнмеççĕ.

«Эп япаласен кÿлепине куратăп пекех туйăнать-çке. Ман пуçри тĕгре майĕпен сирĕлнĕн туйăнать. Ана эп хам та сисетĕп. Эп çивĕчрех куракан пултăм. Çапах та нумай ÿсмелле-ха, нумай пĕлмелле...»

Славик юлташĕ еннелле çаврăнчĕ:

— Акă мĕн. Эп каялла чакма шутламастăп та. Кирлех пулсан, эп тепре тытăçма та хатĕр. Ытла та кулăшла пулса тухать: производство конфликчĕ! Ку конфликт темелĕх те çук. Çапах та — тĕтĕм куçа çинĕпе пĕрех. Кун пек мар пысăк йывăрлăхсене çĕнтереççĕ çынсем...

— Каларăм-çке, санăн мĕнпур инкекÿ те çавăнта, терĕм: сирĕн çак тавлашу, тулашĕнчен пăхсан, тавлашу темелĕх те çук, çавна пула вăй сан енче мар, Анатолий Степанович енче.

— Çынна ватăлăх çĕнтерсе-çĕнтерсе пырать те юлашкинчен шăтăка илсе каять. Ватăлăх — чир, анчах унран пĕр тухтăр та сыватаймасть. Пурнăçра та, ĕçре те çавăн пек куçа курăнман е, курăнсан та, шухăша ямалăх çук пек туйăнакан чăрмавсем, чăкăлтăш ĕçсем, тавлашусем тĕл пулаççĕ. Çавсем вĕсем, пĕрле илсен, шăпах çынна ватăлтараççĕ те — тусан пек, тĕтĕм пек, этем вĕсене кашни кун çăтма хăнăхнă.

— Тавлашмастăп, логику ытла та хăватлă. Капла эс, тăванăм, нумай пурăнаймастăн. Вилетĕн, паян театрта, ыран, ак, автобуссем чарăнакан вырăна черет тăратма каятăн, магазинта сана пĕр пус каялла тавăрса паманшăн виçĕ пуслăх çапăçса килетĕн, пĕчĕк ăçтиçук чăрмавсем сана, ху каларăш, чăнах та, йÿçĕ тĕтĕм пек

çавăрса илеççĕ те — пĕтетĕн, пĕр нимсĕр пĕтетĕн. «Шел, ачи лайăхчĕ те — автобус айне пулчĕ»— тетпĕр ĕнтĕ.

Пӳлĕм алăкне шаккарĕç.

— Кĕрĕр,— чĕнчĕ Славик.

Алеша кĕрсе тăчĕ:

— Салам пултăр пурне те.

Вăл Володьăпа Славике алă пачĕ.

— Пĕлнĕ пекех килтĕн. Сана кĕтеттĕм,— терĕ Славик, Алешăна хывăнма пулăшса.

— Мĕнле çĕнĕ хыпар пур?

— Хыпарĕсем аптрасах каймаççĕ... Худсовет членĕсенчен пурте тенĕ пекех пьесуна сцена çинче лартма хатĕрлес, теççĕ. Кунтан та аванрах хыпар пулма та пултараймасть пуль халь иксĕмĕршĕн.

— Мĕншĕн иксĕмĕршĕн çеç?— Алеша куçĕпе Володя çинелле кăтартрĕ.— Ыттисемшĕн мĕнлерех?

Славик Алеша мĕн шухăшланине ăнланчĕ.

— Аслă режиссер, паллах, хирĕç. Вăл «репертуар!» тет, унта палăртнă спектакльсене хатĕрлемелле, тет, тата ытти те. Унсăр пуçне, вăл... калама та пĕлме çук. Мĕн мурĕшĕн пырне лартăмăр-тăр эпир унăнне...

— Артистсем тата?

— Вĕсемпе калаçман-ха. Вĕсем килĕшессе шансах тăратăп. Вĕсем хăйсем те тахçанах тунсăхлаççĕ чăн-чăн лайăх пьесăшăн.

Алеша сăн-пичĕ савăнăçлăн çиçсе илчĕ.

— Тĕп рольте кам пулать? Шухăшласа хутăн пульха кăшт та пулсан?

— Ак ларать...— Володя çине тĕллесе кăтартрĕ Славик.

Володя тĕлĕнсе куç харшисене çĕклерĕ те — чĕнмерĕ. Вăл Алешăпа Славик çине пăçăртанпах шăппăн пăхса ларатчĕ. «Тепĕр чух тĕнчене кисрентерекен идейăсем те çĕтĕк-çурăкпа çуклăх хушшинчех çуралаççĕ. Интеллигентлă ача, инженер. Тепри — театр искусствине ятарласа вĕреннĕ. Чăнах та, мĕншĕн вĕсен талантлă япала тăвас мар? Лайăх спектакльте лайăх роль. Япăх-и?»

Володя савăннипе чĕтренсе илчĕ. Темле хавхаланулăх сывлăшĕ пырса сĕртĕнчĕ пулас ăна. Вăл пукан çинчен тăрса чӳрече патнелле утса кайрĕ те юлташĕсем çине аякран пăхма тытăнчĕ.

— Ытгисем тата?— ыйтрĕ Алеша.

— Çынсем пирки кулянмалли çук. Артистсем çителĕклĕ. Репетицисем иртгерме те вырăн пур.

— Эсӗ ытлашши ан сик,— сӑмах хушрӗ Володя. Юлташӗсем ун енне ҫаврӑнчӗҫ.— Каларӗ тейӗн акӑ: эс пьесӑна хатӗрлеме тытӑнассине пӗлсенех, Анатолий Степанович хӑй те репетицисем тума тытӑнать. Ун чух сана ҫын шырама ҫӑмӑлах пулас ҫук.

— Чӑнах,— шухӑша кайрӗ Славик.— Ун пек вӑл ытла киревсӗр хӑтланнӑ пулӗччӗ. Ҫук. Ун пек пулма пултараймасть.

— Мӗншӗн?— лӑпкӑн ыйтрӗ Алеша. Володьӑна ку питӗ килӗшрӗ: сасси те, ыйтӑвӗ те. Вӑл инженер ҫинчен куҫне илмерӗ.

Славик ним те ответлеймерӗ.

Алеша куҫӗсемпе Славике тӗллерӗ:

— Мӗншӗн тесен вӑл ҫавӑн пек тума тивӗҫлӗ мар. Ҫапла-и? Анчах вӑл ҫавӑн пек тума пултарассине кӑтартса пачӗ. Асӑрханмалла.

Славик тӑчӗ-тӑчӗ те кӗтмен ҫӗртен кулса ячӗ.

— Юлташсем, эп халь ним калама та пӗлместӗп, анчах спектакль пурпӗрех пулать. Ним чухлӗ те иккӗленместӗп. Эпир ҫӗнтерме тивӗҫлӗ.

Володя вырӑнӗнчен хускалмарӗ.

Славикӗн хӗрелсе кайнӑ сӑнне асӑрхаса, кулса илчӗ те Алеша, пукан ҫине ларчӗ, пирус кӑларчӗ...

— Эсир туртмастӑрччӗ пулас иксӗр те. Мӑкӑрлантарма ирӗк паратӑр-и?

Ӑна ирӗк пачӗҫ.

Алеша пирусне тивергрӗ те, ҫӑра тӗтӗм кӑларса, лӑпкӑн калаҫса хучӗ:

— Ан шанчӑр. Ку пирӗншӗн усӑллӑ. Пире сцена кирлӗ. Хӑшпӗрисем шанманни пире ҫивӗчрех, хӑюллӑрах, тӑрӑшуллӑрах, тимлӗрех тӑвать. Начар мар.

Алеша отвечӗ Володьӑна тӗлӗнтерчӗ, савӑнтарчӗ, ҫав вӑхӑтрах кӗвӗҫтерчӗ те пулас. Вӑл ҫав каччӑра хӑйне хирӗҫле вӑй пуррине сисрӗ: каччӑн ҫирӗплӗхӗ ӑна килӗшет, анчах вӗсем юлташсем пулма пултарас ҫук. Нихӑҫан та. «Малтанхи кун вӑл ытла айван пек курӑнчӗ. Халӗ вара — тӗлӗнсе пӗтерейместӗн»,— шухӑшларӗ Володя, ҫамрӑк инженерӑн кӑмӑллӑ та ӑслӑ сӑн-питне сӑнаса.

Юлташӗсемпе тата темтепӗр ҫинчен калаҫса ларнӑ хыҫҫӑн вӑл, вӗсене иккӗшне хӑварса, урама тухрӗ. Паян унӑн репетицине те каяс ҫук. Икӗ кун харӑс канмалла. Ӑслӑ урамра чипер хӗрсем ҫине пӑхкаласа нумайччен ҫӳрерӗ вӑл. Кӗҫех ун куҫӗ умне Людмила сӑнӗ тухса

тăчĕ. «Вăт хĕрарăм. Ачаш та хăй, ыталама та меллĕ, анчах ыра ятăма пăсма пулать». Володя ăшĕнче кулса илчĕ. Паян унăн кăмăлĕ аван.

Вăл театр умне çитсе тăчĕ те, «тен, Тамарăна курмăп-ши», тесе, кĕрсех кайрĕ. Тамарăна курмарĕ. Коридорта Людмилăна хирĕç пулчĕ, анчах сăмах хушмарĕç вĕсем пĕрне-пĕри. Те вăтанни пулчĕ ку, те—пытанни.

Виççĕмĕш хута хăпарса, Володя репетицисем иртте-рекен зала пычĕ. Яланхи пекех. Нимех те çук. Анатолий Степанович сасси унчченхинчен улшăнман, кăмăлĕ те уçă пек курăнать.

Володя каялла çаврăннăччĕ çеç, çав вăхăтра ăна гахăшĕ ятпа чĕнчĕ. Анатолий Степанович иккен. Аслă режиссер ун патне васкамсăр çывхарчĕ те, сывлăх сунса, аллине пачĕ. Володя хăй те аслă режиссер аллине хăвăрт тытса чăмăртарĕ.

— Канмалли кун та килетĕн, театрсăр пурăнаймастăн ĕнтĕ,— кулкаларĕ Анатолий Степанович.

— Пĕр самант та,— шӳтлесе хирĕç тавăрчĕ Володя. Анчах та çапла шӳтлени ăна аслă режиссер умĕнче хăйне çăмăлттайла кăтартнă пекех туйăнчĕ, вара вăл, кулма пăрахса, хуллентерех:— Ĕççем пурччĕ,— терĕ.

— Пулĕ, пулĕ çамрăк çыннăн,— сасăпа калама юраман вăрттăн ĕçшĕн вăтантарас мар тенĕ пекрех пăхрĕ Анатолий Степанович Володя çине.— Пулĕ, пулĕ, ĕнетĕп.— Унтан, алхаснă пек, Володьăна хулпуççинчен хытах чышса илчĕ те хаваслă сасăпа:

— Ну, мĕнле пыраççĕ ĕçсем?— тесе ыйтрĕ.

— Аван!..

— Чăннине пĕлтерес килмен чухне эп хам час-часах çак сăмаха калатăп. Эсĕ те çапла-и?

Анатолий Степанович каллех хаваслăн кулса илчĕ. Çын умĕнче хăйĕн пĕчĕк çылăхне йышăнса чунне уçни Анатолий Степановичшăн хăйшĕн те кĕтмен çĕртен пулчĕ, анчах ку — темех мар-çке. Володя вара, аслă режиссер хăйне çапла хисеп тунинчен тĕлĕнсе, ним калама та аптрарĕ. Анатолий Степанович мăнкăмăллăн е хирĕçсе калаçнă пулсан, Володьăн ăна тивĕçлипех ответлеме хăюлăх та çитнĕ пулĕччĕ, кирлĕ сăмахсемшĕн те вăл кивçене каяс çукчĕ. Халь вара... Володя пачах кĕтменччĕ çакăн пек калаçăва.

— Ну, мĕн вăтанатăн?— малтанхи пекех çепĕççĕн калаçрĕ Анатолий Степанович.— Мĕнле-ха сана, вăтанаканскерне, хĕрарăмсем юратаççĕ?

— Хĕрарăмсем?— тĕлĕннĕ Володя аслă режиссер çине шăтарас пек пăхрĕ. Анатолий Степанович куçĕсене пытармарĕ, куçĕсем кулмастчĕç — Володя çакна асăрхарĕ те çӳçенсех кайрĕ. «Нивушлĕ пурне те пĕлет? Каплах ман пурнăç ытла та начар-çке»,— шухăшларĕ вăл тарăхса.

— Сана Людмила Алексеевна курасшăнччĕ паçăр. Тĕл пулмарăр-и?

«Пĕлет ват пуç!»

Ку ыйтăва мĕншĕн панине Володя тӳрех ăнланчĕ, çапах та, шуйттан хăватне парăннă чун пек, сисмесĕрех ответлерĕ:

— Çук. Тĕл пулман...

Ук сасси те, сăнĕ те улшăннине Анатолий Степанович тӳрех асăрхарĕ. «Пурте çапласкерсем эсир — меммесем»,— терĕ вăл хăй ăшĕнче. Вара каллех, малтанхи хавасла сăн-сăпатпа кăмăллă сассине çухатмасăр, Володьăна чавсинчен тытса чарчĕ те:

— Тепĕр сехетрен ман пата пырăн-ши?—тесе ыйтрĕ.

Володя халĕ аван туйса илчĕ: ку — ыйтни мар, ырă сунса чĕнни те мар, ку — хушса калани.

— Юрĕ,— хирĕç тавăрчĕ вăл, шухăша кайса.

Вĕсем уйрăлчĕç.

Володя урама тухрĕ. «Мĕн мурĕ тăвасшăн-ха ку?.. Шухăшлама пĕр сехет вăхăт пачĕ пулать. Чее, ват шуйттан. Мĕскершĕн килтĕм-ха паян кунта? Тепĕр чух калатчĕ... Тепĕр чух эп хальхи пек кĕселленсе тăмастăмччĕ».

Хула çемçен вĕçекен юр мамăкĕнче — тĕлĕкре кулса выртакан ача пек. Лăпкă, уçă сывлăш питне ачашшăн сĕртĕннине те туймасть халь Володя. Майĕпен утса, вăл Советсен площадьне çитрĕ, каялла çаврăнчĕ. «Каймасан мĕн пулать-ши? Çук çав, юрамасть: сăмах панă. Ман пек çыннăн хăй сăмахĕ çинче тăмаллах». Вăл хавассăр кулса илчĕ те: «Э, ăçта каймасть пĕр качака укçи»,— текелесе, театр еннелле хăвăрт утрĕ.

Анатолий Степанович хăй пӳлĕмĕнче пĕчченех. Вăл, темле хутсемпе аппаланаканскер, Володя кĕрсен сăмах чĕнмесĕрех ăна ларма сĕнчĕ. Хăй каллех хучĕсем çине пуçне чикрĕ. «Халь юриех пĕр пилĕк минут лартатьха. Шуйттан çисе каясшĕ»,— тарăхса пăхрĕ Володя Анатолий Степановичăн çаралма пуçланă çавракка çамки çине. Çав вăхăтрах хăй ăна шăпах çавăншăн хисепленине те туйса илчĕ. «Ман пеккисемпе урăхла калаç-

ха, уссы те виçĕ пуслăх пулмĕ!» Ку шухăш Володьăна нимĕн чухлĕ те савăнтармарĕ, çапах та вăл «лартатăн пулсан, çур сехет те ларма пултаратăп»,— текен сăн-сăпатпа ытахальтен пӳлĕм ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ. «Нимĕн интересли те çук. Эп хам, аслă режиссер пулсан, çав стена çине кавир илсе çактарнă пулăттăм. Ку чăнах та культура вучахĕ иккенне пĕлтерекен пĕр япала та курăнмасть. Станиславский портретне те пулин тупайман...»

— Владимир Андреевич,— Анатолий Степанович пуçне çĕклерĕ.—Эсир çĕнĕ спектакль лартма хатĕрленнине пĕлетĕп эпĕ. Паллах, унта сансăр пулмасть. Анчах та пĕр пĕчĕкçеç чăрмав пур-çке: пирĕн маларах репертуара йышăннă пьесăсене хатĕрлемелле. Кирлĕ тесе шутлакан артистсем те, тен, çитмĕç. Унсăр пуçне, санăн вĕри юнлă юлташу мораль тĕлĕшĕнчен те ответлăх туймасть пулас: лартатпăр тесе сăмах панă пьесăсене лартмаллах-çке. Вăл пур — хăйне валли шăл çемми шыраса тупнă та, театр çине ал сулнă. Директорпа калаçнă имĕш, манран вăрттăн. Ку мĕне пĕлтерет?..

Анатолий Степанович чарăнчĕ, Володя çине сăнаса пăхрĕ, унтан каллех лăпкăн калаçрĕ:

— Эсĕ ăслă ача. Эп сана юри чĕнтĕм. Ӳкĕте кĕрт юлташна. Асту, хăйшĕн начар пулма пултарать.

— Ӳкĕте кĕртме май çук пуль.

Володьăн лăпкă сасси аслă режиссера тарăн шухăша ячĕ.

— Пулма пултараймасть,— терĕ вăл.— Пулма пултараймасть. Кайран-малтан ан ӳпкелĕр вара. Эп юлташла асăрхаттаратăп.

— Каласса калăп, анчах та вăл килĕшес çук.

— Административлă мерăсем йышăнмалла-ши-мĕн вара?

— Анатолий Степанович, вăл пурпĕрех хăй ĕçнех тăвать, эп ăна пĕлетĕп!

— Вăт ашак!

— Ăна пӳлме икĕ май пур,— сасартăк Володьăн куçĕсем хавхалануллăн йăлтăртатса илчĕç.— Пĕрремĕш — пьеса чăнах та начар тесе ĕнентересси. Анчах ку — пурнăçа кĕртме май çук шухăш. Иккĕмĕш...

— Ну, мĕн иккĕмĕш?..

— Эсир хăвăрах каларăр-çке...

— Çынсен пĕр пайне эп илĕп. Ыттисем пурпĕр юлаççĕ. Вăл пуçтаратех.

— Анатолий Степанович, калăр-ха вăрттăн,— хăюлланчĕ Володя,— мĕншĕн лартасшăн мар эсир çав пьесăна?

Кавир çине тухнă кĕрешекенсем пĕр-пĕрин аллине хаваслă кулăпа чăмăртанă самантрах кĕрешӳ пуçланать. Çак икĕ çын сăн-питĕнче те вĕсен шала пытарнă туйăмĕсем палăрсах каймаççĕ. Анчах та вĕсем хушшинче пыракан чĕмсĕр калаçăва итлеме май пулнă пулсан, эпир çакна илтнĕ пулăттăмăр:

«Сисетĕн-çке, мĕн ыйтса тăратăн, е санăн эп парăннине курса савăнас килет-и? Чим-ха, ку парăнни те пулмасть вĕт-ха: чее тăванăм, эс ху та юлташусене сутма хатĕр».

«Куратăн-и: эп санпа та, вĕсемпе те выляма пултаратăп. Эп вĕсене кирлĕ, анчах эсĕ те ман хака туятăн. Эп санран мĕн ыйтнине хăвах пĕлетĕн — ухмах мар, пурнăç опычĕ санăн такамшăн та çитмелле. Уçăл, уçăл, ан хăра».

«Эп сана тĕрĕссине калăп, анчах эсĕ кайран унпа мана хирĕç усă курмăн-и? Эс манран та чеерех иккенха. Ытла çамрăкла пуçлатăн. Ну, юрĕ, пăх-ха кунталла. Пăх-ха, пăх-ха, лайăхрах курам сана».

«Ан хăра, ват пуç. Çитменнине, хăрасан хăрамасан та, эс пурпĕрех калама тивĕçлĕ. Эсĕ мана ĕненместĕн-и?»

Володя тата уççăнрах кулать те, ответ кĕтсе илмесĕрех, ытахальтен кăна тенĕ пек каласа хурать:

— Кичемрех пурăнатпăр-ха...

«Шуйттан пĕлет-ха сана: те чăн калатăн эсĕ, те вылятăн»— ĕненмест Анатолий Степанович.

Вăл çаплах чĕнмест.

«Хăравçă»,— тарăхать ăшĕнче Володя.

«Кирлехчĕ-ши ку калаçăва пуçарма? Эп лешсемпе пĕчченех майлаштараттăм пуль, тен. Ну, юрĕ — мĕн пуласси пулĕ».

— Пьеса мана килĕшсех пĕтмест. Тата мĕнле йĕрке вăл — аслă режиссертан ыртсе кайса ĕçлесси?

— Çапла, сирĕн авторитет кăштах шупкалма пултарать. Çынсен чĕлхинчен хăрушраххи ним те çук-çке.

Володя хăй тĕл лектернине пĕлчĕ. Ахальтен мар аслă режиссер «авторитет» сăмаха илтсенех пуçне чикрĕ.

— Кичемрех пурăнатпăр çав,— терĕ вăл, кăшт тăрсан, Володя сăмахĕсене илтмен пек. Вĕсем пĕрне-пĕри ăнланчĕç.

— Тăхтăр-ха, хĕллехи гастрольсем хăçан пуçланатчĕç-ха?— сăмаха урăх йĕрпе яма шутларĕ Володя.

— Ха-ха-ха!— кĕтмен çĕртен хыттăн ахăлтатса кулса ячĕ Анатолий Степанович. Вара ларнă çĕртен хăвăрт сиксе тăчĕ те Володя патне пырса ăна хулпуççинчен чышса илчĕ.— Ну, пуç та санăн!

«Охо, аслă режиссер мухтамалăх ӳснĕ иккен-ха эпĕ»,— хăйĕнчен хăй тăрăхлама хăтланчĕ Володя, урама тухсан. Анчах та сасартăках туйса илчĕ: Анатолий Степанович çине вăл халь, çак самантра, ним чухлĕ те çилленмест иккен. Çитменнине, çав сăмахсене хăй мĕн тунине пĕлсех каларĕ-çке вăл. Унăн ăшĕнче темĕнле çутă сӳнчĕ, тейĕн. Темле пружина, халиччен ăна малалла хĕтĕртсе тăраканскер, унăн ăсĕпе чун-хавалне çивĕчлетме пулăшаканскер, унăн сассине янравлăрах, хусканăвĕсене сулмаклăрах та унăн кашни сăмахне ĕненмеллерех тăваканскер,— çак пружина халĕ татăлнăнах туйăнчĕ ăна. Репетицисем, Юманов пьеси тăрăх хатĕрленĕ премьера... Тамара, Людмила... Славик, Яндушов. Акă унăн пурнăçĕ, унăн çыхăнăвĕсем... Ах, унччен институт пулнă-çке. Çутă, таса тĕнче!» «Ромео рольне выляттăм... Эп, чăваш, Ромео ролĕнче. Ха-ха-ха! Халь — Çтаппан. Ыран — Мĕкĕте. Пĕри — тракторист, тепри — сысна пăхакан. Тĕлĕнтерсе яракан аталану ку, пĕр шухăшласан. Анчах та шухăшлакансем çук. Эх, Çтаппан, Çтаппан! Юратман эп сана, эсĕ те мана юратмастăн. Анланмастпăр эпир пĕрне-пĕри, акă мĕн!.. Шурков тем каласа лĕпĕртетрĕ пĕркун. Эп вара радиора сăвă вулаттăм, телевиденире пĕр пайлă комеди кăтартаттăм, Çтаппанăм килте выртатчĕ. Тĕрĕссипе каласан, çав рольсенчен пĕри те кăмăла каймач мана. Гамлет ăçта! Ăçта Сирано де Бержерак! Пулмалла-и манăн е пулас çук-и, тепĕр тесен? Чăваш искусстви, тетпĕр. Мĕскĕнсем! Ав, Славик, Ашмарин профессор словарьне туяннă та — пăхмасăр калама вĕренет: «Мамăк тӳшек сарса, йăлйăл кулса, кăчăк туртса юлчĕ хура куç». Çапла, ĕлĕк халăх хăй поэт пулнă, унăн чунĕ хальхи пек çич еннелле сапаланман. Халь тĕлли-палли те çук: те вырăс эп, те чăваш. Тен, пĕр-пĕр абэгэ мар-ши? Наци сăн-сăпачĕ çухалсах пырать. Эпир пур, ухмахсем, хамăр та сисмесĕрех ăна гримлатпăр, тухъя тăхăнтаратпăр, ура сыртаратпăр... Алă сулмалли анчах юлнă ĕнтĕ...

Анланчĕ Володя: чăнах та, хăй каларăш, пурнăç тĕрекне çухатнă вăл... Анчах та... анчах та выльăх, пĕр

кётӳрен юлсан, теприне ерсе каять-ҫке. Пурнӑҫ тӗрекӗ ҫухалчӗ тесе, пурӑнма пӑрахмалла марах ӗнтӗ... «Условисем улшӑнчӗҫ — меслетсене улӑштарас. Ку — ҫутҫанталӑк саккунӗ, ӑна эп шухӑшласа кӑларман».

## XI

— Эсӗ больницӑра тенине илтсеччӗ. Сывалтӑн-и ӗнтӗ халь?

Тӗкӗр умӗнче тӑракан Людмила хӑй ҫумӗнчен иртсе пыракан Тамарӑна тытса чарчӗ.

— Эп... ҫапла, больницӑра пултӑм,— терӗ вӑл.— Халь сывалатӑп ӗнтӗ.

— Бюллетеньпех-и-ха?

— Бюллетеньпех. Тепӗр ик кунтан хупаҫҫӗ пулмалла.

— Э-эх, усал куҫа курӑнса килмест, теҫҫӗ. Ыран мӗн пулассине паян никам та пӗлмест ҫав.

Иккӗшӗ те ассӑн сывласа илчӗҫ, тӑвӑр коридор тӑрӑх хуллен утса кайрӗҫ.

Мӗншӗн каларӗ ҫак сӑмахсене Людмила? Мӗншӗн Тамара мӑкӑнь пек хӗрелсе кайрӗ?

Людмилӑн тахҫантанпах Тамарӑпа темӗн ҫинчен шӑппӑн, лӑпкӑн, вӑрттӑн калаҫас килет. Темӗн ҫинчен мар, пурин ҫинчен те — пурнӑҫ ҫинчен, хӗрарӑм шӑпи ҫинчен, телей ҫинчен, Володя ҫинчен. Кирек мӗнле пулсан та, вӗсем пӗрне-пӗри ӑнланассӑн туйӑнать ӑна. Людмила Тамарӑн кӑвак куҫӗсене асӑрханса тинкерет, анчах та йывӑр пӗлме — темскер унта: те курайманлӑх, лайӑх пытарнӑскер, те чеелӗх, курайманлӑх тӑванӗ, те хуйхӑ ҫеҫ. Хуйхӑ пулсан... Людмила хӗре пӑшӑрхантарма шутламастчӗ, ун шучӗпе, Тамара Володьӑсӑр пуҫне те каччӑ тупма пултарать. Ҫакна ӗненсе тӑни Людмилӑшӑн ҫӑлӑнӑҫ утравӗ пекех, ҫапах ку утрава та шыв илме пултарассине сисет те вӑл, унӑн чунӗ каллех чӗтренсе илет, кӗрхи ҫумӑр айне пулнӑ чечек пек. «Мӗнле чечек ӗнтӗ эпӗ халь,— шухӑшлать Людмила,— мӗнле чечек... Хуҫӑлнӑ, ҫеҫки усӑннӑ чечек, вараланнӑскер». Кӗвӗҫӳпе хутӑшнӑ тарӑху тата пурнӑҫа ҫӑткӑнла юратни ҫеҫ ӑна халӗ пуҫа усма памасть: ҫавӑнпах вӑл Тамара патне килчӗ те. Кирлӗ пулсан, ах... кирлӗ пулсан, вӑл тем тума та хатӗр. Володя ҫеҫ унпа пултӑрччӗ. Тамара та чӗнмест. Хӑйпе юнашар утакан хӗрарӑм чӗринче мӗнле туйӑмсем капланнине пӗлмест вӑл. Аҫтан пӗлтӗр ӗнтӗ? Людмилӑпа вӗсем туслашма пултараймарӗҫ,

мĕншĕн тесен вĕсен хушшине малтанхи кунсенчех Володя сăнарĕ чикĕ юпи пек тухса тăчĕ. Тен, çывăхланнă та пулĕччĕç вĕсем Володя пулман пулсан, кирек кам та пĕрле ĕçлекен çынпа çывăхланать-çке. «Володя... Аш çунтармăш Володя. Мĕншĕн юрататăп-ха эпĕ сана?..»

Вĕсем коридор вĕçне çитрĕç. Малалла кайма çук. Кайма кирлех те марччĕ. Каялла çаврăнчĕç.

— Эсĕ халь ĕçлеместĕн пулĕ ĕнтĕ, ма килнĕччĕ театра?— ыйтрĕ Людмила кăмăлсăррăн, мĕншĕн тесен вăл Тамара ĕçлеменнине пĕлет, апла пулсан, ыйтни те — кулăшла.

— Тунсăхларăм,— çĕрелле пăхса хуравларĕ Тамара.— Курас килекен пулчĕ хамăр çынсене.

— Çапла ĕнтĕ,— терĕ Людмила шăппăн, пуçне чиксе.

— Санăн паян репетицинче пулмалла-и?

— Ĕнер пултăм репетицире. Паян ман — канмалли кун-ха.

«Нивушлĕ ача-пăчаллă çыннăн килте ĕç çук-ши?— шухăшларĕ хăй ăшĕнче Тамара.— Апла кунта мĕн çăмăлпа çӳретĕн?»— ыйтас килчĕ унăн, анчах пĕр сăмах та чĕнмерĕ вăл.

Вĕсем алăк патне çитрĕç. Тамара, урама тухма тытăнса, Людмиларан уйрăлчĕ çеç, лешĕ ăна каллех чарчĕ:

— Тăхта, пĕрлех тухăпăр... Эс ăçта каятăн?

— Радиона. Ача-пăча передачисен редакторне курмалла.

— Эпĕ те пыратăп. Илсе каятăн-и? Кăштах пушă вăхăт пур-ха. Уçă сывлăшпа сывласа вăхăта çамрăксемпе ирттерем.

Калаçу каллех татăлчĕ пулин те, Тамара хăйне Людмила темĕн çинчен калаçма шут тытнине ăнланчĕ. Мĕн çинчен-ха? Хĕр çак ыйтăва ответлеме пултараймарĕ. Володя пирки калаçма Людмилăн хăюлăх çитес çук пек туйăнчĕ ăна. «Ун çеç мар, никамăн та,— шухăшларĕ вăл.— Тата урăх мĕн пулма пултарать-ха?»

Урамра ытарма çук ырă çанталăк. Юлашки кунсем март уйăхĕн вĕçне аса илтереççĕ: уçă сывлăш чĕрене уçать, тӳпере аялтанах çăмламас пĕлĕтсем шуса иртеççĕ, хутран-ситрен ирсерен хула çинче сенкертерех тĕтрен çӳхе те çепĕç каррине куратăн, кĕрпеклĕ юр ура айĕнче хуллен тĕпренет, юр çук çĕрте — асфальт. Клумбăсем, асамçăсем пек, тĕлĕреççĕ, вĕсем çинче çак самантрах

хĕрлĕ те кĕрен, кăвак та шурă чечексен чашăкĕсем уçăлса хĕмленме тытăнасăнах туйăнать. Хура ўтлĕ çăкасенче те сĕткен чупни сисĕнет — тымартан папкана. Ак кĕçех тўпе чаршавĕ сирĕлĕ те, çутçанталăк концертне ертсе пыракан хĕвел хаваслăн кулса тухĕ. Хальччен кăштах тĕлĕрнĕ пурнăç сасартăк шăнкăрчсен хаваслă юррипе çĕкленĕ, çеçке çуран ўсентăран çĕр питне çĕнĕ тĕс кĕртĕ. Уяв çитĕ, пысăк уяв — пурнăç уявĕ.

— Тĕлĕнмелле ырă çанталăк,— терĕ Тамара, чăннипех хавхаланса.

— Çуркуннене аса илтерет, тунсăхлама аван...

Чĕтренсе тухрĕ Людмила сасси. Унăн çутăрах хăмăр куçĕсем кăштах хĕсĕнчĕç, вăл çуртсемпе йывăçсем çине темле вăрттăн хурлăхпа, вĕсемпе сывпуллашнăн пăхса пычĕ. Вут пек пĕçерекен тутипе те, хĕрелсе кайнă питçăмартисемпе те уçă сывлăшăн минретсе яракан симне туйрĕ вăл. Каллех ача пулас килчĕ унăн. Ав, çунашкапа ярăнаççĕ. Нимле хуйхă-суйхă та çук вĕсен, тĕлĕнмелле хаваслă та ырă тĕнчере пурăнаççĕ вĕсем. Çапăçни те, куççуль тăкни те, ылханни те — самантлăх çеç, пĕр çилпе килет, теприн пе каять...

— Светлана мĕнле ўсет санăн?

Людмила чĕри тахăшĕ йĕппе чикнĕ пек ыратса кайрĕ.

— Ўсет,— терĕ вăл, Тамара çакна ыйтнăшăн ун çине çилленнĕ пек сасăпа. Анчах тепĕр самантранах вăл, «ман хуйхăшăн эс айăплă мар-çке-ха», тесе каланăн, хăйпе юнашар утакан хĕр çине уççăн пăхса илчĕ те, сăмахне малалла тăсрĕ.— Пысăкланать ĕнтĕ. Кĕçех мана пулăшакан пулать. Кулăшла: ĕнер супăнь катăкĕ тытнă та урай сĕрме тытăннă. Пуканисемпе мĕн кăна хăтланмасть пуль...

Людмила савăнăçлăн каларĕ. Анчах та çак хĕрпе хăй мĕншĕн пĕрле утнине аса илчĕ те вăл — самантрах тĕксĕмленчĕ, Тамара кĕтмен çĕртен Светлана çинчен ыйтни те ăна ырра пĕлтермен пек туйăнчĕ. «Вăл мана эп кам иккенне аса илтересшĕн пулмарĕ-ши?»— текен шухăш та килчĕ унăн пуçне.

— Ытла та юрататăп эпĕ пĕчĕк ачасене. Вĕсем хăшпĕр чух пурнăç тупсăмне тупса панăнах туйăнать. Темле уçăмлăх сисĕнет, пурте хăй вырăнĕнче пек... Тĕлĕнмелле...

— Санăн воспитательте ĕçлемелле пулнă,— терĕ Людмила, Тамара çине шанмасăр пăхса.

Хĕр чунне çак тӳрккеслĕх ыраттарса илчĕ пулин те, вăл ăна систермерĕ.

— Чăнах та,— терĕ вăл малтанхи сасăпах,— пĕр вăхăт эпĕ ача садĕнче ĕçлеме те шухăшлаттăм, вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăнах. Халь тин ăçта каятăн ĕнтĕ?

«Эс ача садĕнче ĕçленĕ пулсан, Володьăна курас çукчĕ».

Людмила хирĕç чĕнмерĕ. Вĕсем радиокомитета çитрĕç, пусма картлашкисем тăрăх иккĕш те харăс утса хăпарчĕç.

Коридорта Алешăпа Славик курăнса кайрĕç. Çамрăксем иккĕшĕ те таçта васканăн туйăнать, вĕсем Людмилăпа Тамарăна хăвăрт кăна сывлăх сунчĕç те, темшĕн каçару ыйтса, чарăнмасăрах тухса кайрĕç. Алешăн куçĕсем самантлăха Тамара çинче чарăнчĕç.

Редактор çук иккен. Пĕр татăлнă калаçу коридорта каллех пуçланчĕ.

— Мĕн туса çӳреççĕ кусем кунта?— ыйтрĕ Людмила.

— Кам пĕлет,— хирĕç таварчĕ Тамара,— Славик кунти режиссерпа тем канашласшăн мар-ши?

— Вĕсем пĕрне-пĕри паллаççĕ-и вара?

— У-у, малтанхи кунсенчех туслашнă.

— Кунти режиссер хăй те ĕлĕк пирĕн театрта ĕçленĕ, теççĕ, Анатолий Степановичпа хирĕçсе тухса кайнă.

— Ма кĕрешмен вара вĕсем?

Людмила кулса ячĕ:

— Сирĕн, çамрăксен, кĕрешесси малта... Кĕрешӳ çухатусăр пулмасть-çке...

— Кĕрешӳсĕр пурнăç — пурнăç та мар. Ман тĕрĕслĕхе кам та пулин ĕненмесен, ăна çул памасан, чысран кăларма тăрăшсан — вилетĕп, пурпĕрех кĕрешетĕп.

Людмила пĕлмерĕ: те ĕненмелле Тамара хĕрӳлĕхне, те ку — вĕриленни çеç.

— Мухтава тивĕçлĕ сан пек çынсем. Ăмсанатăп,— улшăннă сасăпа пĕлтерчĕ вăл.— Эп хам яланах кăшт çемçешке пулнă. Ман çинчен çынсем, калас-тăк, урăхла шутлаççĕ.

— Мĕнле тата вăл — урăхла?— тĕлĕнчĕ Тамара.— Чăнах та, çын çинчен тĕрлĕрен шухăшлама пулать ĕнтĕ. Ман пирки те тĕрлĕ шухăшлакансем пулĕ те — çынна ăçтан чарăн...

Людмила тарăннăн сывласа илчĕ, пусăрăнчăк сасăпа хуллен:

— Тĕрĕс,— терĕ.

Унăн халĕ калаçăва урăх еннелле пăрас килчĕ.

— Редактору пурпĕрех çук, атя, универмага çитсе килер,— сĕнчĕ вăл Тамарăна.

— Кĕçех килет, терĕç те, кĕтсех тăрар-ха,— терĕ хĕр ăна хирĕç.

Людмила хăй кăмăлсăр иккенне кăтартмарĕ, çутă та хаваслă сăн-сăпатпа, хĕрпе хĕр калаçнă чухнехи пек, темле вăрттăнлăх уçăласса кĕтнĕн, Тамарăна аллинчен ярса тытрĕ те:

— Мĕнле каччă çав Славик?— тесе ыйтрĕ.

Ку хаваслăха хирĕç хаваслăх кирлĕччĕ ĕнтĕ, анчах Тамарăн сăнĕ улшăнмарĕ.

— Вăл çĕнĕ спектакль хатĕрлет, çавна çеç пĕлетĕп.

— Э-эх! Вăл спектакль те пуласси пур-ха... Ик телейлĕ япала! Эп ĕненсех те пĕтерейместĕп.

Тамара ун еннелле хăвăрт çаврăнчĕ:

— Кам пĕлтерчĕ сана спектакль çинчен?

— Володя.

— Володя?— Тамара хăй хĕрелсе кайнине туйрĕ. Çак самантра Людмила та ун çине тинкерсе пăхрĕ.— Апла пулсан, тĕлĕнмелли çук... Аван мар хăтланать Володя...

— Мĕнле ăнланмалла сан сăмахусене?— ăшĕпче савăнса ыйтрĕ Людмила.

Хĕр пуçне çĕклерĕ:

— Вăл мана та çаплах каларĕ: Славик спектакль хатĕрлет, эп унта вылясса вылятăп пулмалла, анчах ĕç тухасса шанмастăп, терĕ. Пулаççĕ-çке çавăн пек туссем.

— Володя вылямасть вăл спектакльре,— сасартăк питех те хĕпĕртесе пĕлтерчĕ Людмила.

— Ăна роль панă-çке! Артистсем ахаль те çитмеççĕ! Ытла та тĕлĕнмелле хăтланать вăл. Хăй сана çапла каларĕ-и?

— Хăй.

— Хăçан?

— Ĕнер... каçхине.

Людмила хăй мĕн тунине ăнланса илчĕ-ши, çук-ши, анчах сасартăк ăна темле савăнăç çĕклентерсе ячĕ. «Кур-ха, епле аван пулса тухать,— шухăшларĕ вăл,— эп вĕсене çапăçтарсах яратăп-çке. Тав турра, Володьăра темскер пурах пек-ха, вăл ман майлă пулассăн туйăнать».

«Ĕнер? Каçхине?— Людмила сăмахĕсене илтсен, Тамара шартах сикрĕ.— Апла ун пек-и-ха!.. Пурте

паллă... Ухмах хĕрача. Хăвăнтан çапла култаратăн-и ĕнтĕ? Ухмах, ухмах...»

Тамара ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ. Людмила хĕр пăлханнине аванах курчĕ, хăй сăмахĕсем ун чĕрине мĕнле кĕрсе вырнаçнине те пĕлчĕ вăл. Унăн Тамарăна урăх асаплантарас килмерĕ: вăл чӳречерен пăхма пуçларĕ.

— Славикпе пĕрле кам пулчĕ çав тата?

— Пьеса авторĕ пулма кирлĕ, пĕр инженер,—хăвăрт тавăрчĕ Тамара калаçас килменнипе.

— Сан çине пăхрĕ те, хамăн чун çӳçенсе кайрĕ. Хĕрӳллĕскер пулмалла.

«Кĕвĕçни мана çапла калаçтарать-ши?— самантлăх хăйĕнчен хăй вăтанчĕ Людмила.— Э-э, юрĕ-çке, темех мар. Ăна валли кашни утăмрах...»

Тамарăн тухса чупас килчĕ. Людмилăпа вăрçса кайсан та аван пулмалла. Анчах Володя... путсĕр çын.

Алăк уçăлчĕ те коридорта пĕр хĕрарăм курăнчĕ. Тамара ăна хыçалтан тӳрех палларĕ, çăлăнăç тупнă пек, ун патнелле ыткăнчĕ. Вĕсем алăкран кĕрсе çухалчĕç. Тепĕр самантран Тамара коридора тухрĕ те шухăша кайнă Людмилăна:

— Кăшт тăхта, эп кĕçех!— тесе хăварчĕ.

Людмила, килĕшнине пĕлтерсе, пуçĕпе сулчĕ, чӳречерен урамалла пăхма тытăнчĕ. Автобуссемпе троллейбуссем, пĕр вĕçĕмсĕр унталла та кунталла иртекен халăх хĕрарăм пуçĕнчи шухăшсен чупнине пĕрре те кансĕрлемерĕç. Сасартăк вăл кăртах сикрĕ: урампа Володя хуллен иртсе пырать. Людмилăн чĕри ыратсах кайрĕ. Темле ухмахла шухăш вăркăнса кĕчĕ ун пуçне: «Юратать пулсан, иртсе каймасть — кĕрет». Çанçурăмĕ пĕçерпине туйса илчĕ те Людмила, чĕри тапнă май, шутлама тытăнчĕ — пĕрре, иккĕ, виççĕ... Çирĕм улттă таран шутласан, алăк сасси илтĕнчĕ, коридора çын кĕрсе тăчĕ. Людмила алăк енне хăвăрт çаврăнчĕ. Ăна хирĕç Володя килет.

— Сана кунта тĕл пуласса пĕлсех кĕтĕм, салам!— терĕ вăл, аллисене Людмила еннелле тăсса.

Хĕрарăм, пĕтĕм кĕлеткипе ун патне туртăннăскер, хавасланса хĕрелнĕскер, сасартăк тăпах чарăнчĕ. Темле сисĕмлĕх ăна çак çынпа хăй хушшинче сивĕ те аван мар, тĕттĕм япала пуррине пĕлтерчĕ. Володьăн кулли килĕшмерĕ-ши ăна, е унăн сасси, е вăл пĕтĕмпех ăна килĕшмест-и? Кам вăл униăн, кам вăл унăн — çак ар-

çын? Унăн телейĕ-и, е çак хаваслă, çутă тĕнчепе çыхăнтаракан çинçе çиппе кĕçех татса яма пултаракан сивĕ чунлă этем-и? Кам вăл?

Людмила çӳçенсе илчĕ. Ку ыйту çине вăл нихăçан та хăй тĕллĕн хуравлама пултараймĕ çав, Володя... вăл килĕшес çук... Çынсем — пĕлтермĕç... Ку — иккĕшĕн хушшинчи, ку — вăрттăнлăх, ку — вĕсен çеç! Урăх никамăн та мар...

Володя кулма чарăнчĕ, хĕрарăма аллинчен тытрĕ:

— Мĕн эсĕ, Людмила? Ним те пулман пулĕ-çке?

Сăн-пит те, сасă та улталать çав. Людмила аллисене вĕçертрĕ те Володьăн аллине хăй хыттăн тытса чăмăртарĕ. Малтанхи пăлханчăк шухăш таçта кайса çухалчĕ унăн, çутă хăмăр куçĕсенче каллех савăнăçлă хĕлхемсем, юр пĕрчисем пек, çиçме тытăнчĕç.

— Мĕн туса çӳретĕн çак эс кунта?

— Йĕрпе килтĕм...

— Хам та çапла пуль тесех шутланăччĕ. Кăштах кĕтсе тăр ĕнтĕ, кĕçех тухать,— вĕчĕрхенерех пулин те савăнăçлăн каларĕ Людмила.

Володя тĕлĕнсех кайрĕ:

— Кам?

— Кам пултăр? Ху пĕлетĕн пуль — йĕрпе килтĕм, терĕн-çке.

Володя, хăвăрт пĕшкĕнсе, Людмилăн урине чĕркуççирен аяларах самантлăх çеç аллипе перĕнчĕ те, тӳрленнĕ май, ĕнентерес тенĕ пек, лăпкăн, чунтан тухакан сасăпа:

— Эп çак пушмак йĕррисемпе килтĕм,— терĕ.

Чи фантастикăллă тĕлĕнтермĕш те чуна тыткăнлать. Людмила каччă сăмахĕсене ĕненмерĕ, анчах çав сăмахсенчи туйăм унăн кăкăрне савăнăçлăн пăлхантарса çĕклентерчĕ. Унăн кĕлетки малтанхинчен те ытларах пĕçерме тытăнчĕ. Вăл хăй Володьăна пурпĕрех кăшт та пулин пăлхантарса тăнине туйса илчĕ, çавăншăн чĕререн хĕпĕртерĕ. Телей, пĕчĕк пулсан та — телеех. Прожектор балет сцени çинче тĕп геройсене çутатнă пек, çав вылянчăк телей çути халĕ мĕнпур тавралăхран вĕсене иккĕшне — Людмилăпа Володьăна — уйăрса илчĕ. Людмилăна урăх ним те интереслентермерĕ. Ăна урăх ним те кирлĕ мар. Вăл хăй ывăннине туйрĕ. Унăн нимĕн çинчен те шухăшлас килмест. Ан тив, хăть мĕн калаçчăр ун çинчен, театртан каймалла пулсан та вăл хирĕçлес çук — Володя çеç унпа пултăр.

— Володя, эп пĕтĕмпех халтан кайрăм. Илтетĕн-и?
Людмила сасси шăппăн илтĕнчĕ.

— Сире, хĕрарăмсене, пĕлме çук,— терĕ Володя, кĕске вăхăт хушшинчех Людмила сăн-пичĕ темиçе хут улшăннинчен чăннипех те тĕлĕнсе.

— Çапла çав, пире, хĕрарăмсене, пĕлме йывăр, çĕнсе илме çеç — çăп-çăмăл...

— Людмила, эп сана кӳрентертĕм-и вара?— çепĕççĕн калаçрĕ Володя.

— Мана çын кӳрентерместь. Эп хама хам кӳренетĕп. Çынсенчен эп ырри̇не çеç куратăп.

— Пăрахар ку калаçăва. Эсĕ ун пек калаçакан марччĕ-çке. Ну, савăнăçлăрах пул ĕнтĕ. Миçе çын иртсе кайрĕ. Кун пек сăнпа тăрсан, мĕн шутлĕç иксĕмĕр çинчен?

— Шутлĕçин... Çынсенчен пытараймăн...

— Пытарма кирлех те мар,— лăплантарчĕ Володя, унтан çак сăмахсемшĕн хăй çине тарăхса кайрĕ: ытлашши пулчĕ.

— Тамара паян мĕн каларĕ, пĕлетĕн-и?

— Мĕн каларĕ?

— Вăл сана юрататъ, анчах та эс унăн идеалĕ мар. Вăл санпа халĕ нихăçан та пĕр шухăшлă пулас çук.

Володя кулса ячĕ.

— Тĕлĕнмелле. Мĕн пулса тухнă-ха вара?

— Вăл Славике шанать, спектакль пуласса ĕненет. Тĕрĕслĕхшĕн вĕçне çитиччен çапăçма сăмах пачĕ.

— Тупа турĕ-и?

— Тупа та турĕ,— терĕ Людмила, хĕрӳленсе.

— Сăмахсене тĕрлĕрен илтме пулать,— сиввĕнрех калаха хучĕ Володя, кĕнеке çинчен вуланă пек.—Эс мĕн каларăн ăна?

— Ху ĕнер каçхине мĕн каларăн, çавна...

Володя тарăхнине палăртмарĕ.

— Тен, эсĕ тĕрĕсех те тунă пулĕ,— терĕ вăл, Людмила çине пăхмасăр. «Ыран-и, паян-и — ман вăл сăмахсене тепре калама тиветчĕ, Тамарăна та мар — Славике. Каланă-тăк — аван».

— Темĕн интересли çывхарса килнĕн туйăнать! Эс пĕлме тивĕç: пĕрпеклĕхе чăтма пултараймастăп эпĕ. Иртнĕ уйăхсем мана йăлăхтарчĕç. Тĕп пултăр чуна шăнтакан кичемлĕх!

— Çавăншăн юрататăп та эпĕ сана,— шăппăн пĕлтерчĕ Людмила.

— Охо! — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Володя. «Эппин, эпир радиокомитет коридорĕнче юрату çинчен калаçмалăхах çывăхланнă иккен!» — Эпĕ те сана çавăншăн...

Людмила хăйĕнчен кулнине сисмерĕ. Юратушăн тунсăхланă чунĕнче унăн чăнпа суяна уйăрмалăх та асăрханулăх юлман ĕнтĕ. Вăл ытла та васкавлăн ыйтрĕ:

— Мĕншĕн?

— Эсĕ мана юратнăшăн...

Володя пуçне аяккалла пăрчĕ. Телейлĕ Людмила ним те чĕнмерĕ, унăн питçăмартисемпе тути çинче çутă та лăпкă шевле вылярĕ.

Людмила паçăртанпах ĕнтĕ Тамара тухасса кĕтет. Мĕнле майлă вăхăтчĕ уншăн! Паçăр Володя ун ури патне пĕшкĕннĕ чух тухнă пулсан аванччĕ те. «Ĕнтĕ тухма вăхăт, — шухăшлать Людмила. — Хăçантанпа тăрать».

— Апла, Тамара терĕн-и-ха? Эсĕ ăна кĕтетĕн-и? Тата мĕн калаçмалли пур сирĕн? — тăруках ыйтрĕ Володя, Людмила çине пăхса.

— Калаçмалли те çук-ха, кĕтме пултăм та... Эс килессе пĕлнĕ пулсан... Ав!

Людмила хăвăрт шăпланчĕ. Алăк сасси илтĕнчĕ. Коридора Тамара тухрĕ. Хăй енне çаврăнса тăнă Володьăпа Людмилăна асăрхасан, вăл ним тума пĕлмерĕ. Тен, сăмах чĕнмеллеччĕ пулĕ вĕсене е чĕнмесĕр иртсе каймаллаччĕ-и? Тамара аптрасах ӳкрĕ, анчах та алăкран тухсан чарăнса тăмарĕ, Володьăна сывлăх сунчĕ те урамалла тухса вĕçтерчĕ.

«Пулчĕ, — шухăшларĕç Людмилăпа Володя пĕр харăс. — Эпир вĕсенчен уйрăлтăмăр».

Володя йӳççĕн кулса илчĕ.

Людмила ассăн сывларĕ.

«Арçын пулса çитетĕп пулас. Романтика пĕтрĕ-ши? Е вăл халь тин пуçланать-и? Авантюрист иккен эпĕ. Еплерех сальто-мортале пулчĕ», — шухăшларĕ Володя. Вăл тĕреклĕ хулпуççийĕсене савăнăçлăн вылятса илчĕ.

«Манăн ыранхи кун паянхинчен лайăхрах пулĕ-ши, е эп çак самантшăн кайран пĕр вĕçĕмсĕр ӳкĕнĕп?» — шухăшларĕ Людмила хăраса.

## XII

Славик хăй паллакан çынсен, юлташĕсемпе тусĕсен пурнăçĕ çине, вĕсен шухăш-кăмăл хусканăвĕсем çине халичченхи пек мар, урăхларах, вĕсене ăнсăртран курнă пек, ют çын куçĕпе, çав вăхăтрах вĕсен ку таранччен-

хи пурнăçне пĕлсе тăрса пăхрĕ. Телĕнмелле ӳкерчĕк уçăлчĕ ун умĕнче: кирлĕ-кирлĕ мар калаçусен купи, вăтантарса хĕретекен хутшăнусем, темле тĕрĕс мар йĕрсемпе чупакан шухăшсем, куçкĕрет айванлăх. Çак пĕтĕмпех чуна савăнтарма пултаракан ырă шухăш-кăмăлпа юнашар, пархатарлă ĕçсемпе пĕрле, çивĕч ăспа, малашлăха куç хывнă çунатлă ĕмĕтсемпе пĕр харăс. Пĕрре пăхсан, ку кулăшлаччĕ. Шухăшласан — ăна ăнланма пулатчĕ. Унтан та ытларах — çапла пулма кирлĕ пекех туйăнатчĕ. Славик куçĕсене чарсах пăрахрĕ. «Чăнах та, этем ку таранччен çапла çăрăлса пурăннă. Хăрамăпăр çапла калама. Революци ун ăстăнне мĕн чухлĕ тасатнă, ун шухăш-йĕрне мĕн чухлĕ тирпей кĕртнĕ, унччен часчас тĕллевсĕр ĕмĕчĕсене, пурнăçа кĕме пултарайман юмахсемпе йăпанса пурăннăскерсене, пĕрремĕш хут тĕллев кăтартса çунатлантарнă. Анчах та этем паянхинчен нумай илемлĕрех, ӳт-пӳрен те, ăстăнпа туйăм-сисĕмрен те хальхинчен сывăрах, хăватлăрах пулма тивĕçлĕ. Вăл çапла пулĕ те. Унччен вара пайтах çапăçмалла-ха. Кампа? Тусанпа, пылчăкпа, чирпе, ватлăхпа. Этем чĕринчи, этем пуçĕнчи тусанпа, ватлăхпа.

Вăл ăшĕнче хăй вăйне тата тепĕр хут виçсе пăхрĕ, лару-тăрăва тĕрĕс хак пама тăрăшрĕ. Юлашкинчен, пурте уçăмлă пек туйăнчĕ ăна: пьесăна çырса хатĕрлесс çитернĕ, ăна худсовет членĕсем вуласа ырларĕç, репетицисем ирттерме вырăн пур, артистсем те çителĕклĕ. Пĕтĕм чăрмав — аслă режиссерта. Тĕрĕссипе илсен, çынсем калана тăрăх — худсоветăн нимĕнле авторитет та çук. Аслă режиссер мĕн тăвас тет, çавна тăвать. Худсовет членĕсем хăйсен шухăшне те ĕненми пула пуçланă имĕш. Славик ку сăмахсемшĕн пăшăрхансах тăмарĕ. Çак пăтăрмахлă ĕçре хăй çĕнтерессĕнех туйăнчĕ ăна. Чăнах та ĕнтĕ, шухăшласа пăхсан, тӳрех паллă-çке: вăл кирлĕ ĕç тăвать. Мĕнле калаçу пулма пултарать тата урăх?

Яланхи пекех хăвăрт пуçтарăнса, вăл паян та ирех театра васкарĕ. Вахтер сĕтелĕ патĕнче ăна Тамара кĕтсе илчĕ. Вăл Славике тем калама хатĕрленни курăнчĕ. Вĕсем пĕрне-пĕри сывлăх сунчĕç. Славик коридорпа сулахаялла пăрăнсанах Тамара ăна хулĕнчен ярса тытрĕ те Володьăпа Людмилăн шухăш-кăмăлĕ çинчен васкасах калама пуçларĕ.

— Эп сана ĕнерех пĕлтересшĕнччĕ, тĕл пулаймарăм кайран,— тесе вĕçлерĕ вăл сăмахне.

Тарăхса кайнă Славик ним тума пĕлмерĕ.

Хăй кабинетне кĕрсен те вăл тӳрех сăмах тупаймарĕ.

— Халь мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?— Славикрен те ытларах пăлханчĕ Тамара.

— Мĕн те пулин тăвăпăр.

Пĕр вăхăт иккĕшĕ те шăп пулчĕç.

— Путсĕр те иккен ку этем,— терĕ юлашкинчен Славик.— Тĕлĕнсе каймалла. Мĕнле çынсем пур пирĕн хушăра... Шел Людмилăна.

Тамара чĕнмерĕ.

Кĕçех Алеша персе çитрĕ. Çĕнĕ хыпар ăна уртарсах ячĕ.

— Каларăм-çке тахçанах: сирĕн театрта путлĕ çын сахал, тесе. Юлташ тесе пурăнатăн. Ох, путсĕр! Ох, путсĕр!— Алеша диван çине кайса ларчĕ те пуçне чикрĕ.— Паллах, театрта пурте ун пек мар. Лайăх çынсем начаррисенчен пур çĕрте те ытларах пулаççĕ... Володьăна панă роле халь ху илетĕн пуль?

— Ĕç рольте çеç мар...— терĕ Славик, пуçне çĕклемесĕр.

— Анланатăп, тусăм. Сана халь манран та йывăртарах. Тен, ахалех килсе пуçа чикрĕм пуль çак çурта.

— Пустуй сăмаха ан калаç. Сана никам та айăпласшăн мар,— лăплантарчĕ Алешăна Славик.— Акă мĕн чуна пăшăрхантарать — куçкĕрет япаласем çинчен мĕн чухлĕ калаçмалла, тавлашмалла! Юн тăкмалли çеç юлчĕ-ши ĕнтĕ?

— Эпир кăштах идеалистсем. Çавă çеç. Юн тăкма кирлĕ мар. Ĕç унсăрах майлашăнма тивĕçлĕ,— кĕтмен çĕртен лăпкăн сăмахлама тытăнчĕ Алеша. Унтан, Тамара еннелле çаврăнса, хаваслă сасăпа.— Çапла-и?— тесе ыйтрĕ.

— Çапла!— çавăн пекех хаваслăн хуравларĕ Тамара та.

— Каçарăр, эп сире паллаштарма мансах кайнă.— Славик ура çине тăчĕ те Алешăпа Тамарăна аллисенчен тытрĕ.— Тамара, чаплă артистка пулма ĕмĕтленет... Алеша Яндушов, инженер, драматург специальноçне илессишĕн экзамен тытать.

Тамара Алешăна алă пачĕ. Каччă ăна асăрханса чăмăртарĕ.

— Церемони иртрĕ. Хам çылăха каçарттартăм,— терĕ Славик.— Виççĕш те кулса ячĕç.

Çав вăхăтра тахăшĕ алăка шаккарĕ.

— Кӗре́р,— терӗ Славик.
Кабинета Володя кӗрсе тӑчӗ.
— Ман килес. Аван-и пурте?— Вӑл ҫамрӑксем ҫине хаваслӑ туйӑмпа чӑрсӑррӑн пӑхкаларӗ.— Иртсе пыраттӑм та, шавланӑ сасӑ илтӗнчӗ. Кӗрсе курас, терӗм.
— Килнӗ ҫынна хӑвалаймӑн. Лар,— диван ҫине тӗллесе кӑтартре́ Славик.
Володя майӗпен ларчӗ те ӗненме йывӑр хавхаланупа калаҫма пуҫларӗ:
— Ҫӗнӗ хыпар: паян пӗр ылтӑн пулӑ туянтӑм! Пулӑ-тӑк пулӑ! Аквариума ҫапӑҫтарать ӗнтӗ. Пулӑсем те кӗ-вӗҫеҫҫӗ...
— Пирӗн те ҫӗнӗ хыпар пур,— терӗ Славик, чунтан тарӑхса.
— Мӗн тата?— ним те пулман пек ыйтрӗ Володя.
— Эс — путсӗр этем,— чӑтса тӑраймарӗ Тамара. Унӑн хӗрелсе кайнӑ питҫӑмартисемпе ҫунтарса ярас пек пӑхакан кӑвак куҫӗсене Володя пӗр вӑхӑт чӑннипех те киленсе сӑнарӗ.
— Мӗн чухлӗ ырӑ вӑй сисӗнет санра,— терӗ вӑл Тамарӑна.— Эсир те ҫаплах шутлатӑр-и?
— Ҫаплах,— терӗ Алеша, канӑҫсӑррӑн хусканса.— Ҫаплах шутлатпӑр...
Вӑл ассӑн сывласа илчӗ.
— Итле-ха, Володя,— ура ҫине тӑчӗ Славик.— Мӗнле ӑнланмалла эсӗ юлашки вӑхӑтра кӑтартакан фокуссене? Сана тивӗҫлӗ ролех-и ку?
Володя ахӑлтатса кулса ячӗ. Унтан, лӑпланса:
— Ытла та айван-ҫке эсир, йӗпе романтиксем. Хӑвӑр мӗн тунине те чухлаймастӑр,— терӗ.— Эп сирӗншӗн тӑрашатӑп, туссем-ҫке-ха эпир, туссем...
— Сӳпӗлтетсе тӑрас марччӗ,— хыттӑн каларӗ Тамара.— Туссем юнашар утаҫҫӗ. Эсӗ хыҫалтан ҫыртатӑн... Каласса та ан тӑр кунта!
— Чӗлхӳ ҫивчӗ санӑн, пӗлетӗп,— сасартӑк кулма пӑрахрӗ Володя, ҫилленме пуҫласа.— Калаҫни ытлашши ан пултӑр.
— Хамӑн хама ҫителӗклӗ,— Тамара тутӑрне майлама тытӑнчӗ. Вӑл хӑй Володя умӗнче пӗрремӗш хут вӑтанмасӑр калаҫнине асӑрхарӗ, вара, темӗн ҫухатнӑ пек, сасартӑк кулянса кайрӗ.
— Тус ҫавӑн пек парне кӳрессе кӗтменччӗ,— терӗ Славик.— Тен, чӑнах та эпир пурнӑҫа ӑнлансах ҫитерейместпӗр пуль.



7. Ю. Айдаш. Ҫӑнтӑр ҫутипе.

— Чăн сăмах!— сиксех ӳкрĕ Володя.— Эсир пурнăҫа ăнлансах пĕтерейместĕр. Пурнăç вăл — кăткăс япала. Эпир аквариумра мар-çке. Эп хам та сенкер ĕмĕтсен тыткăнĕнче пурăнаттăм. Мĕн шухăшлани йăлт пурнăҫа кĕрсе пырас пекчĕ. Чăнах та, эп халиччен пысăк чăрмавах курман пурнăçра. Эп пурне те ҫĕнтерсе пытăм. Анчах та халь урăхла чăрмавсем сиксе тухрĕç. Ну, шухăшласа пăхăр ĕнтĕ, мĕн тума пултаратпăр эпир ҫак юлашки вăхăтсенче? Театр искусстви, тетпĕр. Чăваш чĕлхи, тетпĕр. Тепĕр вун çултан чăвашла калаçакан та пулмасть. Театр та, чăваш театрĕ, кама кирлĕ? Акă мĕн çинчен шухăшламалла! Эсир пур — чикĕшме те хатĕр. Мĕн усси? Вĕçĕнче мĕн пуласса пĕлмелле. Эсир ăна пĕлместĕр, пĕлме те шухăшламастăр. Çавă пăшăрхантарать.

— Пирĕншĕн, тархасшăн, ан пăшăрхан!— чышкисене чăмăртарĕ Алеша.— Çеçпĕл чĕлхи янăрать. Малашне те янăрĕ. Хытăрах янăрĕ...

— «Янăрĕ»! Аран-аран... Шупашкартан Қавал таран. Çапла-и? Ха-ха! халь урăх масштабсемпе пурăнмалла.

Тамара, ыйхăран вăраннă пек, шартах сикрĕ.

— Мĕн пăхса тăратăр ун çине? Қăларса сирпĕтĕр ирсĕре!— кăшкăрса ячĕ вăл. Унтан, чунĕ кӳтнине тӳсеймесĕр, халь-халь йĕрсе ярас пек, коридоралла тухса чупрĕ.

— Эп Тамарăна çавăн пекех çемçе чĕреллĕ хĕр тесе шутламан. Ак тĕлĕнтермĕш!

Володя, аллисене саркаласа, пĕрре Славике, тепре Алешăна куçларĕ. Кĕç-вĕç сиксе тăма хатĕр Алеша ун çине пăхмарĕ, ик аллипе диван хĕррине чен çатăрласах тытрĕ.

— Апла эс пирĕн искусство çине хăяккăнрах пăхатăн иккен-ха. Пур çав унăн сан пек ывăлĕсем, пур... Шупашкара, тĕп хулана, амăшĕсем ачисене курма килеççĕ — сăхман е кĕрĕк тăхăннă. Тутăрĕсене каялла çавăрса çыхнă. Урам тăрăх хитрен утса тухма та пултараймаççĕ. Вĕренмен! Аслă ачисем вара, сан пеккисем, вĕреннисем, амăшĕсемпе автобус çинче чăвашла калаçмаççĕ. Пĕрле çӳреме те вăтанаççĕ...

— Аннепе эп чăвашлах калаçатăп-ха,— ирĕксĕррĕн кулса ячĕ Володя.— Анчах ку чăваш искусствине çăлас çук. Унăн ĕмĕрĕ кĕске. Санăн пьесу, Алеша, аван пулĕ, о-о! тен, талантлă та пулĕ (эп те ăна кăшт пăхкаларăм-

çке — аван пек туйăнчĕ), çапах та вăл пирĕн искусствăн юлашки курăмĕ хыççăн хупăнакан чаршава сирсе пăрахас çук... Диалектика, тăванăм...

— Çапла, эс диалектикăна вĕреннĕ çав,— йўçĕнчĕклĕн кулса илчĕ Славик.

— А халăх! Мĕн шутлатăн халăх çинчен?— Алеша ура çине сиксе тăчĕ.— Халăх санран урăххине ыйтать! Пĕлетĕн-и, çынсем мĕнле савăнаççĕ? Епле савăнмăн: театрта пурте аслă шкул пĕтернĕ-çке! Акă ĕнтĕ пирĕн тăван искусствăн та тĕнче искусстви шайне çитме вăхăт, теççĕ. Хальхи вăхăт шайĕнче тăракан çынсем-çке-ха, теççĕ. Эсĕ пур.

— О, Алеша, ан вăтантар, тархасшăн! Ахаль те, вăтана-вăтана, сăмах чĕнейми те пулса çитрĕмĕр.

— Вăтантарăн сана!

Куçĕсене чарса пăхать Славик ĕнерхи тусĕ çине:

— Володя, эс мана шалтах тĕлĕнтерсе пăрахрăн. Эсех-и ку? Нивушлĕ эсĕ çапла шухăшлатăн? Аçта санăн ырă ĕмĕтўсем? Сана ĕненес те килмест.

— Ĕнен, тусăм, ĕнен. Çитет, хама хам куçкĕрет улталаса пурăнтăм...

— Мĕнле майпа?

— Тĕрлĕрен... Çуккине пур тесе ... Юрĕ, çитĕ. Калаçрăмăр. Эс ху пек, эп хам пек. Парас-илес çук. Ĕçĕ те пĕтнĕ,— çаплах лăпкăн, хăй тĕрĕс шухăшланине чунтан ĕненсе калаçать Володя.

— Ик айкки те тăвайкки. Çапларах-и? Мĕнле-ха капла, Володя? Халăх сана вĕрентнĕ, ўстернĕ, халь эс ак ун çине пăрахнă хĕрў çине пăхнă пек пăхатăн. Ху пурнăçунта эсĕ сахал мар ыр сăмах илтнĕ. Сăпка юрринчен пуçласах. Кам каланă вĕсене? Халăх. Эс кĕнекесенчи ăслăлăха вĕреннĕ. Кам ăсĕ çыраннă унга? Халăхăн. Этемлĕхĕн. Çук-ха, ку таранччен эпир санпа хамăр тĕллĕн пĕр утăм та туманччĕ-ха. Пире халĕ те этемлĕх малалла тĕртсе пырать. А эпир ăна хăçан çул кăтартăпăр, э? Хăçан пулăшăпăр ăна илемлĕрех, ăслăрах, çунатлăрах пулма? Вăл пире шанать-çке! Вăл çаплах пирĕн çине ăшшăн пăхать, амăшĕ ачи çине пăхнă пекех. Мĕн пур татах та пархатарлăраххи тăван халăха валли ĕçленисĕр пуçне? Кала-ха? Асту, Володя, халăх ылханĕ витĕмлĕ. Амăшĕ ылханĕ ачине çитет, теççĕ чăвашсем.

— Тĕшмĕшлĕх. Тата — кам каларĕ сана эп халăхшăн ĕçлеместĕп, тесе?

— Кун ирттĕр тесе ĕçлени халăхшăн ĕçлени мар.

— Ну, юрĕ. Туман çылăхсемшĕн халех ан вăтантар. Ну, юрĕ... Апла эсир спектакле лартасах тетĕр?

— Лартатпăрах, Володя.

— Пырса курăп.

— Чармастпăр. Анчах та... Пĕлмен эс кун пек çын иккенне. Эпир, ухмахсем, хамăр çинчен ырă ят юласса шанатпăр. Халăх юрринчи пек. Астăватăн-и: ыр çын вилет — ят юлать, тет. Эсĕ вилсен — мĕн юлĕ?

— Охо! Ыйтăва çивĕч лартнă. Эп вилсен, мĕн юлĕ, тетĕн-и? Мĕн юлас пек туйăнать сана? Пĕр ывăç тăпра юлать!

— Сан аçу вăрçăра вилнĕ-и?

— Вăрçăра.

— Манăн та. Ленинграда хӳтĕлесе. Эп виçĕмçул унăн вилтăпри умĕнче пултăм .Вут çунса тăрать — нихçан сӳнмесĕр. Вилнисем чĕррисемпе калаçаççĕ, çӳçентерсех ярать. Вĕсем чĕрĕ. Пĕлетĕн-и çавна? Туятăн-и? Эс ху камне пĕлместĕн пулас çав.

— Охо! Эсĕ хăвна çирĕп тытаканччĕ-çке. Мĕнле-ха паян нумай калаçатăн, э? Сăмахсем сана та тыткăна илчĕç-и?.. Ха-ха! Аçу сана ачашларĕ-и вара? Эсĕ унăн аллине хытă тытса чăмăртарăн-и?.. Сăмахран, сасăран культ тăватăр. Сасса пуççапатăр. Калăн, тĕнчере этем ăсĕ мар, сăмах пуçпулса тăрать. Сăмах чурисем эсир!

— Аçу ĕмĕтне кам пурнăçа кĕртĕ? Çавăн çинчен шухăшласа пăхнă-и эсĕ? Вилнисемпе чĕррисем пĕрпĕринпе çыхăннă. Вилнисем чĕррисем хушшинчех пурăнаççĕ. Эпир пурте пĕр ĕçех тăватпăр.

— Мĕн калăн! Эрех ĕçетпĕр, хĕрарăмсем хыççăн чупатпăр, кутран-ситрен ĕнесемпе пуçланса ĕнесемпех пĕтекен комедисенче вылятпăр, кукуруза акатпăр, пуçлăхсене критиклетпĕр, вĕсенех йăпăлтататпăр... Çапла-и?

— Эпир революци тăватпăр!— çиллессĕн, шăл витĕр, шăппăн каларĕ ура çине сиксе тăрса Алеша.

Володя та тăчĕ, костюмне тӳрлеткелесе, Алеша çине куç айĕн пăхрĕ, анчах ăна хирĕç ним те чĕнмерĕ.

— Эсĕ, романтик, пурнăç çине урăхларах пăхма вĕрен,— терĕ вăл Славике.— Романтика этемлĕх ачалăхĕнче çеç пулать тенине илтнĕ ĕнтĕ эсĕ. Белинский сăмахĕсем. Эс те ача-ха. Ӳсес пулать, шăллăм. Улăх тăрăх чечек пуçтарса çитет.

— Юрĕ, ан вĕрент. Тухса сирпĕн хăвăртрах. Тата... тем пулса тухма пултарать.

— Каятăп.— Володя алăк патнелле утрĕ.— Сана вара юлашки сăмах калатăп, юлташла: пурнăç синчен нумай калаçма кирлĕ мар, тусăм. Пурнăçа ăна — пурăнмалла!

Володя, алăк хăлăпне тытсан, çамрăксем енне тепре çаврăнчĕ те пуçне тайса тухса кайрĕ.

Пӳлĕмрисем нумайччен чĕнмерĕç.

— Ухмахла шăплăх, ухмахла çемçешкелĕх,— терĕ юлашкинчен Алеша.— Мĕншĕн тытса касмарăмăр эпир ăна? Асăнмалăх пулатчĕ.

— Чуну каннă пулĕччĕ-и?— сиввĕн пăхрĕ ун çине Славик.— Володя пеккисемпе урăхла калаçмалла. Эх, артист — туса пачĕ пирĕн вăхăтăн кĕске обзорне. Вăл хăйĕн кашни хусканăвне ĕненсе таракан эгоист пулнă иккен. Мĕнле-ха ку таранччен этем пĕрре те такăнман. Халь такăнчĕ. Çапах такăннине йышăнмасть.

— Йышăнас та çук. Эпир çемçе.

Нумайччен чĕнмерĕ Славик.

— Эс ăна сахал пĕлетĕн-ха,— терĕ юлашкинчен.— Вăл шуйттанла ача: кирлĕ пулсан, çĕр тĕпне анса кайма хатĕрскер. Ĕçлеме те пултарать. Ку роль шăпах ăна валли тесе шутлаттăм ĕнтĕ. Мĕн пулчĕ ăна? Мĕн пулчĕ?

— Пурте паллă: хăйшĕн çĕр тĕпне те анать, çыншăн — пӳрнине те хускатмасть.

— Апла пулсан, мĕншĕн çак чир ку таранччен палăрман-ха?.. Эх, этем, этем! Çивчĕ куçлисем те суккăрланаççĕ. Тусан çиет. Канăççăр чĕресене те ыйхă пусмăрлать. Сасса пуççапатăр, терĕ. Сăмаха. Тен, кăштах тĕрĕс те каларĕ пуль: нумай калаçатпăр тепĕр чух. Нумай калаçма кирлĕ мар — витĕмлĕ калаçмалла...

## XIII

Иртен-çӳренсем çине пăхмасăр, ирхи çутçанталăк сăнĕпе хавхаланса киленнĕ май, хуллен утать Славик театр еннелле.

«Галя... Çутă çăлтăрăм. Эсĕ маншăн чи çывăх çын пулса тăтăн-çке. Сан пекки тĕнчере урăх пĕр çын та çук. Галя, Галя...» Юратнă хĕр сăнарĕ асран та каймасть. Телейлĕ Славик. Галя та телейлĕ-ши? Юратать пулсан, телейлĕ пуль.

Юлашки кунсем хĕрпе каччăна татах та ытларах çывăхлантарчĕç. Халь вĕсем малтанхи пек пытанса та вăтанса тĕл пулмаççĕ ĕнтĕ. Пĕр-пĕрне кирлĕ пуласса

иккĕш те лайăх туйса илчĕç. Каччă пекех, ĕмĕтленнĕ чух, Галя та Славике хăйĕн чи çывăх çынни тесе шутлать. Пуласлăхри кашни куна каччă ячĕпе çыхăнтарать.

Тепĕр çур сехетрен вĕсем Гальăн ĕç пӳлĕмĕнче тĕл пулчĕç. Гальăна пулас спектакльти декораци эскизĕсене туса хатĕрлеме Славик ĕнер çеç хушнăччĕ. Хĕр ун умне пĕр папка уçса хурсан, Славик тĕлĕнсех кайрĕ: костюмсем пирки ыран калаçса пăхăпăр тенĕччĕ вăл, ак халь кунта декорацисем те, костюмсем те.

— Мĕнле-ха çавăн пекех хăвăрт? Çĕрĕпех çывăрмарăн-и? — ыйтрĕ вăл Гальăран.

— Эпĕ мĕн чухлĕ çывăрнине эсĕ пĕлме тивĕçлĕ.

Славикĕн тĕлĕннине палăртакан сăн-сăпатне курса, тăраничченех кулнă хыççăн, Галя хăйĕн вăрттăнлăхне уçрĕ:

— Эскизсене эпĕ тахçанах тума тытăннăччĕ, пьесăн пĕр экземплярне алла илсенех.

— Декорацисем темех мар, тейĕпĕр, анчах костюмсене эсĕ ăçтан-ха ман кăмăла каймалла тума пĕлтĕн? Эп сана пĕр сăмах та каламанччĕ-çке.

Галя чĕнмерĕ — телейлĕн кулчĕ. Кăшт тăхтасан тин вара:

— Пьесăри çынсем куç умнех тухса тăраççĕ. Вĕсене эс те ман пекех курнă иккен,— терĕ.— Çапах, репетицисем вăхăтĕнче, тен, кăшт та пулин улăштарма тивĕ-ха...

Вăл декораци эскизĕсене тепĕр хут пăхса тухрĕ.

— Эсĕ унччен те çакăн пекех лайăх декорацисем хатĕрленĕ-и? — ытараймасăр ыйтрĕ Слава, хĕре куçран пăхса.

Галя кулса ячĕ.

— Яланах. Мĕнле-ха эс çавна та асăрхаман?— Славик ним те чĕнмесĕр пуçне пăркаланине курса, хĕр сăмахне малалла тăсрĕ:— Эпĕ халь хам фантазие ирĕке ятăм. Юриех. Ку мĕн калĕ-ха, терĕм... Анатолий Степанч, пĕлетĕн-и, ух, мĕнле реалист вăл! Пырса ан тĕкĕн çавăн евĕрлĕ эскизсемпе. Вăл яланах «пурнăçри пек» пултăр, тет. Вара ăна пурнăçри пек туса параттăм, анчах та, тӳррипе каласан, хама та кăмăла каймастчĕ çав «пурнăçри пекки».

— Ĕмĕтсĕр вăл — çавăнпа.

Коридорта ура сасси илтĕнчĕ. Славик тăма ĕлкĕричченех алăк уçăлчĕ те пӳлĕме Шурков, хĕсĕннĕ пек, айăккăн пăрăнарах кĕрсе тăчĕ. Вăл Славăпа Галя çине шанмасăртарах пăхса илчĕ. Унăн сăн-питĕнче самантлăх

темле «эсир ăслă та, эп те ухмахах мар» тени выляса илчĕ. Унтан вăл сасартăк, кулнă пек туса, шăлĕсене кăтартрĕ те хăй çамрăксене пачах та чăрмантарма шухăшламанни çинчен васкаса пĕлтерчĕ.

— Мĕн каласшăнччĕ çак эсир?— ыйтрĕ Кудрявцев, чĕнмен хăна çине кăмăлсăррăн пăхса.

— Аслă режиссер ячĕ, Анатолий Степанович,— васкарĕ лешĕ.— Вăл сире пыма хушрĕ.

— Иксĕмĕре те-и?

— Çук, сире çеç. Режиссера чĕн-ха, терĕ.

— Халех пыратăп, кала.

Шурков хăвăрт çухалчĕ.

— Мĕн вăл паян тамăкран тарса тухнă çылăхлă чун пек!— тĕлĕнчĕ Галя.— Пашкать, сывлăшне аран çавăрать.

— Темшĕн савăннă пулас. Пĕркун çапла режиссер ăна та ыттисем хушшинче аса илсе мухтанă та, ик сăмаха та пĕрле çыпăçтараймасăр, текех кавлесе çӳрерĕ... Пулаççĕ граждансем.

— Граждансем... Шурков пек граждансем кăтартнипе ĕçлес пулсан, çитнĕччĕ пурнăç.

Славик эскизсене каллех папкăна пуçтарса хучĕ.

— Мĕн шуйттанĕ тума чĕнтерет-ха вăл, э? Ахалех чĕнтерес çук. Пĕр-пĕр пăтăрмах тупса парсан ак...

— Ху шухăшланинчен ан пăрăн. Эсĕ пĕччен мар.

Вĕсем пĕрлех тухрĕç.

Анатолий Степанович хăй кабинетĕнче пĕчченех. Чӳречерен пăхса тăракан скер, вăл, Славик кĕрсен, хуллен ун еннелле çаврăнчĕ, хирĕç сывлăх сунчĕ, аллипе диван çине кăтартса, ларма сĕнчĕ.

Майĕпен утса пырса, Анатолий Степанович унпа юнашар вырнаçрĕ, ассăн сывласа илчĕ, хуллен калаçма пуçларĕ:

— Çамрăклăх, çамрăклăх... Амăрткайăк вĕçевĕ пек ирĕклĕ сан ĕмĕтӳ, ун пекех хăюллă. Сăрт-тусене те хускатассăн туйăнать... тата ытти те, тата ытти те!— Анатолий Степанович сăн-пичĕ хуйхăллăн тĕксĕмленчĕ. Вăл чĕререн тухакан сасăпа сăмахне малалла тăсрĕ.— Ас ӳсĕрĕлни çеç ку. Тĕнче илемлĕ-çке! Çапах та, пурте çăмăллăнах алла лекес çук. Кам çамрăк пулман? Пурнăç йĕрки çавăн пек: çамрăклăх çĕнтерсех пырать. Çамраклăх нихăçан та ватăлмасть вăл. Çынсем çеç ватăлаççĕ, вилеççĕ... Тĕлĕнтерет вăл, пурнăç, шухăшласан. Тепĕр тесен, тĕлĕнмелли те ним те çук. Пурин те вĕçĕ пур.

Вăхăт кăна вĕçĕмсĕр... Çапла, ывăлăм. Çак шухăшсем çынна урăлтараççĕ. Романтика сĕрĕмĕ иртет. Тинĕс çинче тĕтре сапаланса пĕтнĕ пекех.

Анатолий Степанович сасси шанчăклă çынпа калаçнă чухнехи пек лăпкăн янăрать. Çав шанчăклă çынна йăнăшсем тăвасран хăтарас, ытлах палăртмасăр тăна кĕртес тени те сисĕнет ку сасăра.

Кудрявцев чĕнмерĕ.

Анатолий Степановичăн малтанхи сăмахĕсене вăл тĕлĕнсе итлерĕ, анчах та кĕçех аслă режиссер шухăшĕ àçталла пăрăнса пынине асăрхаса илчĕ те, ăшĕнче пĕрре тарăхса, тепре кулянса, ун сăмахĕсене малтанхи пекех пуçне çеклемесĕр тăнларĕ.

— Çапла, ывăлăм. Санăн ĕмĕтӳсем те, хăйсене уйрăм илсен, ырă ĕмĕтсем. Тулĕк инкекĕ те шăпах çавăнта-çке: уйрăм илме юрамасть вĕсене! Театр ĕçĕнчен, театр пурнăçĕнчен, тата анлăрах каласан...

«Ытларах аслă режиссер пурнăçĕнчен»,— кулса илчĕ ăшĕнче Славик.

— Театрти лару-тăрăва асра тытас пулсан, хăшпĕр йĕркесене пăхăнас пулать. Эсир, çамрăксем, мĕн тăвас килет, çавна тăвасшăн. Чĕре хушать имĕш. Чĕре часчасах суккăр вăл. Юнтармăш ача пек тата. Мĕнпур йăнăшсем чĕре хыççăн кайнипе пулаççĕ те. Аспа ĕçлес пулать. Çиччĕ виçсе пĕрре касма каланă. Урă куçпа пăхмалла, урă куçпа...

— Конкретлăрах пулмалла кун пек чухне.

— «Конкретлăрах!»— шăпах çакă кирлĕ çав. «Конкретлăрах!» Тĕрĕс!— хавасланса калаçрĕ Анатолий Степанович. Унтан сассине пусарчĕ.— Акă, эсĕ спектакль лартасшăн. Килĕшетĕп: эсĕ спектакль лартма тивĕçлĕ, сана никам та чарма пултараймасть. Театрта лайăх спектакльсем кирлĕ. Санăн хăвăртрах хăвăн пултарулăхна çынсене кăтартас килет. Ну, калăпăр, çынсенчен те ытларах хăвна. Ху режиссер тата начар мар режиссер пулнине санăн чи малтан хăвна кăтартса памаллаçке. Тавлашмастăп, коллега, тавлашмастăп. Анланатăп эпĕ сана. Эс вара мана пачах та ăнланасшăн мар,— Анатолий Степанович ăшă кăмăлне палăртса кулса та илчĕ.— Ну, ку çав, паçăр каланă пек каласан, ăс ӳсĕрĕлнинчен çеç килет. Урăх нимрен те мар...— Сасартăк унăн сасси улшăнчĕ, хытăрах, хушнă пекрех илтĕнчĕ вăл.— Урăлас пулать. Вăхăт ĕнтĕ. Пĕчĕк ача мар. Тӳррипе илсе пăхсан, çамрăклăх — сирĕн телей çеç вăл, ĕç-

ре тупнă пархатар мар. Çавăн пекех пирĕн ватăлăх та — пирĕн хуйхă.. Вăл пирĕн айăп мар. Çапла, ывăлăм. Пĕрне-пĕри ăнланса ĕçлес пулать. Эп тĕрĕс калатăп-и?

— Тĕрĕс мар теме çук... Пĕрне-пĕри ăнланса ĕçлес пулать. Çавăнпа ыйтатăп: мĕншĕн манăн çав спектакле лартма юрамасть-ха?

Анатолий Степанович çак кутăн ачан айванлăхĕнчен пĕрре те тĕлĕнмен пек, ăна малтанах пĕлсе тăрса малтанах каçарнă пек пăхрĕ те ун çине, лăпкăн кулса ячĕ:

— Лартма юрамасть тесе каламан эпĕ, калас та килмест. Епле чарăн-ха режиссера спектакль лартма? Кулăшла мар-и ку? Анчах та кашни япалан хăйĕн вăхăчĕ пур-çке. Паян юрамасть. Çак кунсенче — юрамасть, мĕншĕн тесен май çук. Унсăр пуçне, хăвăн айăпна вăхăтра йышăнни те паха.

— Мĕнле айăп тата?— тĕлĕнчĕ Кудрявцев.

Анатолий Степанович каллех кулса ячĕ:

— Мĕнле айăп, тет... култаратăн эсĕ. Çамрăк çав, ху мĕн тунине те асăрхаймастăн ав... Коллектива кам пăсать?

Çак самантра Славик пурне те ăнланчĕ: Анатолий Степанович ку таранччен мĕн калаçни Славике çул çинчен хирсе кăларас тени çеç пулнă.

— Эп коллектива пăсман. Эпĕ çĕнĕ спектакль лартма çеç ирĕк ыйтатăп. Коллектив урăхла майпа пăсăлать вăл.

— Апла, эппин? Мĕнле майпа?

— Эп тӳрех калама хăнăхнă. Кунта эсир хăвăр айăплă. Искусствăн чыслă саккунĕсене пăхăнма пăрахнă эсир, мĕнпурĕ пĕтĕмпех çакăнтан килет.

— Шухăшласарах калаç, ачам,— сиввĕн те лăпкăн каларĕ Анатолий Степанович, Славик урисем çине пăхса.— Шухăшласарах, тетĕп...

— Анатолий Степанович, кун пирки ман чухлĕ никам та шухăшламан пулĕ. Эп тĕрĕс калатăп. Чăнлăха юрататăр пулсан, эсир мана ăнланма тивĕçлĕ. Спектакль пирки калас-тăк: паян — юнкун, çитес тунтикун эпир репетицисем ирттерме тытăнатпăр.

— Кампа?— тăрăхласарах ыйтрĕ аслă режиссер.

— Артистсем çителĕклĕ.

— Артистсен пĕр пайĕ çитес эрнере гастроле тухса каять.

— Юлни те çителĕклĕ.

— Юманов хӑйӗн пьесине лайӑхлатрӗ. Ҫӗнӗ вариантпа спектакль ӑнӑҫлӑ пуласса шанатӑп. Ана хатӗрлеме тытӑнатпӑр.

— Ку япалапа пурте килӗшес ҫук. Сынсем ман спектакле выляма кӑмӑл турӗҫ пулсан, халь тин каялла чакас ҫук ӗнтӗ.

— Тен, чакӗҫ. Сан пьесуна театр илмен. Уншӑн артистсене никам та тӳлемест.

— Пьеса репертуара кӗрессе те, уншӑн тӳлессе те шансах тӑраҫҫӗ артистсем.

— Эс шантаратӑн пуль ӗнтӗ,— кулса ячӗ аслӑ режиссер.— Апла... ӗҫлетӗн массӑпа. Ӗҫле, ӗҫле!.. Кутӑн ҫаврӑнса ан тухтӑр ҫеҫ ӗҫлени.

— Уншӑн ан пӑшӑрханӑр. Артистӑн чун пур. Эсир ӑна, чӑн та, маннӑ ӗнтӗ. Вӑл тата питӗ сисӗмлӗ чун. ҫитменнине ырӑпа усала хӑвӑрт туять.

Славик тинех лӑпланчӗ.

— Эппин, шухӑшу ҫирӗп?— ыйтрӗ аслӑ режиссер хытӑ сасӑпа.

— Ҫирӗп. Каялла чакма килӗшместӗп. Намӑс та пулнӑ пулӗччӗ. Хамран. Ҫынсенчен те.

Анатолий Степанович сӑн-пичӗ темрен йӗрӗннӗ пек пӗркеленсе илчӗ.

— Сан пек маттурсем ҫынсем ҫине пӑхсах тӑракан марччӗ-ҫке. Хӑвна хӑвӑнпа вара ҫураҫтарма пулӗччӗ.

— Йӑнӑшатӑр.

— Шел. Хӑвӑн пурнӑҫна хӑвах пӑсатӑн...

— Юрӗ ӗнтӗ.— Славик ура ҫине тӑчӗ.— Эсир мӗн те пулин ҫӗннине каласса кӗтнӗччӗ. Кайма та юрать пуль?

— Хӑвӑн ирӗкӳ,— сасартӑк ҫемҫелчӗ аслӑ режиссер сасси.— Тен, килӗшӳ тунӑ пулӑттӑмӑр...

— Эсир манпа килӗшес ҫук-ҫке. Эп — сирӗнпе.

— Юрӗ, ӑнӑҫу сунатӑп, ачам... Ӑнӑҫу сунатӑп.

Анатолий Степанович чӳрече еннелле ҫаврӑнчӗ.

Славик тухрӗ.

«Эппин, урӑ куҫпа пӑхмалла,— шухӑшларӗ вӑл, коридор тӑрӑх майӗпен утса.— Урӑ куҫпа иккен». Вӑл Володя сӑмахӗсене аса илчӗ те сасӑпах каларӗ:

— Иксӗр те пӗр юррах юрлатӑр-ҫке... Ҫамрӑкки куҫкӗретех романтикӑна хирӗҫ, ватти — урӑ куҫпа пӑхма хушать. Иккӗшӗ те пурнӑҫран хӑраҫҫӗ — шутсӑр ӑслӑ ырашпӑтрисем...

Славик хӑй сисмесӗрех Галя пӳлӗмӗ умне ҫитсе тӑнӑ иккен. Шалтан Тамара сасси илтӗнет. Хӗрсем тем

çинчен шавлăн калаçаççĕ. Славик алăка шаккамасăрах кĕчĕ.

Ана курсан, хĕрсем иккĕш те васкаса ыйтрĕç:

— Ну, мĕн терĕ?

— Нимех те мар...

— Нимле улшăну та çук-и?— ун умнех пырса тăчĕ Тамара.

— Çук, анчах та пулма пултарать.

Славик халь çеç пулса иртнĕ калаçу çинчен хĕрсене кĕскен пĕлтерчĕ.

— Кунта шавласа тăни кирлех те мар,— терĕ Тамара,— Вăл пурне те лайăх ăнланать. Ӳкĕте кĕрессĕн мар çеç. Гастроле яратăп тет пулсан, яратех. Приказа вара пăхăнмаллах пулать — приказ-çке!.. Директоре директор пек пулсанччĕ. Атту — кӳлнĕ лаша пек...

— Тĕрĕс, Тамара. Мĕн тăвăн, гастроле каймаллах пулать. Çапах унта пурте каймаççĕ. Эсĕ каймастăнах!— Славик пӳрне хуçса шутлама тытăнчĕ.— Мĕншĕн тесен халь сивĕ, сана чир хыççăн юрамасть. Володя рольне эп хам илетĕп.

— Режиссер та, артист та — хăвах-и? Йывăр пулмĕ-и?— пĕр вăхăтрах шанса та пăлханса пăхрĕ ун çине Галя.

— Йывăр пултăр — усăллă. Унтан!.. Тимерова пурпĕрех яраççĕ... Юлакансенчен унпа тан выляма пултаракан пур-ши?

— Пур!— çирĕппĕн karaрĕ Галя.— Пур. Эп пĕлетĕп — Сурский. Эсир ăна халиччен пĕр рольте те курман-ха. Комедисенче выляса тăнĕ тухнă унăн. Пирĕн спектакль çинчен пĕлет вăл. Пĕркун манран ыйтса та пăхрĕ: мана валли мĕнле те пулин чăн-чăн роль пур-ши, терĕ.

— Чăн-чăн роль тесех каларĕ-и?

— Çаплах каларĕ.

— Ну, апла-тăк, эпир ăна чăн-чăн роль паратпăр... Людмилăпа ĕçсем мĕнлерех-ха пирĕн?

Славик Тамара енне çаврăнчĕ. Тамара кăштах палăрмалла хĕрелсе кайрĕ. Тусне пулăшас шутпа, Галя васкасах сăмах хушрĕ:

— Людмила, пĕтĕмĕшпе илсен, питĕ пăтранчăк хĕрарăм. Вăл питĕ аван та, питĕ начар та выляса пама пултарать. Халь вăл Володя серепинче.— Галя ассăн сывласа илчĕ, кĕтмен çĕртен тарăхса хушса хучĕ:

— Людмилăна пĕтерсе те хурĕ-ха вăл, йĕксĕк.

— Ку — уйрăм калаçу, Галя. Ун пирки те шухăшлама тивет пулĕ-ха. Халь çакна палăртмалла — вылямалла юрăхлă-и вăл, çук-и?

Хĕрсем нумайччен чĕнмерĕç.

— Калаçмалла пулать,— терĕ Тамара юлашкинчен.— Эп калаçса пăхăп. Тен, урăххин калаçмалла-ши?

— Эсех калаç-ха. Тамара. Людмила ухмах хĕрарăм мар та, кăштах пăтранчăк çав. Вăл сана ăшĕнче хисеплет. Эп туятăп çынсене. Калаçса пăх.

— Володя хирĕç пулсан? Людмила унран иртместçке.

— Володя — икĕ питлĕ этем. Хăрах урипе пĕр енче, тепринпе тепĕр енче пулас. Вăл Людмилăна пирĕн спектакльте вылямa чарас çук. Хăех выляттарасшăн пулĕха, акă...

## XIV

Людмилăпа Тамара пĕрле утаççĕ. Хĕрлĕ неон çутинче сăнпичĕсем иккĕшĕн те открытка çинчи пек пулса тăнă. Володя, вĕсене палласа илсен, самантлăх чӳречерен пăхма пăрахрĕ: хĕрарăмсем сасартăк ун еннелле çаврăнса хăйне асăрхасран хăрарĕ вăл. Вĕсем майĕпен утса иртрĕç.

— Мĕн çинчен калаçаççĕ-ши?— шухăшларĕ Володя — Кулăшла, кулăшла. Пурте темле пăтранчăк, тĕксĕм. Пурнăç пек те мар. Çутă çитмест, çутă çитмест. Пурнăçăн ун хитре пулмалла — таса, илемлĕ. Урамсем — тӳрĕ, тӳпе — кăвак, çынсем — хăюллă. Пылчăкра пурăнатпăр. Пурăнма пĕлместпĕр. Хăшĕ-пĕрисем пĕлеççĕ... «Санран çын пулать», тетчĕç мана ялта. Çын пултăм, тăвансем. Курăр, акă: эп — çын... Эп — çын... «Шуйттан çури» текенсем те пурччĕ. Çурăмран лăпкасах калатчĕç. Шуйттан çуриех çав... Шуйттан çури çеç те мар манра — пирĕшти те ларать... Тăхтăр, эп хам пултарнине пурне те туман-ха...

— Манăн çамрăк тусăм тем çинчен шухăшлать.

Володя хăй хулпуççи çине выртнă алла майĕпен сирсе хучĕ те, ларнă çĕртен пуçне кăшт чалăштарса çӳлелле пахрĕ: Анатолий Степановичăн çутă сăн-пичĕ пĕрре те килĕшмерĕ. Аслă режиссерпа юнашар Шурков тата Юманов тăраççĕ. Володя вĕсене сăмах чĕнмесĕрех аллине сулса хăйпе пĕрле ларма паллă пачĕ. Анатолий Степанович Володьăна хирĕç ларчĕ, ун ик айккине Шурковпа Юманов вырнаçрĕç.

— Кур-ха, епле чипер хĕр пек ларать вăл кунта,— çепĕççĕн сăмах хушрĕ Шурков, хĕрĕнкĕ Володя çине сутă куçĕсемпе пăхса.

— Чейлĕх параймастăп, хам та чухăн,— терĕ Володя пуçне çĕклемесĕр.

Анатолий Степановичпа Юманов харăс кулса ячĕç Шурков, сивĕ шывпа сапнă пек, кăртах сикрĕ, Володьăран пăрăнчĕ. Вăл шӳт тума хăтланса пăхрĕ, анчах сăн-пичĕ çинче каллех ухмахла кулă йăлкăшрĕ.

— Нимех те мар-çке, пĕррелĕхе каçарăп,— теме çеç пултарчĕ вăл.

Володя ун еннелле çаврăнчĕ те, йывăрланнă куç хăрпăкĕсене уçма тăрăшнă пек хăтланса, Шурков çине хыттăн вĕрчĕ:

— Ф-фф!

Кулă сӳнчĕ.

Юмановпа Анатолий Степанович каллех хыттăн кулса ячĕç.

Володя вĕсемпе пĕрле кулма тытăнчĕ.

«Халăхран юличчен муртан юл» тенине асра çирĕп тытнăран-ши, те урăх сăлтавпа — кĕтмен çĕртен майĕпен Шурков тути те уçăлса сарăлчĕ, вăл чыхăна-чыхăнах ахăлтатма пуçларĕ.

Володя кулма чарăнчĕ. Ун хыççăн Анатолий Степанович, ун хыççăн — Юманов, чи кайран — Шурков. Вăл юлашки хут «хи-хик» тенĕ чухне пурте ун çине пăхатчĕç.

— Юлташсем,— терĕ Володя,— Шурков çамкишĕн ĕçме сĕнетĕп. Тултарăр черккĕрсене!

Шаккарĕç. Шурков Володя çине пăхмарĕ. Володя вара никам çине те пăхмарĕ.

Ĕçсе ячĕç.

— Хăватлă,— терĕ Юманов, ним калама та аптранипе.

— Юна вĕреме кĕртет пуль, э? Çапла-и?— çаврăнчĕ ун енне Володя.— Пуçра акăш-макăш та асар-писер шухăшсем çуратать. Çапла-и? Ха-ха-ха!

Каллех пурте хавассăн ахăлтатса ячĕç. Темшĕн ытла та хăвăрт ӳсĕрĕлсе çемçелнĕ Шурков тулли черккине сĕтел çинех йăвантарса ячĕ те эрех Анатолий Степановичăн хаклă костюмне кăштах йĕпетсе илчĕ. Ырă çын таçтанах паллă: аслă режиссер хăй помощникĕ çине сив куçпа та пăхмарĕ, лешĕ темиçе хутчен пĕр çуталса, пĕр тĕксĕмленсе каçару ыйтрĕ.

— Ах, мĕнле çаврăнăçусăр этем эп,— тесе сасăпах вăрçрĕ вăл хăйне.

— Мĕншĕн çаврăнăçусăр-ши эсĕ, мур пĕлет-и сана,— сăмах хушрĕ Володя, куласси килнипе. Володьăн, чăн та, çак самантра такампа тавлашас килчĕ, вăл кама та пулин тӳпелеме те хатĕрччĕ, такамран кулас, тăрăхлас килчĕ унăн.

— Кала-ха,— çаврăнчĕ вăл каллех Шурков енне.— Кала-ха, хаклă тусăм, пĕр пытармасăр. Эс çак костюма ăçтан туянтăн? Шупашкартах-и? Тĕлĕнмелле виçеллĕ, хитре.

Шурков хура габардинтан çĕлетнĕ костюмĕ çине, пĕр икĕ размер пысăкрахскер çине, мăнкăмăллăн пăхса илчĕ те Володьăна ăшă кулăпа тав турĕ. «Тинех этеме юрăхлă япаласем çинчен калаçма ăс çитертĕн пулать»,— тесе шухăшларĕ вăл ăшĕнче. Çав вăхăтрах ятлă çынсем умĕнче унăн хаклă тумтирне асăрхани... О-о! ку вара!..

— А эсĕ, ачам, çынсене сăнама пĕлетĕн пулмалла, маттур,— терĕ сасартăк Анатолий Степанович Володьăна, хăй помощникĕ çинчен пĕтĕмпех маннă пек пулса.

Володя çак сăмахсене илтесшĕнччĕ. Анчах та халь, вĕсене илтнĕ хыççăн, вăл ытлах савăнмарĕ.

— Тавтапуç,— терĕ вăл темле уçăмсăр сасăпа. Ку сасă тăрăх çамрăк çын шӳт тăвать теме те пулнă, анчах та, кĕлпе витĕннĕ кăвар пек, хутран-ситрен çеç çуталса илекен куççенчи вăрттăнлăха кам та пулин пĕлес пулсан, вăл каччă чĕринче шӳт тăвас тени çеç мар, ытти туйăмсем капланнине те курма пултарнă. Ун чух çак сасăра сисĕнекен çăмăлттайлăх урăхларах сăнпа тухса тăнă пулĕччĕ.

«Эп сана та çавăн пекех яр-уççăн куратăп. Сан шухăш-кăмăлу, сан ĕçӳсем, эс ку таранччен туни, санăн пуласлăху — пурте ман куç умĕнче,— шухăшлать Володя аслă режиссер çинчен.—Эсĕ мăкланнă ĕнтĕ, тахçанах мăкланнă. Хитре пурнăçра часах çав нумайăшĕ мăкланаççĕ. Мана парасчĕ çав пурнăça. Кунçул юхăмĕ кутăн пырать: ватăлсан — пенси, хваттер. Мана халь кирлĕ, халь! Кайран, хыçран хăйăр юхтарма тытăнсан, куç курать унта. Э-эх!.. Ну, юрĕ. Урăхла май çук пулсан, çаплипех юлтăр. Ӳсентăран ăшша туртăнать, çутă патне кармашать. Пулă та хӳтлĕх шырать. Ман пуçа миме хурса янă-çке-ха. Эппин, шухăшлаттар ăна... Ак, умрах лараççĕ виççĕн. Виççĕш те айвансем, анчах виççĕшĕн

те темскер пур. Çав «темскере» пĕрисем пуççапаççĕ, теприсем асăрхаманçи пулса иртесшĕн, виççĕмĕшĕсем ун çине такăнса йăванаççĕ. Çав «темскер» ят кăна, сăмах, сывлăш хумханса янăрани, анчах та унăн вăйĕ пурçке, чĕмере! Мĕнлерех вăй тата! Ăна шута илес пулать. Унсăр май çук... Манăн çĕнĕ тусăмсем, эсир те манпа ырринех курас çук пек туйăнать. Сисетĕп! Ытла та чухан эсир. Мăка! Эхх! Шуйттанах пĕрлештерсе янă пуль мана сирĕнпе. Тармалла çеç пĕр-пĕр вырăс театрне...

Володя хăйĕн «çĕнĕ тусĕсем» çине вăрттăн пăхса илчĕ. Лешсем ăна, кресло айккинелле пуçне усса куçне хупнăскерне, сывăрса кайнă терĕç пулмалла, ун еннелле пăхмасăрах шавласа калаçрĕç.

Юманов драматурги секцийĕн юлашки ларăвĕ çинчен каласа култарать: кам мĕнле анекдот каланисене тимлесех итленĕ иккен вăл.

— Сире валли лайăх пьесăсем çырма пултăмăр. Кĕтĕр,— терĕ вăл юлашкинчен.

— Ку санăн анекдот-и?— шӳт тума хăтланчĕ Шурков, Анатолий Степанович çине куç хӳрипе пăхса.

— Кулса каламастăп,— хирĕçлерĕ Юманов, режиссерпа унăн помощникĕ енне ӳпĕнсе.— Решени йышăнтăмăр.

— О, апла пулсан — пьесăсем пулаççех!— илтĕнчĕ Володя сасси. Пурте ун енне çаврăнчĕç. Вăл, çӳçне-пуçне аллипе сăтăркаланă май, ӳркевлĕн тӳрленсе ларчĕ.

— Пулаççĕ, пулаççĕ,— шантарчĕ Юманов.

— Ĕненетĕп, ĕненетĕп,— унпа пĕр саслăн каларĕ Володя.— Анатолий Степанович, эсир тата мĕнле, ĕненетĕр-и?

— Э-э! Тур пĕлет. Эп хăнăхнă ĕнтĕ. Пулсан — аван, çук-тăк — кивçене каятпăр. Хамăр тăватпăр. Ак, помощник пĕр комеди çырса пама пулчĕ-ха.

Вăл Шуркова хулпуççинчен лăпкаса илчĕ:

— Теренций вăл пирĕн!..

Шурков сăпайлăнименсе пуçне чикрĕ.

— Ой, мĕн эсир?— терĕ вăл, хăйне вĕçĕмсĕр мухтакан каччăпа калаçакан хĕрупраç пек.

— Шурковăн пурнăç опычĕ пысăк, пуян. Çав опытпа усă курсан,— тĕртсе илмесĕр чăтаймарĕ Володя,— мĕншĕн Теренций пулас мар унăн?.. Ĕнесем йăлăхтарчĕç, ашаксем тухчăр сцена çине! Хă-ха-ха!.. Кăштах уçăлса кĕрем-ха. «Юрĕ-çке, çитĕ ку мĕскĕн чунпа лăкăртатса»,— шухăшларĕ вăл, вара ура çине тăчĕ.

— Тĕттĕм чунлă йĕкĕт пулас ку,— терĕ Юманов, Володя аяккалла пăрăнсан.

— Вĕçкĕн,— йĕрĕннĕ пек каласа хучĕ Шурков.

— Çынсемпе ĕçлеме пĕлес пулать,— кулкаларĕ Анатолий Степанович.— Эсир çăмăл тетĕр пуль. Çăмăл мар... А ку ача вара... ачи аптрамасть вăл. Пултараканскер. Асту, Шурков, эп ăна кĕçех хам помощник туса хуратăп ак. Ха-ха-ха! Ан кулян, тумастăп. Юри калатăп. Ăна валли ахаль те ĕç çителĕклĕ. Вăл штатра тăман помощник пулать. Ха-ха-ха! Эсĕ нумай япаласене куратăн та ăнланмастăн, а вăл курмасăрах ăнланать, курсан вара, у-у, курсан вара... пурне те калама та юрамасть çав. Эсир пĕлетĕр-çке, маттур каччă: эп ăна юрататăп, чăн-чăн ăмăрткайăк...

— Çав хăрушă та,— хĕстерсе хучĕ хăй сăмахне Шурков.

— Эс мĕн калас тенине туятăп та эпĕ, тăванăм, ăмăрткайăк пурне те сăхмасть... Шăшисене сăхать вăл, тата путексене, пăрусене. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм,— терĕ Шурков.

— Шăши е путек пулас мар тетĕн пулсан, ан хăра унран — е хирĕç тăр, вĕçне çитиччен хирĕç тăр, е ун майлă пул,— ăнлантарчĕ Анатолий Степанович, ашшĕ ачине вĕрентнĕ пек. Унтан сасартăк çемçен кулса ячĕ, ăшшăн хушса хучĕ.— Эп хам сана унпа хирĕçме сĕнмен пулăттăм. Вăл пур енĕпе те санран ирттерет. Çапла, ирттерет.

— Пурнăç кăтартĕ-ха,— терĕ Шурков тарăхнă сасăпа.

Юманов шăппăн кулкаласа, пуçне сулса ларчĕ.

— Тĕлĕнмелли ним те çук, Юманăм,— çаврăнчĕ ун енне Анатолий Степанович,— театр—хăй уйрăм çĕршыв. Унан хăйĕн пурнăçĕ, хăйĕн саккунĕсем пур. Çав саккунсенчен хăшне-пĕрне хут çине çырса хунă, нумайăшĕ ăруран ăрăва хăй тĕллĕнех куçса пырать е кун йĕркинчен тухса тăрать... Ман пурне те асăрхамалла, пĕлмелле...

— Директор пур-çке,— хирĕçлеме хăтланчĕ Юманов, йĕпеннĕ чавсине шăлкаланă май.

— Э-э, эс те çав, пĕрремĕш кун-и-мĕн театрта? Директор ĕçĕ вăл — çынпа ĕçлесси мар, манăн вара кашнин юнтармăшне пĕлсе тăмалла. Пĕрне ху юрама тăрăшан — кирлех пулсан; теприне ху юраттаратăн — кирлĕ пулсан! Çынсен хирĕçĕвĕ ĕçе пăсать те, юсать те. Çапла-и, Шурков?

— Çапла, Анатолий Степанович,— васкавлăн хуравларĕ режиссера пулăшаканĕ.

— Илтрĕн-и?— помощник çине пÿрнипе кăтартса, Анатолий Степанович каллех Юманов енне çаврăнчĕ.

— Вăл чăнах та çапларах пуль-çке,— килĕшнине те, килĕшменнине те пĕлтермерĕ Юманов.— Хăвăрăнне хăвăр пĕлетĕр ĕнтĕ... Каосан турпас, калаçсан —сăмах... Ман сана асăрхаттарас килет: эсĕ ытлашши ирĕк ан пар ăна, унпа киленессе те, ой-ой, тусăм, майĕпентерех килен. Çăварлăхлани пăсмасть...

— Ан пăшăрханăр, тусăмсем,— терĕ аслă режиссер хаваслăн.— Хамах пĕлетĕп: ăна ирĕке яма кирлĕ мар, анчах та пытармасăрах калатăп, ун çине пăхатăп та эпĕ — хам çамрăклăха куратăп... Хам çамрăклăха... Çапла... Манăн ывăл ачасем пулмарĕç, турă памарĕ, теççĕ-и-ха çав?.. Тен, арăм юри тумарĕ-и — пĕлместĕп, ха-ха-ха!.. вăт, эп хам та вăтăр çул маларах ун пекчĕ. Яштака, вăйлă, çивĕч, çулăмлă, çаврăнăçуллă...

— Театрта хăçантанпа ĕçлесе ăна çеç курмарăн пулĕ те-ха,— çаплах тĕпчерĕ Юманов ытахальтен,— унта кашниех çивчĕ, яштака, вăйлă, çулăмлă...

— Пулма пултараççĕ,— калама памарĕ Анатолий Степанович.— Тăрăшсан. Анчах та ку вара — хăй тĕллĕн, çапла пулас тенипе мар, çутçанталăк халалĕпе— çивчĕ те, яштака та тата ытти те. Пĕр сăмахпа каласан — маттур ача, кăмăла каять!

— Юрататăн, эппин?

— Юрататăп, тур имлесшĕ, юрататăп!

— Пĕркуннехине аса ил-ха.

— Э-э, ун чухнехи вăл... Тепĕр тесен, çав кун килĕшме тытăнчĕ те вăл мана.

Анатолий Степанович Юманов çине чăрсăррăн пăхса илчĕ: «Манăн ирĕк, мĕн тăвас тетĕп, çавна тăватăп. Вăл ăçтиçук ачапа венчет туман-çке. Кирлĕ пулсан — уйрăлăп»,— тени палăрчĕ унăн сăнĕнче.

— Кăна ĕненме пулать,— терĕ Юманов васкамасăр.—Психологи енчен илсе пăхсан...

— Ан калаç-ха кирлĕ мара. Эпир-и вăл психологсем? Ку тĕлĕшпе «Родина» кинотеатр патĕнче таракан чикан майрисем пиртен виçĕ хут ирттереççĕ. Ха-ха-ха!

Çав вăхăтра вĕсем патне Володя та пырса тăчĕ. Вăл сивĕ шывпа çăвăннă пулмалла: хулпуççисем çинче шыв тумламĕсем йăлтăртатса тăраççĕ, çÿç пайăркисем те кăштах йĕпеннĕ.

— Охо! Эсир мансар пĕрре те тунсăхламастăр иккен!— терĕ вăл вырнаçса ларнă-ларманах. Унтан, кресло çинчен кăштах çĕкленсе, куçĕсемпе официанткăна шыраса тупрĕ те кăчăк туртса хăй патне чĕнчĕ; чăлтшурă саппун çакнă çап-çамрăк хĕр, çинçе те пиçĕ пӳсиллĕскер, сĕтел патне çывхарчĕ. Володя мĕн каласса кăшт кулсарах кĕтме тытăнчĕ. Володя хĕре кăн-кăвак куçĕсенчен пĕр самант чĕнмесĕр тӳррĕн пăхса тăчĕ те, пурте илтмеллех ассăн сывласа, лăпкăн каларĕ:

— Тархасшăн, тепĕр çĕршер грамм коньяк илсе килĕр-ха.

Официантка кайрĕ.

Анатолий Степанович, Володя хĕр çине мĕнлерех пăхнине лайăх сăнаса ларнăскер, хăй те Володя чĕрине пĕçертсе шăнтнă туйăмсенех туйрĕ пулас.

— Еплерех, э? — терĕ вăл, чыхăнса.

— Мĕскершĕн çавăн пек чипер хĕрсем ресторанта ĕçлеççĕ-ха? Кунта вĕсене часах ăсран кăлараççĕ,— хуйхăллă сасăпа ыйтрĕ Володя, никам çине пăхмасăр. Унтан хăех ответлерĕ,— Э-э, тепĕр тесен, ку лайăх та пулĕ-çке! Темле ăшăрах пек туйăнса каять.

— Эс пурнăç тутине пĕлетĕн пулмалла?— куçне чеен хĕссе, Володя еннелле ӳпĕнчĕ Юманов.

— Эп чиперккесем мĕн тути каланине те пĕлетĕп!— хытгăн пăшăлтатрĕ Володя.

Çав вăхăтра официантка эрех илсе те килчĕ.

Хальхинче хĕр Володя çине пăхмарĕ, анчах та Володя çынсене пĕлет: çак çамрăк сăн-питре, чечекленекен ӳт-пӳре ачалла çепĕçлĕх, ачашлăх, ырă кăмăл темĕн чухлех. Хĕр чĕнмерĕ, укçине илчĕ те лăрăнса кайрĕ. «Тахăшĕн аллине лекет те...»— шухăшларĕ Володя, ăна пăхса ăсатнă май. Унăн чĕри ыратса туртăнчĕ. Тепĕр минутран вăл чипер официантка çинчен мансах кайрĕ: ура çине тăчĕ те кашнин черккинех эрех тултарчĕ.

— Тăван искусство аталанăвĕшĕн!— хыттăн каласа, черккине çĕклерĕ вăл.— Тĕппипе ĕçмелле! Ман пек!— вара черккине ӳпĕнтерчĕ, ăна çӳлелле çĕклесе пусхĕрлĕ тытрĕ те сĕтел çине шаклаттарса лартрĕ.

Ыттисем те ĕçсе ячĕç — «тăван искусствашăн» мĕнле ĕçмĕн-ха?

Анатолий Степанович хăйĕн çамрăк тусĕ çине юратса пăхрĕ. Унăн пусĕ майĕпен енчен-енне сулкаланчĕ, куçĕсем хупăнма тăрăшрĕç. Вăл хăйне ыйхă пусса килнине асăрхарĕ те, çумăр айне лекнĕ лаша пек, йывăр

кĕлеткине тăрр! чĕтретсе, кăштах тӳрленчĕ. Сĕтел урлă кармашса, вăл Володьăн аллине шыраса тупрĕ, ăна хыттăн чăмăртарĕ. Туслăха çирĕплетнине пĕлтерсе, ун чавси перĕннипе сĕтел çинчи черккесем хаваслăн чăнкăтартрĕç.

— Телей пуласса,— терĕ Юманов усăннă пуçне çĕклемесĕрех.

Темле, ăнланма та йывăр çаврăнăçулăхпа, Шурков вăр-вар сĕтел айне пуçне чикрĕ те черкке тĕпренчĕкĕсене пуçтарса та тухрĕ, сĕтел çине хучĕ.

— Тĕрĕс,— хулпуççинчен лăпкарĕ ăна Володя.—Пуçтармасан, урана тăрăнать. Пи-пи пулать. Юн тухать. Ха-ха-ха!

Вăл, йĕри-тавралла пăхкаласа, паçăрхи çамрăк официантка килессе кĕтрĕ пулмалла. Чиперкке курăнмарĕ. Ун вырăнне капан пек хĕрарăм пырса тăчĕ, гӳрех Володя çине пăхрĕ:

— Черккесем икĕ тенкĕ çуршар тăраççĕ.

— Пире урăх официантка пăхать,— терĕ Володя, кулма хăтланса.

— Тӳрккес калаçатăн,— пӳлсе хучĕ ăна мăнтăр хĕрарăм.— Пилĕк тенкĕ тӳленĕ пултăр халех.— Вăл пĕр вырăнта чăтăмсăррăн тăпăртатса тăчĕ.

Анатолий Степанович ку сценăна шăп чĕнмесĕр сăнарĕ.

Юманов тĕлĕрсе ларать.

Шурков кĕсйисене ухтарма тытăнчĕ: типшĕм алли унăн ăса пек вылярĕ.

Володя хуллен пилĕк тенкĕ кăларса сĕтел çине пăрахрĕ. Çав вăхăтра Шурков та укçа шыраса тупрĕ курăнать. Хĕрарăм Володя хунă укçана илчĕ те, Шурковăн малалла кăнтарнă аллине асăрхаман пек, унран йĕрĕннĕ пек, аяккалла пăрăнчĕ.

— Ан пăшăрханăр, черккесем кĕçех илсе килетĕп,— тесе хăварчĕ вăл.

Юманов тĕлĕкĕ сирĕлчĕ пулас, вăл пуçне çĕклерĕ.

— Кам çĕмĕрчĕ вара ку черккесене?— тĕлĕннĕ пек ыйтрĕ Анатолий Степанович.

Володя ăна ăнланчĕ, пуçĕпе Шурков еннелле сĕлтрĕ:

— Ак, ларать сиккелесе... хăсăк сăхса ӳсĕрлнĕ автан пек.

Шурков хĕремесленсе кайсах тавлашма тытăнчĕ.

— Эп халиччен те нимĕн те çĕмĕрсе курман!— хӳтĕлерĕ вăл хăйĕн никама пăхăнманлăхне.

— Пулĕ, пулĕ, ĕненетĕп,— терĕ юлашкинчен Володя килĕшӳ тума хатĕррине систерекен сасăпа.— Тавлашу пĕтрĕ.

— Çапла çав!— хавхаланчĕ Шурков.

Çак самантран пуçласа аслă режиссершăн Володя чи кăмăллă этем пулса тăчĕ.

Володя хăй аванах сисет ăна. Анчах тепĕр çур сехетрен, çĕнĕ тусĕсенчен уйрăлсан, вăл каллех пĕччен тăрса юлчĕ те, малтанхи канăçсăр шухăшсем, шăнасем пек, ун пуçĕнче тепĕр хут хĕвĕшме тытăнчĕç. Вăл хăй çак çынсемпе выляма пултарнине ăнланни тата, инкеке, çак çынсем халь хăйсем унпа выляни ăна пĕр вăхăтрах тарăхтарса йĕрĕнтерчĕ, çунатлантарса хавхалантарчĕ. Çитес телейлĕ кунсен чĕтренчĕк мĕлки йăпатса ачашларĕ ăна.

Хĕллехи уçă сывлăшпа вăл часах тăна кĕме тытăнчĕ пулин те, пуçĕ самаях шавларĕ-ха унăн. Троллейбус чарăнакан вырăнта вăл сасартăк паллана хĕр сăнне асăрхаса тăпах чарăнчĕ. Хĕр ăна тӳртĕнрех тăрать. Унпа юнашар пĕр çамрăк çын. Володя, хĕре питĕнченех курасшăн пулса, çывăхарах пычĕ. Ах, ку ресторанти официантка пулчĕ иккен. «Акă кам ыталать унăн çинçе пилĕкне!»—шухăшларĕ те Володя пуçне аяккалла пăрчĕ. Троллейбус килчĕ. Володя малти алăкран кĕме хатĕрленсе тăратчĕ, анчах темле арçын ăна çаннинчен тытса каялла сĕтĕрме тытăнчĕ. Тахăшĕ хăйне аванах мар сăмахсем каланине те илтрĕ вăл. Ытти чух пулсан, Володя хирĕç тавăрнă пулĕччĕ те, халĕ ытлашши çемçелнĕ пулас — çанăран туртакан арçынпа калаçма та, сăмахпа кӳрентерекен çынна хирĕç тавăрма та пултараймарĕ. Малти алăк унăн сăмси умĕнчех шалтлатса хупăнчĕ. Вăл хыçалти алăк еннелле утрĕ, анчах ун патне те çитеймерĕ — çутă троллейбус мăнаçлăн тапранса кайрĕ. Володя чӳречерен чипер официанткăпа унăн юлташĕн хаваслă сăн-питне асăрхарĕ те каялла çаврăнса тăчĕ. Хăйĕн хутланчăк кĕлеткине сасартак хăй курас пулсан, вăл, тупа та туршăн, мĕнле те пулин йĕплĕ сăмах тупса калатчех пулĕ.

## XV

Юлашки виçĕ кун ытла та тӳлеккĕн иртнĕн туйăнчĕ Славике. «Нивушлĕ пĕр чăрмав та пулмĕ-ши урăх? Анланчĕç-ши вара?— шухăшларĕ вăл хăй ăшĕнче.— Анланма та тивĕçлĕ ĕнтĕ. Пĕрле ĕçлетпĕр-çке. Халь сасар-

так Анатолий Степанович хӑй патне кӗрсе пӗр ӑшӑ сӑмах калас пулсан, Славик пӗтӗмпех ӗненнӗ пулӗччӗ ӑна. Савӑннипе хӑйӗн чи вӑрттӑн ӗмӗчӗсене те каласа кӑтартнӑ пулӗччӗ.

Славик репетицисем пуҫарма та хатӗр ӗнтӗ. Пӗр япала ҫеҫ ҫитмест халь — Алексей пьесине официальнӑй йӗркепе театр репертуарне йышӑнни кирлӗ.

Паян иртенпех ҫак шухӑшпа асапланать вӑл. Анатолий Степановича курасшӑнччӗ — усси пуласса шанмасран кӗмерӗ те ун патне. Гальӑпа Тамара та кӗме сӗнмерӗҫ.

Каччӑ туйӑмӗсене пӗтӗмпех ӑнланать Галя. Чӗнмест вӑл. Кирлӗ пеккине Славик хӑех шыраса тупасса шанать пулмалла. Тамара вара пачах урӑхла — кашни тӗл пулмассеренех Славике хӗрӳллӗн ӑнлантарать — ун шучӗпе, нимӗн тӑхтаса тӑмасӑрах министерствӑна каймалла. Пур ҫӗрте те бюрократсем лармаҫҫӗ-ҫке. Пӗр Анатолий Степанович ҫинче тӗнче тытӑнса тӑмасть. «Ҫитменнине тата сан пек арҫынна иккӗленсе тӑни килӗшмест те!»

Алеша малтанхи пекех тӗксӗм. Вӑл Тамара калаҫма тытӑнсанах пуҫне аяккалла пӑрать, тусне нимӗнле канаш та памасть. Славикшӗн хӑй чӑрмав пулса тӑнӑн туйӑнать каччӑна — пӗр вӗҫӗмсӗр пӑшӑрханать вӑл. Ашӗнче хӑй пурпӗрех ӗненет: вӗсем ҫӗнтерме тивӗҫлӗ, ҫапла пулать те, анчах ыран мӗн пулассине тӗп-тӗрӗс пӗлсе тӑманни ҫеҫ чуна канӑҫсӑрласа ыраттарать.

Сӑмах майӑн каласан, театрти ҫӗнӗ тусӗсем Алешӑна кунран кун ытларах та ытларах килӗшсе пыраҫҫӗ. Славик пирки сӑмах та ҫук, унпа вӗсем тахҫанах тӑванлӑ ӗнтӗ. Гальӑпа Тамарӑн ҫепӗҫлӗхӗ, калаҫури ҫаврӑнӑҫулӑхӗпе ырӑ кӑмӑлӗ уншӑн ытла та хаклӑ пулса тӑчӗҫ. Алешӑн йӑмӑкӗсем те, аппӑшӗсем те ҫук. Килте унӑн шӑллӗсем ҫеҫ. Халӗ Тамарӑпа Галя ҫине вӗсемпе пӗрле чух час-часах пӑхкалать те ҫамрӑк ҫын, тӑванӗсем хушшинче аппӑшӗ е йӑмӑкӗ пулас пулсан, хӑй вӗсене питӗ юратассӑн туйӑнать ӑна. Каччӑ Тамарӑна килӗштерсе пырать пулмалла. Ӗнер, ав, сӑмахран, калаҫу Тамара ҫинчен пуҫлансан, вӑл Славике чарчӗ те унччен кӑшт маларах пулса иртнӗ ӗҫсем ҫинчен каласа пама ыйтрӗ. Паян ирхине тата, Гальӑна асӑрхасан, унпа пӗрле Тамара ҫуккинчен тӗлӗнчӗ. Алӑкра Тамара курӑнсан, вӑл ӑна ыттисенчен кайран сывлӑх сунчӗ: туйӑмӗ ҫын умӗнче ытла хӑвӑрт палӑрасран хӑрарӗ пулмалла. Анчах

та начар пытарнă япала маларах куç тĕлне пулать-çке. Çавна сисмерĕ вăл.

Директор кĕнĕ чух вĕсем тăваттăшĕ те пĕрлеччĕ.

Владимир Борисович çамрăксене сывлăх сунчĕ, малалла иртсе ларчĕ.

— Ну, ĕçсем мĕнлерех, режиссер?

Каччă унăн типшĕм сăн-пичĕ çинче хуллен çуталакан кулла курса хавхаланчĕ:

— Аптрамаççĕ, Владимир Борисович.

— Çаплах-ши?— иккĕленчĕ директор.

— Çаплах, тесе шутлатпăр,— терĕ Славик, юлташĕсем çине кăтартса.

— Володьăна курмастăп-çке сирĕнпе. Вăл ăçта тата?— тĕпчерĕ Владимир Борисович.

— Вăл пирĕнпе мар,— майĕпен хирĕç тавăрчĕ Славик.—Ăçтине те калама пултараймастпăр.

— Хирĕçмерĕр пулĕ те?

— Хирĕçрĕмĕр...

Славик хăйсем мĕнле тавлашса кайни çинчен кĕскен каласа кăтартрĕ.

Çĕнĕ хыпар Владимир Борисовича шалтах тĕлĕнтерсе ячĕ.

— Эп ăна çавăн пек ача тесе шутламанччĕ. Кулянтарать ку. Питĕ кулянтарать. Пирĕн вăхăтра çынсем çамрăклах пăсăлни аван мар япала. Çапла пулма тивĕçлĕ мар пек те...

— Ваттисенчен вĕренеççĕ,— тарăхса kаларĕ Галя.

Пурте шухăша кайрĕç. Пӳлĕмре пĕр вăхăт шăп пулса тăчĕ. Юлашкинчен Владимир Борисович пуçне çĕклерĕ:

— Аслă режиссерпа та ĕçсем малтанхи пекех-и-ха?

Славик ун çине тинкерсе пăхрĕ:

— Малтанхи пекех. Пытанмалла вылятпăр. Кăнтăр кунĕнче хунар çутса чăнлăх шыраççĕ. Чăнлăхĕ юнашарах çӳрет. Курсан — курмăш пулаççĕ. Тĕлĕнмелле хăшпĕр çынсенчен. Ĕç тунă пекех туйăнать пуль хăйсене.

Владимир Борисович йывăррăн сывласа илчĕ:

— Сирĕн ĕçсем çапларах çаврăнса ӳкессе эп хам та кĕтмен. Пĕлеттĕм, чăнах та, Анатолий Степанович тепĕр чухне хăйне кăтартма юратнă пек туйăнать. Принципсем хирĕç пулса çапăнчĕç пулĕ... Паян пирĕн 12-мĕш, çапла-и? 15-мĕшĕнче пĕр бригада хĕллехи гастроле каять...

— Пĕлетпĕр,— сăмах хушрĕ Тамара.

— Яратăрах апла?— тарăхрĕ Алеша.

— Яма тивет,— терĕ Владимир Борисович.— Ямасан та май килмест: финанс планне тултараймастпăр унсăрăн. Юманов комедийĕ кĕтнине тивĕçтереймерĕ.

Телефон шăнкăртатса илчĕ.

Славик трубкăна тытрĕ.

Каласу кĕске пулчĕ.

— Апла, эппин... Халех пырэтăп,— терĕ те Славик, трубкăна хучĕ.— Министерствăран,— пĕлтерчĕ вăл.— Ман çинчен докладной хут çырнă иккен.

Пурте пĕр харăс пăлханса ўкрĕç.

— Кам пултăр, Анатолий Степанович ĕнтĕ!— тарăхса кăшкăрчĕ Тамара.

— Çавă, заместитель каларĕ,— терĕ Славик. Вăл васкаса тумланма тытăнчĕ.

— Мĕн çырма пултарнине пĕлместĕп, анчах та эсĕ хăраса ан тăр, тĕрĕссине куçран кала,— вĕрентрĕ Владимир Борисович, ура çине тăрса.

Алеша та тусĕ патне пычĕ.

— Ытлашши ан вĕрилен. Ытти пирки пирĕн пăшăрханма кирлех мар пек туйăнать,— терĕ вăл, ун аллине чăмăртаса.

Галя нимĕн те чĕнмерĕ. Вăл Тамарăна хулĕнчен ярса тытрĕ те Славик тухса кайиччен çапла тăчĕ.

Роман Петрович Петров хăй кабинетĕнче пĕчченехчĕ. Славик алăкран кĕрсенех, вăл хăй умĕнчи хутсене сĕтелĕн сулахай енне тирпейлесе хучĕ те çамрăк çын çине пĕр самант тинкерсе пăхрĕ.

— Ларăр. Эсир пулатăр-и Кудрявцев?

— Эпĕ.

— Мĕн пăлхавĕ çĕкленĕ эсир театрта? Аслă режиссер питĕ кўреннĕ.

— Пăлхав? Мĕнле пăлхав?

— Эп сирĕнтен ыйтатăп.

— Театрта никам та нимле пăлхав та çĕклемен. Чăнах та манăн аслă режиссерпа хăшпĕр ыйтусем пирки калаçса вĕçне çитерейменни пулнă...

— Килĕштерейместĕр пулать эппин? Мĕн çитмерĕха сире? Эсир театра килни те çур çул анчах-çке.

Славик тарăхса кайрĕ. «Çапла каласса пĕлсех килтĕм. Сасси те...» шухăшларĕ вăл, анчах та, юлташĕсем асăрхаттарнине асра тытса, лăпкăнрах калаçма тăрăшрĕ.

— Тĕрĕс, эп театрта çур çул та ĕçлеместĕп-ха. Апла

пулин те, хавăрах куратăр, эпир аслă режиссерпа хирĕçетпĕр. Эпĕ ăна хытах кӳрентернĕ пулас — министерствăна жалоба çырмалăхах.

Çамрăк çын кăшт тăрăхларах калаçнине Роман Петрович малтанах сиссе илчĕ те ăна интереслĕнсех итлерĕ.

— Эсир аслă режиссера хăйне çеç кӳрентернĕ пулсан, тен, Анатолий Степанович пирĕн пата докладной çырман та пулĕччĕ. Эсир театр коллективне ăна хирĕç çĕклес çул çине тăнă-çке! Кăна вăл, театрăн художествăлла руководителĕ пулнă май, ниепле те ырлама пултараймасть. Эпир те уншăн хавасланмастпăр. Çакăн пирки мĕн шутлатăр эсир?

— Театрăн художествăлла руководителĕ пулнă май, тата ытти хăшпĕр сăлтавсене шута илсе, аслă режиссер кирек епле хирĕçĕве те çапла çеç хаклама пултарать. Ман шутпа, конкретлă пулмасăр объективлă пулма çук, çавăнпа та ку хирĕçĕвĕн сăлтавĕсене эсир те пĕлме тивĕçлĕ.

Ку ответ Роман Петровича килĕшрĕ. Анчах та вăл малтанхи пекех васкамасăр, кичеммĕн тенĕ пек калаçрĕ:

— Хирĕçӳ сăлтавне пĕлетĕп эпĕ. Эсир, аслă режиссерпа калаçса татăлмасăрах, паллă мар автортан хăвăр ирĕкпе пьеса йышăннă та спектакль хатĕрлеме шутлатăр. Асра тытăр: таçта та йĕрке пур. Вăл театрта та пулма тивĕçлĕ. Эсир çакна ăнланатăрах ĕнтĕ?

— Ăнланатăп, ăнланатăп, анчах...

— Питех те аван. Апла пулсан театрта çав йĕркесене директорпа аслă режиссер туса пынине те ăнланатăр ĕнтĕ эсир?

— Ăнланатăп.

— Йĕркене пăссан, ĕç малалла кайманни те сирĕншĕн вăрттăнлăх мар пуль?

— Тепĕр чух ĕçсем хăнăхнă йĕркене пăссан çеç малалла кайма пултараççĕ,—салхуллăн хуравларĕ Славик.

— Калăпăр, ку — тĕрĕс. Пĕр япалана çеç асра тытмалла — йĕркене пăсма кирлĕ чухлĕ сăлтав пулмалла. Театрта пурччĕ-и вара çавăн чухлĕ сăлтав?

— Пурччĕ.

— Ку — сирĕн шутпа. Пурте çапла шутламаççĕ-çке. Аслă режиссер çапла шутламасть.

— Вăл çапла шутланă пулсан, докладной çинче ман мар, унăн хушамачĕ пулмаллаччĕ. Ыттисем пирки — урăхла калаçу.

Роман Петрович ларнă çĕртен хускалса илчĕ. Унăн пысăк кăвак куçĕсем паçăрхи пекех кичеммĕн пăхрĕç. Славик пӳрнисене пăлханса шатăртаттарнине вăл лăпкăн сăнаса ларчĕ.

— Театр çак тапхăрта финанс планне тултараймасăр ĕçлет. Аслă режиссер çавăншăн та ответлă. Репертуара кĕртнĕ пьесăсене лайăхрах хатĕрлес вырăнне эсир çĕнĕ пьеса йышăнатăр. Коллективăн вăйне гĕрлĕ çĕре сапалатăр. Капла юрать-и? Ку — хулиганла хăтланниех-çке.

— Финанс планне тултарасси — театр умĕнче тăракан пĕрремĕш тивĕç мар. Çăм таптаракан машинăпа театр хушшинчи уйрăмлăха пурте пĕлеççĕ. Финанс планĕ тулмасть пулсан, театрпа халăх хушшинче ăнлапулăх çук ĕнтĕ. Юрату хире-хирĕç, теççĕ. Эпир, артистсем, халăха сахалтарах юрататпăр пулĕ, халăх пире юратсах каймасть пулсан. Репертуар тенĕрен — вăл пирĕн питех те чухăн. Ана эпир, хăнăхнă çултан пăрănмасан, ниепле те çĕнетсе пуянлатма пултараймастпăр. Артистсенчен пумайăшĕ хăйсен квалификацине çухатаççĕ. Рольсем ялан пĕр евĕрлисем. Амплуа иккен. Артистшăн амплуа пулма кирлĕ мар. Халь вылякан спектакльсенче режиссер мĕнле те пулин çĕнĕ меслетсемпе усă курни сисĕнмест. Çĕçĕ те касмасан тутăхать. Тутăхнă çĕçĕпе кайран касма тытăнсан — тĕпренет вăл. Артист пултарулăхĕ те çаплах. Ана ӳстермелле. Унран ыйтмалла. Вăл хăйне хăй çĕнтерсе пытăр. Анатолий Степанович артистсемпе ĕçлемест. Ĕçлемест! Театрăн художествăллă руководителĕ çинчен çапла каланăшăн каçарăр мана, тархасшăн...

Славик хăй ытлашши хĕрсе кайма тытăннине сисрĕ те шăпланчĕ. Министр заместителĕ сĕтел çине хунă хулăн кĕленчене кăранташĕпе майĕпен шаклаттарса ларать.

— Эсир каланă тăрăх, театрăн репертуар чухăн, Анатолий Степанович та начар режиссер. Çапла-и?

— Çапла.

— Çавăнпа та эсир, çĕнĕ пьеса илсе, репертуара пуянлатма шутлатăр ĕнтĕ. Унсăр пуçне, эсир калаçнинче «артистсемпе эп хам аслă режиссертан лайăхрах ĕçлеме пултаратăп» тени те сисĕнет. Эп тĕрĕс каларăм-и?

— Репертуара пуянлатасси те, артистсемпе ĕçлесси те пĕр сын умĕнче çеç тăракан задача мар. Ана кашниех тумалла. Ман вара, режиссер ятне тӳрре кăларас тесен, кунтан урăхларах шухăш пулма та тивĕçлĕ мар.

— Капла шăпах Анатолий Степанович каланă пек пулса тухать: эсир, кĕвĕçнипе, унăн ырă ятне халăх умĕнче чысран кăларма пăхатăр, хăвăр мухтава тухма тăрăшатăр. Çавăнпа çĕнĕ пьеса илетĕр, театр ĕçне пачах тĕшмĕртмен автора явăçтаратăр, çынсене аслă режиссера хирĕç тăрататăр.

Славик тăнлавĕсене юн тапса пычĕ. Вăл чĕри хăвăрттăн-хăвăрттăн сикнине итлесе ларать, лăпланма тăрăшать. «Эсир те Анатолий Степановичран çӳлтех мар иккен,— шухăшлать вăл тарăхса.— Приговор вулатăр эппин. Мĕн тата вĕçне çитичченех вуламастăр? Театртан тухса кай, тесе калăр!»

— Театртан эп пурпĕрех каймастăп, кирек епле пулсан та!

Роман Петрович кулса ячĕ:

— Апла эсир хăвăр айăпăра йышăнатăр-и? Докладной çинче пурне те тĕрĕс çырнă-и?

— Çапла!— терĕ тарăхнипе Славик.— Кевĕçстĕп, мĕншĕн тесен, театр искусстви пуçĕнче Анатолий Степанович пеккисем ларни искусствăна чысран кăларнă пекех маншăн. Мухтава тухма тăрăшмастăп эпĕ. Хамăн пурнăça çеç тӳрре кăларас килет. Çынсене те аслă режиссерпа чăркăшланса, ачалла юнтарса хирĕçтерместĕп. Чăнлăх патне илсе пырас килет ман вĕсене... Мĕнле путсĕр шухăшсем? Çапла-и?..

— Лăпланăр,— терĕ заместитель, каччăн хĕрелсе кайнă хăлхисене курса.— Сире никам та театртан хаваламасть.

Славик ăна чĕнмесĕр итлерĕ. Çак калаçăва татах малалла тăсни уншăн халĕ ытла та пысăк асап пек туйăнчĕ.

— Эсир парти ретĕнче тăратăр-и? — ыйтрĕ сасартăк Роман Петрович.

— Çук,— терĕ тĕлĕннĕ Славик.

— Кандидат, эппин?

— Çук. Комсомолец эпĕ...— ăнланаймасăр пăхрĕ Славик хăйне хирĕç ларакан çын çине. Анчах та Роман Петрович сăн-пичĕ çинче нимле туйăм та уççăн палăрни курăнмасть...

— Юрĕ, лару-тăру уçăмлă,— малтанхи пекех лăпкăн каларĕ Роман Петрович, ура çине тăрса.— Кайăр та мĕн шутланине тăвăр. Анатолий Степановичпа эпир театрти ĕçсем пирки татах калаçăпăр-ха. Калаçмаллисем, чăнах та, сахал мар.

Славик шак хытса тăчĕ. Вăл, хăй мĕн илтнине те ĕненмесĕр, çаплах Роман Петрович çине пăхрĕ.

— Ĕненместĕр-и?— кулсах ячĕ Роман Петрович.

— Ĕненес килмест,— терĕ Славик хуллен.— Мĕн калас манăн юлташсене?

— Спектакль пулать, лартатпăр, тейĕр,— каллех кулса ответлерĕ министр заместителĕ.

— Роман Петрович, эсир... эсир вăл пьесăна вуламан та-çке-ха.

Ним те шарламасăр, заместитель сĕтел сунтăхĕнчен пĕр хут тĕрки туртса кăларчĕ те Славике тăсса пачĕ. Ку — Алеша алçырăвĕн пĕр экземплярĕ иккен. Славик тĕлĕнсех кайрĕ:

— Ăçтан тупнă-ха эсир ăна?

— Саншăн тăрăшакансем пур.

Пĕр самант иккĕш те пĕрне-пĕри интересленсе сăнарĕç. Роман Петровичăн сăнĕ, паçăрхипе танлаштарсан, чылаях çуталнăн туйăнчĕ Славике. Вăл хăй те яланхи лăпкăлăхне тупрĕ пулмалла: сасси йăвашланчĕ, питçăмартисем синчи хĕрлĕ тĕс те майĕпен чакса пычĕ.

— Анатолий Степановичпа манăн ним çинчен те калаçма кирлĕ мар-и?— ыйтрĕ вăл.

— Эсир ан калаçăр. Çитес кунсенче аслă режиссер пурне те хăех пĕлĕ.

— Тавтапуç, Роман Петрович. Эппин, эпĕ вĕçтеретĕп. Чипер юлăр!

Славик кабинетран хăвăрт сирпĕнсе тухрĕ. Савăннипе урисем те çĕре перĕнмерĕç унăн.

Тепĕр вунпилĕк минутран вăл каллех юлташĕсем хушшинче ларчĕ.

Унăн хаваслă сăн-питне курсан, унтан пĕр сăмах илтиччен ех юлташĕсем вăл ыра хыпар пĕлтерессе сисрĕç.

— Ну, хăвăртрах кала ĕнтĕ,—васкатрĕç Тамарăпа Галя, ăна икĕ хулĕнчен тытса.

Алеша ун патне çывхармарĕ, вăл питĕ пăлханчĕ, тусĕ калаçма тытăнасса чăтаймасăр кĕтрĕ.

— Эпир çĕнтертĕмĕр, ачасем!— терĕ те Славик, çак сăмахсен пĕлтерĕшне хăй те халь çеç ăнланса илнĕ пек, Гальăпа Тамарăна хыттăн ыталаса чăмăртарĕ, унтан Алеша патне чупса пычĕ.— Çĕнтертĕмĕр, туссем!

— Халь чи интересли пуçланать,— терĕ вăл тепĕр самантран.— Тен, интересли çеç мар, хăрушăраххи те пуль. Тамара, Галя! Спектакль пулать-и, калăр?

— Пулать! Пулать!— кăшкăрса ячĕç хĕрсем пĕр харăс.

Алăк уçăлчĕ те Владимир Борисович курăнса кайрĕ. Славик ун патне чупса пычĕ.

— Владимир Борисович, савăнăç: спектакль лартма ирĕк пачĕç!

Директор Славикĕн аллине хыттăн тытса чăмăртарĕ:

— Пĕлсех тăтăм çапла пуласса. Çĕнтереççех, терĕм. Ĕçлĕр, ĕçлĕр.

Вăл Славике хулпуççинчен лăпкаса илчĕ те хавхалануллă куçпа ыттисене пăхса çаврăнчĕ. Вара пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

Анатолий Степанович хăлхине те кĕчĕ вăл.

Çĕнĕ хыпара çав кунах пурте илтрĕç.

Володя яланхи пекех çутă сăн-питлĕ курăнчĕ, анчах, темиçе хутчен те шухăша кайнине асăрхасан, кичемлĕх пусса илнипе çывăхри буфета кайса çĕр аллă грам эрех сыпса тухрĕ.

Каçа вăл хăйĕн тусĕсемпе пĕрле ирттерчĕ. Анатолий Степанович юлашкинчен Шурковпа Юманова хăй патĕнчен хăваласа тенĕ пекех каларчĕ те Володьăна «пĕр-ик сăмах калаçма» хăварчĕ.

Володя аслă режиссер сăмах пуçласса кĕтрĕ.

Лешĕ нумайччен чĕнмесĕр тăчĕ те салхуллăн:

— Йăнăш турăмăр,— терĕ.

— Пĕртен-пĕр тĕрĕс çул халь — Славике пултарнă чухлĕ пулăшасси.

— Пулăшасси?! Эсĕ, тăванăм, манран ан кул! Çук, çук — пулмасть апла! «Пулăшасси»! Тата мĕскер?!.

— Каларăм: ку — пĕртен-пĕр тĕрĕс çул. Çын курмалла пулăш, çын курмалла мар вăхăтсем те пулаççĕ...

Анатолий Степанович çамкине чышкипе çапса илчĕ:

— Тăм писмен!

«Тăм писменех çав»,— шухăшларĕ Володя.

— Гастроле халлĕхе никама та ан яр. Е, ярсан та, каярахпа, Кудрявцев репетицийĕсем пуçлансан. Чăнах та, çапла тумалла пулать.

— Çынсем мĕнле пăхĕç-ши ман çине?

— Вăл хăвăртан килет: халлĕхе эсир аслă режиссерах-ха. Хăвăра мĕнле кăтартатăр — çавăн пек курăнатăр ĕнтĕ.

— Апла, Кудрявцева пур енчен те пулăшмалла?

— Çынсем умĕнче — çапла. Ыттине хăвăр пĕлетĕр. Сирĕн тĕп задача — аслă режиссерта юласси. Çакна çеç

асра тыгмалла. Вак-тĕвек ыйтусем çинчен хам шухăшлăп.

Вĕсем сиввĕн сывпуллашрĕç. Володя пĕр самантлăх хăй çак мăк каскапа çыхăннăшăн ӳкĕнсе те илчĕ, анчах та каялла чакма çул çукчĕ ĕнтĕ унăн. Славикпе вĕсем тепĕр хут нихăçан та туссем пулас çук.

## XVI

— Эсĕ рольсене пĕлсех валеçмен пек,— терĕ Владимир Борисович, актерсен списокне пăхса тухнă хыççăн, Славик еннелле çаврăнса.— Қаçар та-ха...

— Пулĕ те, пулĕ те... Сире мĕн килĕшмест?— ăшĕнче кăштах пăшăрханчĕ пулин те кăмăллăн ыйтрĕ Славик.

— Тамара рольне эсĕ урăххине панă пек. Вăл çепĕç те тарăн туйăмлă хĕрсен ролĕсенче хăйне аван кăтартрĕ. Халь вара — пачах хирĕçле темелле: арçын ачаллараx хĕр...

— А-а, эсир ун çинчен-и-ха? Владимир Борисович, ун пирки кулянма кирлĕ мар. Эп Тамарăна çеç мар, пурне те рольсене çавăн пек... пăтратсарах патăм. Юри. Артист патшана та, ун тарçине те, арçынна та, хĕрарăма та пĕр пек пултаруллă вылянма тивĕç.

— Хăвна лайăх пултăр тесе каларăм. Ан çиллен...— Владимир Борисович Славик çине тинкерсе пăхрĕ.— Пĕр такăрланă çулпа кайма çăмăл.

— Артистăн такăр çул пулма кирлĕ мар, Владимир Борисович. Такăр çул вăл — хăнăху, йăлана кĕни, пĕр-евĕрлĕх пулса кайни, хăрах енчен пиçнĕ панулми пек. Çур кĕлеткине шалкăм çапнă çын пек. Такăр çул чирĕнчен сывалма тăрăшатпăр ахаль те.

«Ну-ну, айта, çаплах-çаплах, тĕрĕс...»,— текелесе, Владимир Борисович репетици ирттерекен пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

Тамара хăй çумĕнче тăракан Гальăна хăлхинчен шăппăн пăшăлтатрĕ:

— Вăтанчĕ, сисрĕн-и?

— Қам?

— Владимир Борисович ĕнтĕ, кам пултăр. Қуçĕсене мăчлаттарма тытăнчĕ. Славик тĕрĕс калать.

— Эс ăçтан пĕлетĕн? Тен, вăл йăнăшать пуль. Тепĕр тесен, вăл тĕрĕс калани темех мар-ха. Пурте вăл тăвас тенипех пулмасть-çке.

Тамара ун çине кулараx пăхрĕ:

— Эс ун ҫепĕҫлĕхне анчах курнă-ха. Вăл хаяр та. Ӳ-ух, хаяр та. Курса тăр акă. Артистсене ташлаттаратьха вăл пĕрре.

— Хаярлăх пултарулăхах мар.

— Пултарулăхпа усă курма ҫирĕплĕх кирлĕ. Пултаруллисем нумай та, ĕҫе ăна пурте тăваймаҫҫĕ.

— Пурăнсан — курăпăр.

Галя тарăннăн сывласа илчĕ.

Иккĕш те пысăк пӳлĕм тăрăх канăҫсăррăн утса ҫӳрекен Славик ҫине пăхма тытăнчĕҫ.

— ...Тепре асăрхаттаратăп: хăвăра ҫынсем умĕнчи пекех туйăр. Репетици ҫеҫ-ха тесен, ним те пулмасть. Тытăнатпăр! Пурте хатĕр-и?

— Хатĕр!

— Кайрăмăр!

Славик, хăй те хытă хавхаланнăскер, аллисене шарт ҫупса, пуҫлама паллă пачĕ.

Халĕ вăл — ҫарпуҫĕ. Ҫак пӳлĕм — вăрҫă хирĕ. Ҫынсем сахалăн пулсан та, вĕсене ертсе пыма, ҫĕнтерӳ патне илсе ҫитерме ҫăмăлах мар. Пурте ҫарпуҫĕнчен килет, ҫак ҫынсен пулас шăпи, вĕсен телейĕ, вĕсен пурнăҫĕ— пĕтĕмпех ун аллинче. Куҫа курăнман пиншер ҫиппе ҫыхăнса тăраҫҫĕ унпа вĕсенчен кашниех. Куҫсем пурин те — ун ҫинче. Унăн сăмахĕ, унăн кашни хусканăвĕ, вăл кăшт ҫеҫ палăрсан та, ун ҫине пăхса тăракан ҫынсем патне ҫитет, вĕсен чĕрисене хускатса илет. Унăн кулли ҫынсене хавхалантарса култарать, унăн салхуллă сăн-пичĕ ҫынсене шухăша ярать. Хăйсен кашни утăмне, хăйсен ăнăҫăвĕсемпе инкекĕсене ҫынсем ун сăн-пичĕ ҫинче пăхса кураҫҫĕ, ҫул ҫӳрекенсем хăйсен ҫул-йĕрне Ҫурҫĕр ҫăлтăрĕпе тĕрĕсленĕ пек, вĕсем ҫарпуҫ куҫĕнчен пăхса тĕрĕслеҫҫĕ.

Вĕсем пурте — ҫарпуҫ аллинче.

Анчах ҫарпуҫĕ хăй те вĕсене пăхăнса тăрать иккен. Вĕсем пуртан анчах вăл — ҫарпуҫĕ. Вĕсем ҫук пулсан— пĕччен уйрăм ҫын ҫеҫ пулнă пулĕччĕ, ҫав ҫынсенчен кашни пекех. Ав мĕнле иккен вăл — коллективпа пуҫлăх хушшинчи ҫыхăну. Вĕсем ун ҫине пурте пĕр пек шухăшпа, пĕр пек кăмăлпа пăхнăран, вĕсен ăспуҫĕнче, вĕсен туйăмĕсенче вăл пĕр пек курăннăран ҫеҫ вăл вĕсемшĕн — ҫарпуҫĕ. Ун ҫине ертсе пыракан ҫине пăхнăн пăхаҫҫĕ, шăпах ҫавăнпа вăл—ертсе пыракан та. Калăпăр, ҫав ҫынсенчен малтан пĕри, ун хыҫҫăн тепри, кайран виҫҫĕмĕшĕ ăпа ĕненми пулсан, унăн сăмахĕ-

сем, унăн хусканăвĕсем вăл çарпуçĕ мар, ахаль çын çеç иккенне кăтартса параççĕ пулсан, çак сыхăну, ик енчен те пыракан çыхăну, татăлнă пулĕччĕ. Халь пĕр кристалл тытăмĕ пулса тăракан çак молекулăсем — çынсем сасартăк сапаланса кайнă пулĕччĕç. Вĕсем пĕрнепĕри ăнланни вĕсене çыхăнтарса тăнăран пĕр енне сулăннă туртăм, пĕр йĕрпе чупакан вăй пулнă пулсан, ун чухне çак пĕр пысăк вăй темиçе пĕчĕк вăя пайланнă пулĕччĕ, вара çав пĕчĕк вăйсем сĕтел çине çӳлтен тумлатнă пĕр чĕркĕмĕл тумламĕ пиншер пĕчĕкçĕ тумламсене пайланнă пек арканса сапаланĕччĕç.

Ун чух вара çарпуçĕ те, çар та пулмастчĕ...

— Атя, тепĕр хут туса пăхатпăр,— Славик тăп чарăннă Анатолий Шингарев патне пырса тăчĕ.— Атя тепре. Тĕрĕсех мар пек туйăнчĕ.

— Пурнăçри пек-çке,— тĕлĕнчĕ лешĕ.

— Пурнăçри пек — аван та, çителĕксĕр. Эпир — искусствăри пек тума тивĕç. Искусство тумалла, тĕрĕсрех каласан...

— Туса пăхар эппин...

...Çак мизансценăна çĕнĕрен выляса пăхнă хыççăн артист кăшт лăпланать те çапах та килĕшсех каймасть-ха.

— Вячеслав Петрович, малтан тĕрĕсрех пекчĕ...

— Ну, юрĕ,— тет Славик лăпкăн, хĕрсе каяс мар, тесе.— Эсĕ каланă пек пултăр. Паянлăха. Ыранччен шухăшласа пăх. Вара малашне иксĕмĕр мĕнлерех килĕшесси çинчен шухăшлăпăр.

«Ĕнен, эп тĕрĕс калатăп. Санăн эп каланипе килĕшес пулать» тенĕ пек пăхать вăл Шингарев çине. Артист ăна хулпуççинчен лăпкаса лăплантарать:

— Юрĕ, юрĕ, шухăшласа пăхăп...

Каллех вара — пиншер хускану, пиншер сăмах, вĕсене кашнине уйрăм тĕрĕс, виçеллĕ тумалла, пĕрлештерсен, çав сăмахсемпе хусканусем — юрă пек пулччăр. Юрăран сăмах кăларса ывăтма çук-çке!

Пӳлĕм алăкĕ хуллен уçăлнине никам та асăрхамасть. Икĕ çивчĕ куç хавхаланса ĕçлекен ушкăн çине шăтарас пек пăхать, пĕр çын ытларах тыткăнлать çав куççене: Славик. Унăн сăмахĕсене пĕрне те сиктерсе хăвармасăр итлет, унăн кашни хусканăвне сăнать Володя. Сасартăк ун пуçĕнче тĕлĕнмелле шухăшсем çуралаççĕ: кулăшла!— пĕр çынна пула пĕтĕм ĕç пăсăлса кайрĕ. Пĕр çынна пула! Çынни кам-ха тата! Хам юлташ пулнăскер-

çке! Илсе пăрахас ăна, анчах вăл шахмат хăми çинчи пешка мар-çке. Наркăмăш парса вĕлерес-и? Ха-ха-ха! Ку тата кулăшларах. Кун пекки ĕлĕкхи романсенче çеç пуль. Мĕнле çăмăл пулнă пулĕччĕ мана, вал çухалсан? О-о! Аван мар шухăшсем манăн! Ха-ха-ха! Сасăпа калама та... çук, çук, çăвартан ан тухтăр. Ку — хăрушă та. Ну, çивчĕ куçлă ачам, юрататăп эпĕ сана, çавăнпах — кураймастăп.

— Тепĕр хут! Кашни хăй вырăнне йышăнăр!— илтĕнчĕ Славикĕн уçă сасси.— Хатĕр-и?.. Кайрăмăр.

«Кăтартнă пулăттăм та эп сана ху вырăнна»,— шухăшлать Володя.— Вăтам ĕмĕрсенчех аван пулнă вăл пурнăç. Халь мĕн — сăмса урлă пĕрре лайăхрах хурсан та темиçе талăка хупса намăслантараççĕ... Э, çук, ман пек этемĕн унсăрах май тупмалла. Тупатăп! Тупатăп, Володечка, ан кулян, Владимир. Эс маттурччĕ-çке! Ан тив, каппайтăр, çĕнтертĕмĕр тесе. Пурнăç пĕр килмест вăл. Ĕмĕр сакки сарлака!

Володя тарăннăн сывласа илчĕ те, хăйне никам та курмасть-ши тесе, хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. Пÿлĕмрисем хыттăн кулса ячĕç. Володя пуçне хăвăрт каялла пăрчĕ: пÿлĕмрисем темшĕн савăнса ахăраççĕ, шухăша кайнă Володя вĕсен сăмахĕсене илтсе юлма та ĕлкĕреймен иккен. Володя Славикĕн савăнăçлă туйăмпа çĕкленнĕ сăн-питне, çăмăл кĕлеткине, хаваслă куллине курать. Унтах — Тамара. Вăл, пуçне каçăртнă та, аллисемпе хăлаçлана-хăлаçлана илет, унăн пĕтĕм кĕлетки чĕтренсе кулать, тейĕн. Хăй çав вăхăтрах юнашар тăракан Алешăна тем калать. Ав, Симочкăпа Галя пĕр-пĕрин çине пăхса, темскер хăвăрт калаçкаласа, чыхăнса каяс пек ахăраççĕ.

Пурте пÿлĕм варринче тăракан Викторпа Нина Сурскийсем çине пăхкаласа илеççĕ. Мĕнпурĕ те вĕсенчен пуçланнă пулмалла. Нини шăппăн кулать. Юлашкинчен Викторĕ юриех çилленнĕ пек турĕ те хыттăн кăшкăрчĕ:

— Çитĕ сире! Чÿречесем тухса ÿксе пĕтрĕç ĕнтĕ! Ахăратăр... Çитĕ, тетĕп!

Анчах та ку сăмахсем хыççăн кулă малтанхинчен те хытăрах янăрама пуçларĕ. «Айăпа кĕнисем» ыттисемпе пĕрле савăнса ахăлтатмасăр та чăрăнмарĕ вăл.

Володьăн пичĕ шурса кайрĕ. Вăл алăк хăлăпне пацăрах çав тери çирĕп ярса тытнă та — çаплипех тăрать: аллисем те шуралнă, чĕрнисем çеç, юн тапса пынипе, хĕрлĕн курăнаççĕ. Володя пĕр вырăнта тапăртатса илчĕ,

унтан, пуçне пăрса, коридор вĕçнелле пăхрĕ: такам килнĕ пекех туйăнчĕ ăна. Каллех тапăртатса илчĕ те — каллех пăлхавлăн коридор вĕçнелле тинкерчĕ. Никам та çук-çке. Вăл сывламасăр тăчĕ. Ах, мур! Кăкăрта чĕри хыттăн-хыттăн тапать иккен. Володя, хăйне хăй вăрçса, алăка шалтах хупрĕ: çитĕ, савăнччăр...

Вăл коридор вĕçнелле утрĕ, сулахаялла пăрăнчĕ.

Хăй хыçĕнче сасартăк алăк сасси илтĕнчĕ — хăшĕши?— пĕлес килчĕ Володьăн. Акă ура сассисем ун патне çывхараççĕ. Вăл каялла çаврăнчĕ те килекен çынна хирĕç утса кайрĕ. Ку Сима упăшки пулчĕ — Толя Шингарев.

— А-а, салам, тăванăм. Мĕн эсĕ пĕрре те курăнмастăн ушкăнта?— хăвăрттăн калаçрĕ Сима упăшки, Володя хăйне ал пама хатĕрленнине асăрхаман пек пулса.

Володя пĕр самантлăх ним калама аптрарĕ те сăмаха пăрас шутпа:

-- Анатолий Степанович çук-и çавăнта?— тесе ыйтрĕ.

— Мĕн тутăр Анатолий Степанович унта? Пыман. Çук.— Толя малтанхи пекех кулкаларĕ. Темшĕн хăйĕнчен кулнă пек туйăнчĕ ку Володьăна. Анчах та вăл чунĕ вĕчĕрхенсе тарăхнине нимпе те палăртмарĕ, хăйпе калаçакан пекех çĕкленӳллĕ сасăпа калаçрĕ:

— Мĕнле вăл — «мĕн тутăр»? Анатолий Степанович аслă режиссер-çке. Ун интересленмелле. Пăхмалла. Халиччен вăл çапла тăватчĕ-çке.

— Э-э! Халиччен çаплаччĕ те — усси сахал пулнă пулмалла. Халь акă — урăхла. Славка пирĕн çунтарать кăна! Ав, куратăн-и, пуçран халь те пăс тухса тăрать,— пуçне малалла пĕксе кăтартрĕ Шингарев. Чăпах та, вăл тарланă, çӳçĕ те кăштах арпашнă.

Володя унăн йӳле янă пиншак айĕнчен курăнакан сарлака кăкăрĕ хăвăрттăн анса хăпарнине асăрхарĕ. Сăн-пичĕ çинче çын ывăнни палăрать, анчах та çав вăхăтрах хаваслăх, хаваслăх çутатаççĕ, сапалаççĕ унăн хăмăр куçĕсем. Шингарев çӳçне турипе якатса илнĕ хушăра Володя çине вăрттăн пăхать. Лешĕ самантлăх çеç пуçне пĕкрĕ те, ăна каллех çĕклесе, малтанхи пекех уçă сасăпа калаçма тытăнчĕ.

— Апла... ĕçсем аван пыраççĕ, тетĕр?

— Аван! Мĕн каласси пур. Шуйттан ачи, Славике калатăп-ха, çамрăк пулин те, хавхалантарма пĕлет.

Савӑнсах ёҫлерӗмӗр паян. Э-э, эп анчах-и? Пурте! Пурте хавхалануллӑ. Маттур ача. Сайра тӗл пулаҫҫӗ ун пеккисем!

— Шӑп ҫавӑн пеккисем кирлӗ пирӗн театрта,— тем шутпа каларӗ Володя. Сӑмахӗсем хӑйсемех тухса кайрӗҫ унӑн.

Сима упӑшки ун ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ.

— Во-во! Шӑп ҫавӑн пеккисем кирлӗ, тӗрӗс калатӑн,— терӗ вӑл.

— Анчах та ват ҫын — тӑват ҫын, теҫҫӗ мар-и-ха? Ватӑрах артистсемпе хирӗҫсе ан кайтӑр. Хӗрӳллӗ вӑл, асӑрхаттарас пулать ӑна.

— Кирлӗ мар асӑрхаттарма. Ачи ӑна-кӑна чухлаканни. Паян та, унччен те куркаларӑмӑр ӗнтӗ, тавлашасси пулкалать пуль те — эй, мӗн хӑрамалли пур ку япаларан? Эпир — хамӑр ҫынсем-ҫке, кирек епле пулсан та. Пӗр ушкӑн. Пӗр ӗҫ тӑватпӑр. Ҫапӑҫса тӑма вӑхӑт та ҫук. Вӗчӗ тытса кӗвӗҫсе ҫӳреме — сӑлтав та ҫук: Славик хӗрне эп хапсӑнмастӑп. Вӑл та ман арӑмшӑн ҫунмасть пуль, тетӗп-ха! Ну, кайрӑм эпӗ! Пыркаласа кур унта. Эх, интереслӗ халь пирӗн!

— Театрти пекех пуль?— хирӗҫ кулчӗ Володя, вӗчӗрхенсе.

— Театрти пек!— ҫирӗппӗн тавӑрчӗ те Сима упӑшки, аллине сулса, унран уйрӑлчӗ. Юлашки сӑмахӗсем Володя хӑлхинче нумайччен янӑраса тӑчӗҫ. Сима упӑшки ҫав сӑмахсене юриех каларӗ пулӗ, тесе те шухӑшларӗ Володя, анчах та ку ответ хӑй ҫапла ыйтнинчен ҫеҫ килнине тавҫӑрса илчӗ те пӗр самантлӑх лӑпланчӗ. Самант иртрӗ те — Володя каллех малтанхи пек шухӑшлама тытӑнчӗ: ҫук, тем тесен те, Сима упӑшки ӑна тӗртсе илес тесех каларӗ ҫав сӑмахсене... Аллине те памарӗ, ӑҫтиҫук этем. Ав, ҫынсем мӗнле улшӑнаҫҫӗ...»

Ӗҫсӗр аптӑраса, вӑл коридорсем тӑрӑх сулланса ҫӳрерӗ.

Виҫҫӗмӗш хутран аннӑ чух пусма картлашкисем ҫинче вӑл Шуркова хирӗҫ пулчӗ. Лешӗ хул хушшине темле хут тӗрки хӗстернӗ те хӑйпе хӑй киленнӗн каҫӑрӑлса утать. Урисене ҫӳле ҫӗклет хӑй — ӑшӑх шыв урлӑ каҫакан хур аҫи пек.

— Сывлӑх сунатӑп,— темшӗн усал пуласран хӑранӑн, асӑрханса сӑмах хушрӗ Шурков Володьӑна.

— Салам!— тӳрккесрех сасӑпа ответлерӗ Володя.— Аҫталла йӑпшӑнатӑн?

Шурков, кулам пекки туса, тутине хăварт уçса хупрĕ те ал лаппипе питне сăтăрса илчĕ. Вăл куллине шăлса антарчĕ, тейĕн: аллаппи айĕнчен пачах урăх сăн-пит курăнчĕ. Вăл кăштах çиллес пек курăнать халь.

— Хăвна ытла мăнна хуратăн, юлташ. Пĕрле ĕçлекенсем хушшинче килĕшмест вăл. Çынсене хисеплес пулать. Çапла, юлташ.

Володя ахăлтатса кулса ячĕ.

— Ха-ха-ха! Çынсене хисеплетĕп эпĕ, сана вара, «юлташа»...

Вăл юриех сăмахне каласа пĕтермерĕ.

— Асту, юлташ, эс мана та асăнăн-ха!— çĕлен чашкăрнă пек хыттăн пăшăлтатса тавăрчĕ Шурков, Володя çине кураймасăр пăхса.

Володя куç харшисене çĕклентерчĕ:

— Авă мĕн! Ай, кукша!..

Унтан, Шурков лару-тăрăва хаклама ĕлкĕриччен, ун патне пычĕ те пĕчĕк ачана тытнă пек хăлхинчен ураттармаллах пăчăртаса тытрĕ, хыттăн пăшăлтатса ăна:

— Моçкă теççĕ сан пеккисене,— терĕ.— Крылов аслаçуна астăватăн-и?

Шурков шартах сиксе илчĕ те — хăйне темле йĕксĕк çыхăннă пекех туйăнчĕ пулас ăна — Володьăна тĕртсе ячĕ.

— Ну-ну, эсĕ! Ерипентерех,— текелесе, Володя пиншакне Шурков алли перĕннĕ çĕртен тасатма тытăнчĕ.—Ах, путсĕр этем!

Ана-кăна чухлакан Володя çакна хăй аякран пăхса тăрас пулсан, «епле йĕрĕнтерекен сцена ку?» темелле. Анчах çак самантра вăл хăйпе хăй киленсе çеç илчĕ. Ах, епле киленес мар: вăл Шурковран тăрăхлама та пултарать-çке!

Халĕ унăн çирĕп те вăйлă кĕлетки, илемлĕ сăн-пичĕ сасартăк пĕтĕмпех пароди евĕр пулса тăчĕ... Чăнах, пароди мар-и ĕнтĕ вăл? Унăн выçăллă-тутăллă иртнĕ ачалăх кунĕсене, чăрсăр çамрăклăх вăхăтĕнче ĕмĕтленнĕ хăюллă ĕмĕчĕсене пĕлекен çын, халь ăна курас пулсан, питех те тĕлĕннĕ пулĕччĕ. Тĕлĕнмесĕр! Ачалăхран, малтанхи çĕнтерӳсемпе çуталнă ĕмĕтсенчен нимĕн те юлманçке унăн. Вăл вилнĕ. Вăл вилнĕ!

Сывлать Володя — вилмен вăл. Вилес те çук. Вилес килмест унăн. Вăл пурăнма ĕмĕтленет. Ĕмĕчĕсем те пур унăн. Пурнăçра çĕнтерӳçĕ пулма ĕмĕтленет вăл. Тен, пулĕ те. Тĕрлĕ çынсемшĕн тĕрлĕ тĕслĕ çĕнтерӳ. Пĕри-

сен — космоса хăпармалла, теприсем чĕлĕм туртма вĕренсен те çĕнтерӳ турăм, теççĕ.

Чӳрече патĕнче шухăша кайса тăнă Володя Людмила çывхарнине туйман та. Лешĕ шăппăн чĕнчĕ:

— Володя...

Володьăна хĕрарăмăн хуйхăллăрах сăнĕ килĕшмерĕ.

— Эсĕ мĕн туса çӳретĕн тата кунта?

Вăл Людмилăн сылтăм аллине ик аллипе те тытса чăмăртарĕ. Кирек епле пулсан та, çак хĕрарăм ăна юратни, ăна чунтан парăнни Володьăна тепĕр чух савăнтарать. Ак халь те вăл çывăх, ытла та çывăх.

Володя Людмилăна шăппăн çупăрласа илчĕ те питçăмартинчен чуптурĕ.

— Эпĕ сана юрататăп...

— Эсĕ ырă кăмăллă,— ассăн сывласа хирĕç тавăрчĕ Людмила, каччăна куçĕнчен пăхса.— Эп сана ытараймастăп. Пар-ха..

Вăл унăн аллине тытса чуптума тытăнчĕ.

— Эсĕ ывăннă тĕслĕ. Мĕншĕн?— ыйтрĕ Володя.

— Кĕçĕр пĕрре те куç хупман. Пĕр вĕçсĕр шухăшларăм. Аптăратсах çитерчĕç...

— Мĕн çинчен шухăшларăн вара?

— Хам çинчен, сан çинчен!.. Пуласлăх çинчен.

Володя чĕнмерĕ.

— Тен, пуласлăх çинчен шухăшлани те ман усăсăр пулĕ. Мĕн ĕнтĕ халь тин? Çаплах шухăшлатăп çав. Çын малаллах пăхать-çке — виличченех.

— Упăшку килте марччĕ-и-мĕн вара?

— Килтех те — Николай мана шухăшлама чăрмантармасть-çке... Володя!— каччăна вăл хыттăн пăшăлтатса чĕнчĕ, пуçне ун кăкăрĕ çине хучĕ.— Кала, эсĕ мана юрататăн-и?

— Ĕненместĕн-и вара?— хĕрарăма сулахай питçăмартинчен ал лаппипе хуллен ачашларĕ Володя.

— Ĕненместĕп. Эпир иксĕмĕр пĕрле пулсан çеç ĕненме пултаратăп... Ман чĕре сиксех тухать халь. Пĕтĕм ăшчик çунать. Эп театртан тарма та хатĕр. Санпа çеç пулма ĕмĕтленетĕп...

Иккĕш те шăплančĕç. Нумайччен чĕнмесĕр тăнă хыççăн тин Володя чӳречерен пахрĕ те:

— Урамра ирхи пекех сивĕ-и?— тесе ыйтрĕ.

— Сивĕ, ирхи пекех,— илтĕнчĕ Людмилăн сасси.— Мĕншĕн улшăнтăн эсĕ, Володя?

Каччă ирĕксĕррĕн кулса ячĕ.

— Улшӑнтӑн? Йӑнӑшатӑн, Людмила. Эпӗ сана юрататӑп. Питӗ хытӑ юрататӑп.— Вӑл Людмилӑна чӑннипех те хавасланса ыталарӗ.— Эсӗ мана питӗ килӗшетӗн.

— Сан валли хӗрсем те пайтах ҫав. Мӗн тӑвӑн эс манпа?— чун тӗпӗнчине каларӗ Людмила.

— Ун пек ан кала. Эсӗ маншӑн пур хӗртен те лайӑхрах.

Людмила, мӗскӗн Людмила — ӑна ҫак сӑмахсем те савӑнтарчӗҫ, вӑл каллех пичӗпе Володьӑн уҫӑ кӑкӑрӗ ҫумне лӑпчӑнчӗ.

— Ҫут тӗнчере халӗ манӑн ҫывӑх ҫын та пӗр эсӗ ҫеҫ,— терӗ вӑл.

Володя чӗнмерӗ, Людмилӑн хулпуҫҫийӗсене ҫирӗппӗн тытса, ӑна хӑй ҫумне хытӑрах чӑмӑртарӗ.

Ҫав самантра ҫӳлтен сасӑсем кӗрлени илтӗнсе кайрӗ.

— Репетицирен тухрӗҫ. Кунта килеҫҫӗ,— пӗлтерчӗ Володя.— Кайрӑмӑр.

Людмила хӑй те малтан шартах сикнӗччӗ, анчах, темле чӑрсӑрлӑхпа хавхаланса, тӑпах чарӑнчӗ:

— Каймастӑп нимҫта та. Эс те ан кай. Курччӑр. Эпӗ сана юрататӑп. Эсӗ те... мана.

Юлашки сӑмахӗсене шӑппӑнрах каларӗ вӑл.

— Юрататӑн пулсан, итле мана,— терӗ Володя, ӑна аллинчен тытса.— Атя, вӗсем пире ахаль те пӗлеҫҫӗ.

Вӑл Людмилӑна аллинчен ҫавӑтрӗ те сасӑсем ҫывхарнӑ енчен аяккалла илсе кайрӗ.

Хавеслӑ кӗрлев вӗсем патӗнченех янӑраса иртрӗ.

Шӑв-шав витӗр хӑлхана кӗрекен сӑмахсене итлесе, вӗсем пӗр тӗттӗмрех кӗтесре шӑппӑн тӑчӗҫ. Хӑйсен пӗчӗк ҫӗршывне, хӑйсен ирӗклӗхне, хӑйсен пӗчченлӗхне, хӑйсен шухӑшӗ-ӗмӗчӗсене сыхласа хӑварчӗҫ пулать вӗсем.

## XVII

Хула ытарма ҫук илемлӗ каҫ ытамӗнче. Хӗвел анни пӗр ҫур сехет ытларах ҫеҫ пулмалла-ха. Анӑҫра сенкеркӑвакӑн ирӗлсе тӑракан тӳпе тухӑҫалла тӗксӗмленет, унӑн тӗсӗ ҫӑралать, анчах ку ҫӑралӑх унӑн тасалӑхне нимӗн чухлӗ те пӑсаймасть. Пин-пин ҫӑлтӑр йӑлтӑртатса чӳхенет тӳпен сарлака талккишӗпе. Сывлӑш уҫӑ, тӑрӑ— ту сывлӑшӗ пекех Кӑнтӑрла сивӗрехчӗ, пас тытнӑччӗ, халӗ ҫӑмламас ҫӑка турачӗсемпе театр умӗнчех ӳсекен роза тӗмӗсем ҫинче ахах та мерчен йӑлтӑртатать. Сыв-

лăшра та мĕльюн-мĕльюнăн çутă пĕрчĕсем майĕпен выляса куçса çӳреççĕ. Электричество ламписем тавралла вĕсем уйрăмах нумай. Мерчен çăвать тӳперен.

Спектакль пуçланасси тепĕр сехет юлнă пулмалла. Театр умĕнче халăх кĕпĕрленсе тăрать. Касса патĕнче пĕр çын та çук ĕнтĕ — билетсем сутăнса пĕтнĕ. Хаваслă шăв-шавра «ытлашши билет çук-и?» тени илтĕнкелет.

Пĕрер стакан кофе ĕçме кафене чупса кĕнĕ Алешăпа Тамарăна асăрхасан, Володя питне хаçатпа хупларĕ. «Тупăннă... çӳпçипе хупăлчи. Ыр кур ĕнтĕ, савни!» Анчах та шухăшсенчен ăçтан хаçатпа хупланса юлăн? Тĕрĕссипе каласан, Володя темиçе кун ĕнтĕ хăй çинчен те, ыттисем çинчен те шухăшлать. Кирек епле пулсан та, вĕсем — пĕр çул çинчех-çке. Вăл вĕсемпе пĕрле çыхăннă, уйрăлма халь майĕ те çук.

Юнашар сĕтелсем хушшинче ларакан çамрăксем çине вăл мăнкăмăллăн пăхать — вĕсенчен пĕри те ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен хăйпе танлашаяс çук пек туйăнать ăна.

Володя хуллен тăрать те гардероб патнелле утать. Хăй тавралла никама та асăрхамасăр, тахçан хăнăхнă хусканусене пĕр туйăмсăр туса, вăл шурă тум тăхăннă кăпăшкарах вата хĕрарăмран пальтине, çĕлĕкне илет, тĕкĕр умĕнче хуллен, тăрăшса тумланать. Вара, çак нумая пыман ритуалăн юлашки пайне пурнăçланă пек, гардероб умĕнчен хуллен иртнĕ чух вăл кăпăшка хĕрарăма пуç таять те, куç хăрпăкĕсене пĕр-пĕрин патне çывхартса, ун çине тĕксĕммĕн пăхса илет. Хыçран алăк хыттăн шалтлатса хупăнса юлать.

Тулта уçă. «Пурнăç чăннипех илемлĕ иккен». Чĕрĕ пек çунса тăракан çăлтăрсемпе капăрланнă тĕксĕм кăвак тӳпе чаршавĕ театрăн ӳт тĕслĕ çутă çуртне сăпайлăн хупласа тăрать. Ун çине пăхсан-пăхсан, вăл сасартăк хăйĕн йывăрăшне çухатса майĕпен çӳлелле улăхассăн туйăнать. «Шел, этеме хавхаланулăх та, ăс та, чăтăмлăх та çитмест».

Володя театра кĕрет. Тата вунă минутран спектакль пуçланмалла. Иккĕрен пĕри: е ăнăçу, е... Пурте калаççĕ, спектакль пит аван, теççĕ. Курăпăр, курăпăр...

Шăнкăрав виççĕмĕш хут шăнкăртатсан, Володя хăй вырăнне кайса ларчĕ.

Кĕçех çутă сӳнчĕ.

Кĕрен бархат чаршав хуллен чӳхенсе йăлтăртатать. Залра шăп. Оркестр ларакан вырăнтан сĕрме купăс сасси асăрхануллăн чĕтренчĕ — ирхи сивĕ сывлăмлă

курăк çинче çарран утакан хĕрача тухса тăчĕ Володя куçĕ умне. Майĕпен-майĕпен тĕп кĕвве ытти инструментсем те пулăшма тытăнчĕç. Кĕвĕ мăнаçланса сарлакаланчĕ, ĕçлĕ кун шавĕ аслăланса пынă пекех. Теме кĕтсе темшĕн пăшăрханакан, темле вăрттăнлăх патне хуллен çывхарнăçемĕн кăртлатса сикекен чĕре сасартăк уççăн та хавассăн тапма тытăнчĕ — музыка оркестрăн мĕнпур хăвачĕпе янăраса кайрĕ. Пысăк залра çӳрекен сасса куçпа та курма май пур пек туйăнчĕ, вăл çынсен пичĕкуçĕсене перĕнсе, вĕсене уйрăм тĕс кĕртрĕ, люстра çинче выляма пуçларĕ, залра хуллен хумханакан вăркăш çил кăларчĕ. Итлесе ларакансем пурте пĕр пысăк шухăш патне çывхарма тытăнчĕç, вĕсен кăмăлĕ пĕрпеклен-чĕ. Пĕр пĕтĕм хавхаланулăх пурне те çĕклентерчĕ, çывăхлатрĕ. Залра хыттăн алă çупса ячĕç...

Володя кресло ăшне пусăрăнарах ларчĕ. Ыттисен хавхаланăвĕ ăна та ярса илчĕ, анчах та вăл, хăйне хирĕç пыракан вăя парăнасшăн мар пулса, ăна пултарнă таран сиввĕн кĕтсе илме тăрăшрĕ.

Музыка çаплах çурхи çил пек уçăлтарса вăркăшрĕ, чуна хумхатса хуллен ачашларĕ, унтан, ыткăнса килекен хĕвелĕн куçа шартарса яракан чăмăркки пек, хаваслă та янравлă пин-пин хĕлхем сапса пĕр самант кĕрленĕ хыççăн, дирижер патакĕ сывлăшра шак хытса ларчĕ: чун хĕлĕхĕсем хыттăн карăнса, оркестрпа пĕрле янăрама тытăннă самантра зал шăпланчĕ.

Чаршав майĕпен ик еннелле сирĕлсе уçăлчĕ.

Сцена çине пĕрре пăхсанах Володя çакна асăрхарĕ: виçе, тĕлĕнмелле виçе пур ку спектаклĕн тулаш енче. Çак пĕчĕк лаптăк сасартăк тем сарлакăш пулса кайрĕ, нимле тăвăрлăх та сисĕнмест.

Володьăн Славик çине пăхса илес килчĕ: вăл çавăн пекех маттур-ши? Çак спектакльте пĕр кăлтăк та тупăнмĕ-ши?

Ун шухăшĕсене сиснĕ пекех, сцена çине Славик тухрĕ. Володя ун çине шăтарасла пăхать... Славикĕн лăпкăн илтĕнекен сасси Володьăна кăштах тĕксĕммĕн курăнчĕ. Артистăн янăравлăрах, çутăрах пулмалла, шухăшларĕ вăл, анчах та, актер вылянине сăнанăçемĕн, вăл ун çинчен куçне илме пултараймарĕ. Темле ирĕксĕр хавхаланупа çĕкленсе, чĕри унăн хăвăрттăн кăртлатса тапма тытăнчĕ.

Актер кăтартакан сăнар ăна тыткăнларĕ. Спектаклĕн пĕр-пĕтĕм чунĕпе килĕшсе, унăн сывлăшне туйса, унăн

куçа куранман вăрттăн юхăмĕпе пĕр майлă вылярĕ Славик.

«Анатолий Степанович ку вырăнта ăна кăшкăртнă пулĕччĕ,— темиçе çĕрте те палăртрĕ хăй ăшĕнче Володя.— Чăнах та, мĕн чухлĕ меллĕ самантсем пурччĕ çутă та кĕрнеклĕ курăнма. Ку ăна-кăна чухламан пек вылять. Нивушлĕ тата пĕр тумлам та мăнкăмăллăх çук?»

Славик-режиссерпа Славик-актер тăрăшса ĕçлерĕç çав. Славик-актерăн пĕчĕкрех тĕллевĕсем Славик-режиссерăн пĕртен-пĕр пысăк тĕллевне пăхăнса пычĕç. Çав вăхăтрах спектакльте пĕр актер ытлашши çуттăн вылянипе спектакле пăсса пăрахма та пултарнине Славик малтанах пĕлетчĕ. Ун çинчен вăл пурне те асăрхаттаратчĕ. Хăйĕн ролĕ, уйрăм илсен, унăн чăнах та çав тери куçа илĕртекен, куракансене тӳрех килĕшсе парăнтаракан рольччĕ. Славик ку пуянлăхпа перекетлĕн усă курма пултарчĕ, вăл хăй çутта тухса ыттисене тĕттĕмре хăвармарĕ. Унăн сăнарĕ ытти сăнарсене хупламарĕ, пачах урăхла, ун сăнарне пула ытти сăнарсем те çивĕччĕн курăнса кайрĕç, вăл вĕсене чун пачĕ. Оркестрти инструментсем пек, кашни сăнар ирĕккĕн курăнчĕ.

Виççĕмĕш пайĕ вĕçленчĕ. Фойене халăх кĕпĕрленсе тухрĕ. Çынсем унта та кунта ушкăнăн-ушкăнăн калаçса тăраççĕ. Володя хăлхине ирĕксĕрех кăмăла кайман сăмахсем кĕреççĕ.

Ачашлăх ыйтрĕ унăн чунĕ. Çак самантра Людмила çеç лăплантарма пултарать ăна. Людмила халĕ килте. Пĕчченех. Хăвăртрах ун патне!..

Володя пальто тӳмисене хăвăрт вĕçертсе ячĕ те Людмилăн ăшă та çемçе кĕлеткине хăй çумне хыттăн тытса чăмăртарĕ. Самантлăх Людмила çӳçенсе чĕтрерĕ, унтан лăпланчĕ, Володьăна хывăнма пулăшса тӳлеккĕн кулкаларĕ. Вара шалти пӳлĕме илсе кĕчĕ.

— Сана паçăртанпах кĕтрĕм,— терĕ вăл.— Эс килессĕнех туйăнчĕ.

— Чĕрепе чĕре калаçать. Ывăлусем ăçта?

— Мăнаккăшĕ патĕнче. Ун хĕрĕн çуралнă кун паян. Унтах çывăраççĕ. Кĕçĕр улах пирĕн.

Людмила Володьăпа юнашар диван çине пырса ларчĕ.

— Санăн çиес килет пуль?

— Çук,— терĕ Володя, Людмилăна хăй çумне чăмăртаса.— Çук, çиес килмест.

— Ĕçетĕн-и эппин?..

— Пар.

Вăл ăна, хăйĕнчен уйăрасшăн мар пулса, аллинчен тытрĕ. Людмила выляса туртăнчĕ. Володя вĕçертмерĕ. Буфет патне вара иккĕш те пĕрле кайрĕç.

Людмила графинпа черккесем илнĕ чух Володя, ун хыçĕнче тăрса, ăна мăйĕнчен майĕпен чуптурĕ.

Умлăн-хыçлăн виçĕ черкке ĕçсен, Володя Людмилăна театрти ĕçсем çинчен каласа пама тытăнчĕ.

— Ан кала, итлес килмест,— терĕ Людмила шăппăн.

— Эсĕ маттур иккен, мĕнле тавçăрса илтĕн? Людмила, Людмила... Кил кунта!

Володя ăна ыталаса илчĕ те хăй чĕрçи çине лартрĕ.

— Эсĕ мана юрататăн-и?

— Юрататăп, Людмила.

— Ман сансăр пурăнас килмест. Сан та-и?

— Мана та сансăр йывăр.

Людмила ăна ыталаса илчĕ те пĕр вĕçĕмсĕр чуптума тытăнчĕ.

— Çутă ытла...

Людмила хăвăрт сиксе тăрса çутта сӳнтерчĕ.

— Каллех çутă,— пăшăлтатрĕ Володя.

— Мĕн?— Людмила ун çине ăнланаймасăр тинкерчĕ.

— Эсĕ çутă,— терĕ Володя, ăна пилĕкĕнчен ыталаса.

— Чăнах та-и? Эп çутă-и? Эп сана килĕшетĕп-и?

— Чăнах, Людмила. Эсĕ маншăн чи аванни.

Хăйĕн акăш юрри пек юратăвне тивĕç парне тесех шутларĕ пулас çак сăмахсене Людмила. Савăнăçне ниçта хума пĕлмесĕр, Володьăна аллинчен ярса тытрĕ те вăл юнашар пӳлĕме çавăтса кайрĕ.

— Атя, Светланăна кăтартатăп...

Çурма тĕттĕмре, çемçе кавир тăрăх асăрханса пусса, вĕсем ача çывăракан пĕчĕк кравать умне пырса тăчĕç. Людмила хĕрĕ çинчен шурă витĕнкĕçне хуллен сирчĕ те ачан кăлкан пек сарă вăрăм çӳç пайăркисене майĕпен майлаштарма пуçларĕ. Лăпкă та вĕри туйăм унăн сăн-сăпатне ачашлăхпа сăпайлăх кĕртрĕ. Хĕрарăмăн кашни хусканăвĕ мăнаçлăн, тарăн пĕлтерĕшлĕн курăнчĕ. Çак самантра вăл хăй çумĕнче тăракан арçын çинчен мансах кайрĕ. Чĕринчи мĕнпур юратăвне, ырă кăмăлне, вăрттăн шухăшĕ-ĕмĕчĕсене хĕрне пилленĕн, ытараймасăр пăхрĕ вăл ун çине. Вара, яланхи пек, телейлĕн пăшăлтатрĕ:

— Çывăрах, чунăм...

Володя хӑй ҫумне тата ҫывӑхрах пырса тӑрсан тин вӑл, тӑна кӗнӗ пек, каччӑна хулӗнчен тӗртсе илчӗ те ачи енне пуҫӗпе сӗлтсе, шӑппӑн хушрӗ:

— Кур.

Володя пӗчӗк ачасене унччен нихӑҫан та ҫапла ҫывӑхран курман. Тен, ҫавӑнпа пуль виҫӗ ҫулхи Светлана ҫине халь вӑл сӑмах чӗнмесӗр, тӗлӗнсе пӑхса тӑчӗ. Ачан нимпе те танлаштарма ҫук ҫепӗҫ илемӗ ӑна тахҫанах иртсе кайнӑ кунсене аса илтерчӗ. Хӑй те сисмесӗрех вӑл ассӑн сывларӗ те, ача патнех пӗшкӗнсе, ун ҫине тинкеререх пӑхрӗ.

— Мӗнпе танлаштарма пулать ӑна?— ҫак ыйту ҫине чӑннипех те ответ тупма пултараймасӑр ыйтрӗ Володя.

— Танлаштарма кирлӗ мар,— терӗ Людмила лӑпкӑн.— Мӗншӗн танлаштарас.

Унтан, кӑшт тӑрсан, Володя каллех шухӑша кайнине кура, хӑех хушса хучӗ:

— Ман пурнӑҫ вӑл...

Мӑнкӑмӑллӑн, ҫав вӑхӑтрах кӑшт хурлӑхлӑн янӑрарӗ унӑн сасси.

Вӗсем каллех малтанхи пӳлӗме тухрӗҫ.

Темӗн капланчӗ Людмила чӗринче. Володьӑна тепӗр черкке эрех тултарса панӑ май, вӑл шӑппӑн каларӗ:

— Ҫакна ӗҫсен, килне вӗҫтеретӗн...

Ҫут тӗнчене те манса кайрӗ Володя. Черккери эрехе шалтах ӗҫсе ячӗ те Людмилӑна пилӗкӗнчен ҫирӗп ыталаса тытрӗ, пичӗпе унӑн кӑпӑшка ҫӳҫне хуллен сӗртӗнчӗ. Туйӑмлӑн чӗтренсе тухрӗ унӑн сасси:

— Мӗншӗн, Людмила?

— Пӗтеретӗн эсӗ мана,— терӗ хӗрарӑм.— Пӗтеретӗн. Чун сисет.

— Ах, Людмила. Пӑрах-ха ҫапла калаҫма. Анлан: эп сана юрататӑп, юрататӑп, юрататӑп! Илтетӗн-и?

Людмила каччӑна мӑйӗнчен ҫирӗп ыталарӗ, темрен хӑранӑ пек, ӑна васкаса чуптума тытӑнчӗ, ҫав вӑхӑтрах хӑй пӗр вӗҫӗмсӗр пӑшӑлтатрӗ:

— Ман саншӑн ҫеҫ пурӑнас килет халь тӗнчере... Эс мана юратма пӑрахсан, шыва сиксе вилетӗп... Чунӑм...

— Атя калаҫмӑпӑр ун пирки...

Володя ӑна тата хытӑрах чӑмӑртаса тытрӗ. Урӑх вӗсем пӗрне-пӗри нимӗн те чӗнмерӗҫ. Арҫын аллисем хӗрарӑм кӗлеткине ҫӗлен пек яваласа илчӗҫ...

Володя шӑнкӑрав сассине илтсе вӑранса кайрӗ те Людмила ҫумӗнчен хӑвӑрт сиксе тӑчӗ. Ыйхӑ витӗр вӑл

шăнкăрав шăнкăртаттарнă хыççăнах алăк уçăлнă сасса илтрĕ. Аптраса ӳкнĕскер, Людмилăна вăратма та ĕлкĕреймерĕ вăл, мĕн пулса иртнине, мĕн пулассине те ăнланмарĕ, хăвăртрах юнашар пӳлĕм алăкĕ патне ыткăнчĕ. Çăраççи хăй шăтăкĕнчех иккен. Володя ăна хуллен пăрса уçрĕ те шала кĕчĕ.

— Атте, эсĕ килнĕ-и?— илтĕнчĕ арçын ача сасси.

Алăк умне тĕршĕннĕ Володьăн ури патне çутă йĕр ӳкрĕ — юнашар пӳлĕмре, Людмила çывăракан пӳлĕмре, çутă çутрĕç.

— Ш-ш,— илтĕнчĕ çав самантрах.— Пăх кунталла.

Каллех арçын ача сасси. Анчах та ку малтанхинчен кăшт хулăнрах. Сасартăк Володя кĕнĕ пӳлĕм алăкĕ патне пĕри çывхарчĕ те леш енче юлнă çăраççине икĕ хутчен пăрчĕ.

«Пĕтрĕм». Володя чӳрече патне ыткăнчĕ. Çав вăхăтра пăшăлтатни илтĕнчĕ, Володя каллех алăк патне хуллен йăпшăнса пырса тăчĕ. Кусем Людмила упăшкин малтанхи арăмĕнчен çуралнă ывăлĕсем пулнине Володя тин тавçăрса илчĕ.

— Шăп, унта такам пур,— терĕ асли, Сашок, Витьăна, çăраççи кăнтарса тăракан алăк еннелле кăтартса. Унтан каллех малти пӳлĕме тухрĕ.

— Пăх кунталла.

Вăл палламан пальтопа çĕлĕк çине тĕллесе кăтартрĕ.

— Аттен мар-ши?— ĕненес килмерĕ Витьăн.

— Эс ухмаха тухрăн-и?

— Мăнаккана кайса калатпăр-и?— ыйтрĕ Витя, чӳтреме тытăнса. Вăл юнашар пӳлĕм алăкĕ çине хăраса пăхрĕ.

— Эп ăна халех вĕлеретĕп!— терĕ Сашок, хĕремесленсе кайнăскер.

— Кама?— хăраса ӳкрĕ Витя,— çавна-и?— Вăл питĕрсе илнĕ пӳлĕм çине кăтартрĕ.

— Çук! Теприне... Эп ăна халех вĕлеретĕп!— Сашок Людмила çывăракан пӳлĕм еннелле утрĕ. Ун хыççăн, пĕр-ик утăм юлса, Витя пырать. Сашок кĕсйисене хыпашлама тытăнчĕ. Шăмă турапа авторучка çеç тупăнчĕ унта. Вара, Витьăна нимĕн те ăнлантармасăр, ун çине пăхмасăр, кухньăна тухрĕ те тепĕр минутран каллех шăллĕ патне таврăнчĕ. Ун аллинче — гантель. Ашшĕн гантелĕ.

Каллех амаçури амăшĕ çывăракан пӳлĕм еннелле

çавăрăнчĕç. Ала́кра чарăнса тăчĕç. Çывăракан Людмилăн çара кĕлеткине курсан, иккĕшĕ те куçĕсене хупрĕç. Витя аяккалла пăрăнса тăчĕ.

— Туй тунă...— терĕ Сашок, сĕтел çинчи графинпа черккесене асăрхаса.

Сапаланса выртакан тумтир, вырăн çинчен урайне шуса аннă витĕнкĕç... Сашок пĕр вĕçĕмсĕр чĕтреме тытăнчĕ. Витя малти пӳлĕм алăкне хăлăпĕнчен ярса тытнă та халь-халь тухса тарас пек тăрать.

Сашок малалла пĕр утăм тусан, Витя хуллен йĕрсе ячĕ.

— Ан тив, Сашок, ан тив, юрамасть! Айта тарат-пăр,— терĕ вăл, нăшăклатса.— Сашок, хăратăп эп! Эп каятăп! Эп мăнакка патне таратăп!— Вăл ĕсĕклеме тытăнчĕ.

— Чарăн! Хăравçă!— çаврăнчĕ ун енне Сашок.—Эп ăна вĕлермесен, урăх пурăнмастăп. Эп ăна вĕлеретĕп!

Сашок майĕпен Людмила патне çывхарса пычĕ...

Хăранипе сехре хăпнă Володя малалла мĕн пулассине чăтаймасăр кĕтрĕ. «Вĕлерет-и, вĕлермест-и»,— шухăшлать вăл, анчах сас кăларма та хăрать. Сас кăларсан, ăна палласçĕ-çке. Ах, пальтопа çĕлĕке тата пушмаксене мĕнле илмелле-ши? Хăрушлăх ăна хăюлăх пачĕ курăнать. Вăл çак пӳлĕмрен тухма май тупас тесе, именсе тăмасăрах çутă çутрĕ, алăка хирмелли пĕр-пĕр тимĕр шырама тытăнчĕ.

— А-а-а!— илтĕнсе кайрĕ сасартăк Сашокăн хăрушă сасси. Вăл амаçури амăшĕ патне çитичченех гантельне кĕтесселле ывăтса ячĕ те хыттăн ĕсĕклесе пӳлĕмрен чупса тухрĕ. Çаплах алăк патĕнче тăракан Витя та, ăна курса, сасăпа кăшкăрса ячĕ:

— Атте!

Ачасем иккĕшĕ те урамалла ыткăнчĕç.

Людмила Сашок сассипе вăранса кайрĕ, хăвăрт сиксе тăчĕ, малти пӳлĕме тухрĕ. Уçă алăкра вăл коридорта çунакан лампочкăн тĕксĕмрех çутинче Сашокпа Витьăна палласа илчĕ. Анчах та ачасем вăл кăшкăрса чĕннине илтмерĕç. Людмила çара уранах урама чупрĕ. Тулта юр вĕçтеркелет, çил тухнă. Ачасем курăнмарĕç. Кăртлатса тапакан чĕрине тытса чарас пек, хĕрарăм аллисене кăкăрĕ çумне чăмăртарĕ. Сивве сисмесĕр, хуллен утса хăпарчĕ вăл картлашкасемпе. «Пурнăç пĕтрĕ»,— шухăшларĕ вăл. Сасартăк Володьăна аса илчĕ. «Вăл ăçта-ши?» Хăвăрт чупса кĕчĕ те пӳлĕме шалтан

питĕрсе илчĕ. Володьăн пальтипе çĕлĕкне тата пушмакĕсене курсан, тĕлĕнсех кайрĕ.

— Володя,— шăппăн чĕнчĕ вăл, йĕри-тавра пăхкаласа.

— Уç,—илтĕнчĕ юнашар пӳлĕмрен Володьăн чĕтрекен сасси.

Людмила алăк патне ыткăнчĕ, Володьăна уçса кăларчĕ.

— Эс пĕтĕмпех куртăн-и? Эс мĕнле лекрĕн кунта? Ах, пĕтрĕм, пĕтрĕм... Пĕтĕмпех пĕтрĕм! Ах-х!

Людмила ĕсĕклесех макăрма тытăнчĕ. Володя ун çине пăхмарĕ, тумланма васкарĕ. Нимĕн те чĕнмерĕ вăл. «Мĕнле шуйттан сĕтĕрсе килчĕ-ха мана кĕçĕр çак мур шăтăкне?» Вăл çаплах чĕтреме пăрахмарĕ-ха. Ку ăна йĕрĕнтерет. Вăл чĕтреме хăнăхман. Унăн хăвăртрах тухса тарас килет.

Людмила çаплах чарăнмасăр ĕсĕклет. Володя çĕлĕкне тăхăнчĕ. Халь тухса кайсан та юрамалла пек, анчах хĕрарăма капла хăварма та килĕшӳсĕр-çке. Вăл кравать урлă выртнă Людмилăна хулпуççинчен тытса çĕклерĕ.

— Чарăн, Людмила. Пурте йĕркеллĕ пулать. Чарăн, тетĕп. Чарăнах. Асатса яр мана,— ачашшăн каларĕ вăл.

Людмила куççулĕпе йĕпеннĕ питçăмартисене минтерпе шăлса илчĕ те ăна куçĕнчен пăхрĕ.

— Эсĕ каясшăн-и? Эп те пыратăп. Тек эп кунта юлма пултараймастăп! Илсе кай мана ху патна! Володя, чунăм, чунăм! Эсĕ манăн пĕртен-пĕр юратнă çын! Ил мана хăвпа пĕрле!

Вăл алăк патне ыткăнчĕ, Володя çулне пӳлсе тăчĕ.

Аптраса ӳкнĕ Володя ним тума пĕлмерĕ. Сасси те тытăнчĕ унăн. Вăл Людмила çине йӳççĕнрех кулса пăхрĕ, каллех лăплантарма тăрăшрĕ.

— Чарăн макăрма, Людмила. Чарăн тетĕп.

Людмила алăк патĕнчен пăрăнмарĕ, аллине тăсса, юнашарах çакăнса тăракан пальтине илчĕ,васкавлăн тăхăнса ячĕ. Урисемпе пушмакĕсене шырарĕ.

— Леш пӳлĕмрен тутăр илсе кил,— хушрĕ вăл. Унăн сасси темле улшăнсарах тухрĕ. Володя тутăр илсе килнĕ çĕре Людмила пушмакĕсене тăхăннăччĕ ĕнтĕ...

— Володя, эс пĕтĕмпех курнă, вĕсем мана вĕлерессĕнччĕ вĕт? Çапла-и, Володя?

Людмила каллех хыттăн ĕсĕклеме тытăнчĕ.

«Чăтма пултараймастăп хĕрарăм куççульне»,—тарăхса шухăшларĕ арçын.

— Çапла,— пĕлтерчĕ вăл ним пулман пекех.

— «Вĕлеретĕп» тенине илтрĕм. Эп ку тĕлĕкре пулчĕ, тесе... Володя, атя, кайрăмăр. Урăх кунта нихăçан та таврăнмастăп. Эп ку хуларан тухса таратăп. Чунăм, атя иксĕмĕр те, сана та кунта юлма юрамасть. Вĕсем сана тем тăвĕç, ĕçре те аван мар. Илтетĕн-и, Володя? Тарар кунтан. Ĕç таçта та тупатпăр. Володя, эсĕ мана юрататăп, терĕн. Эсĕ манăн, çапла-и, чунăм? Ну, кала ĕнтĕ, кала! Эсĕ манăн-и? Эпĕ санăн, эпĕ сана çеç юрататăп. Илтетĕн-и?..

Володя илтмест. Хăйне ыталаса мăйĕнчен çакăнакан хĕрарăмăн хурлăхлă сассине вăл илтмест.

— Çитĕ,— терĕ вăл сиввĕн.— Мĕнле вĕçленессине малтанах курмалла пулнă. Шупашкартан эпĕ ниçта та кайма пултараймастăп. Тăшмансем манăн ытла та нумай кунта. Эп кайни тарнă пекех пулĕ.

— Ах, чăнах та, ăçтан тартăр-ха Володя? Вăл тарма хăнăхман-çке!

— Ну, лăплан, лăплан-ха эсĕ, пĕчĕк ача мар ĕнтĕ. Санăн та ниçта та кайма кирлĕ мар. Уйрăлатăн çеç упăшкунтан. Театртах ĕçлеме юл.

— Мĕнле куçпа?!— сасартăк карт сиксе пăрăнчĕ Людмила.

Володя унăн куçĕсем тарăхса çуталнине асăрхарĕ. Вăл алăк патнелле пĕр утăм ярса пусрĕ.

— Кам та пулин килме пултарать. Пирĕн кунта тек иккĕн юлмалла мар,— терĕ те вăл алăка уçрĕ.

Людмила ăна хулĕнчен икĕ аллипе те çатăрласа тытрĕ.

— Эсĕ мана пăрахса хăваратăн-и вара?

— Людмила, ăнлан, эпĕ хуларан ниçта та каймастăп. Санăн та кайма кирлĕ мар... Ытла хăравçă иккен эсĕ...

— Пĕлмен-и вара эс эп хăравçă иккенне?— куççулĕ витĕр кулкалама тăрăшрĕ Людмила, çаплах шанчăкне çухатмасăр.

— Ну, юрĕ, чипер юл. Ыранччен!— Володя хыттăн туртăнса аллине вĕçерчĕ те пусма картлашки тăрăх аялалла чупсах кайрĕ.

— Володя! Эпĕ те пыратăп, Володя!— ун хыççăн чупрĕ Людмила, каллех ĕсĕклеме тытăнса.

Людмила урама чупса тухнă çĕре Володя унран инçеччĕ ĕнтĕ. Акă вăл каялла çаврăнса пăхрĕ те, хăй хыçĕнчен чупакан хĕрарăм мĕлкине асăрхаса, урам тепĕр еннелле ыткăнчĕ. Хăй мĕн хăтланнине хăй те пĕлмесĕрех чупрĕ Людмила. Мĕне шанчĕ-ши мĕскĕн хĕрарăм, мĕне хăваларĕ? Пурнăç пилленĕ телей тесех шутларĕши вăл çак самантра хăйĕнчен таракан арçынна? Тытса чарасшăнччĕ-и вăл ăна яланлăх е мĕн те пулин каласшăнччĕ çеç? Тен, шăпа тухнипе килĕшсе, ăна ылханса, юлашки хут каччă кăкăрĕ çине пуçне хурса, тăраниччен макăрас килетчĕ пулĕ унăн?

Людмила урам урлă каçма тытăнчĕ. Урамваррине çитсен тин вăл хăйĕнчен инçех те мар грузовик килнине асăрхарĕ те чарăнса тăчĕ, ăна ирттерсе ярасшăн пулчĕ пулмалла.

— Володя-а!—кăшкăрчĕ вăл. Анчах та Володя каялла çаврăнса пăхмарĕ, тăкăрлăка пăрăнса кĕчĕ те, темшĕн сасартăках вăйсăрланса кайнăскер, пуçне каçăртса, йывăррăн сывласа утма пуçларĕ. Унтан, кăшт сывлăш çавăрнă хыççăн, каллех чупма тытăнчĕ. Вара мĕн килне çитиччен чупрĕ.

Ăна амăшĕ уçса кĕртрĕ. Ывăлĕн пăлханчăк сăн-пичĕ ватă хĕрарăма хăратсах пăрахрĕ. Володя унпа калаçса тăмарĕ, тӳрех хăй пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ.

Хывăнчĕ те кравать çине йывăррăн пырса ларчĕ, шухăша путнă пек пулчĕ. Анчах пĕр шухăш та ун пуçĕнче чарăнса тăмарĕ.

Вăл тăрса тĕкĕр патне пычĕ. Галстукне хывса печĕ, çухавине вĕçертрĕ. Тарланă питне-куçне сăмса тутрипе шăлса илчĕ, сăн-питне выляткаласа, çирĕпреххĕн курăнма тăрăшрĕ. Кулса та пăхрĕ. Анчах куласси те килмерĕ, чĕри çине каллех темле йывăр туйăм капланчĕ, хĕстерчĕ ăна. «Мĕнрен хăратăп эпĕ?» Вăл аквариум патне пырса тăчĕ.

Володя пичĕ çинче пĕр самантрах каллех паçăрхи йӳçĕ, ирĕксĕр кулă палăрчĕ. Сценăна хуплайман килĕшӳсĕр чаршав пек, çав кулă унăн пичĕ çинче çакăнсах тăнăн, ăна алпа илсе пăрахма та май пулнăн туйăнать. Володя çаплах пулăсене пăхкаларĕ, аллисемпе аквариум хĕррисене тытса сăтăркаларĕ, анчах аквариум хĕррисене сăтăрни те, йӳççĕн кулкалани те, пулăсемпе калаçни те, пĕр вырăнта тапăртатса тăни те — пурте халь пачах та кирлĕ мар, вырăнсăр, килĕшӳсĕр, унăн шухăш-кăмăлĕпе, чун хусканăвĕпе çыхăнман темскер

çеç пулчĕ. Сасартăк Володя аквариума икĕ аллипе те тытса çĕклерĕ, унăн йывăрăшне пĕлес тенĕ пек, пĕр-ик хутчен ăна сулласа пăхрĕ те урай варрине лашт пăрахрĕ. Урай талккишĕпех сарăлакан шыв, кавир çинче кўлленсе выртакан хăйăр юшкăнĕ, хутран-ситрен сиккелесе илекен ылтăн пулăсен карăлнă çăварĕсем, хуллен йăраланса шăвакан шуйттан мăйраки, йăлтăртатса выртакан кĕленче ванчăкĕсем ун чунне пăлхатакан пĕр ыйту çине ответ парасса кĕтнĕ пек пăхрĕ Володя çĕрелле. Унтан вăл йĕпе урайне хăвăрт чĕркуçленсе ларчĕ те ылтăн пулăсемпе шуйттан мăйракисене шăлавар кĕсйине пĕрерĕн-пĕрерĕн васкаса чикрĕ, хăйăр юшкăнне кавир варрине ывăç тупанĕ хĕррипе хырса пуçтарма тытăнчĕ. Алли кĕленче ванчăкĕсемпе касăлчĕ унăн. Хăй юнне курсан, вăл, йынăшнă пек, хуллен кăшкăрса ячĕ, вара, чĕркуçленнĕскер, тĕлсĕр пăхакан куç шăрçисене пачах вылятмасăр, шухăша кайрĕ. «Мĕн турăм эпĕ... мĕн тумалла манăн»... Ун куçĕ умне Людмила мĕлки тухса тăчĕ. Таçтан Славик чĕнни илтĕннĕ пек пулчĕ.

...Кравать тĕлĕнче çакăнса тăракан рамкăран ун çине хĕрлĕ галстуклă вĕренў отличникĕ тинкерсе пăхать. Тĕлĕнмелле: Володя пурнăçĕнче иккĕ çине иккĕ хутлама вĕреннĕ тапхăр та пулнă иккен.

1965—1966 çç.



Цена 43 коп.

26728